Жк 84.09
Т 13
8-096761

ISSN 0206 – 4261

1931 ÇУЛТАНПА ТУХАТЬ

# ТĂВАН АТĂЛ

ЛИТЕРАТУРĂПА КУЛЬТУРА ТАТА ИСКУССТВО ЖУРНАЛĔ

12+

2013 · 8

Национальная библиотека ЧР
s-096761

# АЛАМЛАТПĂР!



*Петĕр Эйзин çуралнăранпа – 70 çул*

* * *

Пуян çынна пуян темерĕм,
ĕмĕр пуян пулĕ темерĕм.
Чаплă çынна чаплă темерĕм,
ĕмĕр чаплă пулĕ темерĕм.
Пуянсемпе пĕрле лармарăм,
чаплисемпе пĕрле тăмарăм.

Чухăн çынна чухăн темерĕм,
ĕмĕр чухăн пулĕ темерĕм.
Мĕскĕн çынна мĕскĕн темерĕм,
ĕмĕр мĕскĕн пулĕ темерĕм.
Чухăнсемпе ларса калаçрăм,
мĕскĕнсемпе тăрса юрларăм.

* * *

Пултăрччĕ
хура çăкăр –
çиме,
хырăм выçсассăн.

Пултăрччĕ
сивĕ шыв –
ĕçмешкĕн,
ăш хыпсассăн.

Пултăрччĕ
уçă сывлăш –
кăкăр туллин
сывламашкăн.

Пултăрччĕ
савнă тус –
чун каниччен
калаçмашкăн.

Ж-4 84.09
ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР
13




**1931 çултанпа тухать:**

**1931 – «Трактăр»,**
**1935 – «Илемлĕ литература»,**
**1944 – «Тăван Атăл»**




# ТĂВАН АТĂЛ

ЛИТЕРАТУРĂЛĂ КУЛЬТУРА ТАТА ИСКУССТВО ЖУРНАЛĔ




Учредительсем – ЧР информаци политикин
тата массăллă коммуникацисен министерстви,
«Атăл-Волга» Издательство çурчĕ» АУ

**1931 çултанпа тухать**

**8(658) №**
**çурла**
**2013**

**Директор-тĕп редактор**
**С.Л. ПАВЛОВ**

**Попечительсен канашĕ:**
**А.Н.Магарин**
**П.П.Михайлов**
**Р.И.Петров**
**Г.А. Максимов**

**Редакци:**
**А.А.Тарасов (шеф**

e-mail: atal-volga@mail.ru

S-096761
Национальная библиотека
Чувашской Республики

**Рукописи не рецензируются и не возвращаются. Во всех случаях брака в экземплярах журнала обращаться в типографию издательства.**

Отпечатано в ИПК «Чувашия»
428019, г. Чебоксары, пр-т. И.Яковлева, 13.

**© Тăван Атăл, 2013**

Проверено 9 ОКТ 2017

# КĂЛАРĂМРА

## ТĂВАН АТĂЛ


### ПОЭЗИ

Петĕр ЭЙЗИН сăввисем 3
П. Эйзин пултарулăхĕ çинчен. Юрий ЯКОВЛЕВ. Эй, çын! 5
Георгий ФЕДОРОВ. Сывпуллашса кĕр алă сулчĕ. Сăвăсем 37

### ПРОЗА

Лидия САРИНЕ. Хĕве хупман хĕр. Калав 9

### АСТĂВĂМ

Аркадий СКВОРЦОВ. Çулсем иртсен 40

### ФАНТАСТИКА

Михаил СУНТАЛ. Икĕ калав 48

### ШУХĂШ

Хветĕр АГИВЕР. Ăнланаймастăп! 60

### ЧĂВАШ КУН-ÇУЛĔ

Ахмед ибн Фадлан Атăлçи Пăлхар патшалăхне çитсе курни 61

### ТЕАТР

Арсений ТАРАСОВ. Мунча кунĕ. Икĕ пайлă драма 75

### «ЧĂВАШ КАЛАВĔ» КОНКУРС

Марина КАРЯГИНА. Кĕме юраман алăк 106

## СУНТАЛ

### АВТОГРАФ

Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Галина Скворцова 2

### ÇЕМЬЕ ВУЛАВĔ

Елен НАРПИ. Турамăш çуралнă кун 13

### ĂНЕР

Юрий БУБНОВ 20

### КАШНИ ÇЫН – ХĂЙ ТĔНЧЕ

Роза ВЛАСОВА. Шăхачсен çăлтăрĕ 26

### ЧĂВАШ ЧАПĔ

Петр СИДОРОВ. Универсиадăпа Олимп вăййисем таран 30

### ÇĔНĔ КĔНЕКЕ – ÇĔНĔ ТĔНЧЕ 35

### ПĔР ЮРĂ ИСТОРИЙĔ

Шур перчетке. Чăваш халăх сăвăçи Георгий ЕФИМОВ аса илнинчен 36

### «СУНТАЛ» – АЧАСЕНЕ

Алексей МЕДВЕДЕВ. Пăрчăкан. Калав 38

### «КАПКĂН» КĔТЕСĔ

Валерий КОШКИН. Шанми пулчĕ 44

### ТĔРĔ ПУЛТĂР ПАРНЕ 46

### ЧĂВАШ КАЛЕНДАРĔ 48

# Петĕр Эйзин сăввисем

***
Çак çĕр çинче камсем телейлĕ тетĕр?
Суккăррисем çак çĕр çинче телейлĕ –
Вĕсем çак пурнăç мĕнлине курмаççĕ.
Эпир куратпăр та...
Куç хуралса килет.

Çак çĕр çинче камсем телейлĕ тетĕр?
Ухмаххисем çак çĕр çинче телейлĕ.
Вĕсем çак пурнăç мĕнлине пĕлмеççĕ.
Эпир пĕлетпĕр те...
Пуç çаврăнса каять.

***
Кам армана,
кам вăрмана, –
манăн ниçта та
каяс килмест.

Хăшĕ утать,
хăшĕ чупать, –
манăн ниçта та
васкас килмест.

Кам ятлаçать,
кам çапăçать, –
ман никампа та
вăрçас килмест.

Хăшĕ вăрлать,
хăшĕ сутать, –
ман никама та
шанас килмест.

Камшăн уяв,
камшăн пăяв, –
тек пĕр сăмах та
чĕнес килмест...

Пурнăç хăрушă,
пурнăç айван, –
манăн çапах та
пурнас килет.

Йывăç-и, курăк-и.
выльăх е çын, –
манăн пурне те
шеллес килет.

***
Тĕттĕмлĕх.
Хутран-ситрен
сăмахăм
вĕриленсе çитсе
хыпса илет.

Вара
япаласем
тухса тăраççĕ куç умне
хăюсăррăн,
шăппăн,
хурлăхлăн.

Сăмах сÿнет те,
каллех пăч-тĕттĕм.

***
Ку таранччен хĕвел курман
имшер çеçке пек
ÿсет ман тунсăхăм.
Шап-шурă... пĕчĕк...
Майĕпен

шупка кĕрен чечек çурать вăл.
...Кама татса парам-ши?

***
Макăр... –
куçсемпе,
саспа,
хулпуççипе.
Мăкăнь вăрлăхĕ –
куççуль –
тумлам-тумламăн акăнтăр
ман çине,
çине-çине,
Сарă Кун пек савăнăç çине.
Макăр.
Тĕллпулу та,
уйрăлу та
макăрма пĕлмеççĕ.
Çил кĕсли çинче
çăка
ăсату кĕвви суйлать пўрнисемпе.
Сукмак çийĕн:
иккĕ... виççĕ... –
кайнă кайăксем пек
кăнтăра вĕçесшĕн
çунатне çапса
чупаççĕ çулçăсем.

***
Эпир – иксĕмĕр.
Хĕлле.
Кăн-кăвак каç.
Тата симфони –
лапкан-лапкан çăвать пĕр чарăнмасăр,
сан пўрнўсен хĕлĕхĕсем витĕр
ачашшăн сăрхăнать,
манăн алла
пĕр пĕçертсе,
пĕр лăпкаса илет те –
сана,
мана та витĕрех
ирĕлтерсе ярать, –
симфони.

Кулăпала куççуль
шыраççĕ пĕр-пĕрне.
Тупаççĕ.
Йĕмешкĕн те,
кулма та пĕлеймест телей.
Чĕремĕрсем
кăкăрсенчен ишсе тухаççĕ,
ик пĕчĕк акăш пек
вĕçеççĕ çўлелле!

***
Çăварти çăкăра туртса илчĕç.
Туртса илчĕç те
пачĕç йытта.

Çумри сарă хĕре туртса илчĕç.
Туртса илчĕç те
пачĕç юта.

***
Ах, ыр курас тесен,
курма пулатчĕ пуль,
сиртен, тăванăмсем,
уйрăлмаллаччĕ,
сире, тăванăмсем,
пăрахмаллаччĕ,
çичĕ ютпа пĕрле
пурăнмаллаччĕ.
Ах, ыр курас тесен,
курма пулатчĕ те,
ырлăх шырас тесе
шухăшламарăм.

Ах, çакă инкеке
курас та çукчĕ пуль,
сиртен, пускилĕмсем,
уйрăлмаллаччĕ,
сире, пускилĕмсем,
пăрахмаллаччĕ,
тўре-шарасемпе
явăçмаллаччĕ.
Ах, çакă инкеке
курассăм çукчĕ те,
инкекĕмрен тарма
шухăшламарăм.

***
Кураканни курать –
курмăш пулса тăрать.
Пĕлекенни пĕлет –
пĕлмĕш пулса çӳрет...
Çак çĕр çине эпир
курмăш пулма килмен.

Çӳлте çăхан вĕçет,
çĕрте çĕлен шăвать.
Этем тени нумай,
анчах та çын сахал...
Çак çĕр çине эпир
пĕлмĕш пулма килмен.

Кахалĕ кантурта,
вăррийĕ хуралта,
суеçĕ тӳрере,
чейи кĕрекере...
Çак çĕр çине эпир
суя суйма килмен.

Инкек çине синкек,
йĕпе çине сапа.
Инкекĕ иккĕн те,
Усалĕ улттăн тет...
Çак çĕр çине эпир
ырлăх курма килмен.

Пĕрле пулас пулать,
пĕрле чăтас пулать,
пĕрле пурнас пулать,
пĕрле юрлас пулать...
Çак çĕр çине эпир
чĕмсĕр пулма килмен.

# П. Эйзин пултарулăхĕ çинчен

# Эй, çын!

## (Петĕр Эйзинăн ачашлăх метафизики)

Сăвăçран "Хыпар" хаçат валли (2003, çурла уйăхĕ, 5) Римма Прокопьева илнĕ "Çуркуннене пĕрремĕш сиснĕскер" интервьюра унăн поэзири хушма ячĕ пирки ыйтни те пур:

– Эйзин тени "Эй, çын" тенĕ пекех илтĕнет. Çак пĕлтерĕшпех илнĕ-и эсир хăвăрăн хушма ятăра?

– "Эйзин" теме те пĕлтерет, çав хушăрах "Эй, çын!" тенине те. Янравлă илтĕнет вăл. Калăпăр, сĕрме купăс хĕлĕхне туртăнтарса ян! янраттарса янă пекех. Ман чăн хушамат – Димитриев. Маçак "Мĕтри" ятлă пулнă. Ун ятне пăрахасшăн мар эп. Ывăлăм та "Димитриев" хушаматпах çӳрет.

Хĕлĕх тенĕрен. Виçĕ тус – Алексей Аттил, Вениамин Тимаков тата Петĕр Эйзин – пĕрле 1971 çулта Чăваш кĕнеке издательствинче кăларнă кĕнекене "Виçĕ хĕлĕх" ят панă. Çамрăк авторсен пĕрремĕш кĕнеки вăл. Виçĕ сăвăç – виçĕ хĕлĕх. Виççĕшĕ те ян! янранă. Янраççĕ те. Петĕр Хусанкайăн "Çеçпĕл Мишши Крымра" (1936) сăввин чĕлхипе калас пулсан, çулсем урлă, ĕмĕрсен леш енче янраççĕ. "Виçĕ хĕлĕхĕн" вăл вăхăтри витĕмĕ, вăйăмĕ, тĕслĕхрен, Атнер Хусанкайпа Иосиф Дмитриев калаçĕвĕнче аван курăнать ("Кунти тавралăха хура тухатмăшсем "тухатнă...": П.Эйзинăн сăвă кĕнекине вуланă май пуçа килнĕ шухăшсем. – Хыпар, 1991, юпа уйăхĕ, 23).

Ҫирӗм ҫул каяллахине аса илсе вӗсем ҫапла калаҫҫӗ: "Кӗнекене эпӗ ун чухне поэзири ҫӗнӗ чăваш хумӗн манифесчӗ пек йышăнтăм. Уйрăмах – Петӗр Эйзин сăввисене" (А.Хусанкай), "Ҫав тапхăрта илем тӗнчине асап тӗнчипе ҫыхăнтарса этеме хӳтӗлекен, чуна тасатакан сăвă ҫыракан Петӗр Эйзин ҫеҫ пулнă. Унран пысăкрах поэт – ҫук" (И.Дмитриев).

Кӗнекере тата вулаканăн чунӗнче кăна янраман "виҫӗ хӗлӗх" – хула урамӗсенче те! 60 ҫул тултарнă ятпа ирттернӗ каҫра (К.В.Иванов ячӗллӗ Литература музейӗ, 2003 ҫул) Эйзин вӗсем виҫҫӗшӗ мӗнле ыталанса Шупашкар урамӗсенче ун сăввине юрласа ҫӳрени ҫинчен те каласа пачӗ. Иртнине аса илсе хăй сăввине юрларӗ:

Эпир те маттур,
эсир те маттур,
пиртен те маттур
тата пур.

Эпир те пуян,
эсир те пуян,
пиртен те пуян
тата пур.

Эпир те ухмах,
эсир те ухмах,
пиртен те ухмах
никам ҫук.

"Хампа пӗрле тăрса юрлакана ҫур чунăма касса парăттăм" халăх сăмахӗ тӗрӗс пулни сăвăҫ куҫҫулленниче палăрчӗ.

"Кашни кӗнекех вăл – чӗнни", – тет Жан-Поль Сартр "Мӗн вăл литература?" ӗҫӗнче (1948).

Диоген яра кун хунар ҫутнă та: "Эп ҫынна шыратăп", – тесе ҫӳренӗ.

Эйзин, грек философӗ пекех, ҫынна шырать – "Эй, ҫын!":

Этем нумай та, ҫын сахал.

Пиртен кашниех этемрен тата ҫынран тăрать. Этемӗ ытларах пулсан этемккене тухатпăр, ҫынлăха ҫухататпăр.

Эйзин вулаканра ҫынлăха вăратасшăн. Чун пирки, шалти тӗнче пирки аса илтересшӗн. "Ман сăвăсене ăшра вуламалла, – тет сăвăҫ (П.Эйзинпа калаҫнинчен. 30.07.1991.). – Пур енчен те сыхласа, хупăрласа, сăнаса тăратчӗҫ. Ирӗклӗн пурăнма, сывлама та май ҫукчӗ. Мӗн те пулин чунтан калас килетчӗ сăмах... Унччен эпӗ ыттисем пек ҫырма тăрăшнă. Хама килӗшсех кайман ӗнтӗ. Ăнсăртран ман хăй тӗллӗн ҫуралса тухрӗ ҫак сăвă ("Тумлам", 1961. – Ю.Я.). Вăл мӗнле ҫыраннине эп ăнланма та пултараймастăп. Ăна сăвă тесе каламалла та мар ӗнтӗ. Хăй тӗллӗн капланса тухрӗ те вăл... Ҫакăн пек вырнаҫса тухрӗ. Метала ирӗлтерен те ăҫта та пулин яран - вăл хăй тӗллӗн формăланса ларать. Ҫапла пулса тухрӗ пулмалла вăл".

Жан Поль Сартр ("Мӗн вăл литература?"): "Пурăнăҫ (пур ăн, пур ăнăҫ – бытие) хумӗ пирӗн урлă чупнине эпир ăнланатпăр. Анчах ку хума пултараканнисем эпир маррине те пӗлетпӗр. Пӗр вӗренекен ыйтнă: "Ӳкерчӗке ӳкерсе пӗтернине епле пӗлмел-

ле?" – "Ӳкерчĕкӳ çине пăхса эпех турăм-и кăна?" – тесе хăвăнтан тĕлĕнсе ыйтан пулсан", – хуравланă вĕрентекен".

Çын çинчен, çынлăх çинчен ăс шайĕнче калаçма пулать. (Çĕнйĕркелӳ (перестройка) пуçлансан "Çынлăх, чунлăх, чăнлăх" пирки Чăвашра та самай шавласа илтĕмĕр.). Эйзинăн ку ĔÇ ("Унтан аслă ĕç çук", – тет Сартр) хăй тĕллĕн пулать. Вăл çак ĔÇЕ тума килнĕ тесе шутлатăн ирĕксĕрех. "Çынна, çутçанталăка, тĕнчене хӳтĕлесе тăракан Хăват ачи", – тет Иосиф Дмитриев Эйзин пирки.

Иван Юркин чăваш йăвашлăхне Турăпа çыхнине асра тытса Эйзин пирки "Турă ачи" тенĕ пулăттăм эпĕ. "Чăн-чăн чăваш – тĕнчери чи лайăх çын, – тет Эйзин (Калаçуран. 30.07.1991), – ун пек çынсене пĕр виççĕ пĕлетĕп – мана çитет". Халăхне те эпĕ Турă халăхĕ тенĕ пулăттăм. Çепĕçлĕх, йăвашлăх, ачашлăх, ăшă кăмăл... – Турă паллисем. "Мăшкăл айĕнчен чĕрĕ тухнă чĕлхе тĕнчере çухалмĕ", – тет Çеçпĕл "Чăваш сăмахĕ" тĕрленчĕкĕнче (1920). Усал тĕнчене парăнман халăх та çухалмĕ. ХХ ĕмĕр курайманлăх, хаярлăх, усаллăх... çинче никĕсленнĕ теме пулать. Усал тĕнче куссипе кусманни – паттăрлăх. Чуна усала кĕртменни - паттăрлăх. Чуна чулланма паманни – паттăрлăх. Ачашлăха упрани – паттăрлăхран та паттăрлăх...

Мĕтри Юманăн "Пӳлĕх йăмри" хайлавĕнчи (1930) Пихампар Хурăнне йăвантараканни – Мăн Хаяр. Петĕр Эйзинăн Энехмет юманне вăратса юр юрлама хавхалантараканни – ачаш, ăшă çил:

Энехмет хыçĕнче
мăн юман.
Энехмет çырминчи
ват юман.

Виçĕ ĕмĕр ларать
ешерсе,
виçĕ ĕмĕр ларать
тĕлĕрсе.

Кассăн-кассăн килсен
ачаш çил,
кассăн-кассăн вĕрсен
ăшă çил,

ыйхăран вăранать
çав юман,
юрлама тытăнать
çав юман.

Эп тăратăп унта
темĕнччен,
эп тăнлатăп ăна
чылайччен.

Ват юманăн сасси
мĕн сасси?
Иртнĕ ĕмĕр сасси –
ун сасси.

Пурнăç йывăççине вăратма ачаш кăмăл кирлĕ, тет сăвă.

К.В.Иванов:

Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем!
Тапран эс вăрçма, выçă халăх!
Халăх хай çиллине кăтарттăр!
Малалла, малалла, малалла!
(Вăранăр, тапранăр! (1906))

Эйзин: "Халăх хăй çиллине мар – çынлăхне, Турă панă кăмăлне кăтарттăр", – тет. Малашлăха вăрçă-харçăра мар - килĕшӳре курать:

Лаша кӳлеççĕ –
Ĕне хĕпĕртесе тăрать.

Ĕне сăваççĕ –
Кушак хĕпĕртесе ларать.

Йăвашлăх, ăш кăмăл... – пире, чăвашсене, Турă пани. Çакна ман чун таçтан сисет, пĕлет. Эйзинăн поэзийĕ те çак сĕмленĕве çирĕплетет.

**Юрий ЯКОВЛЕВ, тĕпчевçĕ**

# Сăвăç пурнăçĕнчи паллă пулăмсем

Петĕр Эйзин (Петр Егорович Димитриев) 1943 çулхи çурла уйăхĕн 1-мĕшĕнче Элĕк районĕнчи Энехмет ялĕнче çуралнă. 1965 çулта Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă. Пĕр вăхăт Шăмăршă тăрăхĕнче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентсе пурăннă. Совет Çарĕнче хĕсметре пулса таврăннă хыççăн Тракри (Красноармейски) «Ял пурнăçĕ» район хаçатĕнче ĕçленĕ. Малтанах литература ĕçченĕ, каярах яваплă секретарь пулнă. 1968 çулта Шупашкара куçса килнĕ, 2005 çулччченех Чăваш кĕнеке издательствинче вăй хунă, корректортан тĕп редактора çитнĕ.

1962 çултанпа пичетленет. «Виçĕ хĕлĕх» кĕнекери (1971 çулта В.Тимаковпа тата А.Аттилпа пĕрле кăларнă) унăн «Çураçу» ятлă сăввисен ярăмĕ чăваш поэзине хайне евĕрлĕ те çĕнĕ сасăллă сăвăç килнине пĕлтернĕ.

Халиччен Петĕр Эйзинăн çакăн пек сăвă кĕнекисем пичетленсе тухнă: «Кăвайт» (1976), «Сар хĕвел» (1979), «Çĕмĕрт çути» (1980), «Тилĕ тус» (1983), «Анне пехилĕ» (1986), «Юлашки çил-тăман» (1991), «Савни юррисем» (2003); вырăсла: «Весенняя капля» (1982), «Костер сквозь снег» (2003).

П.Эйзин — 1980 çултанпа Раççей писателĕсен союзĕн членĕ. 1994 çулта ăна Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн хисеплĕ ятне панă. 1997 çулта вăл Митта Ваçлейĕ ячĕллĕ премине тивĕç пулнă.

**Лидия**
**САРИНЕ**

# Хӗве хупман хӗр



## Калав

Амӑшӗ килсе кӗнӗ чухне Маруҫ кресло ҫинче вӑрӑм йӗп вӗҫӗсене вылянтарса кофта ҫыхса ларатчӗ. Аллинчи ӗҫне пӑрахса siксе тӑчӗ те амӑшне хирӗҫ васкарӗ, унӑн тулли сумккисене кухньӑналла ҫӗклесе кӗчӗ.

– Иртенпех кӗтетӗп. Мӗнле ҫитрӗн? Автобусӗ часах пулчӗ-и? – ыйтрӗ амӑшӗнчен. – Каллех тем те пӗр тултарса килнӗ ӗнтӗ – чул пек йывӑр.

Ялампи пуҫӗнчи хулӑн тутӑрне салтрӗ, тарӑн калушне хывса алӑк патне лартрӗ, вара тинех ҫӑмӑллӑн сывласа ячӗ. Саппун вӗҫӗпе тарлӑ питне шӑлкаларӗ.

– Ан та кала-ха, хӗрӗм, – алне сулчӗ Ялампи. – Халӑх таҫта каять – аран ларса килтӗм. Хулана килес пур пурне те пӑртакшар та пулин чиксе килес килет-ҫке, чун чӑтмасть. Кишӗрӗ, купӑсти, ыхри, суханӗ, хаярӗ... Ара, кунта калама ҫук хаклӑ теҫҫӗ те. Килте кам ҫиет? Мана пӗччене, мӗн, нумай кирлӗ-им?

– Кунашкалах ҫӗклемелле марччӗ. Кӑна эпӗ те аран ҫеҫ йӑткалатӑп та вара! Ай, анне, аллусем! Аллусем мӗн тӗслӗ!

Амӑшӗ хуралса хытнӑ аллисене ҫавӑркаласа пӑхрӗ:

– Ҫусан тасалать тетӗн-и, ачам? – пӑшӑрханчӗ ватӑ ҫын. – Ҫӗркаҫ хур ҫӑвӗ те сӗрсе пӑхрӑм – усси ҫук. Пӳрнесем йӑлт ҫуркаланса кайрӗҫ ҫав. Хӑҫан пӗтӗ ку ӗҫ, хӑҫан хӗл ларӗ? Хӗллех апла мар-ха. Ҫӗрулми кӑларнӑ вӑхӑтра ахаль те алӑсем питӗ пӗтеҫҫӗ, чӑнах та. Ним тума та ҫук, пирӗн, ялти ҫынсен, чӑтас пулать.

ПРОЗА

Çапла калаçкаласа кăшт сывлăш çавăрнă хыççăн амăшĕ тĕпеле иртме тăчĕ. Пĕр-икĕ утăм турĕ те малалла иртме хăймасăр чарăнса тăчĕ. Аллине хуллен сăтăркаласа хĕрĕ çине кăнн пăхрĕ:

– Ай-тур-тур! Ку кавире хăçан илтĕн, хĕрĕм? – тĕлĕнчĕ Ялампи. – Урайне сарма шел мар-и кăна?

Маруç ваннăйне кĕрсе тапăчки илсе тухрĕ, амăшне тыттарчĕ:

– Тăхăн-ха çакна. Атя, ирт. Хăраса ан тăр, – чечеклĕ палас тăрăх хăюллăн утрĕ Маруç. – Кил, кил. Тĕпеле ирт.

Ялампи тапăчки тăхăнчĕ, асăрханса малалла иртрĕ. Хĕрĕ ним пулман пек кулкаларĕ. Пŷлĕм-йĕри тавра сăнакан амăшĕ стена çинчи çемçе кавир умне кăштăртатса утса пычĕ, кушăрханă аллисемпе маччаран урайне çити тăсăлса тăракан кавире сăтăрса пăхрĕ:

– Кунашкал япалана... Кăна чылайччен пăхса тăрас пулсан куç-пуç алчăраса кайĕ. Кур-ха, кур! Кун пек паха япалана илме мĕн чухлĕ укçа кирлĕ. Ай-яй!

– Анне, эс мĕн? – ун çине кăмăлсăррăн пăхрĕ Маруç.

– Кăштах ĕçмелле пулчĕ-ха çав, – аванмарланса куçне тартрĕ Ялампи. – Апла ан пăх-ха ман çине, туршăн та.

Тин кăна кулкаласа калаçакан хĕрĕ чŷрече еннелле пăрăнчĕ, унтан кресло çине витнĕ капăр çиттисене тŷрлеткелерĕ. Тусан çук çĕртенех шăлкаласа илчĕ.

– Ĕнер нимене каймалла пулчĕ-çке, тус-инкŷсем пŷрт хăпартрĕç. Каймасан та аван мар. Паян та, хулана килме тухсан, вĕсен умĕнчен иртсе каймалла пулчĕ. Чŷречерен шаккаççĕ, кĕрсе тухмасан аван мар пек туйăнчĕ, – тŷрре тухма тăрăшнăн каласа кăтартма тытăнчĕ Ялампи. – Ĕçес мар тесен те ĕçмелли тупăнсах тăрать ялĕнче, чăнах та.

– Нимене каймасан та ю ратчĕ пуль, ахаль те сывлăху начар, – ун çине пăхмасăрах сăмах хушрĕ Маруç.

– Ай, ачам, çапла та-ха вăл, ĕçлекенсем çукрах-çке, ĕçлекенсем çук. Хальхи çамрăксем хăйсемшĕн ытларах тăрăшаççĕ. Эпир унашкал пулман, ĕлĕкрен пĕрле ĕçленĕ, пĕрле ĕçсе-çинĕ. Пĕр-пĕрне пулăшмасан мĕнле пурăнăпăр? Çын кирлĕ пулать вăл, тепĕр чухне хама та пулăшаççĕ. Ниçта кайса кĕме çук, ачам, тепĕр чухне ирĕксĕрех кŷршĕ-аршă патне чупатăн.

Каçхине, апат çинĕ вăхăтра, амăшĕ каллех ялти хыпарсене каласа кăтартрĕ.

– Пŷрт лартасси çăмăл мар, ай-яй, çăмăл ма-а-ар. Ирхине çын сахалччĕ, каярахпа пыма пуçларĕç. Тĕттĕм пулсан тин хăпартса пĕтертĕмĕр. Мĕнле пĕтертĕмĕр – çапла çумăр çуса ячĕ, çĕрĕпе лŷшлеттерчĕ. Вуникĕ сехетченех ĕçсе-çирĕç. Пĕри те тепри пырать. Ĕçлеме пыракан нумаях мар, ĕçме тесен такам та тупăнать унта, Çимкăпа упăшки те кăнтăрла иртсен тин пычĕç, пуринчен ытларах ташласа юрларĕç. Çимка вĕр-çĕнĕ кĕпе тăхăнса пынă. Упăшкипе хире-хирĕç тăнă та такмак каласа сикеççĕ, – аллисемпе хăлаçлансах каласа кăтартрĕ Ялампи. – Çимка урай варрине тухса тăнă та, эй, саркаланать:

Кĕпийĕ те парашют,<br>Саппунĕ те парашют!

– тет. Ах, çав, Раманĕ, ăна хирĕç тăнă та чалт-чалт-чалт! сикет, автан пек:

Ийййа-но! Ийййа-но!
Ман хамӑн та...

Хӗрӗ амӑшӗ ҫине тӗлӗнсе пӑхрӗ. Ялампи хӑй тӗллӗнех лахлатса кулса ячӗ:

– Чи интересли ку мар-ха унта, – апат ҫиме чарӑнсах каласрӗ вӑл. – Кайран, ара, киле кайма тухсан Ҫимка ҫӗнӗ кӗпипе пӗррех кӗрсе ӳкрӗ пылчӑк ӑшне! Ну, лайӑх кӗрсе ӳкрӗ вара, ай-яй чампӑлтатрӗ лапра ӑшӗнче. Ӳсӗрӗлсе кайнӑскерне никам тытса чараймасть вӗт, ура ҫине аран-аран тӑчӗ те ҫав-ҫавах ташлама хӑтланать:

Саппунӗ те парашют!
Кӗпийӗ те парашют!

– тесе сикет. Хӑйӗн ҫине пӑхма май ҫук, тӑр пылчӑк... Ха-ха-ха! – Маруҫ та каҫӑхса кайсах кулчӗ амӑшӗпе пӗрле.

Апат хыҫҫӑн вӗсем телевизор пӑхма ларчӗҫ. Маруҫ тӳрех кофта ҫыхма тытӑнчӗ, амӑшӗ кресло хӗррине вырнаҫрӗ.

– Хамӑрӑн та кӗлет тӑрне ҫумӑр анать те ҫав, – кулянса пӗлтерчӗ Ялампи пӑртак чӗнмесӗр пӑхса ларнӑ хыҫҫӑн. – Ку хаклӑ кавирсене иличчен тимӗр листи илмеллеччӗ пуль.

Маруҫ шарламарӗ, тепӗртакран йӗпсене вылятма чарӑнчӗ, шухӑшлӑн телевизор ҫинеллех пӑхса ларчӗ. Амӑшӗн сӑмахӗсем яланхи пекех кӑмӑлне хуҫасса сисет вӑл.

– Текех эп вӑй ҫитерейместӗп ӗнтӗ, – мӑкӑртатрӗ Ялампи. – Ҫынран та аван мар.

– Мӗн тума кирлӗ мана кӗлет? – вӑрӑм йӗп вӗҫӗпе тутине хуллен сӑтӑрчӗ Маруҫ, телевизор ҫинчен ҫаплах куҫне илмесӗр.

– Епле мӗн тума пултӑр? Килти пурлӑх кама юлать тата?

Хӗрӗ диван ҫумне ӗшенчӗклӗн таянчӗ.

– Супрӗ хӑйӗн кӗлечӗпе, – терӗ вӑл ҫыхма пуҫланӑ кофтине айккине хурса. Кӑмӑлсӑрланнӑ амӑшӗ пӗр хушӑ калаҫмасӑр ларчӗ.

– Тимӗр мӗн хакне пӗлетӗн-и эс, анне? Тимӗр туянас пулсан халь ҫаппаҫарамас юлан. Пӗр листи пин тенкӗ майлӑ тӑрать.

– Ҫак кавирсене иличчен-и?.. Мӗн тума кирлӗ кусем, кам курать?

– Капла хуть хваттере килсе кӗме кӑмӑллӑ. Курас килми пулчӗ манӑн пушӑ стенасене.

– Кам валли илетӗн-ши, пӗрмай япала туянатӑн. Ялта – ял курать. Ҫын иртсе ҫӳрет, кам кил-ҫурчӗ тесе пӑхса иртсе каяҫҫӗ. Кунта кам курать?

Маруҫ чӗркуҫҫисене аллисемпе ҫавӑрса тытрӗ.

– Вилес пулсан та кавир ҫине пӑхса вилем, – те шӳтлерӗ вӑл, те чӑнласах каларӗ – амӑшӗ ҫакна ӑнланмарӗ. Чечеклӗ кавир ҫине тӗлсӗррӗн пӑхса каллех калаҫмасӑр ларчӗ.

Хӗрӗ тӑхӑр пин тӳлесе кавир илнине пӗлсен Ялампин кӑмӑлӗ питӗ пӑсӑлчӗ. Ҫитмӗле ҫитнӗ карчӑк хулана сайра-хутра ҫеҫ килсе каять. Ытти нумай ватӑ пекех вӑл ялта пурӑнать, ватлӑх кунӗсене хӑр пӗччен ирттерет. Хулана куҫса килме килӗшмест, хулара пурӑнма хӑнӑхнӑ хӗрӗ – яла пурӑнма каясшӑн мар. Пурӑнасса та ҫителӗклӗ пурнӑҫпа пурӑнать вӑл. Пурте пур унӑн. Вутӑ илес

хуйхă çук. Çырмаран кĕвентепе шыв çĕклемелле мар. Ăшă, таса, çутă. Нумай пулмасть стенка-шкаф илсе лартрĕ. Халĕ, ав, урайĕнче те, стена çинче те чечеклĕ, капăр кавирсем куçа çиеççĕ. "Хакне каламалла марччĕ, çитрĕ ĕнтĕ мăкăртатмалли", – ӳкĕнчĕ Маруç ăшĕнче.

Стенкăран тĕрлĕрен йăлтăркка савăтсем курăнса лараççĕ. Ылтăн шывĕпе сăрланă кашăксем, витĕр курăнакан хрусталь савăтсем туллиех лартса тултарнă унта. Чи варринче, курăнмалли вырăнта – пысăк пукане. Унăн майне тĕрлĕ çутă шăрça çакса тултарнă. "Курăр! Эп мĕнлерех чипер!" тенĕн вăл пуçне каçăртнă. Юнашар – пĕчĕк арча. Ăна уçса хунă, хаклă йышши духисем курăнса тăраççĕ. Кĕтесре – хĕр чухнехи портречĕ. Çаврака питлĕ, чипер пĕчĕк туталлă, чакăр куçлă çап-çамрăк Маруç кăшт вăтанарах пăхать. Черченкĕ таса сăн-пит. Ачалла тулли питçăмартисем. Пурçăн тутăр вĕçĕсем кăкăр тĕлне усăннă. Тахçан шӳтле-шӳтлех шурă пĕркенчĕк пĕркенсе ӳкерттернĕ сăнӳкерчĕк те пурăнать унăн. Ăна та пысăклаттарнăччĕ вăл. Мăшăрсăрмĕнсĕр, пĕччен пуçпа шур пĕркенчĕк пĕркенсе сăн ӳкерттернĕшĕн кайран темччен ӳкĕнсе пурăнмалла пулчĕ унăн. Чăн пурнăçра ăна тăхăнса кураймарĕ. Сăнӳкерчĕке вăл çын курмалла мар вырăна пуçтарса хучĕ. Çул хыççăн çул иртрĕ, тăр пĕччен пурăнакан Маруç хăш чухне çав сăнӳкерчĕке тахçанччен куç илмесĕр пăхса ларать, ăна ытараймасăр пӳрни вĕçĕсемпе ачашшăн сăтăрса илет те каллех тирпейлĕн майласа чиксе хурать. Тĕпелте тĕк тӳшек сарнă çӳллĕ вырăн, мамăк минтерсем. Краватьăн икĕ енче шурă чĕнтĕр карăнса тăрать. Çавăн тĕрлĕ илĕртӳллĕ вырăн çинче Маруç паян кунчченех тăлăххăн выртса-тăрса пурăнать.

Аллисене хире-хирĕç хуçлатса ларакан амăшĕ шăппăн хашлатса илчĕ, çавçавах урайнелле пăхса ларчĕ.

– Хăма туянмаллаччĕ. Витене пăсса юсанă пулсан та юратчĕ, – калаçрĕ Ялампи пуçне çĕклемесĕрех.

– Хăма? Пĕр кубометр хăма мĕн хак тăнине пĕлетĕн-и-ха эсĕ, анне?

– Темле хаклă пулсан та укçаран ытла хаклă мар. Каларăм та сана – итлемерĕн. Çынран аван мар.

– Мана тем тума кирлĕ пуль.

– Кама кирлĕ эппин, сан çине шанмасан кам çине шанас манăн? – тӳрленсе ларчĕ амăшĕ. – Пӳрчĕ-çурчĕ, вити-кĕлечĕ пурте санăн...

– Ну, анне, шухăшласа пăх-ха хăвах, мĕн тума кирлĕ мана кĕлет тавраш? Мĕн, мана хĕве хупаççĕ-и унта, качча каясси пур-и? Аттепе иксĕре тахçан хĕве хупнă та, иксĕр унта чуп-чуп тунă та – манаймастăн. Ялан вите, кĕлет санăн.

Вата çыннăн йӳçĕтнĕ панулми пек пĕркеленсе кайнă пичĕ çине хĕрлĕ пăнчăсем тапса тухрĕç. Вăл ăшăрхаса кайрĕ, каллех пуçне пĕкрĕ.

– Эй-яй-яй, кама хыврăн пуль, кама хыврăн? – ӳпкелешрĕ вăл хăй тĕллĕн. – Кай, ытла та...

– Ак, тытап та пуçтарса илетĕп урайне сарнă паласа. Кăларса ывăтатăп балкон çинчен. Ларах уруна шăнтса!

Тарăхса кайнă хĕрĕ çине чăрр! пăхрĕ Ялампи:

– Эп пĕр пус çумне икĕ пус хушрăм, сана çын тăвас тесе тăрăшрăм! Эс халь

тăван киле пăрахасшăн-и? – хăтăрса тăкрĕ вăл – Яла ан култар, ачам. Яла ан култар. Кам хĕрĕ – çавăн хĕрĕ, тейĕç.

Сăмах çине сăмах пулчĕ, кĕçех амăшĕпе хĕрĕ хытах хĕрсе кайрĕç.

– Килмессерен янăрашма тытăнатăн. Пĕр пуçласан чарăнма пĕлместĕн, – диван çинчен сиксе тăчĕ Маруç. – Çитет! Илтес килми пулчĕ! Чарăн!

– Чарăнмастăп! Ан та шутла! Чарăнмастăп!

– Ну, кăшкăр эппин пыру çурăличчен. Кӳршĕсем илтрĕç пуль.

– Илтчĕр! Пĕлчĕр! Эс мĕнлине, ан тив, пурте пĕлчĕр! Эп, мĕн, камит кăтартмастăп пуль кунта? Эп ухмаха ермен-ха. – Тарăхса кайнă Ялампи ура çине сиксе тăчĕ, аллипе кăкăрне çапса кăшкăрма пуçларĕ: – Эп... эп хĕрарăм пуçпа пӳрт лартнă! Сан ман çине кăшкăрас пулсан, ман çула çитиччен пурăнмалла! Ан чĕн! Ан чĕн!

– Çав ĕнтĕ халь санăн: эрех ĕçсе килтĕн те чарăнма та пĕлместĕн!

– Ĕçнĕ пултăр! Сан ĕç çук. Мана эс ĕçтермен! – Тата хытăрах кăшкăрма тытăнчĕ карчăк ку сăмахсене илтсен. – Эп халиччен те хам ятран çур литр пуçласа ĕçмен. Çынсем, ав, çамрăклах ĕçсе килĕрен-киле ĕçмелли шыраса çӳреççĕ... Эп хама хам пĕлетĕп. Мана никам усал каламан ку таранччен! Эс, вăт... эс чăнах та...

– Эпĕ мĕн турăм вара? Кала-ха, кала! Эп мĕскер-ха?

– Эсĕ-и? Эс çамрăклах ял çыннисене хăв çинчен калаçтартăн. Сана пурте пĕлеççĕ.

– Сана хăçан намăс кăтартрăм, анне? Кала! Халех!

– Хаяр! Хаяр! Çавăнпа никам та качча илмен сана! Çавăнпах ватта юлтăн!!! – талăртатрĕ Ялампи хĕрне хирĕç тăрса.

Маруç сăнран шурса кайрĕ, тутине çыртрĕ. Куçран шăтарасла пăхса амăшне хирĕç майĕпен утма пуçларĕ.

– Тухса кай! Халех тухса кай ман хваттертен! Сана пула ватта юлтăм! Сана пула ĕмĕре сая ятăм! Сана пула çак çула çитсе мăшăрсăр пурăнатăп! Эс, мĕн, манса кайрăн-и? Хăв мĕн хăтланнине, мана епле улталанине манса кайрăн-и?

Шикленсе ӳкнĕ амашĕ унталла-кунталла пăхкаларĕ. Унтан кресло çумĕпе шăвăнса каялла, стена çумнех кайса тăчĕ.

Хĕрĕн тути чĕтреме пуçларĕ, куçĕсем тарăхупа тулса ларчĕç.

– Ах, мур карчăкки! Эп сана-и? Эп халь...

– Хура-а-ах! Хĕр вĕлере-е-ет! Çуратса ӳстернĕ хĕр амăшне вĕле-ре-ет! – кăшкăрчĕ хĕрĕнкĕ Ялампи мĕн пур вăйран.

Хальччен амăшне пӳрнепе тĕкĕнмен Маруç вăл çапла кăшкăрма пуçласан ниçта кайса кĕрейми тарăхса кайса алăк патнелле вирхĕнчĕ. Алчăранă куçĕсемпе тĕлсĕррĕн пăхкаларĕ. Çав вăхăтра куçĕ тĕлне амăшĕн урайĕнче выртакан кивĕ сумкки лекрĕ. Ним тума аптăраса вăл çав сумкăна йăпăр-япăр ярса тытрĕ те алăк уçса ăна пиллĕкмĕш хутран вăйăнлаттарма тăчĕ. Çӳлелле çĕкленĕччĕ, çав вăхăтра сумкки уçăлса кайрĕ: ун ăшĕнче çур çăкăр, пĕр çăмха, тепĕр мăшăр çăм нуски курăнса кайрĕ. Маруç тăруках çĕре кукленсе анчĕ, икĕ аллипе пуçне çатăрласа тытрĕ...

Çак каç амăшĕпе хĕрĕ çывăраймарĕç. Мĕн кăна шухăшламарĕç пулĕ вĕсем

çĕр каçиччен. Анчах пĕри те хăю çитерсе сăмах пуçараймарĕ. Темĕн тытса чарчĕ вĕсене пĕр-пĕринчен каçару ыйтма.

Пÿлĕмре шăп. Хушăран çеç "Свияга" холодильник кĕрлесе кайни илтĕнет. Пĕр-пĕрне шелленипе чĕрисем иккĕшин те çурăлса тухаслах ыратрĕç. "Ашшĕ-амăшĕ ача-пăчана ялан хÿтернĕ. Анчах Маруç ача мар-çке текех – мăн çын. Çамрăк та мар ĕнтĕ, мĕншĕн ытла йывăр каларăм-ши?" – чунтанах кулянчĕ, çине-çинех вăрăммăн сывларĕ ватă çын. – "Эх, мĕскĕн. Ĕмĕрне те пĕчченех ирттерет-çке. Вăхăтĕнче чармалла марччĕ. Ах, чармалла марччĕ. Петяпа тĕл пулма чармалла пулман. Хамах ухмах пултăм. Хамах айăплă. Пуриншĕн те эпĕ айăплă. Сăнĕ-пуçĕ те пур, хваттерĕ те. Йĕркеллĕрех арçын çеç кирлĕ те çав". "Кÿрентертĕм. Пĕртен-пĕр анне çине кăшкăртăм. Урса кайнипе кĕçех кăларса ывăтмарăм, кам пур-ши ман пекки? Ăçта чикес çак намăса? Çакнашкалах тарăхмаллаччĕ-ши? Кирлехчĕ-ши çапла урса кайма? Урăх никам та çук вĕт манăн. Никам та, пĕр çын та. Çывăх çын та анне кăна. Мĕнле питпе пăхас ăна куçран? Мĕнле каçару ыйтас?" – пĕтĕм чунтан ÿкĕнчĕ хĕрĕ. Ĕнтĕ ăшĕ пĕçерекен пулчĕ, ыйхи пĕтрĕ. Пĕлет Маруç, пурне те чухлать: çăмăл мар амăшне пĕччен пурăнма. Ах, çăмăл мар. Вуттине те тиесе килмелле, пахчине те сухалаттармалла. Кирек те мĕнле ĕç тума çын куçĕнчен пăхмалла унăн. Пурин çинчен те шухăшласан Маруçăн ÿлесе йĕресси килет. Енчен те вăл çынсем пек мăшăрлă пулнă тăк амăшне те çăмăлрах пулатчĕ, çакнашкал пĕччен асапланман пулĕччĕ. Пурнăçра мĕншĕн ытла та айван пулчĕ-ха Маруç? Кам айăплă куншăн? Кам?! Мĕншĕн, мĕне пула вăл хăр пĕччен тăрса юлчĕ? Ыратакан кăкăртан вĕри сывлăш тухать, пыра каллех темле йÿçĕ чăмакка лакса ларать. "Эх, анне, анне-е-е!.. Мĕншĕн çапла хăтланчĕ-ши мăнтарăн? Мĕншĕн? Хăйĕн юратнă, айван çамрăк хĕрне, ытла та хавшак чĕреллĕскере, çапла хур кÿмеллеччĕ-и унăн?! Тăван тĕпренчĕкне мĕншĕн кăштах та пулин шеллемен-ха? Мĕн хăтланни пулчĕ ĕнтĕ? Кама усă пачĕ вăл хĕрне çапла улталани?" Пыра тулса ларнă йÿçĕ чăмакка тек пĕр вырăнта тÿссе тăраймасăр тăварлă шыв пулса пит тăрăх юхса анать, кĕçех мамăк минтер çине ÿксе сăрхăнать. Маруç çамкине ывăç тупанĕпе хуплать, нÿрелсех тăракан питне шурă çиттипе шăлать те каллех тарăннăн хашлатса сывласа ярать. Мĕн тери илемлĕччĕ çамрăк чухнехи пурнăç! Мĕн пек телейлĕччĕ вăл. Шухăшланă-и ун чухне çакнашкал пĕччен йĕрсе выртасса, çĕрĕ-çĕрĕпе ыйхă килменнипе асапланасса? Кам пĕлнĕ çапла пуласса, кам пĕлнĕ. Пурне те ĕненнĕ вăл. Хăйне ĕненнĕ пекех. Çуннă. Кĕтнĕ. Ĕмĕтленнĕ. Çунатланнă. Йĕнĕ-кулнă, вылянă-сикнĕ, утнă-чупнă, юрланă-ташланă, ыррине анчах шаннă. Пĕр ыррине кăна кĕтнĕ-çке пурнăçран? Никама та япăх туман, пурне те ырă суннă. Тĕрĕссипе, ун чухне вăрçма та, тарăхма та пĕлмен. Мĕншĕн вăрçас? Кама тарăхас? Юрату çулăмĕпе çунса-хĕмленсе тăнă вăхăтра никама та усал сунас килмест-çке. Никама та хур тăвас килмест. Кĕç вĕçсе кайма хатĕрленнĕ кайăк пек... Халь-халь улăхра тĕпĕртетсе чупса каяс тиха пек... Вăй-хал вĕресе тарать. Ĕмĕт çунат хушать. Тÿпере пĕр хура пĕлĕт татки курăнмасть. Йăнкăр-йăнкăр таса çутă, хĕвеллĕ... Пĕртен-пĕр сăлтава пула унăн пурнăçĕ йăлт пăтранса, улшăнса кайрĕ. Пурнăç тĕллевĕ пат сÿнсе ларчĕ. Пĕр кĕтмен, шутламан çĕртен...

Ачалăх, çамрăклăх... Пур-ши унран телейлĕ самант? Мĕнех юлчĕ-ши унран?

Тунсӑх? Ҫав манми, чаплӑ самантран халӗ пӗтӗмпе те тунсӑх кӑна тӑрса юлчӗ пулать-и-ха? Ҫаплах пуль ҫав. Тунсӑх тата... аса илӳ.

– Петя, атя, хӗр качча памалла вылятпӑр! Эпӗ хӗрӗ пулатӑп! – йӑкӑлт-йӑкӑлт сиккелет ултӑ ҫулхи пӗчӗк Маруҫ. – Эсӗ – каччи. Ну, эппин, авланаканни. Килӗшетӗн-и?

Петя ун ҫине мӑнкӑмӑллӑн пӑхса илет. Аллинчи икӗ симӗс панулмие хире-хирӗҫ тӳнчлеттерет. Улмасенчен сӗтек пӗрӗхсе тухма тытӑнсанах ҫӑварӗпе ӗмсе илет.

– Ман халех авланас килмест, – тет вӑл.

– Апла пулсан эпӗ хамах качча та каятӑп, хамах авланатӑп! – пӗлтерет хӗрача.

– Хӗрачасем авланмаҫҫӗ. Ҫавна та пӗлместӗн, – панулмине тата хытӑрах хире-хирӗҫ ҫапать арҫын ача.

Маруҫ аллисене пилӗкӗ тӗлне тытса, пуҫне паттӑррӑн каҫӑртса хурать:

– Эпӗ такана ҫине ларатӑп та – качча каймалла вылятӑп. Туй арӑмӗ те хамах пулатӑп. Анне какрас икерчӗ пӗҫерет. Икерчӗ ҫине ҫу сӗрсе илсе тухатӑп. Ӑнт, – тет те килне кӗрсе кайма тӑрать.

– Юрӗ. Авланатӑп. – Маруҫа пӗр панулмине тыттарать Петя. – Анчах асту, лаши хам пулатӑп.

– Аха ҫав. Эсӗ лаши пулатӑн. Эпӗ туй арӑмӗ, хӗрӗ. Пурте пӗрле. Ӑнлантӑн-и?

– Ӑнлантӑм, ӑнлантӑм. Атя, кайрӑмӑр! Лашу ӑҫта?

Петяпа Маруҫ тӗттӗм кӗлетре иккӗшех выляҫҫӗ. Кунта йӑлтах тасатса пуҫтарнӑ, урайне кивӗ кӗрӗк сарнӑ. Хӗрача такана ҫине кӗрсе ларнӑ та пӗчченех туй юрри шӑрантарать. Кӗске ҫӳҫӗ тавра йӗрлӗ, кӑвак хӑюсем ҫыхса янӑ. Кантӑрапа кӑкарнӑ кивӗ таканана арҫын ача кӗлет тӑрӑх сӗтӗрет. "Тӑррр! Тӑпӑртик-тӑпӑртик-тӑпӑртик лаша чупать!" – тет вӑл тӑватӑ уран упаленсе.

– Ытла тӗттӗм. Кӗлет алӑкне уҫар-и?

– Аха.

Вӑл кӗлет алӑкне уҫать те каллех "лаша" вырӑнне кӳлӗнет.

– Тӑхта! Тӑхта! Туй арӑмӗсем урапа ҫинче тӑрса юрлаҫҫӗ. Эпӗ те ура ҫине тӑратӑп, ан васка! – тет хӗрача чӑн-чӑн туйри евӗр саркаланаканскер.

– Туллют-туллют туй килет!

Ай-йа-яра-ай-ара-а-а!

– Эс ӑҫтан туй арӑмӗ пулатӑн, эс халь – ман арӑм. Эп авланатӑп, сана качча илетӗп. Ҫавна та ӑнланмастӑн. Пӗрмай ан юрла-ха, лайӑхрах лар! – таканана сӗтӗрме чарӑнать Петюк. – Ӳксе ан юл тулькkӑш.

– Иййа ҫав, иййа! Эс мана качча илсе каятӑн. Унтан пире хӗве хупаҫҫӗ. Ҫакӑнти кӗлетех хупаҫҫӗ иксӗмӗре.

Арҫын ача сӑмсине кӗпе ҫаннипе сӑтӑрать, Маруҫ ҫине ним ӑнланмасӑр пӑхса тӑрать.

– Мӗнле хӗвене? Мӗн тума?

– Пӗлместӗп. Атя, чарӑнса ан тӑр! Эй! Яра пар! Э-э-эй! Ярапине хама пар! Кайрӑмӑр, Петюк! Вӗҫтертӗмӗр хӑвӑртрах! Унсӑрӑн хӗрӗ тухса тарать ак. Туллют-туллют туй килет, тухса курӑр кин килет! – ҫихӗрет хӗрача ҫинҫе сассипе.

– Лар! Лар! Ура ҫинче ан тӑр!

– Лармастăп! Туй ачине туй хушнă-а-а! Кун пек пурте кураççĕ, пурте тĕлĕнеççĕ. Пĕтĕм ял халăхĕ туй кура-а-ать! – тутăрĕпе сулкалать такана çинче тăрса пыракан Маруç.

– Пирĕн кинĕм пуласси-и-и!

Пирĕн...

Тăвата уран упаленекен Петюк такана кантрине пĕррех туртрĕ – енчен-енне саркаланакан хĕрача чикеленсе кайрĕ. Урайĕнче упаленекен хĕрача çине кăнн пăхса хытса кайрĕ Петюк, куçĕсем чарăлчĕç. Маруçăн кĕпи уçăлса кайнă, айне нимĕн те тăхăнман вăл. Унăн çара ӳтне курсан арçын ача вăтаннипе тăруках хĕрелсе кайрĕ, хĕрача ăна-кăна ăнкарса иличчен пуçне пĕкрĕ те кĕлетрен чупса тухса кайрĕ. Ун хыççăн алăк шанлатса хупăнса юлчĕ.

– Петюк! Тăхта-а-а! Ма выляса пĕтермесĕрех каятăн çак? Икерчĕ кам çиет? Ан кай-ха-а-а-а! – ыратакан чĕркуççине вĕре-вĕре кăшкăрса юлчĕ хĕрача.

– Анне çывăрать-ши? – тепĕр енне çаврăнса выртрĕ Маруç.

Хăçан ир пулать-ши? Хăвăртрах çутăлтăрччĕ çеç. Ирхине сăмах хушатех, кăмăлĕ çаврăнса кайĕ, тен. Амăшĕ çав-çавах чĕнес çук халĕ. Çывăрать-ши е çывăрнă пек çеç пулса выртать. Çук, ыйхи килместех Маруçăн. Темĕн чул çывăрас тесен те ыйхă вĕçет. Аллисене пуçĕ айне хурса вăл каллех тĕттĕмелле пăхса выртрĕ.

* * *

«Эпĕ – артистка. Эпĕ чăн-чăн артистка», – тĕкĕрти хăй çине киленсе пăхать сарлака юбка тăхăннă хĕрача. Хăвăртрах çитĕнсе çитесчĕ кăна. Шап-шурă кĕпе тăхăнĕ вăл, сцена çине акăш евĕр шуса тухĕ те пурте илтмелле уçă сассипе янăратса ярĕ. Юрласа пĕтерсенех пурте шăпăр-шăпăр алă çупса ярĕç. Акă, ăна татах сцена çине чĕнсе кăлараççĕ. Унтан татах, татах... Маруç сăпайлăн пуçне тайĕ, ун еннелле чечек çыххисем ывăтĕç, саламлĕç. Çапла ĕмĕтленсе хăйне чылайччен пăхса тăрать вăл, унтан ассăн сывлать, хăйне хăй витлесе илет. Çӳçне сапаласа ярса пĕр вырăнта тăрстти-тăрстти сиккелет, унтан тӳп-тӳрĕ тӳрленсе тăрать:

– Халĕ сире... Çук, апла мар-ха, – пуçне пăркалать хĕрача. Çичас çĕнĕрен пĕлтеретĕп. – Упасаррова Маруся "Кăвак сирень" юрра юрлать.

– Упасарри Маруççи, çитĕ пуль сана тĕкĕр умĕнче саркаланма! – пӳрт алăкне уçса кăшкăрчĕ çав вăхăтра амăшĕ. – Атя-ха, кĕлетрен алă арманĕ çĕклесе килер. Атя, чаччас пыр!

– Халех! – сас пачĕ Маруç.

Вăл тĕкĕр умĕнчен пăрăнчĕ, хăвăрт пӳртрен чупса тухрĕ, пусма вĕçне çитсен качака пек йăлт-ялт сиксе анчĕ. – Анне, анне тетĕп, тăхта-ха! Анне, манран артистка пулать-ши, мĕнле шутлатăн? – канăç памарĕ ăна пĕртен-пĕр шухăш. – Тĕрĕссине кала-ха, эпĕ артистка-и?

Амăшĕ вăл каланине хăлхана та чикмерĕ, кĕлет алăкне уçса хучĕ, шăналăк çинчи сарă тулла чĕресе тултарчĕ. Хĕрĕ каллех тем калама тăчĕ – Ялампи çав-çавах хăй ĕçĕпе аппаланчĕ.

– Эсĕ пĕрне çĕкле, эпĕ – тепĕрне. Асту, асăрханса ил, ан тусанлан. Ку юбкăна килте тăхăнса ан çӳре терĕм те-ха сана, – хăтăрчĕ вăл каллех ун çине пăхмасăр.

– Анне, ман сас епле уçă, çапла-и? Сан шутпа мĕнле пек, эпĕ артист пулатăп-и? Шкул пĕтерсенех кайса пăхатăп. А-а-а-а! А-а-а-а! А-а-ай!

Ялампи алрманне икĕ аллипе çĕклерĕ те хулпуççи çине лартрĕ, хĕрача амăшĕ хыççăн утрĕ.

– «Артист! Артист!» – супрĕ паян. Артист пурнăçĕ шутсăрах паха тет-ши? – мăкăртатрĕ амăшĕ пӳртелле утнă май. – Курса ларма çеç вĕсем, капла пăхма анчах лайăх. Ан йăсла-ха, так, хăлха йӳçрĕ паян. Мĕнле пĕрмай юрлас килет вăл?

– Ах, çак анне вара... нимĕн те ăнланмастăн эс, – юрлама чарăнчĕ Маруç.

– Ăнланаканни тупăннă. Выльăх тухтăрне вĕренсе тухмалла. Унран ырри нимĕн те çук, ачам.

– Выльăх тухтăрĕ? Мĕскер?!

– Эпĕ тĕрĕсне калатăп. Аннӳ сăмахне итлес пулать.

Маруç тутине тăсрĕ. Сăнĕ тĕксĕмленчĕ.

– Эп сысна çăмарти касма каймастăп! Хуть çапса вĕлер, – татса хурать вăл. – Пурпĕрех сцена çине тухатăп. Манăн...

– Ан йăсла! Эп сана артист пулма çуратман!

– Эп сысна çăмарти касма çуралман!

– Выльăх тухтăрне пĕтĕм ял хисеплет. Пурте ун куçĕнчен пăхаççĕ, кирлех пулсан – пуç çапаççĕ. Выльăх вилсе выртма пуçласан, ай-яй... Хам та пайтах пуç çапнă эп вĕсене. Ĕç укçи те лайăх илеççĕ, – хĕрне ӳкĕте кĕртме тăрăшрĕ Ялампи. – Артистсем вĕсем паян кунта, ыран таçта. Час уйрăлаççĕ, час пĕрлешеççĕ. Сан, мĕн, качча кайса йĕркеллĕ пурăнас килмест-и? Çын ĕретлĕ пулас килмест-и?

– Ой, çак анне вара, пуçларĕ ĕнтĕ, – çамки пĕрĕнет Маруçăн.

– Мĕн пуçларĕ, мĕн пуçларĕ? Петя хыççăн ан кай, ачам. Вăл сана пăхас çын мар. Вăл вĕренсе тухĕ те – шăхăрĕ! – алне сулчĕ амăшĕ.

Кун пирки пĕрре мар тавлашнă амăшĕпе хĕрĕ. Ĕмĕчĕсем пысăкчĕ ун чухне Маруçăн. Вăл вăхăтра Петя хулара музыка училищинче вĕренетчĕ. Артистка пулас тесе çунса пурăнакан хĕрача та вунă класс пĕтерсенех документсене хатĕрлесе çитерчĕ, амăшне систермесĕр хулана тухса вĕçтерчĕ.

Вĕренме кĕрес текенсем нумайăнччĕ. Акă, Маруçăн та черет çитрĕ. Çав тери хăранипе кĕçех çухалса каятчĕ вăл, алăка уçсан малалла иртме те хăймарĕ.

– Сывлăх сунатăп! Стравствуйте! – чĕтререх тухрĕ унăн сасси.

– Кунтарах иртĕр! Кунтарах! – хушрĕç ăна.

Пĕри куçлăхне хыврĕ, сĕтел çине чавсаланса ларчĕ те ăна пуç тӳпинчен пуçласа ура тупанне çити сăнама тытанчĕ. "Мĕн шутлаççĕ-ши? Епле тиркешсе пăхаççĕ. Çук, мана вĕренме илес çуках кусем", – шухăшларĕ Маруç , хăй çавăнтах никам сисмелле мар симĕс кĕпине икĕ енчен турткаласа тӳрлетрĕ.

Ятарласа, хулана килме тесе вăл Мускавран килнĕ инкĕшĕн кĕпине, çӳллĕ кĕлеллĕ кĕп-кĕрен йăлтăркка туфлине тăхăннăччĕ. Çутă, сарлака хура пиçих-

хипе пилĕкне хыттăн çыхса лартнăскер аран сывларĕ. Инкĕшĕн тăвăр туфли урине чăтма çук хытă хĕстерчĕ.

– Хăвăр пултарулăха кăтартса парăр, мĕн тума пултаратăр? Мĕнле юрă, сăвă пĕлетĕр? – сĕнчĕç ăна.

"Пĕтрĕм!" – хăвăрт-хăвăрт тапма пуçларĕ çамрăк чĕре. "Мĕнрен тытăнмалла-ши? Сăвă калас-ши? Малтан юрласа кăтартас пуль... Епле пăхса лараççĕ пурте ун çине. Мăнкăмăлласкерсем. Тен, юптару?"

– Юрă юрласа пама юрать-и малтан? – тата ытларах пăлханса ыйтрĕ вăл.

– Юрать. Апла та юрать, – пуçне сулчĕ куçлăхне хывнă арçын. – Юрлăр.

– "Кĕтӳç ларать сăрт çинче!" – юрă ятне пĕлтерчĕ хĕрача.

– Мĕнле, мĕнле?

– Апла... эппин... "Пире парти ӳстерет" е "Кăн-кăвак сирень", – хăвăрт-хăвăрт калаçрĕ Маруç, вĕсем çине пăхнипе çан-çурăмĕ сӳлетсе кайрĕ.

Пурте шăпланчĕç. Хĕрача хăйĕн юратнă юррине пĕрремĕш куплетран пуçласа вĕçне çити юрларĕ.

– Çитĕ. Халĕ эпĕ мĕнле кĕвĕ калатăп – çавна юрла, – хушрĕ ăна фортепиано умĕнче ларакан шурă çӳçлĕ ватă майра. – Кунталла пăхма кирлĕ мар. Кунта нимĕн те çук, – асăрхаттарчĕ вăл тимлесе пăхакан хĕрачана. – Шурă клавишсем, хура клавишсем...

Маруç тек пăхмарĕ, тӳрленсе тăчĕ, юрлама хатĕрленчĕ. Хăй те сисмерĕ хĕрача, те ытлашши пăлханнипе, те чунтан тăрăшнипе – икĕ аллипе те пилĕкĕ тĕлĕнчен ярса тытрĕ. Харăсах икĕ клавиш çине пуснине тӳрех тавçăрса илчĕ вăл. Илтĕннĕ сасса хăйĕн уçă сассипе евĕрлесе кăтартнă хыççăн тата тепĕр тĕрлĕ кĕвĕ янăрарĕ, ун хыççăн кăшт урăхларах çемĕ илтĕнчĕ. Клавиш сассисем çинçелнĕçем çинçелсех пычĕç. Хăй пĕр такăнмасăр, пĕр йăнăшсăр юрланине сĕтел хушшинчисем кăмăллăн пăхса ларнинченех туйрĕ хĕрача.

– Чи сарлака диапазон, нимĕн те калаймăн, – мăкăртатрĕç комисси членĕсем хăйсем хушшинче.

– Виççĕмĕш октава... си бемоль. Да-а-а! – Куçĕсем йăлтăртатрĕç чи хĕрринче ларакан хура усиллĕ çамрăкăн.

– Упасаррова, çак самантра аннӳ вилсе выртнă пулсан мĕн тунă пулăттăр? – сасартăк пач кĕтмен ыйту пачĕ ăна режиссер.

Маруç куçне мăч-мăч хупкаларĕ.

– Мĕнле вилнĕ пулсан? – ыйтрĕ вăл тăруках ăнланаймасăр. – Кам вилнĕ?

– Аннӳ. Тăван аннӳ вилсе кайнă пулсан мĕн тăвăттăр халĕ?

Вăл шанк хытрĕ. Унтан, ăнран кайнăн, каялла чакрĕ, питне аллисемпе хупласа тытрĕ те шари! çухăрса ячĕ. Тăвăр туфлине пула урисем пăвăнсах ларнăччĕ – Маруç хăй сисмесĕрех урайне тĕшĕрĕлчĕ.

– Хватит. Достаточно! – чарчĕ ăна комисси членĕсенчен пĕри. Куççулĕпе чыхăннă хĕрача ниепле те ĕсĕклеме чарăнаймарĕ.

– Упасаррова! Упасаррова! Çитĕ, чарăнăр! – сĕтел хушшинчен тухса чупса пычĕç ун патне. – Шыв! Хăвăртрах шыв парăр ăна.

– Кирлехчĕ-ши?.. Кам шутланă?

– Темех мар, иртсе кайĕ, – хăйсем хушшинче калаçрĕç хăшĕсем. – Çутçан-

талăк пани çакă ĕнтĕ вăл, атьсем. Кунтан кĕтме пулать. Пысăк шанăç парать.

...Çав тери ывăннăн, аран-аран утса тухрĕ Маруç аудиторирен. Шăм-шакĕ лĕнчĕр кайрĕ унăн, пуçĕ çурăлса тухас пек тӳнлетрĕ.

– Экзамен тытайман пулас, йăлт шуралса кайнă, – пăшăлтатни илтĕнчĕ вăл коридорпа иртсе пынă чух.

Урама тухсан вăл пĕр хушă çамкине ывăç тупанĕпе тытса тăчĕ, йĕри-тавра пăхкаларĕ. Хĕртсе хĕвел пăхать иккен. Ăшă çил вĕрет. Вăл васкамасăр картлашкапа анчĕ, çывăхри улмуççисем айне тенкел çине сĕвĕнчĕ. Чи малтан пиçиххине салтрĕ, уринчи туфлине хывса пăрахрĕ. Тинех çăмăллăн сывласа ячĕ те пуçне тенкел хыçне тайрĕ. Мĕн амакĕ пулса иртрĕ – ăнланса пĕтерейменрĕ Маруç. Ытлашши пулмарĕ-ши? Анчах вăл хăй те йĕркеллĕн астуса юлаймарĕ-çке? Мĕнле пулса тухрĕ ку сцена. Тĕрĕссипе, вăл пач вылямарĕ. Маруç тӳрленсе ларчĕ, аллинчи "Экзаменационный лист" тесе çырнă пĕчĕк хут листине уçса пăхрĕ. "Пиллĕк" паллă лара парать. "Художественное мастерство" – "пиллĕк"! Чалтах сиксе тăчĕ Маруç, яп-яка асфальт çинче икĕ уран тăрст-тăрст сикрĕ, хута çине-çинех чуптурĕ. Иртсе çӳрекен çынсем хăй çине куларах пăхнине асăрхасан тин вăтанса хăвăрттăн тепĕр хут тенкел çумне лăпчăнчĕ, савăнăçне ниçта чикеймесĕр аллисемпе питне хупларĕ, пĕчĕк ача пек ахăлтатрĕ...

Улмуççи турачĕ çине килсе вырнаçнă сар пĕсехеллĕ кайăк вĕçĕмех чĕвĕлтетрĕ. Ахăртнех, вăл та ăна саламларĕ пулас. Турат çинчен турат çине сиккелерĕ те парлатса вĕçсе кайрĕ.

Хĕрача пуçне çĕклерĕ. Мĕн тери аван иккен çĕр çинче пурăнма! Мĕн тери ырă! Çут тĕнче те халичченхи пек мар, çуталса, ялкăшса тăрать тейĕн. Çакă вăл – телей! Акă ĕнтĕ вăл пĕрремĕш çитĕнӳ! Тин кăна пуçланать-ха унăн сукмакĕ. Çамрăк хĕрачан пĕтĕм тĕнчене ыталас килет çакă самантра.

Хальлĕхе пĕрремĕш тур кăна вĕçленме ĕлкĕрнĕччĕ-ха. Актерсен уйрăмĕнче конкурс питĕ пысăк. Ытти экзамен хыççăн ун патне хыпар яма пулчĕç. Çак вăхăтпа усă курса инкĕшĕ Маруçа хăйпе пĕрле Мускава ача пăхма илсе кайрĕ. Халиччен килтен питех тухса курман Маруçшăн Мускав хулинче пулса курасси чăн-чăн уяв пулчĕ.

Курса тĕлĕнмелли, чăнах та, темĕн чухлех пулчĕ вунçичĕ çулхи хĕршĕн. Каçсерен, инкĕшĕпе куккăшĕ ĕçрен таврăнсан, вăл Хĕрлĕ площаде, мавзолей умне кайса курчĕ. Хула урамĕсемпе васкамасăр утса çӳрерĕ. Пĕр-икĕ эрне пек пурăнсанах ăна хула пурнăçĕ йăлăхтара пуçларĕ, тăван килне каяс килчĕ. Ытла та кичеммĕн туйăнчĕ ăна кунта. Каçсерен те ыйхи килмерĕ. Хăвăртрах тăван ялне, юратнă каччине, амăшне курасса ĕмĕтленчĕ. Петюк самантлăха та ăшран тухмарĕ. Йĕкĕт ялта сахал пулать. Каникул вăхăтĕнче стройотрядпа Астрахань хулине е практикăна каять. Килтисем кăçал ăна Чулхула облаçне ĕçлеме илсе кайрĕç. Нумай пулмасть Маруç пĕр йĕкĕтпе паллашрĕ. Ытахальтен çеç калаçкаларĕ унпа. Шурă плащ тăхăннă, тĕксĕм куçлăхлă Анатолий "Энергетика" институтĕнче виççĕмĕш курсра вĕренет. Паллашнăранпа Анатолий ăна пĕрре мар ресторана чĕнчĕ. Вырăсла начартарах калаçакан хĕрача яхăнне те ямарĕ, хăйĕн унпа тĕл пуласах килменни çинчен те систерчĕ. Кун хыççăн йĕкĕт ресторан пирки текех сăмах тапратмарĕ. Ăна паркри илемлĕ вырăнсене, музейсене кăтарт-

са ҫӳрерӗ. Кун каҫиччен килте ача пӑхса ларакан хӗр унпа курнӑҫма пӑрахмарӗ. Ҫемьере кашӑк-чашӑк шакӑртатмасӑр пулмасть, паллах, хушӑран куккӑшӗпе инкӗшӗ те тавлашкалани пулкалать. Кун пек чухне Маруҫ хӑвӑртрах тухса кайма тӑрӑшать.

Пӗр каҫхине ҫапла пурте пӗрле апатланчӗҫ. Апат ҫинӗ хыҫҫӑн ялтан илсе килнӗ варенипе чей ӗҫрӗҫ, икерчӗ ҫирӗҫ.

– Мӗнле ытла тутлӑ пулчӗ паян икерчӗ, – арӑмне ҫурӑмӗнчен саврӗ куккӑшӗ. – Ытти чухне кун пек тутлӑ пулнине астумастӑп. Е хырӑм питӗ выҫнӑ-ши манӑн, э? Тавах тутлӑ икерчӗшӗн.

Кун хыҫҫӑн вӑл аллине хаҫат тытса телевизор умнерех вырнаҫрӗ. Маруҫ шӑпах хулана кайма пуҫтарӑнатчӗ.

– Куҫ харшисене хурат, тутуна хӗретмесен те юрать. Ахалех хӗрлӗ, – пӑшӑлтатрӗ инкӗшӗ ӑна халхинчен. – Асту, ытла чылайччен ан ҫӳре. Кукку мӑкӑртатать... Сӑмахӗ сана мар, ялан мана ҫеҫ лекет. Астунӑ пул!

– Аха, – пуҫне сулчӗ хӗр унпа килӗшсе. – Нумаях ҫӳремӗп.

Маруҫ хӑвӑрт тумланса тухса утрӗ. Тӗрӗссипе, унӑн ниҫта та мар, тӑван ялне каяс килет. Куҫ умӗнчен тӑван тавралӑх каймасть.

Метроран тухсан пӗр хушӑ пуҫне пӗксе шухӑша кайса пычӗ. Унтан вӑрӑммӑн сывласа илчӗ, васкамасӑр тӗп универмаг патне ҫывхарчӗ. Вӗҫӗ-хӗррисӗр хӗвӗшекен ҫынсем хушшинче Анатолие асӑрхарӗ. Вӑл ӑна яланхи вырӑнтах кӗтсе тӑрать. Аллинче – шӑтӑрти хутпа чӗркенӗ чечек. Йӗкӗт ӑна куҫран хӑюсӑррӑн пӑхать. Маруҫ кӑмӑлсӑррине те ҫийӗнчех туйрӗ.

– Мӗн те пулин пулчӗ-и? – ыйтать вӑл пӑшӑрханса. – Кам кӳрентерчӗ?

Хӗрача пуҫне сулкаларӗ.

– Ку сана, – чечекне Маруҫа тыттарчӗ Анатолий. – Пӗлетӗн-и, ман аннепе атте сана питӗ курасшӑн. Ҫук-ҫук, тем япӑх ан шутла. Вӗсем йӑлтах пӗлеҫҫӗ.

– Мӗн пӗлеҫҫӗ? – ун ҫине асӑрханулларах пӑхрӗ хӗр.

– Эсӗ чӑваш хӗрӗ иккенне каланӑ эпӗ, – куҫран пӑхрӗ йӗкӗт Маруҫа. – Вӗсем сана курасшӑн. Паллашасшӑн.

– Ҫакӑ ҫеҫ-и? – хӗр уйрӑлса утма тӑчӗ. Каччӑ шикленсе ӳкрӗ, ҫулне пӳлчӗ:

– Аттепе анне аван ҫынсем манӑн. Ахалех начар шутлатӑн.

Маруҫ ӑна куҫран чӑрр пӑхрӗ те нимех те шарламарӗ. Ытлашши сӑмах вакламасӑр вӗсем анаталла утса кайрӗҫ.

– Ой! Камсем килчӗҫ! Хӑҫантанпа кӗтетпӗр! Килӗр, килӗр! Иртӗр, иртӗр! – йыхӑрчӗ алӑка уҫнӑ-уҫман ҫинҫешке те шуранкарах чипер хӗрарӑм.

– Анне, ку шӑпах Маруся, – паллаштарчӗ Анатолий.

– Ах, мӗнле чипер... Ҫав тери кӑмӑллӑ сирӗнпе паллашма. Юлия Николаевна, – алӑ пачӗ кил хуҫи хӗрарӑмӗ. Унтан хыпӑнчӑклӑн тӗпелелле ҫаврӑнчӗ:

– Никола! Ай, Николаша! Хӑвӑртрах кил! Мӗн тӑватӑн эсӗ унта? Килчӗҫ! Килчӗҫ! – ҫӳҫне унтан-кунтан тӳрлеткелерӗ вӑл. – Ах, мӗнле...

Ҫийӗнче унӑн кӗрен бархатран ҫӗлетнӗ вӑрӑм кӗпе. Кӗске ҫӳҫӗ хуп-хура курӑнать. Тӑрӑхла питлӗ, ачаш, шурӑ сӑнлӑ хӗрарӑмӑн хавхаланса калаҫнӑ май куҫӗсем ҫуталаҫҫӗ. Калаҫнӑ хушӑрах вӑл хӗре тимлӗн сӑнать. Тепӗр пӳлӗмрен

кӗҫех Анатолий ашшӗ утса тухрӗ. Тӗреклӗ хул-ҫурӑмлӑ ватӑрах арҫын ҫамрӑксене ӑшшӑн йышӑнчӗ.

Вӗсем хӑна йышӑнмалли пӳлӗме кӗчӗҫ. Хӗр кӗпе аркисене тирпейлӗн хутлатса ларма ӗлкӗрчӗ ҫеҫ, хӑй те сисмерӗ, пӗтӗм пӗвӗпе ҫемҫе диван ӑшне путрӗ. Хӗр аванмарланса кайрӗ, диван ҫинчен тӑма хӑтланса пӑхрӗ, енчен-енне тапаланчӗ, ҫав вӑхӑтра кил хуҫи хӗрарӑмӗ ӑна аллине тӑсса пачӗ. Юрать-ха, ашшӗпе ывӑлӗ асӑрхамарӗҫ ҫакна. Маруҫ юнашар кресло ҫине вырнаҫрӗ, аллисене пӗрре чӗркуҫҫи ҫине, тепре кӑкӑрӗ умне тытрӗ.

– Темех мар, эпир ку вырӑн ҫинче выртса канатпӑр хӑш чухне, – кулкаларӗ Анатолий амӑшӗ. – Ҫак ҫемҫе ҫӗре мӗнле кӗрсе выртатӑн, пурин ҫинчен те манса каятӑн. Рая лекнӗнех туйӑнать...

"Ку чӗрӗскерех мар пулӗ те?" – пианино ҫинче ларакан тӑмана евӗр чӗрчуна сӑнаса пӑхрӗ хӗр. Унтан куҫӗсем стена ҫумӗнчи йӑлтӑркка мӑйрака ҫине ӳкрӗҫ. Стена тӑршшӗпе Турамӑш турӑшсем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ. "Хӑшӗ кӗлтӑвать-ши кусен? Ашшӗ, амӑшӗ е ывӑлӗ? Анатолий мар пуль, паллах... Кам пӗлет, тен, пурте пӗрле пуҫҫапаҫҫӗ? Кусем тата... Кун чухлӗ савӑт-сапа мӗн тума илсе тултарнӑ-ши?" – Пысӑк, тӗксӗм стенка ӑшӗнчи илемлӗ фарфор савӑтсене каллех тӗлӗнсе пӑхрӗ вӑл. "Ӑҫта лекрӗм? Кунашкал чаплӑ ҫынсем патне ӗмӗрне те кӗрсе курман. Мӗн курнӑ эп, ялта пурӑнаканскер? Вӑт, ҫынсем пурӑнаҫҫӗ тӗк пурӑнаҫҫӗ..." – ниепле те тӗлӗнме пӑрахаймарӗ хӗр.

Анатолий амӑшӗ унпа юнашар ларчӗ.

– Арҫынсем кухньӑра аппаланнӑ вӑхӑтра кӑшт калаҫар-ха иксӗмӗр, – вӑрӑм пӳрнисемпе йӗпкӗн хура ҫӳҫне тӳрлетрӗ хӗрарӑм.

Пӳлӗме йӗри-тавра сӑнакан хӗр килӗшсе пуҫне сулчӗ, ҫӗрелле тинкерсе хускалмасӑр ларчӗ.

– Сӗтел хатӗрлесе чӑрманмалла марччӗ, – чӗркуҫҫийӗсене кӗпи аркипе хупларӗ вӑл. – Эп тин кӑна питӗ вӑйлӑ ҫисе тухрӑм. Суймастӑп.

– Эсир паян пирӗн патӑрта хӑнара, хӗрӗм. Хӑна тумасӑр ямӑпӑр.

– Пӗрре те ҫиес килмест манӑн.

– Апла мар, апла мар. Калӑр-ха, мӗн ҫиес килет?

– Нимӗн те. Ман хырӑм тутӑ.

– Ну, ну, мӗскер калаҫатӑр? Азу, горбуша, панулмипе шаритленӗ кӑвакал?

– Ҫук-ҫук, эп тутлӑ пӑтӑ ҫисе тухрӑм.

– Хир чӑххи ҫиййӗпӗр паян. Ман арҫынсем ӑна хаклӑ хӑна умне ҫеҫ лартаҫҫӗ. Калӑр-ха, хӗрӗм, пӗр пытармасӑр калӑр, чӑвашсем мӗн ытларах юратаҫҫӗ? Пӗр вӑтанмасӑр калӑр.

– Улмапа уйран.

– А-а-а... мӗн вӑл уйран? – Ӑнланаймарӑм, Маруся. Чи юратнӑ апат-и?

– Уйран пулмасан – хӑярпа. Хӑш чух – турӑхпа ҫиетпӗр.

– Аха, питӗ аван. Питӗ аван. Тӗлӗнмелле аван апла пулсан. Пӗлмен.

– Уйранпа улма пулсан пире ним те кирлӗ мар, – ал сулчӗ Маруҫ.

– А-а-а-а, ӑнланмалла. Маруся, аҫу-аннӳ пур-и? Ӑҫта ӗҫлеҫҫӗ?

– Атте колхозра ӗҫленӗ. Вӑл вилни тахҫанах. Анне сысна ферминче ӗҫленӗ, халӗ колхозра, – пӗлтерчӗ вӑл пӗр пытармасӑр.

– Эп пĕлнĕ тăрăх, чăвашсем вĕсем – çав тери ĕçчен. Нимĕнле ĕçе те тиркесе тăмаççĕ. Анатолий питĕ юратать сана, хĕрĕм. Ах, çав ывăлăма, хĕрхенетĕп ăна. Пĕртен-пĕрре вăл пирĕн. Ытла ăслă ача. Вĕренессе те "пиллĕк" паллăпа кăна вĕренет. Анчах хĕрĕсем...

Маруç ун çине хăюсăррăн пăхса илчĕ:

– Хĕрĕсем начар-им? – ыйтрĕ вăл сăнран хĕрелсе.

Хĕрарăм ассăн сывларĕ, унтан Маруçа куçран пăхса пăшăрханчăклăн калаçма пуçларĕ:

– Хула хĕрĕсем намăса йăлтах çухатнă. Манăн ывăла пăсса ярасран чун çук – ĕçеççĕ, туртаççĕ. Хĕр чысĕ çук вĕсен. Ун пеккисемпе çыхланиччен ялта ÿснĕ хĕрпе туслаштăр тетĕп. Эпĕ хам – тухтăр, мăшăрăм манăн – хирург. Иксĕмĕр те больницăра ĕçлетпĕр. Вăл халĕ медицина наукисен кандидачĕ. Иксĕмĕр те çăмăл пурнăçпа пурăнман, йывăр пулнă пире вĕренме, çав вăхăтрах ĕçлеме. Ашшĕн сывлăхĕ начар, хам та тăтăшах чирлекелетĕп. Пĕтĕм шанчăкăм Анатолий çинче. Вăл пирĕн пĕртен-пĕр. Сире питĕ килĕштерет пулмалла. Ялан сирĕн çинчен пуплет. Эпĕ хирĕç мар...

– Хĕрупраççем, сĕтел хушшине килĕр! – илтĕнчĕ çав вăхăтра юнашар пÿлĕмрен.

– Ой, халех, халех! Куратăр-и, ман арçынсем çав тери маттур. Йăлт хăйсем хатĕрлеççĕ. Мăшăрăм – çав тери ырă çын. Хăш чухне япала та çăвать, хваттерте те пуçтарать. Хĕрарăма шеллеме пĕлет.

Умне пĕчĕк саппун çакнă Анатолий пĕрре амăшĕ çине пăхать, тепре Маруçа хавхалантарнăн ним пулман пек кулкалать.

– Çитĕ сире, анне! Сĕтел хатĕр!

– Пĕлетĕр-и эсир, Маруся уйрăнпа улма кăмăллать. Николаша, вăл юратнă апата хатĕрлемелле! Юрать-и, чунăм? Эсĕ çĕрулми пĕçерме лартса яр. Çĕрулми пиçиччен бекон, вăлча тутанăпăр. Никола, хăш коньякне ĕçĕпĕр? – ыйтрĕ кил хуçи хĕрарăмĕ, мăшăрĕ енне çаврăнса.

– Паллашнă ятпа пилĕк çăлтăрлине ĕçсен те юрать, Юлиана, – сĕтел пуçне вырнаçрĕ ашшĕ.

Тĕрлĕ çимĕç лартса тултарчĕç хăна умне. Унашкал çимĕçе Маруç халиччен кинора анчах курнă. Пысăк, çаврака турилкке çинче асар-писер çунатлă кайăк ларать. Куçĕ-пуçĕ те пур унăн, вăрăм чĕрнисем те курăнаççĕ. «Солянка» текен яшка çиме тытăнсан Маруç хăйĕн турилккинче слива ишсе çÿренине асăрхарĕ. Вăл ăна тĕкĕнмерĕ, улăм пĕрчи евĕр туранă кăлпассине суйласа çикелеме тытăнчĕ, кашăкĕпе асăрханса ăсса илнĕ чухне татах темле иçĕм çырли пысăкăш кĕрен çырла курăнса кайрĕ. Кăлпасси яшки ăшне çырла янине нихăçан та курман хĕр йăлтах аптрарĕ. "Çырла яшки те пулать-ши вара?" – çиме чарăнмасăрах шухăшларĕ вăл ăшĕнче. Куç хÿрипе Анатолий умĕнчи турилккене сăнарĕ: унăн чашăкĕнче слива тавраш курăнмарĕ, кĕрен çырла пеккисем ишсе çÿреççĕмĕн. Яшка кăштах сыпкаларĕ те хĕр лăпкăн, никам çине пăхмасăр ларчĕ. Аш çиме сĕнчĕç. Килхуçи хĕрарăмĕ ун умне хир чăххин хăрах пĕççине ури-чĕрнимĕнĕпех хурса пачĕ. Маруç вилка тытрĕ, анчах ыттисем алăпах тытса çинине курсан вилкине хăвăртрах сĕтел çине хучĕ. Алне тăсрĕ çеç – хир чăххин авăнса

тăракан шурă чěрнисене асăрхарě. Ăшě лěкленнě пек пулчě унăн, аш çине тек пăхма та пултараймарě. Ыттисем пикенсех çиме тытăнсан вăл, акă, мěн курчě: шаритленě хир чăххин чěрнисемпе çунаттисем шурă хутран касса илемлетнěскерсем кăна-мěн. Илемшěн кăна та мар, ашне тытса çиме тесе çапла ăсталанă-мěн.

...Анатолий ăна халичченхи пекех киле çити ăсатса ячě. Подьезд умне çитсен хěре куçран пăхрě, аллинчен тытма та хăю çитерейменрě курăнать, çинеçинех ассăн сывларě çеç.

– Паянхи кунпа çеç пурăнма тытăнтăм эпě, Маруся. Сана курмасан пěр кун та пурăнма хěн мана. Сана çухатасран темрен хăранă пек хăратăп, – пěлтерчě каччă асфальта пушмакěпе сăтăркаласа. Унтан каллех вăрăммăн сывларě, пуçне пěкрě.

Тепрер кунтан тăван ялне тухса каясси çинчен ăна пачах пěлтерес темерě Маруç. Çав тери кичем пулчě ăна унпа, хăвăртрах пуйăса ларса килелле вěçтересси çеç килчě çак самантра. "Ыталама та, чуптума та пěлмест-ши ку мěскěн?" – ун çине пăхмасăр кичеммěн анасларě хěр. Унтан аллисене плащ кěсйине чикрě, тӳпенелле тинкерсе пăхса тăчě. Куçěсем ěмěтлěн çуталчěç Маруçăн, каччă хěрсех темěн каланине вăл хăлхине те чикмерě. Никам çинчен те, нимěн çинчен те пуплес килмерě унăн, пěртен-пěр Петюкăн вěри ытамěнче пулас килчě...

– Шăнса кайрăм, – терě вăл тепěртакран.

Каччă хăйěн шурă плащне йăпăр-япăр хывса хěре пěркентересшěн пулчě. Анчах Маруç яхăнне те ямарě, пуçне мăнкăмăллăн тытнипех подьезд алăкне уçрě. "Ыталасчě пěрех хут. Çавна та чухлаймасть-çке, тăм писмен!"– ěнтě тарăхмаллипех тарăхрě Маруç. – Ман Петя пулсан çакăнта... Ăна никам та, пěр йěкěт те çитес çук. Хăвăртрах! Ыранах тухса вěçтермелле кунтан!

– Маруся, кăшт пăртак та пулин... Уйрăлас килмест ман санран, тен, тепěр çур сехет те пулин тăратăн? – хыпăнса ӳкрě Анатолий тинех.

– Çук, çук, Толя. Кирлě мар, çывăрас килет. Тепěр чух... Ыранччен.

– Тата кăшт кăна. Ну, тепěр вун пилěк минут, Маруся! Эп сана пӳрнепе те тěкěнместěп-çке, пěрре те кӳрентерместěп! Тархасшăн. Çапла, сана хирěç кăна пăхса тăрас килет манăн. Урăх нимěн те кирлě мар мана!

– Ой, йăлăхтарчě мана кунта сěнксе тăрса, – ун çине пăхмарě хěр.

– Апла пулсан... Апла пулсан калаçмасăр тăрăпăр. Маншăн апла та аван. Эп санпа хуть çěрěпе тăма та пултаратăп, ан хăра манран, Маруся! Ман пек шанчăклă çынна урăх тěл пулаймастăн эсě, чăн калатăп! – Маруçăн çӳлне пулчě вăл.

– Апла пулсан тек нихăçан та курнăçмастăп санпа! Пăрăн çул çинчен! – çиллессěн пăхрě ăна хěр.

Анатолий урăх пěр сăмах та калама ěлкěреймерě – подьезд алăкě шалтлатса хупăнчě.

Тепěр икě кунран Маруç çула тухрě. Куккăшěпе инкěшě ăна ăсатса ячěç. "Сывă пул, Мускав! Сывă пул, Мускав каччи!" – тинех лашт сывларě Маруç.

* * *

Маруç вырăн çинчен çěкленчě, амăшě çывăракан вырăн умне шăппăн утса

пычĕ. Килти ҫипрен ҫыхнă ҫăм кофтине хывмасăрах выртнă Ялампи, сылтăм аллине пуҫĕ айне хунă. Сывлать-ши? – ун умне пĕшкĕнчĕ хĕрĕ. Амăшĕ сывланине пăртак итлесе тăнă хыҫҫăн ăна ăшă утиялпа витсе ячĕ. Вырăн ҫине каялла кĕрсе выртмарĕ, аялти кĕпе вĕҫҫĕнех кантăк умне пырса тăчĕ, чӳрече каррине сирсе тĕттĕмелле тинкерчĕ. "Эх, анне, анне..."– тарăннăн сывларĕ хĕр каллех. Пĕртен-пĕр тĕпренчĕкне хăй ҫумĕнчен вĕҫертесшĕн пулмарĕ вăл, ăна выльăх тухтăрĕ пулма вĕрентсе кăларассишĕн мĕн чухлĕ тăрăшмарĕ пуль! Амăшне пулах Маруҫăн артистка пулас ĕмĕчĕ путланчĕ. Йăлт тепĕр май ҫаврăнса кайрĕ пурнăҫĕ. Кĕтменччĕ вăл ҫакна унран. Хăйне амашĕ ҫаплах улталасса та шутламан вăл. Халĕ те астăвать-ха ҫакна Маруҫ. Амăшĕ кĕлет умĕнче, сулхăнра ларатчĕ, михĕсем саплатчĕ. Маруҫ пĕверен пĕр ҫĕклем шыв ăсса килчĕ, тулли витресене крыльца умне кайса лартрĕ те амăшĕ умне утса пычĕ. Каска ҫинче хĕрне ҫурăмĕпе ларакан Ялампи хĕрĕ пырса тăнине асăрхарĕ пулин те пĕр шарламасăр ларчĕ. Маруҫ амăшĕн ҫивĕчĕсене тытрĕ, енчен-енне сулкаларĕ, ача евĕр кулкаларĕ. Ҫав тери килĕшеҫҫĕ ăна ҫак ҫивĕтсем. Вăл астăвасса тата хулăнрахчĕ амăшĕн ҫӳҫĕ. Питĕ тытас килетчĕ, майра пек пуҫĕ тавра ҫавăрса хурса ҫӳретес килетчĕ амăшне. Амăшĕ вара яхăнне те ямастчĕ. Ача-пăча айкашнине юратманши е вăхăчĕ те сахалрах пулнă, ахăр.

Пĕррехинче, мунчаран тухсан, амăшĕ тенкел ҫинче нӳрĕ ҫӳҫне тураса ларатчĕ. Йăм-хура ҫӳҫĕ сăмала евĕр йăлтăртататчĕ: васкамасăр, киленсе уҫать вăл ăна. Ултă-ҫичĕ ҫулхи Маруҫ чăтса тăраймарĕ, амăшĕ умне чупса пычĕ те ăна ҫӳҫĕнчен хавхаланса ярса тытрĕ... Пĕррех ҫапса ывăтрĕ ачине Ялампи. Маруҫ ун ҫине кӳренчĕклĕн пăхса илчĕ те пĕр сăмах чĕнмесĕр пăрăнса утрĕ.

Каҫхине Маруҫ вырăн ҫинчен тăрса ларчĕ. Ыйхи ниепле те килмерĕ ачан. Вăл хуллен урайне шуса анчĕ те амăшĕ ҫывăракан кравать умне йăпшăнса утса пычĕ. Тĕттĕмре ним туйми ҫывăракан амăшĕ ҫине чылайччен пăхса тăчĕ. Епле илемлĕн выртать вăл. Аллине пуҫĕ айне хунă, тепĕр алли – кăкăрĕ ҫинче. Хура ҫивĕчĕсем темле юмахри хĕрĕнни евĕр туйăнаҫҫĕ. Пĕри минтер ҫинче, тепри ҫĕрелле усăннă. Хĕрача урайне чĕркуҫленсе ларчĕ, ҫивĕте тытрĕ те хăйĕн пĕчĕк аллисемпе питĕ асăрханса, ҫепĕҫҫĕн ачашларĕ, пичĕпе тути ҫумне сĕртĕнсе пăхрĕ. Ҫакна манса кайман Маруҫ: амăшĕ шарламанни тĕлĕнтерчĕ ăна. Ытти чухне пулсан: "Кай-ха, ан аппалан, кансĕрлетĕн!" – тесе сирсе ҫеҫ яраканччĕ. Тем ырă мара сиснĕн, амăшне куҫран пăхма тăрăшрĕ, лешĕ куҫне тартрĕ.

– Анне! – ун ҫинчен куҫне илмерĕ Маруҫ. – Ман пата ҫыру тавраш килмен-и? Почта килмен-и паян?

– Ҫыру тавраш курман, – ура ҫине тăчĕ амăшĕ. Унтан, пилĕкне сăтăркаласа, пахчаналла тухрĕ.

Маруҫ ассăн сывларĕ. Амăшĕ каска ҫине ларчĕ те пуҫне пĕкрĕ. "Епле-ха капла, ҫыру яма пулчĕҫ-ҫке вĕсем? Мĕн пулма пултарчĕ-ши? Вĕренме илес темерĕҫ-ши? Ҫыру часах ҫитмест-ши?" – тĕрлĕ иккĕленӳллĕ шухăш ҫуралчĕ пуҫра.

Малаллахине аса илсен Маруҫ ҫӳҫенсе илчĕ. Улталанă! Мĕншĕн улталанă-ха амăшĕ? Епле хăйнă? Ăна ун чухне чĕнсе янă пулнă. Вĕренме килме чĕнсе ҫыру янă! Эх, ҫав вăхăтра пĕлнĕ пулсан... Пĕр сăмах та шарламан кун пирки

амăшӗ. Çырăва вуласанах хăраса ӳкнӗ пулас – пачах кăтартас темен. Кăлăхах кӗтсе, çунса пурăннă ун чухне Маруç. Çав çул Шупашкар хулинчен пӗр ушкăн çамрăка Ленинград хулине артиста вӗренме янă. Шăпах çав ушкăнпа каймалла пулнă унăн. Мӗн тери телейлӗ пулнă пулӗччӗ вăл. Кам ăнланӗ халь? Кама кирлӗ? Ăнланнă-ши амăшӗ хăй мӗн тери пысăк йăнăш тунине? Тен, кайран ăнланса та илнӗ пуль, анчах мӗн тăвăн халь тин? Харама кайнă пурнăç. Ниме тăман... пуш-пушă хутаç пек. Нимӗн те çук унта. Камшăн, мӗншӗн пурăнмалла? Амăшӗшӗн пурăнмалла-и? Паллах. Анчах...

Чăннипех артистка пуласран шикленнӗ-ши амăшӗ е аякка кайсан аякках юлать тесе шутланă-ши? Вӗренсе тухнă пулсан, тен, пачах урăх шăпа пулатчӗ Маруçăн. Петюкпа та уйрăлса кайман пулӗччӗç. Музыка училищи пӗтернӗ хыççăн Петюк Хусанти консерваторине вӗренме кӗчӗ. Çав-çавах шанчăка çухатманччӗ Маруç, юратнă çынпа пӗрле пулма ӗмӗтленетчӗ. Амăшӗ пӗр вӗçӗм хирӗçле калаçатчӗ пулин те: "Петяна ан кӗт, ватта юлан. Пире пăхас çынсем мар вӗсем. Ашшӗ-амăшӗ те юратмаççӗ... Хăйсем пек вӗреннӗ çынна çеç илтерӗç..."

Чунӗпе туйнă-ши е, пурăнса курнăскер, çапла пулса тухасса маларах пӗлсе тăнă, анчах унăн сăмахӗсем хӗрӗ умне кăчăк туртнăн çитсе тăчӗç. Ялта Петюк авланнă сас-хура тухрӗ. Кăна илтсен Маруç ниçта кайса кӗреймерӗ, аптăранипе амăшне пӗлтермесӗрех Мускава тухса вӗçтерчӗ. Ан тив, Петюк Хусантан майрапа таврăнтăр, Маруç Мускав каччипе, хăйне вилсе кайса юратакан çӳллӗ те яштака Анатолийпе, килсе кӗрӗ. Пӗтӗм ял халăхӗ умӗнче пуçне пӗксе мар, мăнкăмăллăн каçăрăлса пырса кӗрӗ.

Мускав хулине çитсен инкӗшӗпе куккăшне нимӗн те ăнлантарса тăмарӗ Маруç, çав кунах Анатолий патне кайма шут тытрӗ. Уншăн пурпӗрехчӗ ӗнтӗ, хальхинче пӗр вăтанмасăрах кӗме, ăна уçăлса çӳреме чӗнме те хатӗрччӗ. Алăк патне пырса тăчӗ, шăнкăрав тӳми çине пусрӗ. Тепӗр самантран ун умне Маруç евӗрех çинçешке, йăлтăр-ялтăр куçлă çамрăк хӗрарăм тухса тăчӗ. Ялтан килнӗ хӗре вăл пуç тӳпинчен пуçласа ура тупанне çити пăхса илчӗ. "Авланнă!" – пичӗ çатăрах пӗçерсе кайрӗ Маруçăн. Пӗр сăмах уçса каламасăрах картлашкапа чупса анчӗ, урама сирпӗнсе тухсан тин сывлăш çавăрма тесе майӗпенрех утма пикенчӗ.

Нумайччен çӳрерӗ вăл урамсем тăрăх пуçне пӗксе. Пӗртен-пӗр шанчăкӗ те пулин пӗтсе ларнăскерӗн яла таврăнасси килмерӗ. Мускавра пӗрер эрне пек пурăннă хыççăн Саратов облаçне тухса кайрӗ. Унта та çур çултан ытла пурăнаймарӗ, каллех ют çӗре, Томск облаçне, кайса вырнаçрӗ. Унта кăштах ӗçлесе пурăннă хыççăн тин Шупашкара персе çитрӗ. Ниçта кайсан та чунӗ выртмарӗ унăн, пурпӗр кунталлах, тăван çӗршывах туртăнчӗ. Кунта пир-авăр комбинатне ӗçлеме кӗчӗ. Тек вара унта-кунта кумса çӳремерӗ, пӗр вырăнтах тӗпленсе ӗçлесе пурăнчӗ. "Пӗтӗм ӗмӗте татрӗ. Çавăн тӗрлех хытă чунлă пулнă-ши анне?» – ирӗксӗрех амăшне ӳпкелеме тытăнать Маруç. Çук, паллах, килте тӗтӗм сӳнесрен хăранă ӗнтӗ амăшӗ. Ялти çын телейне хăйне май ăнланнă пулӗ çав. Ах, анчах! Амăшӗ çапла такăнтарман пулсан Маруçăн çунатлă ӗмӗчӗсем пӗтсе лармастчӗç те вӗт. Мӗн пӗчӗкрен сцена çине тухассишӗн ӗмӗтленетчӗ хӗрача. Клубра лартакан спектакльсенче ăна тӗп рольсем паратчӗç. Концертсенче чи мал-

тан юрлаттаратчĕç. Ташă-юрăра ăна çитекенни те пулман. Юрламан кун иртмен, тĕкĕре пăхса артистка пек калаçма, кулма хăтланатчĕ... Эй, мăнтарăн хĕр пĕрчи-и... Мĕншĕн ĕмĕрне пĕччен irrtтермелле пулчĕ-ха унăн? Хăй сисмесĕрех чунĕ туллашма пуçлать, куçĕсем йĕпенеççĕ. Амăшĕ туясран шикленсе сасăсăр йĕрет Маруç, пурçăн чўрече каррине хăй çине туртать. Капла чўрече умĕнче тăни паллах мар. Тĕттĕм пўлĕмре çавах нимĕн те курăнмасть. Вĕтĕ-вĕтĕ пĕркеленчĕксемпе витĕнме тытăннă куç айĕсене пўрни вĕçĕпе сăтăра-сăтăра илет. Йĕрсен-йĕрсен карланкăри йўçĕ муклашка ирĕлме тытăнать, чунра тинех кăшт çăмăлланнă пек пулать.

Çулсем иртнĕçемĕн хĕрĕ пĕчченех тăрса юласса лайăх ăнланчĕ Ялампи. Унăн та çынсем пекех алла мăнук тытса курасси килчĕ ахăртнех – ытлашши ватăлса лариччен пĕр ача та пулин çуратса юлма хистерĕ хĕрне. Хальлĕхе хăй пурăннă чух ачине пăхса пама та пулчĕ. Пĕртен-пĕр хĕрне ытла та хытă юратрĕ Ялампи. Унăн телейсĕр шăпишĕн хăй те хĕрĕнчен кая мар кулянчĕ. Йăпанмалăх пĕр ача кирлине питĕ лайăх ăнланчĕ Маруç, сăпайлă хĕр чĕри çеç ку шухăшпа ниепле те килĕшме пултараймарĕ. Качча илес текенсем çук мар-ха, халĕ те, анчах ун тĕлне темшĕн авланса уйрăлнă çынсем çеç тĕл пулаççĕ. Е тата ытла ватăскерсем, е ытла çамрăккисем. Пĕлтĕр те Маруç патне пĕр лутакарах, çутанка арçын хăтана килсе йăлăхтарчĕ. Пĕрремĕш хут вăл хваттерти крансене тĕрĕслесе çўрерĕ. Викенти ятлă-мĕн. Вĕсен çуртĕнче слесарь-сантехник пулса ĕçлет. Икĕ-виçĕ хутчен те килсе калаçса ларчĕ вăл. Тепрехинче хăй патне хăнана чĕнчĕ. "Мĕнле пурăнать-ши ку этем, кайса курас", – хирĕç пулмарĕ Маруç. Тен, йĕркеллĕ çынах?»

Чи капăр кĕпине тăхăнчĕ, пуçне шурă чĕнтĕр тутăр çыхрĕ. Тутине хĕретрĕ, çўçне кăпăшкалатрĕ. Вăл пырса кĕнĕ чухне кил хуçи чей вĕрететчĕ. Маруçăнни евĕр пĕр пўлĕмлĕ хваттерех иккен унăн та. Викентий сĕтел хатĕрлерĕ, Маруç умне консерва уçса хучĕ, типерех кайнă çăкăрне касрĕ. Шкапран çур литр туртса кăларчĕ. Ытлашши сăмах вакламасăр вĕсем пĕрер черкке ĕçрĕç.

– Пĕтĕм пўлĕм çуталса кайрĕ вĕт хĕрарăм килсен, – ун çине кăмăллăн пăхрĕ Викентий. – Пурăнас килсех кайрĕ...

Маруç çўхе чĕнтĕр тутăрне çурăмĕ çинерех уртрĕ, çўçне тўрлеткелерĕ. Вăтаннипе кăштах хĕрелсе илчĕ, хирĕç нимех те шарламарĕ.

Акă, вĕсем иккĕмĕш черкке çĕклерĕç. Кил хуçи ăна тĕппипех пушатрĕ. Маруç эрехе тутанса пăхсанах сĕтел çине лартрĕ.

– Пĕрре авланса шар курнă хыççăн урăх авланас теменччĕ, – хăюллăнрах калаçма пуçларĕ кил хуçи.

Хĕрарăм сĕтел çине чавсаланчĕ, ăна куçран пăхса малалла итлерĕ.

– Эп туртмастăп. Икĕ çул каяллах пăрахрăм. Ĕçесse те сайра-хутра çеç ĕçетĕп. Ĕненместĕн-и? – сĕтел хушшинчен сиксе тăчĕ Викентий. Вăл шифоньер алăкне уçрĕ, унтан тĕрлĕрен кĕленче кăларса кăтартма пуçларĕ.

– Ку, акă, кур, "Бренди" текен коньяк. Ак ку, акă – лайăхраххи. Унтан та чаплăраххи эппин. "Наполеон" ятлă ку. Хакланиччен илсе хутăм. Хĕрарăмсене ĕçтермелле вăл. Арçынсем эпир шуррипе те çырлахатпăр. Ку, паллах, простой япала мар. Пошалста. Манăн тем те пур. Пĕр ещĕк тушонка илтĕм. Эпĕ вĕт

запчаçсем тупаятăп-çке. Ман пата кам кăна килмест пуль? Пěри тăвата банка кофе парса хăварчě. Ман, чăнах калатăп, пурте пур. Арăм çеç çук.

– Çапла-а-а ěнтě, – унпа килěшсе пуçне сěлтрě хěрарăм. – Пěрре те начар пуранмастăр.

– Çук, çук! Япăх пурăнмастап, – шифоньер алăкне шаклаттарса хупрě кил хуçи. – Манăн пурте пур хама валли. Тулěк, вăт, пěччен ыйхă килмест. Çав анчах. Çěрěпе те çывăраймастăп.

– Малтанхи арăмупа мěншěн уйрăлтăр? – интересленчě Маруç. – Ăна юратнă пулě?

– Юратнă-ха та... Никак каçарма пултараймарăм эпě ăна.

– Мěн те пулин сиксе тухрě-и?

– Засыпушкăра пурăнаттăмăр, – черккесене шурă эрех ячě Викентий. – Хваттер хуçисен пахчинче çăл пурччě. Пěррехинче ман арăм шыв ăсма тухрě те – çук та çук! Хěллеччě. Ку шăнса вилмерě-ши тетěп. Тухса пăхас. Тухрăм та, пăхатăп хушăкран, елки-палки! лес кустой...

Кěрекере ларакан Маруç аванмарланса пуçне пěкрě. Викентий хăлаçлансах калаçрě. Унăн хěсěкрех кăвак куçěсем çилěллěн йăлтăртатма тытăнчěç, çамки çине вěтě тар тапса тухрě, сăмси тăрри хěрелчě. Калаçнă хушăрах Маруç çине чăрр пăха-пăха илчě.

– ...ман арăм хваттер хуçин аслă ывăлěпе чуппа туса тăрать. Кăлăхах кěтсе ларатăп иккен ăна, вăл киле кěме шутламасть те... Витрисем те пуш-пушах, шыв та кирлě мар ăна. Сакконнăй упăшка пÿртре ларать, вăл урăх çынпа, хайěнчен çамрăк йěкěтпе... Çакна курсан малтанах чěлхесěр пулса лартăм. Вырăнтан та хускалаймастăп, хытрăм-кайрăм!

– Тем те пулать иккен пурнăçра, – ним калама та аптăранă Маруç тутăр вěçěсене пěтěркелесе ларчě.

– Ку анчах мар-ха, чи интерес унта – урăххи! – хăвăрт-хăвăрт калаçрě арçын, сурчăкěпе чыхăнса. – Пахча алăкне пěррех тапса уçрăм, алăк чěриклетнě сасса илтсенех хваттер хуçин ывăлě кěрт çийěн аша-аша, карта урлă качака пек сиксе каçса тарчě. Арăм ман çине çвер пек пăхса тăрать. Эп нумай шухăшласа тăмарăм, тарăхса кайнăскер мěнле туртса çапрăм, çапла-и? Ак, çапла, мěнле шăхăртса ятăм хайхискерне! Пуçě каялла çаврăнчě те ларчě! Чăнах та! Куçě-пуçě йăлтах каялла пăхать.

Ăна хирěç ларакан Маруç çăварне аллипе хупларě, куçěсем чарăлчěç. Тěлěннипе сасă та кăлараймарě, хыçлă пукан çине тěршěнчě.

– Ак, хайхи-майхи! Пěтрěм! Ентě мана тěрмене хупаççě тесе шутлатăп. Хăранипе чутах мěн туса яраттăм. Шутла-ха, хăвах шутла. Пуçě каялла чапп! анчах çаврăнса ларчě. Теперччě, манăн арăм каялла пăхса çÿреме пуçлě-ши малалла тетěп. Хам кăвакарса кайрăм пулмалла...

"Кăна качча тухас пулсан, хайхи ку этем манăн пуça та каялла çавăрса лартать ěнтě", – шухăшě вěçсе илме ěлкěрчě Маруçăн.

– Çук-çук, сана çапас çук-ха эпě. Эсě унашкал маррине туятăп, – лăплантарма васкарě Викентий унăн шухăшне сиснěн. – Унччен пулать-и, арăм пуçě пěчěккěн-пěчěккěнех каялла, хăй вырăнне çаврăнма пуçларě. Тěлěнсе пăхса

тăратăп çапла, чăнах та, арăмăн пуçĕ хăй вырăнне куçса ларчĕ. Ак хайхи! Арăм пĕррех сиксе ларчĕ ман çине: пуçларĕ пит-куçа чĕрмелеме... Пĕр чĕрĕ вырăн та хăвармарĕ, кĕççе пит!

Кун хыççăн вăл арçынпа тек нихăçан та калаçмарĕ Маруç, хваттерне те кĕртмерĕ. Халĕ ĕнтĕ качча каяс шухăша пуçĕнчен те кăларса ывăтрĕ.

Ир енне тин тĕлĕрсе кайнă хĕрĕ амăшĕ хăш вăхăтра тăрса тухса кайнине те сисмен.

Вăл кайнă хыççăн Маруç хăйне валли вырăн тупаймасăр пĕр вĕçĕм кулянса пурăнчĕ.

* * *

Яла çитме тата çичĕ çухрăм утмалла. Юлашки вăхăтра сайра килекен пулчĕ вăл кунта. Çамрăк чухне тăтăшрах çӳретчĕ. Çулланнăçемĕн канмалли кунсенче те килĕнче ытларах пулас килетчĕ.

Кĕрхи çанталак нӳрĕ те сивĕ. Хушăран юр пĕрчисем ӳккелеççĕ. Уйсем пуш-пушах çаралса юлнă. Тахçан ыраш пусси кашласа ларатчĕ ку таврара. Сукмакпа килнелле утнă май Маруç хăйĕн çамрăклăхне аса илчĕ. Чăн пулман пуль вăл, юмах çеç пулнă пуль... Унашкалли тек нихăçан та пулмасть-çке, пулма та пултараймать. Е пурнăç çавăн пек-ши – иртнине аса илсе йăпанмалли çеç юлчĕши? Çав çынах-çке пĕр тесен вăл? Ĕлĕкхи пекех «Маруç» тесе чĕнеççĕ ăна. Халĕ те ĕмĕтленес килет, пурпĕрех юратас килет. «Çук пуль çав», – ассăн сывласа илчĕ вăл ял çумĕнчи йăмра тăррисем çинелле пăхса. Кашни япаланах хăйĕн вăхăчĕ пур пулмалла.

Шкулта уйрăлу каçĕ... Хаваслă кĕвĕ янарать. Ĕмĕтсем пурин те çунатлă... Пурте вальс çаврăнаççĕ. Шурă кĕпеллĕ черченкке хĕрсем вăрăм çивĕтсемпе. Çинçе пилĕклĕ Маруçа та йĕкĕтсем пĕр-пĕринпе тупăшсах вальс ташлама кăлараççĕ. Никама та кӳрентересшĕн мар вăл, хăшĕ чĕнет – унпа тухать. Вăхăтăнвăхăтăн каччăсенчен миçе сехет çитнине ыйтса пĕлмеваскать. Ăшша пиçнĕскер ыттисем сиссиччен шкул картишне чупса тухать. Унта, йывăçсем айĕнче, ăна Петюк велосипедпа кĕтсе тăрать.

– Петя! Эсĕ ăçта! – шăппăнраххăн кăшкăрма тăрăшать вăл.

– Кунта! – илтĕнет тирексем хыçĕнчен. – Хăвăртрах кил! – васкатать ăна Петюк.

Шурă кĕпеллĕ хĕр каçхи ĕнтрĕкре савнийĕ патне чупать. Йĕкĕт ăна велосипечĕ çине лартать, вĕсем ялтан тухса уялла вĕçтереççĕ. Чылай аякка кайсан йĕкĕт велосипедне çул хĕрне хурать. Ирĕк вĕсене кунта. Хĕрпе каччă калаçнине никам, пĕр чун та илтмест. Маруç çаран çинчи чечексене чупа-чупа пуçтарать. Уй тăрăх утсан-утсан вĕсем ыраш пусси умне çитеççĕ. Кăвак чечексенчен пуç кăшăлĕ çыхса тăхăннă Маруç темле юмахри хĕре аса илтерет.

– Петь! – вĕлтĕр-вĕлтĕр чупать хĕр сукмак хĕррипе. Каç сĕмлĕхĕнче унăн шурă кĕпи асамлăн вĕлкĕшет. – Кур-ха, кур! Мĕн тери илемлĕ çĕрте пурăнатпăр эпир. Çапла-и, Петя! Тĕлĕкре курнине-е-е курасчĕ пурнăçра-а-а-а! – юрласа ямасăр чăтаймасть Маруç.

Петюк аллисене малалла тăсать, хайне чăн-чăн артист пек тытма тăрăшать, кăкăртан тухакан хулăн сассипе хĕрпе пĕрле юрласа ярать:

Шăпчăк юрă юрлать
Телее мухтаса-а-а-а!..

– Итле-ха Петюк, хамăр класри ачасене калама вăтантăм, сана çеç калатăп. Эсĕ çеç пĕлетĕн манăн ĕмĕтсене: артистка пулас килет манăн. Урăх никам та мар! Мĕн тумалла-ши малалла?

– Экзаменсене хатĕрленмелле, Маруç. Сана шанма пулать. Музыкăна туятăн, сассу çав тери аван.

– Экзаменсене тытаймасран хăратăп-çке!

– Пурте йĕркеллĕ пулать, ман шутпа.

– Темле çав, – иккĕленет хĕр утмăлтурат чечекĕсене пÿрни вĕçĕпе татса. Унтан ассăн сывлать, йĕкĕте куçран пăхать. – Эсĕ, ав, вĕренме кĕтĕн. Мĕнле телейлĕ.

– Маруç, эсĕ мĕскер, маншăн хĕпĕртеместĕн-и вара? – тĕлĕнет каччă.

Хĕр аванмарланнă пек пулать, пуçне пăркалать:

– Ой, çук, мĕскер калаçатăн, Петя? Эп саншăн... Эпир саншăн пурте питĕ хĕпĕртетпĕр. Калаçатăн та. Эс вĕренме кĕрсен савăннипе...

– Мĕн-ха, савăннипе, мĕн? Маруся, кала-ха, кала! Кил-ха кунтарах! – Маруçа ыталама тăрать.

– Ан ашкăн-ха. Петя, ман пĕрре те шÿтлес килмест халь.

– Кĕретĕн, Маруç, кĕретĕн. Ан кулян, юрать-и? Пурте йĕркеллех пулать. Пианино çук-ха манăн. Атте илсе паратăп тет, тахçан илсе парать. Хыгкукар, укçи çĕрсе выртать...

– Фортепианăпа калама йывăр-и? Мĕнле кĕвĕсем калатăн, Петя?

– Алăсене хăнăхтарас тесен ытларах клавишсем çинче вылятас пулать, пĕрвĕçĕм тăрăшсан алăсем хăйсемех каяççĕ. Нумай пулмасть Дунаевский вальсне вĕрентĕм. Вĕренмелли нумай-ха.

– Хăвна мĕнле кĕвĕсем ытларах килĕшеççĕ?

– Мана-и? Ну, Глиэр романсĕ, Бетховен менуэчĕсем... Свиридовăн музыки пурне те килĕшет.

Хĕр йĕкĕт каланине сывламасăр итлет.

– Атя дуэт юрласа пăхăпăр! – тет Петюк Маруçа аллисенчен тытса.

– Хăшне?

– Эсĕ юратаканнине, паллах. Мантăн-им, иксĕмĕр епле шăрантараттăмăр. Пĕчĕк чухне пÿрт айккинче концерт лартмалла выляттăмăр, астăватăн-и?

Ача чухнехине аса илсен Маруç татах хавхаланать, Петюк çине пăхса ахăлтатса кулать.

– Астăватăп, – тет вăл каллех ассăн сывласа илсе. – Йĕри-тавра тутăрсемпе карса шăналăк тăваттăмăр. Эсĕ йывăç çăпала ярса тытаттăн та сĕрме купăс калана пек туса пĕчченех сиккелеттĕн. Эпир, хĕрачасем, такмак каласа алă çупаттăмăр. Халĕ эсĕ клубра баянпа выляма тытăнсан хĕрсем сан çинчен куç илмеççĕ. Час-часах пĕр кĕвĕ вылятăн, питĕ килĕшет вăл пурне те.

– "Меланхоли вальсĕ", ăна Доргомыжский çырнă.

– Ялан ёнĕрлесе çӳретĕп эпĕ вăл кĕвве. Петя, кил-ха, вальс çаврăнса пăхăпăр иксĕмĕр. Кил тетĕп, ман халь санпа çаврăнса пăхас килет. Мпа-па-па! Мп-па-па!..

Хĕрпе каччă вальс çаврăнма пикенеççĕ. Тикĕс мар çĕрте такăнса ӳкме пуç-ласан йĕкĕт хĕре хăй çумне туртса илет. Кула-кулах ыраш хушшине кĕрсе каяççĕ вĕсем.

– Пирĕшти! Чăннипех пирĕшти пуль эс, Маруç, – пăшăлтатать Петюк.

Вăл хĕре çине-çинех чуптăвать, чĕтрекен аллисемпе унăн кĕпи тӳмисене вĕçертет. – Шурă... епле шурă эсĕ. Тап-таса. Эпĕ кĕçех ухмаха тухатăп. Урăх чăтма пултараймастăп, хал çитмест.

Савнийĕн вĕри тутисем, чуна хумхантаракан асамлă, ачаш сăмахсем Ма-руçа пуçĕпех ӳсĕртсе янă тейĕн. Унăн аллисем каччăн вăйлă аллисене сирсе яма ниепле те хал çитерейменççĕ.

– Акă вăл телей. Çак йăлтах манăн... манăн телейĕм. Ох, ухмаха еретĕп кĕçех. Маша, Марусенька, юрататăп...

Вăл хĕре кĕлеткипе хуплать, хăрпашкаскерне хăй çумне пăчăртать. Çак са-мантра вĕсем иккĕшĕ те тĕнчере мĕн пурри çинчен манса каяççĕ. Вĕри туйăм пĕтĕм ӳт-пĕве хупăрласа илнĕ, темĕнле, ăнланмалла мар, халиччен туйса кур-ман хумсем çупăрласа илеççĕ.

– Тăхта! – сасартăк шарт сикет Маруç. – Пĕр минут тăхта-ха!

– Телейĕм, юратăвăм, йăлтах йĕркеллĕ пулать. Пурте лайăх пулать, – ниме те пăхасшăн мар йĕкĕт. – Ан хăра, нимрен те ан хăра, юрать-и?

– Çук! Çук! Пултараймастăп, Петя, итле мана! Пĕр сăмах... Эсĕ итлеме тивĕç. Итлеме тивĕç! – сарлака кăкăрлă йĕкĕте хăй çинчен сиресшĕн Маруç.

Шăрăхра шывсăр типсе вилме пуçланăн Петюк хашкаса сывларĕ, хĕре пурпĕр хăй ытамĕнчен вĕçертмерĕ...

– Нимĕн те ан кала, кирлĕ мар... Эсĕ çеç кирлĕ халь мана. Урăх никам та, пĕр çын та! Ăнлан мана, Маруç. Ăнлан. Вилме пултаратăп...

– Петя, эс мĕскер? – тĕттĕмре ăна куçран пăхрĕ Маруç. – Эп... Енчен те халь эсĕ манăн хĕр чысне аркататăн пулсан, пĕлетĕн-и? Тек нихăçан та, нихăçан та! Кĕçĕртен йăлтах пĕтсе ларма пултарать. Ĕмĕрлĕхех! Ĕмĕрлĕхех! Урăх нихăçан та килмĕпĕр çакăнта. Пултараймастăп! Кун хыççăн эпĕ çĕр çинче те пурăнай-мастăп, Петя!

Йĕкĕтĕн çамки çине сивĕ тар тапса тухрĕ. Вăл пĕр хушă хускалмарĕ, пĕлĕтелле пăхса, калаçмасăр выртрĕ.

– Вĕри мунчара пуç тăрăх пăрлă шывпа сапнăнах туйăнчĕç санăн сăмаххусем, – терĕ вăл чылайччен калаçмасăр выртнă хыççăн. Унтан куçĕсене ĕшенчĕклĕн хупрĕ.

Сехри хăпнă Маруç сиксе чĕтрерĕ, вăл, сăнран шуралса кайнăскер, кĕпине аран-аран тăхăнчĕ.

Пуçне пĕксе шухăша кайса пыракан Маруç сумккисене çĕре лартрĕ, каллех тавраналла сăнарĕ. Талккăшĕпех сухаласа пăрахнă уйра ешĕл кăшман çулçисем выртаççĕ. Апла пулсан колхоз уйĕнчи кăшмана тинтерех кăларса пĕтернĕ

пулас. Сухаласа пăрахнă уй тăрăх ансăр сукмак тăсăлса каять. Утмассерен атă çумне лапра çыпăçать. Çурçĕр енчен вичкĕн çил кастарма тытăнсан ирпе кăшт ӳккелекен юр хытăрах çума пуçларĕ. Яла çитесси пĕр-икĕ çухрăм пек юлсан Маруç татах чарăнчĕ, аллисене вĕрсе ăшăтрĕ. Çав вăхăтра вăл хăйĕнчен чылай аякра пĕр мĕлке асăрхарĕ. "Çак çил-тăманра кам килĕнчен хăваласа кăларнă-ши ку этеме?" – тĕлĕнчĕ Маруç. Тек каялла çаврăнса пăхмарĕ вăл, килне васкарĕ. Нимĕн çинчен те шухăшлас килмерĕ урăх, хăвăртрах ăшă пӳрте çитсе ӳкме çеç ĕмĕтленчĕ. Уй хапхинчен кĕрсен хăйсемпе кӳршĕлле пурăнакан Матрӳн аппăшне тĕл пулчĕ. Хĕрарăм пысăк хулăн тутăр пĕркеннĕ, урине калушпа çăматă тăхăннă. Сивĕ çилрен сыхланса питне алса тулĕпе хупланă, айăккăнрах пăрăнса утать.

– Матрӳн аппа, ăçта кайма тухрăн? – ыйтрĕ унран Маруç.

Хĕрарăм чарăнса тăчĕ, Маруç çине кăнн пăхрĕ:

– Маруç пулчĕ çак? Аннӳне курмарăн-и? – ыйтрĕ вăл çиле май çаврăнса.

– Анне? Ăçта? Мĕн пулнă?

– Вăл – уйра. Пĕчченех тăрмашать. Эпĕ ăна пулăшма кайма тесе тухрăм та. Ай, чух çитрĕн-ха эсĕ, хĕрĕм. Тавах турра, çитрĕн!

Маруç сăнĕ тĕксĕмленчĕ.

– Анне... Мĕнле? Мĕн тăвать вара унта?

– Кăшман пуçтарать. Нумай пулмасть анчах колхоз уйĕнчи кăшмана кăларса пĕтерчĕç, унта тем чухлех выртса юлнă. Аннӳ çавсене пуçтарма кайрĕ те...

Маруç тăруках сăнран улшăнчĕ. Пĕрре çил-тăман витĕр уялла тинкерчĕ, тепре кӳршĕ хĕрарăмĕ çине тĕлĕнсе пăхса илчĕ.

– Мĕн тăвать вăл кăшманпа?Çак çанталакра мĕн туса çӳрет?

– Ах, ачам, сыснисем пур-çке аннӳн. Вĕсене сахал кирлĕ тетĕн-и? Кăçал çĕрулми те питĕ начар тухрĕ те, çынсем тахçанах кăшман хатĕрлерĕç. Çĕрĕçĕрĕпех йăтрĕç, миххи-миххипе çĕклерĕç. Аннӳ çеç хатĕрлеймесĕрех юлчĕ. Çĕрле çӳреймест вĕт – текех çамрăк мар. Халь ĕнтĕ уйри кăшмана пуçтарма никам та чармасть. Пурпĕрех уйра выртса кăна юлать.

Маруç кӳршĕ хĕрарăмне килне таврăнма сĕнчĕ, хăй тек калаçса тăмарĕ, хăвăрт каялла çаврăнса утрĕ. Таçтан вăйĕ тухрĕ унăн, паçăр чарăна-чарăна тăрса утаканскер халĕ ана урлă, сукмаксăр-мĕнсĕр, тӳртенех вашлаттарчĕ. Çурçĕр енчен туллашса вĕрекен хаяр çил пĕтĕм шăмшака çӳçентерчĕ. Пит тăрăх пăрлă, йĕпе юр юхрĕ...

Вăл хашлатса утса çитнĕ çĕре Ялампи миххине çуррине яхăн тултарма ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ. Ана çинче унта-кунта курăнса выртакан кăшмансене пĕрерĕн пуçтарса пĕр çĕре купаланă вăл. Çĕрелле ӳпĕннĕскер хăй умне хĕрĕ çитсе тăнине те асăрхамарĕ. Акă, пĕр кăшманĕ çĕре тухса ӳкрĕ, ăна илчĕ те хуçăк авăрлă çĕççипе лаптаран хырса тасатма пуçларĕ. Юрлă, пылчăклă кăшман унăн шăнса кӳтнĕ аллинчен каллех çĕре шуса тухса ӳкрĕ. Ăна илме хăтланса карчăк тепĕр хут çĕрелле кармащрĕ...

– Анне! – аллине çăварĕ патне тытса кăшкăрчĕ Маруç.

* * *

Тирпейлӗхе юратакан Ялампи килӗнче яланхи пекех таса та ҫутӑ. Кӗтесри турӑш умӗнче те, тӗкӗр ҫинче те уйрӑмах пысӑк тӗреллӗ, чӑлт шурӑ алшӑллисем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ. Чӗнтӗрлӗ чӳрече каррисене икӗ енчен сирсе сенкер хӑюсемпе ҫыхса илемлетнӗ. Тӗпелте тӑрӑхла сак, ун ҫине йӗркипех кавӑнсем хурса тухнӑ. Кравать айӗнчен пиҫсе ҫитнӗ помидорсем курӑнса выртаҫҫӗ. Сарлака тирӗкре – палан, ҫиелте сап-сарӑ майӑр курланкисем...

Маруҫ амӑшӗн хуртӑллӑ кӗпине тӑхӑннӑ. Сӗтел хушшинче таянмалли пукан ҫинче амӑшне хирӗҫ лараканскерӗн пичӗсем хӗрелнӗ.

Сӗтел хушшинчен тухма васкамарӗҫ вӗсем, ӗҫсе-ҫисе тӑраннӑ пулин те ҫаплах шӑкӑл-шӑкӑл калаҫса ларчӗҫ.

– Икӗ михӗ ҫӑнӑх туянтӑм, хакне пӑхса тӑмарӑм. Каярахпа тата хаклӑ пулать теҫҫӗ те, – килти хыпарсене пӗлтерчӗ Ялампи. – Шӑши тапӑнмасан юрать-ха, халь манӑн малтан илнисем те пӗтмен. Пӗччене нумай кирлӗ-и?

– Ытлашши чармӗ, анне. Малалла темле пулать, кам пӗлет.

– Чиперех пурӑнаттӑмӑр та ҫав, пурнӑҫа йӑлтах пӑсса ячӗҫ-ҫке. Выльӑх усрама шутсӑр хӗн те, ҫавӑнпа ӗне туянса юлас терӗм май килнӗ чух. Ҫамрӑк пӑрушка, кӑҫал пӗрремӗш хут чупнӑскерне, илсе ятӑм ак, хӗрӗм. – Унюк Ҫупписем шӑпах пасара кайма тухнӑ, пӑрӑвне сутма каяҫҫӗ-мӗн. Нумай шухӑшласа тӑмарӑм, вунӑ пин тыттартӑм та ҫавӑтса килтӗм.

– Ӗнеллӗ пултӑмӑр-и эпир те? – тӗлӗнмеллипех тӗлӗнчӗ Маруҫ.

– Чипер пулсан кӑҫал нарӑс уйӑхӗнче пӑруламалла та... мӗнле пулӗ ӗнтӗ, – хавхаланса каласа кӑтартрӗ амӑшӗ. – Сумалли ӗне пулать малашне. Сӗтсӗр пурнӑҫ шутсӑр начар. Ҫӑва тухсан сӗт-ҫусӑр пушшех те кансӗр. Ку ӗне пӗрре те хакла ларнӑн туйӑнмасть-ха. Хӑй хакне кӑларать пуль теп-ха.

Ялампи хӗрӗ хуларан илсе килнӗ ҫимӗҫе тутанса пӑхать. Маруҫ пысӑкрах грушине илсе пачӗ амӑшне, вӑл ӑна каялла хурса пӗчӗкреххине илчӗ.

– Кӑна сана валли илнӗ, анне, ҫи, – хистерех сӗнчӗ Маруҫ.

– Пастай-ха, Матрӳнӗн мӑнукӗ килкелекенччӗ кунта. Ҫавна валли тӑтӑр тетӗп те.

– Матрӳн аппан мӑнукӗ пирӗн пата килет-и? Анчахрах питӗ пӗчӗкскерччӗ-ҫке вӑл? – тӗлӗнчӗ Маруҫ.

– Кӑҫал ҫимӗкре пиллӗк тултарчӗ. Телевизор кӑтартмасть вӗсен, кашни кунах ман пата чупса килет. Хам та хӑнӑхса кайрӑм вӑл ачана. Пӗр кун курмасанах тем ҫитменнӗн туйӑнать.

– Ывӑлӗпе кинӗ халь мӗнле пурӑнаҫҫӗ? Йӗркеленсе кайрӗҫ-и? Пӗр вӑхӑт пӑтранаҫҫӗ тетчӗҫ? – интересленчӗ хӗрӗ.

– Уйрӑлнӑ вӗсем. Тунюк халь пӗчченех килсе ҫӳрет яла. Упӑшки тахҫанах пӗр майрапа ҫыхланса пурӑннӑ теҫҫӗ. Уйрӑлмаллипех уйрӑлнӑ тет, – куншӑн кӑшт хӗпӗртенӗн хавхалансах каласа кӑтартрӗ Ялампи.

Маруҫӑн тӗлӗннипе куҫӗсем чарӑлчӗҫ, вӑл аллипе пичӗсене ярса тытрӗ.

– Мӗнле лайӑх пурӑнатчӗҫ Тунюкпа упӑшки. Кам шутланӑ? Кам...

– Пурнӑҫ пӗр пек килмет. Паян лайӑх та ыран темле килсе тухать, – сӗтел ҫинчи ҫӑкӑр тӗпренчӗкӗсене пӗр ҫӗре шӑлса пуҫтарчӗ амӑшӗ.

– Ачи ялта пурӑнать эппин? Матрӳн аппа хытӑ кулянать пуль?

– Кулянать те-ха, мĕн тăвас, тетĕн, ачам? Пурнăç вăл пурне те хăй вырăнне лартать çав. Матрўн те чылай улшăнчĕ...

Хĕрĕ чĕнмерĕ, амăшĕ çине ыйтуллăн пăхрĕ.

– Тунюка качча парсан Матрўн аппу пирĕн пата килме те пăрахрĕ вĕт. Пуçне каçăртса хуратчĕ те кашни уяврах хăти-тăхлачисем патне йăкăртататчĕ. Ĕлĕкрен пирĕнпе пĕрле ĕçсе çинĕ, кайран пач манса кайрĕ, мана ĕçке те чĕнми пулчĕ, хутшăнасшăн та пулмарĕ. Эп вара хам пек пĕччен карчăксем патне тухса утаттăм. Халь, ав, кашни кунах чупса килет, ăшĕ çунать. Кампа калаçса лăпланас? Кўршех кирлĕ!

Маруç амăшĕ çине ўпкевлĕн пăхса илчĕ.

– Кўрше килмесен ăçта каяс ĕнтĕ унăн, анне? – терĕ вăл тепĕртакран.

– Килтĕрех, нимĕн те каламастăп-ха. Хам та упа пек пĕччен пурăнатăп. Тулĕк, аса илетĕп те... Ах, çын йывăр чухне çеç кирлĕ. Унашкаллине эпĕ хам ĕмĕрте нумай курнă, ачам. Хĕр качча параççĕ, ывăл авлантараççĕ, хăта-тăхлачлă пулаççĕ те вара... Эх! Хăпартланса каяççĕ, ниçта кайса кĕреймеççĕ. Тек пĕр-пĕрин патне хутлама пуçлаççĕ. Кирек кам та çавнашкал пулса каять. Эпĕ сăнанă. Кайран, кăшт вăхăт иртет те... пуç усăнать. Хайхи, пурнăç кашнинех хăй вырăнне лартать. Çапла вăл.

– Ялампи-и-и! – илтĕнчĕ çав вăхăтра урамран çинçе сасă. Амăшĕн куçĕсем ăшшăн çуталса илчĕç, вăл ларнă çĕртен сиксе тăчĕ.

– Ак, сăмах çинех çитрĕ ку ача. Алăка уçаймасть-ха вăл – пĕчĕкрех. Кашнинчех хам тухса уçатăп.

Урам енчен алăка тата хытăрах кĕреслеттерни илтĕнчĕ.

– Ялампи-и-и! Уç-ха-а-а-а! – кăшкăрчĕ ача хыттăн.

– Мĕскер?.. Ялампи тесе чĕнет-и вăл сана, анне? – кулкаларĕ Маруç чўрече витĕр пăхнă май.

Амăшĕ алăк патне пычĕ, пăтара çакăнса тăракан кивĕ пиншакне уртса ячĕ.

– Матрўн аппу хыççăн вăл та мана çапла чĕнет. Халех, халех тухса уçатăп, – вĕткеленчĕ амăшĕ. Унтан хĕрĕ çине хăвăрт пăхса илчĕ те: – Эсĕ асту, ашшĕ пирки нимĕн те ан тапрат, – тесе асăрхаттарчĕ. Тепĕр самантран Ялампи кўршĕ ачине çавăтса кĕчĕ.

– Атя, ирт! Аппу килнĕ ав.

– Ну, ырă кун пултăр! – шухăшлă куçĕсемпе ун умне пĕшкĕнчĕ хула хĕрĕ.

– Спаççипă! – терĕ вăл пĕр кана шухăшласа тăнă хыççăн.

– Мĕн ятлă-ха эсĕ?

– Алеша. Пирĕн пăру кукамайăн саппунне веçех чăмласа янă, саппун кĕсйинче сакăрвун çичĕ тенкĕ укçа пулнă. Ăна та хăварман. Йăлтах çăтса янă. Кукамай тарăхнипе ăна чутах пусса пăрахатчĕ, хам чартăм. Эпĕ ăна питĕ юрататăп, вăл пурпĕрех тем те пĕр чăмлать, сĕлекине юхтарма чарăнмасть.

– Сĕт ĕçет-и вăл? Мĕнле чĕнеççĕ-ха ăна?

– Марта! Мана курсан тўрех "му-у-ук!" тет, – сĕтел çинчен куçне илмерĕ Алеша.

Маруç ăна тĕпеле irттерчĕ, темиçе канфет, печени тата груша илсе пачĕ. Унтан Маруç сĕтел çинчи савăт-сапана пуçтарма тытăнчĕ.

– Шыв ĕçес килет, – амăшĕ енне пăхрĕ вăл. – Чей вĕретмелле мар-ши, анне?

– Халех чей лартса яратăп, апат тăварлăрах пулчĕ пулмалла, – илтĕнчĕ тĕпелтен Ялампин сасси. – Хамăн те шутсăр ĕçес килет-ха.

– «Ĕçес килет», «ĕçес килет»... Эп кунта, мĕн, çăлкуç мар вĕт, – мăкăртатрĕ ача сĕтеклĕ грушăна çăвар тулли чăмласа.

Кил хуçисем пĕр-пĕрин çине пăхса кулса ячĕç. Арçын ача вĕсем çине пăхмасăрах печени кăмпăртаттарма пуçларĕ.

– Алеша, эс миçе çулта? – ыйтрĕ унран.

– Аннерен ыйт. Вăл пĕлет.

– Эс хăв миçе çултине те пĕлместĕн-и?

Ача сасартăк хăлхине аллипе яп! ярса тытрĕ:

– Ай! Ялампи! – кăшкăрчĕ вăл тем питĕ кирлĕ япала пĕлтернĕн. – Хăш хăлхи янăрарĕ, пĕл! Хăш хăлхи янăрать?

– Сылтăмми! – сас пачĕ плита умĕнче кăштăртатакан карчăк.

– О! Тĕп-тĕрĕс!

Маруç куллине пытарса каллех ача умне пĕшкĕнчĕ:

– Сылтăмми тетĕн-и? Санăн сылтăм хăлхи хăшĕ-ха, э?

– Пĕлместĕп çав, – хулпуççине сиктерчĕ Алеша. Унтан конфет шатăртаттарма пикенчĕ. Кил хуçисем иккĕшĕ те харăсах кулса ярсан, вăл та вĕсемпе пĕрле ахăлтатрĕ

– Алеша, атя, шыв ăсма тухса кĕрер, – чĕнчĕ Маруç ун çинчен куçне илмесĕр. – Эсĕ мана пулăшăн, юрать-и?

– Юрать. Тулта сивĕ паян. Пирĕн кушак урамрах юлчĕ. Шăнса та хытрĕ пуль мĕскĕн.

– Мĕншĕн шăнса хыттăр-ха вăл?

– Тулта юр çăвать. Кушак çара уранах вĕт, эпĕ хăть атă тăхăннă. Вĕсем килхушшине тухрĕç, пахча çумĕнчи çăл пури умне утрĕç.

– Асту, Алеша, çăл патне ан пыр, – асăрхаттарчĕ Маруç ачана.

– Мĕншĕн? Мĕн пулать?

– Юрамасть. Хăрушă. Эсĕ халĕ пĕчĕккĕ, ӳкме те пултаран.

– Çук, ним те хăрушă мар. Мана çăлран тупнă. Пĕррехинче çăлалла тайăлса пăхрăм та унта хамăн сăна куртăм. Анса пăхас тесе шутларăм. Чăн-чăнах ман сăн курăнать унта, атя, тепре пăхар-и?

– Алеша, мĕскер калаçатăн эс? Пĕтетĕн вара!

– О-о-о-о! Мана пурпĕр тепĕр хутчен çăлтан туртса кăларатчĕç, – умĕнчи катăк шăлне кăтартсах кулчĕ арçын ача.

Маруç вĕрене çавăрса кăларчĕ, пушă витресене тултарчĕ.

– Мару-уç! Эс тепре хăçан килен хуларан! – интересленчĕ ача.

– Маруç мар. Маруç аппу пулатăп эпĕ.

– Маруç аппу-у-у! Эсир хулара сыр çисе куркалатăр-и? Леш, çутă хутпа чĕркенине.

– Çисе куркалатпăр. Санăн çиес килет-и?

– Çук, çиесех килмест, – пуçне пăркаларĕ Алеша.

Хапха алăкĕ чĕриклетсе уçăлчĕ, кил хушшине Матрӳн аппа кĕрсе тăчĕ.

– Ах, тур, ку ачапа! Эп ăна шыратăп! Хăш вăхăтра тухса тарчĕ тулĕк, курса та юлаймарăм. Анчах килтеччĕ...

– Питĕ лайăх пуплетпĕр-ха эпир унпа.

– Эй, пуплеме юратать. Хам пекех, – ал сулчĕ кӳршĕ хĕрарăмĕ. – Паян ир вăрататăп – тăмасть. Пăтă сивĕнсе каять, тăр-ха тетĕп. Кайран санпа аппаланма вăхăт çук тетĕп. Вăл пур, ик аллине пуçĕ айне хунă та месерле выртать: "Манăн та вăхăт çук санпа аппаланма!" – тесе хучĕ. Пыр та калаç хальхи ача-пăчапа.

– Аллуна мĕн турăн, Матрӳн аппа? – ыйтрĕ шурă пирпе çыхнă аллине асăрхаса тулли витрисене çĕклеме хатĕрленнĕ Маруç.

– Сусăрлатрăм-ха. Нӳхрепе аннă чухне персе антăм. Юрать, алла çеç ыраттартăм. Таçтан та тупăнать ман тĕле. Наччас шыçса кайрĕ, пĕр ĕç те тăваймастăп халь. Каçхине ĕне суса парăн-ши тетĕп те.

– Юрать, юрать. Хулана кайиччен каçхине те, ирхине те суса парса хăварăп, – витрисене çĕклесе тӳрленсе тăчĕ Маруç.

Каçкӳлĕм Маруç тумланчĕ, – килте тăрас килмерĕ темшĕн, хăй те пĕлмерĕ – чунĕ таçталла туртрĕ. Вăл пахчана тухрĕ, кунта кăштах уткаласа çӳрерĕ, çĕрулми айккипе анкарти вĕçнелле уттарчĕ. Вĕсен хыçĕнче çырмаллă вырăнсем, кайсан-кайсан сарлака пĕве пур. Пĕве пуçĕнче тирексемпе ăвăссем, пĕве тепĕр вĕçĕнче хурăнлăх пуçланать. Çыран хĕрне васкамасăр утса пычĕ Маруç, тирек çумне таянчĕ те пĕр хушă пăтранчăк шыв çине пăхса тăчĕ. Кунта пăртак тăнă хыççăн шăн курăка чаштăртаттарса пĕве вĕçнелли хурăнсем патне çитрĕ. Кăмăлĕ пусăрăнчăк унăн. Тавралăха каç сăнĕ хупăрланăран çапла-ши? Е кĕрхи сăн çĕр çине çапла хăйне евĕрлĕ тунсăх ярать? Йĕрес – куççулĕ тухмасть, кулас – кăмăлĕ çук. Ăшĕнче вăл хăйне çеç ăнланмалла çемĕ ĕнĕрлет.

Утать, утать çыран тăрăх – тунсăхĕ пурпĕрех хăпмасть унран. "Эпĕ мар, таçта кăкăрта, шалта йĕрет иккен..." чарăнса тăрать Маруç, унтан йывăççем çинелле тинкерет. Çулçă тăкăнма чарăнман-ха. Нумай пулмасть нӳрĕ, хура çĕр çине лаплататчĕç вĕсем, паян вара темрен кăшт шикленнĕн сывлăшра чĕтрене-чĕтрене илеççĕ те çемçе юр çине чăштăрт çеç кĕрсе выртаççĕ. Пĕр шавсăр, лăпкăн. Эх, çулçă ĕмĕрĕ, çулçă ĕмĕрĕ! Шеллес килет вĕсене Маруçăн, питĕ шеллес килет. Утать, утать хĕр, тӳперен "мамăк" вĕçет те вĕçет, ĕнтĕ унăн та вĕсемпе пĕрле вĕçсе каяс килет. Инçе-инçе. Питĕ инçе. Анчах... анчах ăçта? Ăçта вĕçсе çитĕнха? Этем юр пĕрчи мар-çке. Юр пĕрчи мар. Хăвăнтан ху пурпĕр ниçта та вĕçсе каяйман. Хальлĕхе кунта, çĕр çинче пурăнса савăнмалла. Çак илеме курмалла. Мĕн ачаран чупса, выляса ӳснĕ вырăнсем... Пур-ши кунтан хакли çĕр çинче! Çакă мар-и пурнăç? Çакă мар-и-ха телей! Кашнинех хăйĕн вăхăчĕ, хăйĕн пурнăçĕ. Пурин те хăйĕн кун-çулĕ: этемĕн те, çулçăсен те, çак черченкĕ юр пĕрчисен те.

Акă, ăшра сисмесĕрех кĕрхи вальс çемми янăрама пуçлать. Çулçăсем вара çав-çавах йывăçпа сывпуллашаççĕ. Эх, асамлă çут тĕнче! Мĕн тери илемлĕ... Чăтаймасть хула хĕрĕ, вальс кĕввипе пĕр-пĕчченех çаврăнма тытăнать. Ырă-çке çĕр çинче! Мĕн тери ырă! Ан тив, çулçăсем йывăçпа сывпуллашчăр. Вăл вара çакăнти асамлăхпа савăнĕ. Тинех тунсăхпа сывпуллашĕ. "Ташлăр пĕрле, йывăççем!" – вĕлтĕр-вĕлтĕр çаврăннăçемĕн ача пек, унтан темле, сывлăшри шурă пĕрчĕ евĕрех туйрĕ хăйне Маруç. "Савнăр пĕрле, тусăмсем! Савăн пĕрле, çут тĕнче! Сан умра ĕлĕкхи пек çинçешке, чăнкăр-чăнкăр сасăллă хĕр ташлать!"

Сивĕ çил вĕрнине пăхмасăрах çаврăнать Маруç, сивĕ çил вĕрнипе татах та

татах тăкăнаççĕ çулçăсем. Эх, хĕрлĕ, сарă çулçăсем! Мĕн тери тасан та чиперрĕн курăнаççĕ вĕсем. Шурă çĕр çине ӳкни хура пылчăк çине ӳкни мар пуль çав. Сивĕ пулин те...

Çĕрле часах çывăрса каяймарĕ Маруç. Куçне хупсанах ун умне кăпăшка шурă ӳтлĕ, чăл-чăл хура куçлă Алеша тухса тăчĕ. Пĕчĕкскерне тытса чăмăртас, кăкăр çумне çупăрлас килчĕ. Сасси те хăлхарах унăн. Калаçнине, ача хыттăн ахăлтатнине илтес килет. Тĕлĕрсе кайма кăна пуçланăччĕ – хăйне алă сĕртĕннине туйрĕ. Амăшĕ пулнине куçне уçса пăхмасăрах ăнланчĕ Маруç. Ав, урасене ăшăтать, унтан ура сыпписене, чĕркуççисене. Мĕн тери ăшă çапать иккен çав алăсенчен! Аннеçĕм, анне! Мĕнле ырă. Ăшă-ăшă, тăванран та тăван алăсем. Çывăхран та çывăх-çке эсир. Ах, епле ӳпкелĕн-ха ăна? Епле ӳпкелĕн? Тен, анне те мар ку – Турамăш? Чăнах та, Турамăш пуль? Турамăш... Аннепе Турамăш пĕр мар-и вĕсем? Анне вăл хăй – Турă. Паллах. Вăрахчен тăчĕ ун умĕнче карчăк. Пĕчĕк ачине шелленĕн ăна питĕнчен, çӳçĕнчен асăрханса сĕртĕнчĕ... Маруç тепĕр хут тĕлĕрсе кайрĕ.

Тĕлĕкĕнче те чи ачаш сăмахсем çеç пăшăлтатрĕ вăл, нихăçанхинчен телейлĕ туйрĕ хăйне: ĕнтĕ Маруçăн та пĕчĕк арçын ача пур пек. Сăнĕпе пĕрре те Алеша пек мар иккен вăл. Куллипе те, калаçнипе те йăлтах Петюка, унăн юратнă Петюкне аса илтерет. Ĕлĕкхи пекех çап-çамрăк хĕр, шурă кĕпе тăхăннă вăл, сцена çине тухать, залри халăха пуç тайса саламлать. Юрлама хатĕрленсе сцена çинчен халăха тинкерет çеç – темшĕн чĕри сиксе тухасла тапма тытăнать: "А-а-а-а!" çав тери уççăн янăраса тухать артисткăн сасси. Юрласа пĕтернĕ-пĕтермен пурте алă çупма тытанаççĕ, чечексем ывăтаççĕ. Хавхаланса кайнăскер, хытă пăлханать пулин те, тата хытăрах юрлать.

– А-а-а-а-а!!! – пĕтĕм чунне парса кăшкăрса ярать вăл.

– Маруç, хĕрĕм! Вăран-ха, вăран! – силлерĕç ăна.

Маруç куçне уçса ячĕ. Амăшĕ пĕшкĕннĕ иккен ун умне.

– Мĕн пулнă? – хыпăнса ӳкрĕ вăл тӳрех тавçăрса илеймесĕр. – Анне...

– Ĕне сумалла, хĕрĕм, – ăна тутлă ыйхинчен вăратнишĕн кăшт пăшăрханнă сасăпа пĕлтерчĕ амăшĕ.

Георгий ФЕДОРОВ

# Сывпуллашса кӗр алӑ сулчӗ

Янрарӗ, ҫавӑрӑнчӗ рулада
Ман пӳлӗмре.
Вӑраннӑ пек хастар Элада
Яш ӳсӗмре.

Анчах та яшлӑхӑм ӑсаннӑ
Инҫе, инҫе...
Тулта ҫиҫет кӑвар шӑраннӑн
Кӗрхи тӗнче.

Апла кӗлвиткӗҫ тупӗ-ши
Руладӑм ман?
Пуласлӑхпа мӗн ҫыхӗ-ши?
Чунра – тӑман.

Чунра соната канӑҫ тупрӗ,
Ҫӗн увертюр.
Умри пуласлӑх – тавлӑн чупрӗ –
Шур ҫиллӗ юр.

Ҫаплах-ҫке, яшлӑхӑм ӑсаннӑ
Инҫе, инҫе...
Пуласлӑхӑм, кӑвар шӑранчӑк,
Шап-шур тӗнче.

* * *

Ав иртрӗ Шуберт урампа,
Тӑван-пӗтен пек ыррӑн кулчӗ,
Кӗвви ӑша шӑнкравлӑн тулчӗ
Чунне хускатнӑ суранпа.

Сас пачӗ хурлӑ контрабас.
Сывларӗ ассӑн яшӑ Гамлет.
Кам – хӗрхенсе – ӑна ыталӗ?
Ват йывӑҫ тӑкрӗ... шурӑ пас.

Ҫӳрерӗ шӑппӑн Дебюсси,
Вӑрман юхан шывне иленчӗ.
Кӗҫ... евӗк юрӑ пек ҫӗкленчӗ.
Ҫапла ӳтленчӗ ун ӗҫси.

Кун-ҫулӑмпа кӗрсе чӗрре
Пӗр эп кӑна ҫӳретӗп тӗлсӗр,
Пуласлӑха упраслӑх – пилсӗр
Тӗрлетӗп тӗс тупман тӗрре.

Ҫӳрерӗ шӑппӑн Дебюсси...
Ав иртрӗ Шуберт урампа...
Сывларӗ ассӑн яшӑ Гамлет...
Хӑйпе хӑех кӗрсе чӗрре,
Йӗрлет тӗнче тӗс ҫук тӗрре.

* * *

Иртнӗ кун ытарӗ хурлӑн пӑхрӗ
Ман ҫине кӗрхи чӳречерен.
Хӑнана килсе эрнесерен
Иртнӗ кун ытарӗ хурлӑн пӑхрӗ.
Ун ҫӗленӗ сӑхрӗ чӗререн.

Саксофон темскер каласшӑн пулчӗ,
Ӑнкарайнӑн манӑн шухӑша.
Уҫӑмсӑр хускатрӗ те ӑша,
Парк туллин хӗрхӳ янравлӑн кулчӗ,
Тупнӑ евӗр камитле нуша.
Саксофон темскер каласшӑн пулчӗ.
Ҫулҫӑ шавӗ пӑлхатать чуна.
Ҫулҫӑпа пӗрле ҫула тухаслӑн
Каҫ вӗтхӳллӗн пӗрӗхет. Ҫӑвать.
Пӗлӗтсен купи мӑран шӑвать.
Умӗнче – синкерлӗ ӗмӗт аслӑ.
Парк илемлӗ тумтирне хывать,

ПОЭЗИ

Çулçăпа пĕрле çула тухаслăн,
Çил – шап-шурă кунсене савать.
Ав рояль сас пачĕ çурăк саслăн.
Именсе шăпланчĕ саксофон.
Çурăк саслăх тупнăн кирлĕ тон,
Кив паркра çÿрет синкер хаваслăн...
Тен, ку маншăн хывнă Рубикон?
Ав рояль сас пачĕ çурăк саслăн.
Кĕр сивлекĕ тупрĕ кирлĕ тон.
Иртнĕ кун ытарĕ хурлăн пăхрĕ.
Тăлăх вăхăт килчĕ сăхрĕ, сăхрĕ...
Хурланса, тен, йăмрĕ саксофон.
Тупрăм эпĕ хамшăн Рубикон.
Каç вĕтхÿллĕн туллашать. Çăвать
Çил шап-шурă ĕмĕте савать.

* * *
Калам сана: чуну кÿтсе çитсессĕн,
Итле, тăван, итле Бетховена.
Рояль кăкри çĕкленĕ пĕр çиллессĕн,
Пин-пин хаярлăх кĕрĕ хăлхуна...
Тепре ачашлăх – кăмăлна ыталĕ,
Санра вăл йăлтăр тĕспеле çуталĕ...
Вара сана куран кашни çын калĕ
(Иккĕленмесĕр ĕненсем çакна):
Ан йăт пĕччен çĕ – хурлăхри çакна!..

Мĕскер санра хĕлхемлĕн çиçрĕ тетĕн?!
Пуçларăн эсĕ ăнланма кĕвве.
Чун кÿтнине ансат эс çĕнтеретĕн,
Ăна ачашлăхпа çыхан тĕвве.
Анчах Бетховен сĕннĕ çав «юр-варăн»
«Сĕтеклĕхне тутаннăçем», чун тарĕ
Ăша нихçан пулман вутпа çунтарĕ.
Рояль, ав, тăвăл таппинче чĕтрет.
Умра, шантармăш, йăлтăрать кĕтрет.

* * *
Çунать хĕлхемлĕ кăмăл хĕрнĕ майлă
Çупкам-çупкамăн хĕрлĕ хурлăхан.
Ăна татма пĕлмерĕм пулĕ стайлă.
Кăмăлăма ÿкертĕм хурлăха.
...Çупкам-çупкамăн – хĕрлĕ хурлăхан.

Васкавлă пиçнĕ хурлăхан çырлишĕн
Санпа пĕрле эп кĕтĕм пахчана.
Вуншар сăмахăн хавхаланчăк йышĕ
Çырла тути пек илĕртрĕ чуна.
...Санпа пĕрле эп кĕтĕм пахчана.

Карта урлах сĕнет халь кун йÿçекĕ,
Вăтаннă евĕр хĕрелет пилеш.
Шупкалнă уйăх – тĕссĕрленнĕ çекĕл.
Каçар мана. Хытах ан ÿпкелеш.
...Вăтаннă евĕр хĕрелет пилеш.

Ан ÿпкелеш. Санра та пур-тăр айăп.
Пăлхавлă каç вăл – ик чĕре çыххи.
Хистен пулсан, эп парăнăп та кайăп.
Асра упранĕ иртнĕ кун ĕлки.
...Пăлхавлă каç вăл ик чĕре чĕлхи.

* * *
Тĕлĕкре каллех çÿретĕп
Санпала эп çăтмахра.
Çăлтăр хĕмленет ĕретĕн
Эс каланă сăмахра.

Янăрать хитре рулада,
Иртнĕ кунăн чух йĕрри.
Шурă-шурă баллюстрада.
Решетке, çут кÿл хĕрри.

* * *
Сан сассунта пилеш кăварĕ туйрăм
Çапла астарчĕ пулĕ пĕр кана
Кĕрхи кунсен туллилĕхĕ мана.
Санран епле пурнам-ши ĕнтĕ уйрăм?..

* * *
Кашни турат, кашни пĕр çулçă
Сывпуллашса хĕрхÿн ал сулчĕ.
– Чипер. Каятăп сив хĕле.
Тÿпе шур шăллăн кулчĕ, кулчĕ
Вĕçтернĕ евĕр сив кĕле,
Юр çавăрттарчĕ. Тен...

Эпĕ те çапла-ши кайăп?
Кун-çулăмпа... Тупса пин айăп.
Умри ним çуклăха савса.
Курап, кĕр кунĕ ĕнтĕ тайăн.
Çив çил, ват йывăça авса, -
Кун çавăрттарчĕ.

Çапла шăвать çут кунлă çул.
Кĕç тупăп чун виттийĕ. Чул.

* * *
Те Блокăн,
Те Есенин каçĕ
Умра тăрать хăлаçланса?
Ах! Сансăр эп епле çĕр каçăп
Кăвак çутчен асапланса?
...Йĕрет пĕр сассăр пианино.
Бетховен каçĕ пек йĕрет...
Ĕнер савниçĕм пулнă çыннăм
Паян, ак, ют çулпа çӳрет.
Тăхта! Кăшт çеç тăхтаччĕ, тухăç!
Çут кун тата асаплăрах!
Ума килес шăпаçăм тухĕ
Аманнă чĕлĕх пек хăрах.

* * *
*Аннене*
Мĕкĕл-мĕкĕл турĕ
Çутă куç харши.
Вăхăт иртнĕçем вăл –
Хурланман пур-ши?
Иртнĕ кун паланĕ –
Шăкăрах шăрça...
Тен, унта йӳçси те
Тупăнать-тĕр çав.

Ыранхийĕ пурпĕр -
Пултăр ĕмĕтре.
Кур– хаваслăн, ыррăн
Сĕвĕрлет тĕтре.
Ах, татах та пулĕ
Пурнăçра тĕрли...
Тыт-ха, шаклатар-и,
Черккере – хĕрли,
Тутанар паланăн
Техĕм йӳççине...
Сан умра тăрам-и
Чĕркуççи çине?

* * *
Сап-сар шăлне йĕрсе вăл кулчĕ,
Сывпуллашса кĕр алă сулчĕ.
Татах ак иртрĕ вунă çул.
Вĕлтĕртетсе вĕçет сар çулçă:
– Каятăп, – тенĕн, – лайăх юл.

Ума килес ыранăн хĕлĕ
Чĕркуçленсе тăвать сив кĕлĕ.
Сăвап тасан кĕмĕлленет.
Малашлă ĕмĕт сулхăн тĕлĕк,
Суранлă тĕлĕк тĕлленет.

Тата çĕн кĕр килсе тум хывĕ,
Тата çĕн шартлама, çĕн сивĕ
Сăваплăн шăнтĕ те чуна,
Вара чĕрем суранлă сывă
Тупса ĕретлĕ ум куна.

Пĕртен-пĕрех кун-çулăн юрĕ
Ман кăмăл витĕр çурĕ. Çурĕ...
Татах хывма кĕрхи кĕрпек.
Килес кунсен çурхи шыв-шурĕ
Сар çулçă шавĕпе пĕр пек.

Шăпам хайланă сивĕ-ăшă –
Манри синкер-телейлĕ мăшăр.
Каллех сăвап хыпар ярать.
Ман ĕмĕр витĕр йăшăр-йăшăр
Юра – сар çулçă ал парать.

Ума килес ыранăн хĕлĕ
Чĕркуçленсе тăвать сив кĕлĕ.
Ĕретленсе иртет вун çул:
– Каятăп, – тенĕн. – Сывă юл.
Сăвап тасан кĕмĕлленет,
Суранлă тĕлĕк тĕлленет.

**Аркадий СКВОРЦОВ**

# Çулсем иртсен

## Юрий СКВОРЦОВ çыравçăна асăнса

1

Элир Муркаш районĕнчи Хурăнкассинче çуралнă. Ялĕ Сурăм шывĕ тăрăхĕнчи пĕр пысăк вар пуçĕнче ларать. «Чăваш энциклопедийĕ» Хурăнкасси çинчен çапла калать: «Жители-чуваши, до 1866 государственные крестьяне занимались земледелием, животноводством. В 1929 году образован колхоз «Надежда!».

Çав колхоза пирĕн атте туса хунă. Ун чухне вăл Элĕк районĕнчи ĕçтăвкомăн пай пуçлăхĕччĕ. Çĕршывра пуçланнă çĕнĕ юхăм – колхозсем йĕркелесси – пирĕн республикăна та çитсен вăл Хурăнкассине таврăнать. Çăмăл пулман ăна ял халăхне пĕрлештерме. Кашни эрнере пуху ирттернин усси пулман. «Хамăртан пуçлас пулать», – тенĕ вăл хăйĕн ашшĕпе тата Василий пиччĕшĕпе калаçса татăлса. Вĕсем çемйисемпех колхоза кĕреççĕ, килти лашисене, ĕнисене – пĕтĕм выльăх-чĕрлĕхе (кайăк-кĕшĕксĕр пуçне) пĕрлĕхлĕ çĕнĕ хуçалăха параççĕ. Çавăн хыççăн тин ял халăхĕ заявленисем çырма тытăнать. Çапла «колхоз» тенĕ çĕнĕ сăмах Хурăнкасси пурнăçне те пырса кĕрет.

Панкли ялĕнче те вăй хума тивнĕ аттене. Анне питĕ пулăшнă ăна. Вăл учительница пулнă майăнах вулăс ĕçтăвкомĕн женотдел членĕ пулнă, халăхпа калаçма, ĕçлеме пĕлнĕ. Панклири колхозне чи малтан пĕр-пĕччен пурăнакан икĕ хĕрарăм кĕнĕ.

Аттен ырă ĕçĕсем çинчен халь Панклири музей экспоначĕсем аса илтереççĕ. 1983 çулта Хурăнкасссине Элĕк районĕнчи Чăваш Сурăмри музей директорĕ К.В.Воронов (ЧР хăрушсăрлăх министрĕ пулнă С.В.Воронов ашшĕ) пынăччĕ. Вăл пире музей çинчен каласа пачĕ, çав музейра упранакан аттен вулăс ĕçтăвкомĕн председателĕ пулнă чухнехи сăнÿкерчĕк копине парса хăварчĕ. Çав сăнÿкерчĕк мана аттен пурнăçне аса илтерет.

Асатте пирĕн, Тит Игнатьевич Игнатьев, тимĕрçĕ пулнă. Колхозра та тимĕрç лаççинче ĕçлетчĕ, лашасене таканлатчĕ, çава-çурла тата ытти япала ăсталатчĕ.

Çырмари тимĕрç лаççине эпĕ лайăх астăватăп. Ялваррине касакан çырма сарăлса улăхалла – Сурăм юханшывĕн çыранĕсем патнелле тăсăлать. Хитре вырăн. Хурăнкасси тесен эпĕ яланах çав вырăна аса илетĕп.




*Илларион Титович Скворцов. Ю. Скворцов ашшĕ.*

*Христина Яковлевна Скворцова. Ю. Скворцов амăшĕ. 1953 ç.*

*Аркадий, Леонард, Юрий Скворцовсем. 1951 ç.*



Ун чухне улăхра çирĕклĕх ÿсетчĕ. Лачакаллăччĕ ку вырăн. Кайăк йăвисем йышлăччĕ унта. «Тĕввик! Тĕввик! – тесе тĕкĕрлĕксем вĕçетчĕç. Вĕсен хурлăхлă сасси пире, ачасене, хăрататчĕ те эпир Каçикка варĕ еннелле хăвăрттăн васкаттăмăр. Унта та пире шиклентерекенни пурччĕ: «Сибури тытать», – тетчĕç ваттисем вăл вырăна.

«Хурăнкасси» очеркра Юрий Скворцов çапла çырнă: «Н.И.Ашмарин «Каликка варĕ» сăмах тĕлне те «речка» тесе палăртать те ыйту палли (?) лартать. Тен, Каçликка варĕ, чăн та, тахçан юханшыв пулнă пуль... Сибура çын ячĕ пулни Н.И.Золотницкин «Чувашские имена» словарĕнчен те паллă. Апла пулсан кунта çак çын пурăннă е çав вырăнта вилнĕ теме пулать».

«Сăваплă вут» повеçре Ю.Скворцов пуян Сибурпа чухăн Каçликка сăнарĕсене лайăх ÿкерсе панă. Сюжетăн тĕп геройĕсем – Евленпе Сайите. Вĕсен таса та вăйлă юратăвне аса илтереççĕ мана Хурăнкасси таврашĕнчи варсем, уçланкăсем.

2

Ю.Скворцов пирĕнтен уйрăлса кайнăранпа кăçал çурла уйăхĕн 11-мĕшĕнче 36 çул çитет. Хăй пурăннă чух вăл çырнисене час-часах хурлатчĕç: «Пурнăç

чăнлăхне пăсать», – тетчĕç. Халь унăн кĕнекисене çĕнĕ виçепе хаклаççĕ. Хак парасси çыравçă çын чунне, шалти тĕнчине мĕн тери ăста, тарăн тишкерсе ӳкерсе кăтартнинчен килет. Мана Валентин Абрамов литературовед хальхи литература тĕпчевĕпе критики çинчен 2008 çулта пынă калаçура каланă сăмахсем аса килчĕç: «Этем чунĕн вăрттăнлăхĕсене Юрий Скворцов пек тишкерекенсем курăнмарĕç». («Тăван Атăл», Çавра сĕтел... 140 стр.)

Чăваш ăстин ячĕ çӳлерех çĕкленме пултарни çинчен Ева Лисина çыравçă 10 çул каяллах çапла каланăччĕ: «В чувашской прозе есть вещи, которые можно показать всему миру. Наследие Юрия Скворцова, например (при хорошем переводе, т.е. без приукрашиваний, при точном, бережном отношении к оригиналу». («Советская Чувашия» хаçат. 1993, авăн, 1).

Ăсталăх вăл – этемре шалта; ăсталăх вăл – турă панинче. Ăçтан пулса тухнăха çавнашкал çыравçă – Ю.Скворцов? Паллах, пушă вырăнта мар. Пирĕн çемьере пурте искусствăна юратакан çынсемччĕ. Атте яланах кĕнеке, хаçат-журнал çырăнса илсе тăратчĕ, сĕрме купăс калама юратнă. Анне шкулта вĕреннĕ чухнех кӳршĕри Нестор Виноградов тантăшĕпе (кайран Н.Виноградов чăваш академи театрĕн тава тивĕçлĕ артисчĕ пулса тăнă) пĕрле Тивĕшри клуба ташлама, юрлама çӳренĕ; яланах музыка итлеме юратнă, юрланă.

Тата вăл чăваш чĕлхипе питĕ таса калаçатчĕ. Ывăлĕн кĕнекисене вуланă чух çапла калатчĕ: «Ку сăмахсене манран илтсе çырнă».

– Юрий пичче, – аса илетчĕ Тамара йăмăкăм, – анне каланă сăмахсене питĕ тăнласа итлетчĕ, çырса пыратчĕ. Хăйĕн кун кĕнекине никама та вулаттармастчĕ.

Леонид шăллăм анненех хывнă пулас – питĕ хитре юрлатчĕ, кĕнекесем нумай вулатчĕ, Дюма, Купер геройĕсемпе аташатчĕ.

Эпĕ пĕчĕк чухне шкултан кĕнекесем илсе килсе Юрккапа Леня шăллăмсене вуласа параттăм.

Унтанпа вăхăт чылай иртрĕ. 1944 çулта эпĕ салтака каяс умĕн тăван яла аннепе сывпуллашма килнĕччĕ. Юрккан куçĕсем тĕлĕнтернĕччĕ мана. Пысăк ăс-тăн куртăм эпĕ вĕсенче. Çулсем иртсен шăллăмра пултарулăх пуррине пурте асăрхарĕç.

Анчах пурнăç ун çине пĕчĕкренех хаярлăн-хатарлăн пăхнă иккен: шăтса тухнă калчана ӳсме пуçличченех пĕтĕрсе хурас тенĕ пекех пулса тухнă вара.

Вăл улттăра чухнех пирĕн аттепе анне уйрăлса кайнă. Эпир, Леонардпа иксĕмĕр, атте патне Çĕрпӳ хулине куçрăмăр, Юрий çулталăкри Тамара йăмăкпа пĕрле ялта аннепе тата аçа çурипе юлчĕç. Вăрçă пуçланнă чухне Юрий вуннăраччĕ. Çав вăхăта вăл хăйĕн сăввинче çапла аса илет:

Хирте машин та сахалланнă –
Фронта ăсаннă тракторсем.
Эпир те ăшă ыйхă маннă –
Сăпка çӳлли шăпăрлансем.

Аслисемпе пĕрле çурма тăлăх ача утă çулнă, тырă вырнă, атă-пушмак çĕленĕ.

Аçа çури фронтран таврăнсан Юркка умне кĕтмен çĕртен атте патне куçса каясси тухса тăрать. Первомайскине (халь Патăрьел районĕ). Эпĕ ун чухне çартан таврăнманччĕ-ха, Леонард Хусанти мединститутра вĕренме пуçланăччĕ.

– Март уйăхĕн сивĕ кунĕсем тăратчĕç, – каласа панăччĕ кайран Юрий. – Çулĕ инçе.

Халь шухăшлатăп та тĕлĕнетĕп çеç: мĕнле çав пиллĕкмĕш класа вĕренме каякан ача ятарлă маршрутпа çӳрекен автобуссем ун чухне çукчĕ, пĕччен çитме пултарнă çав нихăçан курман-илтмен Первомайскине?

Ача уринче – çăпата, çийĕнче кивĕ кĕрĕкрен пăсса çĕленĕ пиншак, пуçĕнче – хăлха тăрринех хуплакан аçа çурин пысăк çĕлĕкĕ. Пиншакĕ кĕсьесĕр, алси çӳхе.

Канашра Юрккана хамăр ял хĕрарăмĕ Улатăр урлă Харькова каякан пуйăс çине лартасшăн пулнă – билет сутман пирки вагон пусми çинче кайма тӳр килнĕ.

Йĕпреçе çурçĕр иртсен çитнĕ. Буинск разьездĕнче Юркка анса юлнă. Кунтан Первомайскине çитме çирĕм пилĕк çухрăм. Ирччене утмалла. Вăрманпа. Ун телейне çул юлташĕ тупăннă, вăл ачана ирхине тин çеç ĕçе килнĕ атте патнех илсе çитернĕ.

Çапла Юрий нумай çул аттесĕр пурăннă хыççăн ăна курса савăннă. Анчах... Каллех «анчах» темелле. Кунта шăллăма аттен иккĕмĕш арăмĕ, пирĕн ама çури анне, кĕтсе илнĕ.

Ама çурирен телей куракан пулман теççĕ. Çакна Юрий хăех тӳссе курнă. Атте пирки те çавнах каламалла. Малтанхи çемье арканнă хыççăн вăл чĕмсĕр çӳреме хăнăхрĕ. «Атте вилет, анне вилет. – Вăхăт иртсен хуйхă та иртет», – тетчĕ вăл. Аплах мар çав: чуна пĕрех ыраттарать?

Юркка кулянмалли чылай пулнă. Çавна пулах вун иккĕрех вăл тапак туртма пуçланă. Нумай калаçма юратмастчĕ, ялан шухăшлăччĕ.

Вăл çирĕп чунлă çын пулман пулсан унран çыравçă пулаяс çукчĕ пуль. Атте ăна вĕрентме тăрăшатчĕ, ывăлĕ поэт пуласса шанма та пултарайман пулас. Тен, çавăнпах Хусана авиаци институтне кайма сĕнчĕ: «Сăвăсене инженер пулсан та çырма пулать, – терĕ. – Хусанта Леня вĕренет, иксĕр пĕрле пулатăр».

Хирĕçлеме хăяймарĕ шăллăм. «Хусана çурçĕр тĕлне çитрĕм. Леня патĕнче çĕр каçрăм та ирхине хамăн института кайрăм, общежитие вырнаçрăм. Паян студбилет пачĕç», – пĕлтерчĕ вăл аттене.

Вĕренĕвĕ ăнăçлах пуçланса кайнă унăн. Пурнăçĕ çинчен тăтăшах пире пĕлтерсе тăратчĕ. Çур çул иртсен Леньăран çыру çитрĕ: «Паян эпĕ Юрий патне кайса килтĕм, анчах вăл унта тек вĕренмест иккен. Мĕн пулнă-ши? Килте мĕн тăвать вăл?»

Анчах Юркка киле таврăнман. Леня çырăвĕ пуриншĕн те кĕтмен хыпар пулчĕ. Акă мĕн каласа пачĕ мана кайран Ваçлей Игнатьев çыравçă: «Ун чухне пирĕн атте темле ĕçпе Хусана кайнăччĕ. Киле таврăннă чух вакунра вăл Юрий Скворцова, авиаци институтĕнчен вĕренме пăрахнăскере, тĕл пулнă. «Выçăччĕ хăй, укçи çукчĕ. Буфетра ăна, ырханккана, кукăль илсе çитертĕм», – терĕ.

Канашра Юрий Шупашкара каякан пуйăс çине куçса ларнă, Ишлейре анса январьти шартлама сивĕре вăтăр çухрăм çуран утса Хурăнкассине çитнĕ. Шăнса чирленĕскере (вăл демисезоннăй пальтопа кăна пулнă) анне вĕри кăмака çине вырттарса эмел куракĕсемпе сиплеме тытăннă.

Тепĕр икĕ уйăхран Хурăнкассине Геннадий Айхирен çыру килнĕ: «Каçар,

Юрий, сан адресна тупса сана чӑрмантарнӑшӑн. Эсӗ авиаци институтӗнчен вӗренме пӑрахни ҫинчен пӗлтӗм... Ара, шалти туйӑма епле сӳнтерӗн! Эсӗ поэзи валли, музыка валли ҫуралнӑ ҫын, чӑваш чӗлхин пуласлӑхӗ...»

Ҫав кунсенче шӑллӑм «Йывӑрлӑх парӑнать» калав ҫырма пуҫланӑ. Авиаци институтчӗ ҫинченччӗ вӑл. Студент пурнӑҫӗ ҫинчен.

Ялта Ю.Скворцов драма кружокӗ йӗркеленӗ, Федор Павловӑн «Судра» комедине лартнӑ. Шкулти пӗр учитель ӑна чӑрмантарма хӑтланнӑ, репетицине пухӑннӑ ялти артистсене хӑваласа янӑ. Ҫакӑн ҫинчен Юрий республикӑра тухса тӑракан хаҫат редакцине ҫырнӑ. Ҫырӑва тӗрӗслеме корреспондент килсен учителе шкул директорӗ патне чӗннӗ (хытӑ калаҫнӑ).

Хӑйӗн Хурӑнкассинчи пурнӑҫӗ ҫинчен шӑллӑм атте патне Первомайскине ҫырса пӗлтернӗ. «Военкоматран повестка кӗтетӗп», – тенӗччӗ унта. – Кӗркунне манӑн, тен, вӗренме мар, салтака каймалла пулать».

Анчах вӗренме чӗнсе янӑ хут маларах ҫитнӗ. Юрий Шупашкара тухса кайнӑ, педагогика институтне вӗренме кӗнӗ.

3

Эпӗ те ҫав вӑхӑтранах студент пулса тӑтӑм. «Студент» тесен куҫ умне М.В.Ломоносов палӑкӗ, Мускав университечӗн корпусӗсем тухса тӑраҫҫӗ. Журналистика факультетне тин ҫеҫ йӗркелесе янӑччӗ, унта ун чухне хаҫат тата издательство редакцийӗсенче ӗҫлеме хатӗрлекен уйрӑмсем ҫеҫчӗ. Эпӗ хаҫат уйрӑмӗнчеччӗ. Ман пек салтакран килнӗ фронтовиксем те пурччӗ унта, ытларах ӗнтӗ – тин ҫеҫ шкул пӗтернӗ каччӑсемпе хӗрсем. Пире пурне те пӗр туртӑм пӗрлештеретчӗ – журналистика тата илемлӗ литература. Пирӗн группӑри Валентин Шаров, Ким Смирнов студентсем кайран «Правда», «Известия» хаҫатсенче ӗҫлесе палӑрчӗҫ, Игорь Дедков вара (Марк Щеглов пекех) паллӑ критик пулса тӑчӗ, писательсем ҫинчен кӗнекесем кӑларчӗ.

Вӗренме ҫӑмӑл марччӗ. Мана юлташсен ырӑ тӗслӗхӗсем хавхалантаратчӗҫ. Пӗрремӗш экзамен хыҫҫӑнах В.Шаров коридорта кӗтсе илчӗ: «Библиотекӑри вулав залне ыран пӗрле каятпӑр», – терӗ. – Игорь Дедков пире валли вырӑн йышӑнать». Паллах, ку савӑнтарчӗ.

Экзаменсене тытма чаплӑ профессорсем килетчӗҫ. Вӗсен лекцийӗсене эпир университетӑн чи пысӑк – Коммунистически аудиторире итлеттӗмӗр. В. Асмус философи историйӗпе паллаштаратчӗ, Н.Гудзий ӗлӗкхи вырӑс литература тӗнчине илсе каятчӗ. Авалхи герксен геройӗсем ҫинчен С.Радцинг каласа паратчӗ. «Гомерӑн «Илиада» поэмине чӗркуҫҫи ҫине тӑрса вулас пулать», – тесе Е.Кучборская калани те пире хумхантарнӑччӗ ун чухне.

Пирӗн группӑра тата В.Булгаков студент вӗренетчӗ. Пӗррехинче вӑл пире хӑйсем патне чӗнчӗ. Эпир Михаил Булгаков хваттерӗнче пултӑмӑр, ҫыравҫӑн япалисене, сӑнӳкерчӗкӗсене куртӑмӑр. М.Булгаков ун чухне манӑҫраччӗ, ун ҫинчен шӑппӑн ҫеҫ калаҫатчӗҫ.

Стромынка ятлӑ студентсен хулине те манас ҫук. Кашни эрнере тенӗ пекех унта паллӑ ҫынсем килсе каятчӗҫ. Общежити клубӗнче эпӗ Зоя Космодемьянская амӑшне, Александр Безымянский поэта курнӑччӗ. Унтах чӑваш спортсменӗ



*В. Игнатьевпа Ю. Скворцов. 1965 ç.*

Ардалиоан Игнатьев Европа чемпионатĕнче палăрни çинчен пĕрремĕш хут илтнĕччĕ.

Университетра вĕренме пуçласанах пире А.Радищев вилнĕренпе 150 çул çитнĕ май П.И.Чайковский ячĕпе хисепленекен консерватори залĕнче пухăннă писательсен пухăвне кайма йыхрав билечĕ пачĕç. Унта республикăсенчен килнĕ çыравçăсем те пурччĕ. Пухăва ертсе пыракан Александр Фадеев вĕсен ячĕсене те пĕлтерчĕ, Уйăп Мишши ятне асăнчĕ.

Ку сентябрь уйăхĕн вĕçĕнче пулнăччĕ. Çав кунсенчех эпир Октябрь уявне кĕтсе илме те хатĕрленеттĕмĕр. Кашни эрнере стадионта тренировкăсем пулатчĕç. Ноябрĕн 7-мĕшĕнче эпир Хĕрлĕ площадьре демонстрантсен ретĕнче утрăмăр, мавзолей трибуни çинче И.Сталина куртăмăр. Çур çул та иртмерĕ – эпĕ ăна тупăкра куртăм. Союзсен Çуртĕнчи Колоннăллă зала лекме çăмăл марччĕ. Пирĕн студентсем лекци хыççăн Герцен урамĕпе иртсе пыракан халăх колоннисен ретне кĕрсе тăчĕç. Союзсен çурчĕ патне çитнипе пĕрехчĕ – чиперех утса пыракан халăх сасартăк пĕр-пĕрне тĕртсе, хĕстерсе, ӳксе, ура айне пулнисене таптаса малалла ыткăнчĕ. Çак хăрушă саманта нихăçан та манас çук. Сталина тупăкра курма мана тепĕр кунне çеç тӳр килчĕ.

Çак событисем çинчен эпĕ Юрие телефонпа калаçнă чух каласа патăм.



*М. Удалов, Г. Айхи, Ю. Скворцов. 1965 ç.*

Акă унăн çырăвĕсенчи йĕркесем:

«Учеба продолжается. Живу плоховато. Денег нет. Долгов набралось ровно 200 рублей, да плюс – в этом семестре не получую компенсацию за квартплату (65 руб. в месяц). Жду не дождусь когда выйдет «Ялав» №2 – тогда получил был рублей сто за стихотв. «Тантăшпа тĕл пулсан». За «Марш молодежи» гонорар пока ен выплатили, жду приезда Ф.Лукина (а он приедет не раньше мая месяца). Ближе к весне купить бы хоть брюки – хожу как лесоруб... Ничего не поделаешь, такова действительность.

С приветом твой Юрий. 10.03.54».

«Хваттер ман институтран питĕ инçе... Çапах та «в бурю хороша любая гавань» теççĕ. Хваттер хуçин пысăк библиотека, эпĕ нихçан курман кĕнекесем пур. В.Лацисăн «Сын рыбака» тата В.Янăн «Чингиз хан» романĕсене вуларăм.

13.01.54».

«Библиотекăра чăвашсем çинче çырнă материалсем шыратăп... 1856 çулта Александр Дюма Раççей тăрăх курса çӳренĕ чух Лысково ялĕ патĕнче ăрасна калаçакан çынсене курнă. Ку – чăвашсем пулнă. Çийĕнче вĕсен хĕрлĕ тĕрĕпе илемлетнĕ çăлкăш пир кĕпе, шăлаварĕ кĕске, чĕркуççи таран çеç тенĕ.

5.02.1953 ç».

Лекцисем хыççăн эпĕ яланах факультетри библиотека патăнчи стена çинче çакăнса тăракан ещĕке хурса тухнă çырусене пăхкалаттăм: «Мана валли çукши?»

Юрий тăтăшах çырса тăратчĕ: вĕренӳ çинчен, профорг ĕçне туса пыни çинчен, шахмат секцине ертсе пыни çинчен. «Санпа эпĕ пьеса пирки калаçнăччĕ, çуллаччен ăна çырасси пулмасть. Халь пысăк сăвă çырма пуçларăм. «Чĕрепе калаçни» ятлă вăл. Шухăшĕ: «чĕре хушнине яланах итлемелле мар. Композицийĕ çапла: эпĕ хамăн чĕрепе калаçатăп; чĕре пĕр енне туртать, ăс-тăн пачах урăхла тума хушать».

«Ас тăватăн-и, эпĕ В.Билль-Белоцерковскин пĕр калавне чăвашла куçарнăччĕ. Ăна эп «Ялава» кайса патăм. Редакци сотрудникĕ тепĕр уйăхран каялла таварса пачĕ: «Начар, – терĕ. – Кăна эсĕ вунă хут юсасан та пичетлеместпĕр, тен, вун пĕрмĕшĕнче çеç мĕн те пулин пулса тухĕ». Ку çамрăк авторпа калаçни пулчĕ ĕнтĕ».

Кунашкал тĕслĕхсем пулкалатчĕç. «Славика» вуласан пĕр студентка мана çав калава пăлханса мухтанине халь те астăватăп. Анчах «Славика» пичетлеме те çăмăл пулман. Калава пăхса тухнă редактор хайлава тӳрех пăрахăçланă. Юрий тавлашнă: паллах, питĕ пăшăрханнăччĕ вăл ун чухне.

4

Литература ĕçне Ю.Скворцов сăвăсенчен пуçланă. Сăвă ăш çунмасăр çырăнмасть.

Эп мĕнле-ши сансăр пурăннă, хĕр-тусăм?

Халĕ эпĕ сансăр хам та хам пек мар.

.......................................................

Сансăр эп хĕвелсĕр, сансăр эп телейсĕр,
Мăшăрсăр текерлĕк – сансăр манăн чун.

Кам хумхантарнă-ха çавнашкал поэт чĕрине? Иккĕленмесĕрех калама пулать: хамăр ялти Зоя Федорова, шăллăмăн тантăшĕ. «Çамрăкчĕ ун чух» сăвва та ăнах халалланă, вăлах – Сухви прототипĕ.

«Сурăм хĕрĕ» повеçпе Ю.Скворцов пултарулăхĕнче çĕнĕ тапхăр пуçланать – вăл проза çине куçать.

1959 çулта вăл харăсах хайĕн икĕ чи паллă «Сурăм хĕрĕ» тат «Уках хурăнĕ» повеçĕсемпе кĕмеллеччĕ литературăна. Анчах унăн малтанхи кĕнекинче «Уках хурăнĕ» кĕмен – ăна цензорсем кăларттарнă. Аннотацийĕнче вара çак сăмахсем юлнă: «Кĕнекере... «Икĕ повесть».

– Ку сăмахсене эпĕ юри хăвартăм, – тенĕччĕ мана шăллăм, – унта «Уках хурăнĕ» пулнине çирĕплеттĕр тесе.

Повесть хумхантарать. Хăрушă вăрçă вăхăтĕнче вун çиччĕри Укахви тата унăн тантăшĕсем Иваново облаçне торф кăларма каяççĕ. Фронт валли ĕçленĕ вĕсем. Çапла чăваш хĕрĕсем шурлăхри салтаксем пулса тăраççĕ. Шартлама сивĕре, шывлă, лачакаллă çĕрте ĕçлесе Укахви йывăр чирлет.

«Уках хурăнĕ» – чăн-чăн литература шутне кĕрекен произведени. «Хĕлĕх хӳре кăвакал» пирки те çавнах каламалла.

– Хама килĕшет, критиксем мĕн калĕç, – тенĕччĕ Юрий ăна çырса пĕтерсен.

Хытă вăрçакансем те пулчĕç ăна пичетлесен. В.Захаров писатель «Хĕлĕх хӳре кăвакал» «Ялавра» тухсанах ăна вырăсла куçарчĕ, Юрий тӳрех Саратовра тухса тăракан «Волга» журнала ярса пачĕ. Калава унта ырларĕç. Автор патне рецензент çапла çырса янăччĕ: «Ю.Скворцову удалось на мой взгляд смелая попытка показать свою «Каштанку». Такого рода произведения не делают литературного взрыва, но они часто для рядового читателя, особенно подрастающего, куда важнее взрывных».

Ю.Скворцовăн пĕтĕм пултарулăхĕ пирки те çавнах калама юрать пулĕ.

**Михаил СУНТАЛ**

# Икĕ калав

## Аваллăх ахрăмĕ

Пĕррехинче эпĕ, каникула килнĕ студент, пахчара ĕçлесе ывăннă хыççăн канма тесе урама тухрăм. Каç пулса çитеймен. Кунта, вăрăм каска çинче, вĕт-шакăрпа пĕрле шурă сухаллă ватăсем, хĕрарăмсем, йĕкĕтсемпе хĕрсем. Ĕç кунĕ хыççăн кашни урамра вара çавăн пек – çынсем хăйсем тĕллĕнех, каласса таталмасăрах пĕр çĕре пухăнма юратаççĕ. Мĕн кăна каласа кăтартмаççĕ-ши пĕрне-пĕри? Кама кăна сÿтсе явмаççĕ-ши тата? Шăтăк кимĕ çине лартса яманни пĕр çын та юлман пулĕ тетĕп. Хĕрсем çепĕççĕн юрласа ярсан урама урăхла сăн çапать. Ун пек чух такам аллийĕ ял çине асамлăх варкăшĕ сапса тăрать тейĕн. Ачи-пăчи вара вĕçĕмсĕр хăйсен тем тĕрлĕ вăййине – шак чулла, тытмалла, пытанмалла – выляса тĕттĕмчченех йĕритавра чупса çÿрет.

Эпĕ çитнĕ çĕре çынсем хальхинче те темĕнле юмах ярса ларатчĕç. Юмахĕ-мĕнĕ – ача-пăча каланă-курнă тăрăх каласаççĕ иккен. Курнавăш вăрманĕнчи Çĕлен çырминче темĕнле пы-ысăк тискер кайăк пурăнать имĕш? выртмана çÿрекен ачасем пĕвере крокодил пек хăрушă пулă курнă. Хăйсем вара, шĕвĕрккесем, хăранипе тарса пĕтнĕ. Нихăшĕ те тĕплĕн каласа кăтартма пĕлеймест. Шыври шуйттан та шыври шуйттан теççĕ. Кам мурĕ пĕлет вĕсене? Те суяççĕ, те чăнах çавнашкал тĕлĕнтермĕш курнă? Ватă çынсем пуçне сулкаласçĕ, хăйсем çакна май авалхи халапсене аса илеççĕ. Эпĕ те, крокодил пек пулă çинчен каланине илтсен, шухăша кайрам. Кам пĕлет, тен, тĕрĕс те? Калаççĕ-çке Шотландире Лох-Несс кÿллинче темĕнле пысăк шыв чĕрчунĕ пурăнать тесе. "Курнă çынсем" унăн сăнÿкерчĕкĕсене те пичетре кăтарткаларĕç. Тĕрлĕ йышши аппаратпа шыраса пăхнă хыççăн, нимĕн те тупайман пирки çав хыпара "çăвар тутине сая яни" терĕç. Тĕлĕнтерни те манăçа тухрĕ. Гималай тăвĕсем çинче вара çÿлте "юр çыннисем" çÿреççĕ пулать. Тĕнчере пытанчăк кĕтессем пурах ĕнтĕ. Çынсем пĕлмен, курман вырăнсем.

Çĕрĕпе çывăраймасăр шухăшларăм эпĕ ял çине сарăлнă хыпар çинчен: ĕненме те пулать-çке, мĕншĕн тесен кÿршĕ ачи суяканскер мар, тата çав тĕлĕнтермĕше хам куçпа хам куртăм тесе хĕрес хыврĕ. Малтан илтнисемпе çак калаçу хушшинче çыхăну пур пекех туйăнчĕ мана.

ФАНТАСТИКА

Пуҫа ватса выртрăм-выртрăм та ирех Курнавăш вăрманне ҫынсенчен вăрттăн хам тĕллĕн кайса килме шутларăм.

Курнавăша ҫитсе кĕрсен эпĕ чылайччен вăрман илемĕпе киленсе утрăм. Кӳлĕ хĕррине ҫитсен тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтĕм – чăн-чăн ҫăтмах кунта! Куҫ умĕнче тем пысăкăш, вĕҫĕ-хĕррисĕр пĕве сарăлса выртать. Ҫыранĕсем ешĕл хăвапа хупланнă.
Таврара шăп. Эпĕ, сас-чӳ кăлармасăр, чылайччен ҫак илемлĕхе сăнаса тăтăм. Халлĕхе нимĕнле хăрушлăх та курăнмарĕ-ха – ачасем каласа кăтартнă тĕлĕнтермĕш палли те ҫук. Ача чухне эпир ҫак ҫырмара тритонсемпе шапасене сахал мар тытнă. Ун чух пĕви те пĕчĕккĕ кăначчĕ, хамăрах ҫерем касса тунăччĕ ăна – ĕлĕкрех бульдозерсем ҫукчĕ те-ха. Халĕ вара Ҫĕлен ҫырми тем пысăкăш кӳлĕ пулса тăнă.

Эпĕ пĕве таппинелле хăпарса пăхма шутларăм. Талккăшĕпе хăмăшлăх, шыв ҫийĕпе кăкшăм чечекĕ ашкăрса ӳсет. Юмахри Сарă кун ҫĕршывĕ тейĕн.

Ҫыран хĕрринче темĕнле пысăк йĕрсем палăраҫҫĕ. Путса кĕнĕскерсем. Ку темĕнле пысăк чĕрчун йĕрĕ пулас. Эпĕ ăна шăрпăк коробкипе урлă-пирлĕ виҫсе пăхрăм. Тăршшĕ хĕрĕх сантиметр, сарлакăш – вăтăр. Кун пек пысăк ура лаппиллĕ чĕрчунсем мезозой эринче – ҫĕр миллион ҫул каялла ҫеҫ пурăнма пултарнă, анчах та вĕсем тахҫанах вилсе пĕтнĕ-ҫке-ха. Ачасем калани вара? Ҫак йĕрсем?..

Ҫанҫурăм ҫӳҫенсе кайрĕ. Темĕнрен шикленнĕ пек йĕри-тавра ҫаврăнкаласа пăхкалатăп. Сисетĕп: такам мана чăтлăхран сăнаса тăрать. Текех чăтма хал ҫитерейменĕм, "Эй, кам унта? Тух!" – тесе кăшкăрса ятăм. Чăнах та, чăтлăхра такам эхлеткелет. Тепĕр минутран хăвасене сирсе ман ума Кавĕрле мучи тухса тăчĕ. Астăватăп-ха, ĕнер каҫхине вăл каска ҫинче хăйне нимĕнле шыв усалне те ĕненмен пек тыткаларĕ.
"Эпĕ-ха ку. Эпĕ, ывăлăм. Ан хăра. Ку таврара мĕн туса ҫӳретĕн тата? Уҫăлма тухрăн пуль-ха?" – ăшшăн кулса илчĕ мучи. Эпир калаҫса кайрăмăр. Кавĕрле мучи кӳлле браконьерсенчен сыхлать иккен. "Эпĕ – "Кăвак патруль", – тет вăл хăй ҫинчен. Чылайччен калаҫкаласа ҫӳрерĕмĕр ҫапла.

---

*Михаил СУНТАЛ (Михаил Павлович Желтов) 1945 ҫулхи нарăсăн 19-мĕшĕнче Тăвай районĕнчи Сăхăтпуҫ ялĕнче ҫуралнă. Тăвайри вăтам шкулта вĕреннĕ, Совет ҫарĕнчв пулнă. Хĕсметрен таврăнсан Чăваш патшалăх университечĕн электротехника факультетĕнче вĕреннĕ. Аслă пĕлӳ илнĕ хыҫҫăн 1975 ҫулта Шупашкарти Приборсем тăвакан завода вырнаҫнă, электронщик пулса ĕҫленĕ. Кĕнеке вулама юратни, тăван чĕлхе пуянлăхĕпе, илемĕпе хавхаланни ăна Чăваш телевиденийĕпе радио комитетне илсе ҫитернĕ, вăл чылай вăхăт редакторта ĕҫленĕ.*

*Хальхи вăхăтра – Чăваш патшалăх университечĕн преподавателĕ, философи докторĕ.*

*Михаил Сунтал – 14 кĕнеке авторĕ, Раҫҫей писателĕсен союзĕн членĕ.*



Тепӗр кунне хӗвел анас умӗн эпӗ каллех ҫула тухрӑм. Леш вӑрттӑнлӑха пӗлесех килчӗ манӑн. Малтанах хатӗрлесе хунӑ электрохунарпа сунарҫӑ ҫӗҫҫине илтӗм (урӑх нимӗн те алӑ айӗнче пулмарӗ). Ҫынсем курасран асӑрханса малтан ҫырма тӑрӑх ял хыҫӗпе, кайран уйпа утса кӳлӗ хӗррине ҫитсе те тӑтӑм.

Ҫывӑрма пуҫтаранннӑ кӳлӗ калама ҫук илемлӗ. Таврара мӗн пурри пурте хӗвел анасса анасласа кӗтет. Каҫӗ вара кӗттермерӗ, хӗвеле вӑрман хыҫне туртса антарчӗ те малтан тӗтрелӗхпе пытарса, кайран тем вӑхӑтра тавралӑха хӑйӗн ҫӑмӑл йывӑрӑшӗпе хӑвӑрт та сисӗнкӗсӗр пусарса хучӗ.

Эпӗ те тӗттӗмре тунката пек пулса ҫыран хӗрринче хытса лартӑм. Кӗтнӗ чух вӑхӑт васкамасӑр, вӑраххӑн шӑвать. Хускалмасӑр ларнӑран пӗтӗм ҫанҫурӑм ыратма пуҫларӗ. Пурпӗрех чӑтатӑп.

Сасартӑк пӗве таппинче малтан темӗнле уҫӑмлах мар сасӑсем, кайран хӑвалӑхра тем чаштӑртаттарни илтӗнчӗ. Чим-ха, ҫыран хӗррипе пысӑк чӗрчун утать-ҫке! Эпӗ, сас-чӳ пулсанах хунар ҫутса малалла вирхӗнме хатӗрленсе тӑнӑскер, халӗ, акӑ, пӑталаса лартнӑ евӗр, вырӑнтан та тапранаймастӑп. Ҫав чӗрчун вара тата ҫывхарчӗ. Чӑтаймарӑм, ура ҫине сиксе тӑтӑм та хунара ҫутса ятӑм. Унччен те пулмарӗ, темӗнле пысӑк чӗрчун хура ҫиҫӗм пек хӑвӑрт куҫса шывалла шаплатса ӳкрӗ. Тавралӑх чӗтренсе илчӗ тейӗн. Хумсем ҫыран хӗррине ҫил-тӑвӑл чухнехи пек хӑватлӑн пыра-пыра ҫапӑнчӗҫ. Аякри вӑрманта вӑраннӑ кайӑк-кӗшӗк ҫуначӗсемпе ҫатӑлтатни, кӑшкӑрашни чылайччен янӑраса тӑчӗ. Вара тин кӳлӗ ҫийӗ каллех майӗпен ыйха путрӗ. Халь ҫеҫ кунта хӑрушӑ курӑну пулса иртнине, манӑн сиксе тухасла тапакан чӗресӗр пуҫне урӑх пӗр япала та систермест.

Савӑнӑҫ пулчӗ-и ку е инкек – калама та хӗн. Сӑмахран, эсӗ халиччен упа курман. Вӑрмана кайсан сан умна ҫав хайхи утаман чаштӑртаттарса тухрӗ тейӗпӗр. Сехрӳ хӑпмӗ-и? Паллах, хӑраса ӳкетӗн. Анчах эсӗ ӑна курнӑшӑн е сывӑ юлнӑшӑн ытларах савӑнатӑн. Паян манпа шӑп та шай ҫавнашкал пулса иртрӗ. Тепӗр кунне эпӗ мучипе тӗл пулса калаҫма шутларӑм. Вӑл ҫак чӗрчунпа темӗнле ҫыхӑну тытнӑн туйӑна пуҫларӗ мана. Тата кунӗн-ҫӗрӗн кунта кӳлӗ хӗрринче ҫӳресе курнах ӗнтӗ вӑл ҫав усала, ун ҫинчен манран нумайрах пӗлет. Ҫавӑнпа, тен, кулса ҫеҫ ларчӗ пуль вӑл калаҫу вӑхӑтӗнче вӑйӑ сакки ҫинче? Хура мӗлке пек курӑнса юлнӑ чӗрчунӗ те каҫхине ҫеҫ тухса ҫӳрет пулас. Кӑнтӑрла ӑҫта та пулин шывра выртса ҫывӑрать ӗнтӗ.

Эпӗ пырса кӗнӗ чух Кавӗрле мучи килӗнчехчӗ. "Килех, килех", – терӗ вӑл мана, тӗпелелле иртме сӗнсе. Кунта унӑн тӗрлӗ йышши приборпа аппарат лараҫҫӗ, нихӑҫан та курман ӳсентӑрансем ӳсеҫҫӗ, тата тем пысӑкӑш аквариум пур. Наукӑпа техника тӗнчине лекмерӗм-и эпӗ?

– Интересленетӗн-и? – куҫне хӗскелесе ыйтрӗ мучи. – Апла пулсан, ирӗк паратӑп, кур. Эсӗ килессе пӗлсех хатӗрлесе хутӑм.

– Ӑҫтан пӗлтӗр вара эпӗ кунта килессе?

– Э-э, ачам! Пӗве хӗрринче тем шӑршласа ҫӳренине пӗлсенех сана кӗтме тытӑнтӑм. Юрӗ, кур ман япаласене. Эпӗ пахчаран хӑяр татса кӗрем.

Пӳлӗмре пӗччен юлсан, тӗлӗнтермӗш япаласемпе паллашма тытӑнтӑм. Ытларах мана пысӑк аквариум кӑсӑклантарса ячӗ. Аквариумӗнче шыв курӑкӗсемпе пӗчӗк

пулăсем, тритонсем çеç хуллен ярăнса çӳреççĕ. Тавра вара – локатор антенни евĕрлĕ çавра тимĕрсем. Сĕтел çинчи генераторсем темĕнле пайăркасем кăларса тăраççĕ пулмалла. Чӳрече янахĕ çинчи чечексем те – нихăçан курманнисем. Вĕсен шăрши тӳрех кӳлĕ тавралăхне аса илтерет, Ахăртнех, çыран хĕрринче те çавăн пек курăксем ӳсеççĕ-ши?

Çенĕкре сасă пулчĕ те кил хуçи пӳрте кĕрсе тăчĕ. Унăн аллинче шултра хăярсемпе помидорсем. Мана хăналасшăн ĕнтĕ. Мучи ăста пахчаçă иккен. Апат-çимĕç хатĕрленĕçемĕн хай текех ман енне пăха-пăха илет. Мĕн шухăшлать-ши вăл? Сăмахне темшĕн пуçласшăн мар. Эпĕ ыйтасса кĕтет-ши? Чăтаймарăм, малтан хам ыйтрăм:

– Тĕлĕнмелле, мĕн тăватăр эсир ку аппаратсемпе? Тем пысăкăш аквариум та та.

Ман сăмахсене чиперех илтрĕ пулин те, Кавĕрле мучи тӳрех чĕнмерĕ. Куçĕнче çеç кулă палăрчĕ. Чее старик. Эпĕ мĕн пĕлнине ман ыйтусенченех ăнланасшăн ĕнтĕ вăл.

– Тутанса пăхсам, – терĕ хăярпа помидор салатне ман ума лартса. Ешĕл апата хаваспах активсе пăхрăм. Тутлă та иккен тин çеç пахчаран татса кĕнĕ çуллахи çимĕç! Анчах мучи мана хăна тăвас тĕллевпе кĕтмен пулĕ-ха.

– Мĕнле вара? Курса юлайрăн-и çырма усалне? – терĕ сасартăк Кавĕрле мучи.

– Çук çав, лайăххăн кураймарăм. Фотоаппаратпа тухмаллаччĕ.

Кил хуçи, кулкаласа, мана тӳнтерле çавăрса хунă ӳкерчĕке тыттарчĕ.

– Çакă пулман-и вăл, сана хăратаканни? Пăх-ха! – терĕ вăрттăн кулкаласа.

Ун аллинчен илнĕ сăнӳкерчĕке пăхма та хăраса тăратăп. Ăнланма çук – нивушлĕ Кавĕрле мучи çав чĕр-чуна курнă? Тата ӳкерсе илме те пултарнă? Çавăрса пăхрăм çеç... ӳкерчĕкре – ман çине кĕç-вĕç сиксе ӳкме хатĕр плезиозавр. Çĕр миллион çул каярах вилсе пĕтнĕ хăрушă чĕрчун. Чĕрĕ пекех ӳкерсе хунă!

– Ăçтан тупнă эсир куна?

– Асăрхаймарăн-и? Лайăхрах пăх-ха, – çаплах кулкаларĕ мучи.

Сăнасарах пăхрăм та Çĕлен çырми хĕрринчи хăвалăха, пĕвене, вăрман çумĕнчи йывăççене уйăрса илтĕм. Лайăх ӳкерсе илнĕ вара. Йывăç-курăкĕ юрĕ-ха, анчах плезиозаврĕ – ăçтан? Çавăнтах, татăлнă шухăшсене сыпăнтарса, пуçа тепĕр шухăш пырса кĕчĕ. Эпĕ сак çинчен ялт сиксе тăтăм. Мучи вара... тĕлĕнтермĕш! Мана, йăлтах пăлханса кайнăскере, лăпланма, каллех вырнаçса ларма ыйтрĕ. Унăн каласа памалли пур иккен. Калавĕ самаях вăрăм. Акă вăл.

– Çамрăк чухне, – пуçларĕ мучи, – кибернетика институтĕнчен вĕренсе тухсан ĕçлеме мана чĕрчунсене тĕпчекен лабораторие ячĕç. Пире, кибернетиксене, чĕрчунсен шухăш-кăмăлĕ, пурнăç тытăмне сыхласа тăракан органсем, гомеостатсем ытларах интереслентеретчĕç. Çавăнтах эпĕ эволюци теорийĕпе усă курса чĕрчунсен аталанăвне модельсем туса сăнарăм. Ĕçленĕçемĕн пĕр шухă идея пуça пырса кĕни манăн пĕтĕм пурнăçа улăштарса хучĕ. – Мучи хăй ларакан тенкеле ман çумарах шутарчĕ. – Эсĕ пĕлетĕн пуль ĕнтĕ, – терĕ вăл мана куçранах пăхса, – кирĕк мĕнле машина та, чĕрчун та пурнăçра малтан пĕчĕкскер анчах çуралать. Тĕслĕхрен, радиохумсене тытакан детекторлă приемник. Пĕрремĕшсем, пĕр кристалтан анчах тунисем, пӳрне пысăкăш çеçчĕ, ыттисем, кайрантарах тунисем, сĕтел калăпăшне çитрĕç. Кайран каллех пысăк приемниксем вырăнне пĕчĕкреххисем – транзисторсенчен тунисем – пурнăçа кĕчĕç. Мĕне пĕлтерет ку? Тепĕр тĕслĕх: чи пирвайхи

автомобильсем те пĕчĕккĕ пулнă. Техникăн никĕсĕ ӳснĕçемĕн машинăсен калăпăшĕ те пысăклансах-пысăклансах пынă. Кайран вара бензин çитми пулсан çĕр çинче "малолитражка" текеннисем те чупа пуçларĕç. Ăнкартăн-и пурнăç пире ăçталла илсе пынине? Çук. Малалла тăнла. Илтнĕ пулĕ питĕ пысăк плезиозаврсемпе динозаврсем çинчен? Вĕсем пурте çĕр миллион çул каялла вилсе пĕтнĕ. Ку пуриншĕн те паллă ĕнтĕ. Анчах, эпĕ шутланă тăрăх, вĕсем вилсе пĕтме пултарайман, Çĕр çинче сыхланса юлнах! Мĕнле майпа? Радиоприемниксемпе автомашинăсем пек. Тем пысăкăш ӳссе çитĕннĕ чĕрчунсене, Çĕр çинче сивĕтнĕ пирки, апат-çимĕç çитми пулнă. Мĕн тумалла-ха çавнашкал лару-тăрăва лекнĕ организмсен? Паллах, вĕсен майĕпен пĕчĕкленме тивнĕ. Хальхи ăславçăсем калашле, чĕрчунсем аталаннăçемĕн урăх "экологиллĕ нишăна" куçнă. Пĕчĕк варансемпе тритонсен нишине. Апла тесен, ман шутпа, "пĕчĕкленсе пыракан плезиозаврсене" каялла пысăклатма та пулать. Кун пек идея çине ӳкме, хăв та туятăн пулĕ, çăмăл мар. Çавăнпа та-и, тен, ман шухăшпа никам та килĕшесшĕн пулмарĕ. Эпĕ вара тĕпчев институтĕнчи лабораторине пăрахса тухса кайрăм. Хам çуралнă яла каялла таврăнтăм та авалхи плезиозаврсемпе динозаврсене килтех ӳстерме тытăнтăм. Çак сăмахсене каланă чух мучи аквариум çинелле пăхса илчĕ, ахăртнех, теме аса илтерчĕ пулас вăл ăна. – Чи малтанах Çĕлен çырминче пĕчĕк тритонсем нумаййине асăрхарăм. Çак пысăк савăта туллиех ятăм вĕсене. Пуçларăм вара схема хыççăн схема туса генсене улăштаракан хумсем шырама. Организмăн ӳсмелли планĕ генсенче сыхланса упранать. Енчен те пĕчĕк тритонсен аталанăвĕн çулне плезиозаврсенни енне пăрса яма май килсен? Кун хыççăн кун. Мутаци хыççăн мутаци, Вунă çул пĕр вĕçĕмсĕр ĕçленĕ хыççăн тинех ăнăçу килсе тухрĕ. Тритон плезиозавр пурнăçне аса илчĕ тейĕн аквариумра ӳснĕçем ӳсе пуçларĕ. Анчах эпĕ халĕ те нимĕн те ăнланма пултараймастăп. Мĕншĕн пĕри çеç? Биохумсем пулăшрĕç-и кунта е тата та мĕнле те пулин урăх закон ĕçĕ палăрчĕ – пĕлместĕп. Хальтерех шухăшланă тăрăх вара, тритона çутçанталăк ахрăмĕ пырса çапрĕ пулĕ тетĕп. Урăхла каласан, пĕчĕкленнĕ динозаврсем малашлăхра каллех пысăкланма пултараççĕ. Çутçанталăк ылмашăвĕ, биоцикл. Эпĕ биохумсемпе çав цикла кĕскетрĕм пулас, хăвăртлатрăм. Питĕ ĕлĕк-авалтан персе янă генсен бумерангĕ каялла çаврăнса плезиозаврсем пурăннă вăхăтри сие çĕклерĕ.

Паллах, хăвăрттăн ӳсекĕн тритон-плезиозавр аквариума вырнаçайми пулчĕ. Эпĕ вара ăна, нимĕнех те шутласа тăмасар, Çĕлен çырмине кайса ятăм. Ун чух пĕвене пысăклатса тарăн кӳлĕ чавнăччĕ. Ытти тритонсемпе те чылайччен аппалантăм – усси пулмарĕ, Генсен авалхи тытăмне астуса тăракан механизмсене çĕнĕрен ĕçлеттереймерĕм. – Те савăнать, те кулянать Кавĕрле мучи. – ӳсе пуçланă тритон-и? Хăвах куртăн. Халĕ вăл çынсене хăратакан пулчĕ. Мĕн тумалла? Хам та пĕлместĕп. Чăн-чăн мезозойри плезиозавр Курнавăшри кӳлĕре ишсе çӳрет. Çавăн çинчен каласса пăхма кĕтрĕм те сана. Сансăр пуçне мана кунта никам та ĕненес çук.

Ватă ăславçă каласа кăтартни мана вăхăтлăха шухăша ячĕ. Чылайччен тĕмсĕлсе ларсан, эпĕ ăна акă мĕнле сĕнӳ патăм:

– Плезиозавра пирĕн тытса вĕлермеллех пулать. Виллине вара специалистсене кăтартмалла. Ахаль çеç, пуш алăпа кайса каланине вĕсем ĕненес çук. Чĕррĕн те тытса каяймăпăр. Пурăнма та ăна йывăрланнăçемĕн йывăрланса пырĕ. Апат тав-

рашне, хӑвалӑха кӑшласа ярсан, тата мӗн ҫийӗ вӑл? Ҫынсене тапӑнасран та хӑрушӑ. Кам ҫине те пулин сиксе ӳкиччен пӗтересех пулать ку усала. Наукӑна та, ҫынсене те усӑ кӳрӗпӗр, Сирӗн меслетпе вара тӗпчев институтӗнче, лайӑхрах условисенче, ҫӗнӗ эксперимент тумалла.

Мучи килӗшмесси малтанах паллӑччӗ. Ҫавна пӗлсех эпӗ ӑна ҫине-ҫинех ӳкӗтлерӗм, ӑнлантартӑм. Пурпӗрех хам енне ҫавӑраймарӑм, Тен, пысӑк чӗрчуна хӑйӗн ачине хӗрхеннӗ пекех хӗрхенчӗ вӑл? Нихҫан та килӗшес ҫукчӗ пуль – пӗр ӑнсӑрт пулӑшрӗ.

Пӗр кунхине ачасем кӳлӗ хӗрринче пулӑ тытса ларнӑ. Тахӑшӗн вӑлтине пысӑк ҫӑрттан лекнӗ пулас. Туртса кӑларма тӑнӑ ку – пулла пӗве усалӗ ярса илнӗ! Ачине те шыва туртса антарнӑ.

Ку хыпара илтнӗ мучи ман пата ҫав кунах персе ҫитрӗ. Аллинче икӗ кӗпҫеллӗ пӑшал. Эпӗ, паллах, «мезозой эрине» сунара кайма савӑнсах килӗшрӗм.

Пӗве хӗррине эпир каҫ пулсан ҫитрӗмӗр. Хӑва тӗмӗсем ҫумнерех вырнаҫса ларса, тритон-плезиозавр апат ҫиме тухасса кӗтме пуҫларӑмӑр. Хальхи пек астӑватӑп, каҫӗ ун чух уйӑхлӑччӗ. Пӗве ҫийӗнчи шӑплӑха итлесе ларнӑ чух йӗри-тавра пӗр сас-чӳ те ҫуккине асӑрхарӑм. Мӗншӗнне тинех ӑнланса илтӗм. Шӑплӑх кунта плезиозавр вырнаҫнӑранпа пуҫланнӑ. Ытти пӗтӗм чӗрчун хӑранипе кунтан тарса пӗтнӗ. Малашне те ӗҫсем кун пек аталанса пырсан, Курнавӑш вӑрманӗ те пуш-пушах юлӗ. Кун йышши экспериментсем тума чарӑнмалла. Хӑҫан тухать-ши ӗнтӗ ку пӗвери шыв усалӗ? Тен, паян тухас та темӗ вӑл? Каҫӗ питӗ ҫутӑ. Шыв шуйттанӗ тӗттӗме юратать, теҫҫӗ. Кавӗрле мучи мӗн шухӑшлать-ши? Тем тесен те, ӑна кунта хурал тӑма йывӑр пулас. Пӗтӗм пурнӑҫне панӑ ӗҫе пӗтерсе лартма пултарать-ҫке-ха. Ҫавӑнпа мар-ши вӑл хаш та хаш сывлать.

Мӗн чухлӗ тӑтӑмӑр шыв хӗрринче – астумастӑп. Плезиозавр апата тухнине эпир нихӑшӗ те сисмен. Питӗ шӑппӑн ҫӳрекен чӗрчун иккен вӑл. Хӑва шатӑртатни илтӗнсен тин пирӗн куҫа юмахри аҫтаха евӗрлӗ чӗрчун курӑнчӗ. Эпӗ пӗр самантлӑха хамӑр Ҫӗлен ҫырминче иккенне те манса кайрӑм. Таврара – сӗм-авалхи тӗнче! Ман алӑра пӑшал вырӑнне – сӑнӑ. Тискер кайӑкпа сунарҫӑ пӗр-пӗрне вӑрттӑн сӑнаҫҫӗ. Хӑшӗ те пулин вилӗссине пӗлсех, пурпӗр, кашни каялла ҫаврӑнса пӑхмасӑр, хирехирӗҫ пырать. Мӗн тумалла? Акӑ, халех плезиозавр ман ҫинелле сиксе ӳкӗ. Эпӗ сӑнна, ывӑтма тесе, ҫӳлелле ҫӗклетӗп... Юрать, ҫав вӑхӑтра юнашар тӑракан мучи мана ҫурӑмран тӗксе тӑна кӗртрӗ. Чӑнах, эпӗ ӑспа аташса тӑнӑ чухне капмар чӗрчун пирӗн патах ҫывхарса ҫитнӗ. Тек шухӑшласа тӑмасӑрах ӑна пӑшалпа пуҫӗнчен тӗллесе петӗм, Аманнӑ тискер кайӑк сасси пӗтӗм тавралӑха кисретрӗ. "ӑҫтаха" тинех курчӗ пулас сунарҫӑсене. Йӑванса каяс вырӑнне вӑл пирӗн еннелле хӑвӑрт ҫывхарса килет. Ҫавӑнтах пӑшалӑн тепӗр кӗпҫинчен персе ятӑм. Тӑпах чарӑнса тӑчӗ хайхи. Икӗ хут персе те вӗлерейменнине кура пӑшала тепӗр хут авӑрларӑм. Вӑт тӑмсай, усалӑн нерв тытӑмӗ начар аталаннине шута илмесӗр ӑна пуҫӗнчен персе вӗлерме хӑтланнӑ-ҫке эпӗ. Пӗтерес тесен, чӗререн лектермелле. Пеме пӑшал ҫӗкленӗччӗ ҫеҫ, тискер кайӑк вырӑнтан тапса сикрӗ те шывалла чӑмрӗ. Хыҫалтан тепӗр хут усӑсӑр шаплаттарса ӗлкӗртӗм. Мӗнех тӑвайӗҫ пульӑсем ҫав тем пек пысӑк чӗрӗ тушкана?

Кӳлӗ тавралӑхӗ каллех шӑплӑха путрӗ. Хумсем ҫеҫ ҫырана пӗр хушӑ ҫапӑнса

пӑшӑлтатрӗҫ. Нимӗнле хӑрушӑ ӗҫ те пулса иртмен тейӗн. Уйӑх пaҫӑрхи пекех хӑйӗн таса ҫутине сапаласа хитре кавирне пӗве урлӑ хура вӑрманалла сарать. Плезиозавр та шыв ӑшӗнче пытанса выртать ӗнтӗ. Халь, аманнӑскер, ҫынсемшӗн вӑл татах та хӑрушӑрах пулса тӑчӗ. Чылай вӑхӑт иртсен, мучи те ҫавна ӑнланса илчӗ пулмалла.

– Эпӗ пӗлетӗп мӗн тумаллине, – шӑплӑха сирчӗ унӑн пӑлханнипе кӑшт хӑрӑлтатакан сасси. – Шывсӑр вӑл нумай пурӑнаймасть. Асӑрханӑ тӑрӑх, апат ҫисе те ҫур сехетрен ытла ҫӳремест. Шыв чӗрчунӗ-ҫке. Халех пӗвене татса ярас пулать.

Ҫавӑнтах эпир, айвансем, пӗвене татма тытӑнтӑмӑр. Ку – йывӑр ӗҫех мар. Шыва ҫул уҫса ҫеҫ пар – сиссе те юлаймастӑн – шыв ҫӗре ҫурса малалла вирхӗнет. Пӗр сехет те иртмерӗ, пӗве анаталла ҫурхи шыв пек кӗрлесе юхса анса кайрӗ.

"Мӗн туса хутӑмӑр? Ӑҫта ӗнтӗ пирӗн чӗрчун? Ҫӗрле ӑна шыраса тупасси те пулмӗ. Юхса каймарӗ-ши? Эх, эпир те ҫав, Лапшу Ҫтаппанӗсем!.. Пӑшал ҫакса тухнӑ тата!" – вӑрҫрӑмӑр хамӑра хамӑр плезиозавра шыраса ывӑннӑ хыҫҫӑн килелле пушӑ алӑпах таврӑннӑ май.

Тепӗр кунне мӗн пулса иртнине каласа та кӑтартас килмест. Ҫӗлен ҫырмине Кавӗрле мучипе темӗн чухлӗ ухтарсан та, нимӗнле плезиозавр та тупаймарӑмӑр. Ӑҫта кайса кӗме пултарнӑ вӑл – пӗлместӗп. Тен, тӑм ӑшне варӑннӑ? Ҫырма питӗ юшкӑнлӑччӗ. Иксӗмӗр те питӗ хуйхӑрса ӳкрӗмӗр. Ӑславҫӑсем патне пушӑ алӑпа каяймастӑн-ҫке. Темле илемлӗ каласа кӑтартсан та, кам ӗненӗ сана. Кулса ҫеҫ тӑрӗҫ.

Ҫавӑн пек ӑнӑҫсӑр вӗҫленчӗ те ӗнтӗ ҫавӑ хӑш чух ӗненме те йывӑр тамаша. Ӑна аса илсен, Ҫӗлен ҫырми хӗрринче ӳкерсе илнӗ сӑнӳкерчӗке альбомран кӑларса пӑхатӑп. Хама тем ҫитмен пек туйӑнать ун чух.

# Асатте кӗпи

*Ку тӗлпулу больницӑра пулса иртрӗ. Эпӗ ун чух палатӑра пӗчченех выртаттӑмччӗ.*

Пӗринче юнашарти кравать ҫине тин ҫеҫ операци тунӑ ҫынна пырса хучӗҫ. Вӑл йывӑҫ тӑрринчен ӳкнине медсестра пӗлтерчӗ. Урине хуҫнӑ пулать вара. Сӑнран пӑхсан, хӑй ҫап-ҫамрӑк. Хура ҫӳҫлӗ, типшӗм питлӗ. Халат айӗнчен хӗрлӗ кӗпе курӑнать. "Шел ачана. Анчах мӗн тӑвас тетӗн? Ача чух хам та пӗрре ҫеҫ мар ӳкнӗ. Вырт ӗнтӗ халь, мана юлташ пулӑн", – шутларӑм эпӗ. Епле ӗҫсем пуҫланассине пӗлнӗ пулсан, апла каламӑттӑм та-и, тен?

Каҫхине, ҫывӑрас умӗн, кӑшт уткаласа ҫӳрес терӗм. Кӳршӗ ман пӗр хускалмасӑр выртать. Сӑнаса тӑракан шураппа: "Тӑна кӗмен-ха", – терӗ. Эпӗ, паллах, шӑппӑнрах, пӗр сас-чӗв те кӑларас мар тесе, унталла-кунталла куҫкалатӑп. Инкек куҫа курӑнса килмест. Утса ывӑннӑ хыҫҫӑн кравать ҫинче "ӗмӗр сакки сарлака" кӗнеке вуласа выртаттӑмччӗ, сисмен те, ҫывӑрнӑ кайнӑ. Тӗлӗк куратӑп. Атӑл, баржа, трап... Эпӗ те Ҫтаппан пекех вӑйлӑ, ытти крючниксемпе пӗрле михӗ йӑтнӑ та ҫырана тухатӑп. Трап хӑми вара темӗншӗн хытӑран хытӑрах авӑнать. Халь-халь шыва персе анассӑн туйӑнать. Миххи тата тем пысӑкӑш. Йывӑр. Малалла утас тетӗп, хӑратӑп. Ҫапла асапланаканскер, тӑруках вӑранса кайрӑм.

Куҫа уҫиччен хупсах выртмаллаччĕ. Мачча ҫӳллĕшĕнче темĕнлĕ хĕрлĕ кĕлетке сывлăшра ярăна парать. Хăранипе ман куҫ алчăраса кайрĕ, ҫӳҫ-пуҫ та, сисетĕп, вирелле тăрать. Хам вара ни кăшкăрма, ни сиксе тăма вăй ҫитерейместĕп. Пĕтĕм шăм-шак хытса ларнă. Юлашкинчен питĕ хыттăн кăшкăрса ярас тенĕскер, темĕнле хăрăлтатакан сасса пăвăннă карланкăран тĕртсе кăларса ятăм. Анчах ун пек вăйсăр сасса кам илттĕр? Куҫран тата темĕншĕн куҫҫуль тапса тухрĕ. "Хăранипе йĕрсе ярасшăн пулман-ши эпĕ?" – тесе те шухăшлатăп халĕ хамран хам кулкаласа. Ун чухне шăл йĕрес шухăш пуҫра та пулман. Кӳршĕ вара эпĕ мĕн те пулин ăнланса иличчен вырăн ăшне кĕрсе выртрĕ. Ним сиксе тухман пекех, хăйĕн кравачĕ ҫинче пĕр хускалмасăр выртать. Вăл тарăн ыйха путнă тейĕн. Гоголĕн "Вий" ятлă калавĕнчи пăтăрмахсем куҫ умĕнче ҫĕнĕрен курăнса каймарĕҫ-и? Мана курăнчĕҫ. Каҫарăр та, ирĕксĕрех сăхсăхса илтĕм. Турра ĕненместĕп-ха. Темĕншĕн, тен, хускалнăранн-и, мана вăй кĕрсе кайрĕ. Тинех сывлăш ҫавăрса ятăм. Кăштах чĕтреме чарăнсан, кравать ҫинчен тăрса, юнашара пырса пăхатăп. Чăнах пулчĕ-ши ку? Тен, тĕлĕкре кăна аташатăп? Ҫук, чăнах. Ҫынни те ҫавах. Тата хĕрлĕ кĕпи... Урайĕнче ăшă халат выртать...

Ҫапла пăхкаласа тăнă хыҫҫăн ним тума аптранипе каялла кайса выртрăм. Ҫывăрасси хăямата! Пуҫра тем те пĕр, юмахри ковер-самолетран пуҫласа мĕлке-тĕлленчĕксем таранах аса илетĕп. Пур пĕрех пĕри те курнине тăмасть. Юлашкинчен, ним тума та пĕлменнипе-и, тен, хама ку туйăнчĕ пулĕ тесе ҫывăрма хистерĕм. Чылай выртсан тин ыйха путнă.

Эпĕ тăнă ҫĕре хĕвел тухнă. Каҫхи ĕҫ-пуҫа аса илсе кӳрше тинкеретĕп. Вăл та вăраннă. Унăн хура куҫĕ шăтарасла пăхать. Ҫын ҫынах. "Хамăр ял" пек. Ирĕксĕрех тем хаваспа йăл кулса илетĕп. Чирлĕ ҫын та кăмăл туса хирĕҫ кăшт хускалать. Паллашрăмăр. Эпĕ мĕн ятлине тата Биктимиров хушаматлине пĕлтертĕм. Тен, илтнĕ те пулĕ. Тăваттăмĕш стройтрестра тăрмашатăп. Прораб. Еҫĕ, космоса вĕҫнипе танлаштарсан, янăрасах каймасть те – хурламастпăр. Пурăнмалăх пур. Кӳршĕ вара ман темĕншĕн хăйĕн ятне те, хушаматне те каласшăн пулмарĕ. Ун вырăнне сăнĕнче темĕнле тарăху палăрчĕ. Ҫамкине тар тапса тухрĕ. Тĕлĕнмелле ҫын. Паллашма та тăхтаса тăрать. Тен, вăл ăнран кайнă? Чылайранпа чĕнменнине кура пăшăрханнăҫем пăшăрханса пыратăп. Шăнкăрав кнопкине пусатăп. Пĕр авăкран пӳлĕме медсестра чупса кĕрет. Вăл чирлĕ ҫыннăн аллине тытса пульс тĕрĕслет, унтан укол тăвать. ăна пăлханма тата халлĕхе унпа калаҫма юраманни ҫинчен аса илтерет.

Ҫав кунне, чăнах та, чирлĕ ҫынпа калаҫма май килмерĕ. Тепринче те ҫавах. Анчах чухлатăр пулĕ, каҫхи вĕҫев, хĕрлĕ кĕпе... Кĕтме пĕлекен кĕтсе илетех, виҫĕ кун иртсен, хăех сăмах хускатрĕ. Акă мĕн каласа пачĕ вăл мана:

– Эпĕ пин те тăхăрҫĕр аллă пиллĕкмĕш ҫулта Кусанар ялĕнче ҫуралнă. Атте ман Алякин Петр Васильевич, вăрҫă инваличĕ. Анне, Анна Тихоновна, учительница. Вĕсен пĕртен-пĕр ачи, Коля, сирĕн умăрта. Эпĕ, мĕнле калас, пурнăҫра хура-шур курсах кайман. Хăй йĕркипе ялти шкултан вĕренсе тухрăм та район центрĕнчи вăтам шкула ҫӳреме пуҫларăм. Унтан, паллах, институт. Физика учителĕ сĕннипе Мускаври авиаци институтне кайса кĕтĕм. Аттепе анне хирĕҫлерĕҫ. Мана килтех хăварма тăрăшрĕҫ. Тĕп килти вучаха сӳнтерес мар тенĕ ĕнтĕ вĕсем. Эпĕ вара, ватăсене хăварсах Мускава тухса кайрăм. Ҫамрăк ачасене ун чухне техникăпа технологи

питĕх те кăсăклантаратчĕ. Мана ытларах автомобильсемпе самолетсем çынна хăйне аякка куçарма пултарни тĕлĕнтеретчĕ. Магнитпа магнит пĕр-пĕрне вăрттăн, куçа курăнман вăйпа е тĕртсе, е туртса илнине те тĕлĕнсе пăхса лараттăмăр. Тен, ку вăл ялта çуралса ӳснĕрен? Мĕнле калас, ача чух лашапа урапасăр пуçне нимех те курман. Лашисем лайăхчĕ вара. Уйра ĕçленĕ хыççăн шăварма çăл еннелле ăмăртмалла чуптараттăмăр. Епле хăвăрт та чармалла мар ĕрĕхсе ыткăнатчĕç çамрăк утсем. Хаваслă вăхăт – ачалăх. Халь вара? – кӳршĕ хăй çине пăхса, темле хурлăхлăн кулса илчĕ. – Касса ӳкернĕ юман пек выртатăп. Ну, ку юрĕ-ха. Малалла каласа кăтартам. Паллă, вĕренме кĕрсен ан ӳркен – вĕренсе тухатăнах. Анчах çамрăк чухне вĕренӳсĕр пуçне урăххи те пур-çке-ха. Урăххи вăл, Надя, Надежда ятлăскер. Чăваш çĕршывĕнчен, Шупашкартан, вĕренме килнĕ. Эпĕ ăна пĕтĕм чунтан юратса пăрахрăм. Тĕл пулсан, хамăр пĕрмаях малашнехи пурнăç тата Тăван çĕршывшăн, юратнă халăхшăн ĕçлесси çинчен калаçаттăмăр. Савăк вăхăт...

Николай Петрович каллех калаçма чарăнчĕ. Унтан хашш сывласа илчĕ. Шухăша путрĕ. Эпĕ ăна, паллах,васкатмарăм. Пӳлĕмре шăп. Пире никам та кансĕрлемест.

– Пĕлетĕр-и, çак инкеке эпĕ Надьăна пула лекрĕм, – терĕ кăшт тăхтасан.

– Епле вара, эсир пĕр-пĕрне ытла та хытă юрататăр тенĕччĕ-çке?

– Тем, эпĕ наукăна ытларах юратрăм пулас. Мана, чи лайăх вĕренекен студента, диплом çырса хӳтĕленĕ хыççăн автоматика кафедри çумĕнчи аспирантурăра хăварчĕç. Надя Шупашкара таврăнчĕ. Хăлĕ вăл электроаппаратура заводĕнче ĕçлет. Темле йăлăнсан та, вăйпа тенĕ пек хистесен те, эпĕ унпа пĕрле Шупашкара кайма килĕшмерĕм. Эпĕ левитаци законĕсене тĕпчеме пуçланă вĕт . Çăмăлтарах меслетпе, Çĕр туртăмне çĕнтерсе, йывăр грузсене инçе куçарма çĕнĕ мел ширанă. Илтнĕ-и эсир вĕçме пултаракан çынсем çинчен?

– Темле фантастикăлла калавра вуласаччĕ.

– Фантастикăра? Эпĕ вара çав ыйтăва чăннипех хускатрăм. Эсир мана ăнлантăр пулĕ тетĕп, – тута хĕррипе кăшт кулса илчĕ кӳршĕ. – Çапла пĕр çул аспирантурăра вĕреннĕ хыççăн, – малалла тăсрĕ хăйĕн калавне аспирант, – канма тесе яла килтĕм. Ялта аттепе анне. Ыйтусем, пăлхану. Анне мана килтех, ялтах, пурăнма хистет. Атте чирлĕрех. Килти хуçалăхра та пулăшу кирлĕ. Вăйпитти арçын алли палăрсах каймасть-ха пирĕн ялти кил-çуртра. Анне тен, кин те кертесшĕн пулнă пулĕ. Ватлăхра мăнуксемпе йăпанмасан, кампа урăх йăпанăн? Атте ытла калаçмасть. Пурне те ăнланать пек. Анчах сисетĕп. Кăмăлĕпе вăл пит пусăрăнчăк. "Епле-ха апла, – тет атте, – ывăла юратса ӳстертĕм, вĕрентрĕм, вăл пур, пĕтĕм шанчăкăм, тăван ашшĕпе амăшĕн ĕмĕтне пăрахăçлать. Асаттесен килне тĕпрен хăртать. Ĕçлес тесен инженерăн ялта та ĕç нумай".

Эпĕ вĕсене пĕтĕм чунтан шеллетĕп. "Нивушлĕ – тетĕп, – атте-аннен юратăвне юратăвне тивĕçлĕ пулаймăп? Ĕмĕрлĕхе парăмра юлăп? "

Килте кунсем питех те вăраххăн иртеççĕ. Эпĕ Мускава каясси çинчен шухăшлама пуçларăм. Атте-анне те кăшт лăпланнă пек. Шупашкара Надя патне кайса килес кăмăлăм пур та – хăяймастăп. "Çула май, тен, кĕрсе тухăп-ха", – лăплантаратăп хама. Пĕрре çапла виççĕн пахчара ларатпăр. Çуçтанталăк васкамасăр каçхи кĕпине тăхăнать. Асăмрах... хĕвеланăçăн хĕрлĕ тути, каçăн тӳпери куçĕсем, шăпчăк хус-

катнă юрă... Çапла ыйхăпа тăтăрха хушшинче кашниех тĕнчен куçа курăнман пулăмĕсемпе çыхăнса-хутшăнса каять. Чун, хире-хирĕçле тенĕ пек, хăйĕн чи хаклă та пытанчăк туйăмĕсене туртса кăларать.

Ун пек-кун пек калаçкаласа ларнă чух атте манран диссертаци çырас ĕç епле пыни çинчен тинех тĕплĕнрех ыйтса пĕлме шутларĕ пулас.

"Итле-ха, ывăлăм. Мĕн çинчен çав сан диссертаци? Çынсене усă пулать-и унран?" – чееленерех пуçларĕ вăл сăмахне. Хальхи пек астăватăп: "Питех те пысăк усă кӳме пулать, атте", – терĕм. Çавăнтах вĕсене хальхи вăхăтри çитĕнӳсемпе паллаштарас терĕм.

– Мана та паллаштармăр-ши? – пӳлетĕп эпĕ кӳрше.

– Мĕнех вара... Итлĕр. Тахçанах, çын хăйне хăй ăнланса çитсенех, тĕрлĕ йышши транспорт шутласа кăларма тытăннă. Çĕр çинче утса-чупса çӳрени çителĕксĕр пек туйăннă-ши? Çук, паллах. Нумайланса пыракан йывăр туприне аяккарах та хăвăрт куçарма çăмăл «урапа» кирлĕ пулнă. Камăн ăсĕ çаплах çӳле çĕкленнĕ-ши? Пĕлместпĕр. Эпĕ ăна çеçенхирте куçса çӳрекенсемех ăсталанă пулĕ тетĕп. Пур пĕрех, хуть те кам пулсан та, унăн урапи хальхи техника никĕсĕнче. Каярахпа пирĕн несĕлсем юхан-шывсем урлă каçма тĕрлĕ кимĕсем тума тытăнаççĕ. Асăрхăр! Çын малтан тип çĕр тăрăх, кайран шыв çинче куçма ĕмĕтленнĕ. Хăюлланнăçемĕн тата суту-илӳ ĕçĕ ыйтнипе тинĕс урлă каçма чăн малтан çыран хĕрринче пурăнакан халăхсем парăслă кимĕсем тума тытăнаççĕ. Хумсем çийĕн, çиле хирĕç, çил пулăшнипе ишме. Епле чăрсăрлăх, э? Вăхăт иртнĕçемĕн общество аталанăвĕ транспортран пысăкран та пысăк хăвăртлăх ыйтма пуçлать. Çав ыйтăва тивĕçтерсе ĕлĕкхи урапа çине çĕнĕ, нумай лаша вăйлĕ двигатель вырнаçтарса лартнă та ăна тӳрĕ те такăр шоссепе е чугун çулпа чуптарма тытăннă. Тинĕс карапĕсем те хăйсен çулне кăшт такăрлатнă. Нумайăшĕ халĕ сывлăш "çытарĕ" çинче ярăнаççĕ. Çав вăхăтрах сывлăша самолетсемпе дирижабльсем вĕçсе хăпарчĕç. Транспорт куç кĕретех тип çĕрпе шывран ятарласа хатĕрленĕ çул е сывлăш тытăмĕ çине куçса пырать. Космос карапĕсем сывлăш хутлăхĕнчен хăтăлса, вĕçĕ-хĕррисĕр уçлăха вĕçсе тухрĕç. Сисетĕр-и? Çын, пĕтĕм вăйне хурса, виççĕмĕш координата, вертикале, çĕнме ĕметленет. Малашлăхри транспорт мĕн хутлăхĕпе усă курса куçма тытăнĕ-ши? Гравитаци хумĕсемпе? Паллă мар. Эпĕ вара çĕр чăмăрĕ йĕри-тавра сарăлса выртакан уя аса илтем. Çапла, магнитлă уя. Мĕншĕн унăн вăйĕпе усă курма юрамасть? Пĕлетĕр пулĕ-ха, магнитлă-линейлă двигательпе усă курса пĕчĕк поезда çĕр çийĕн шуçтарса пăхни çинчен. Анчах халлĕхе ку проект эксперимент этапĕнчен тухман. Каланă конструкцисенче ятарласа хатĕрленĕ магнитлă уйăн пысăк вăйĕпе усă кураççĕ. Ман ĕмĕтĕм вара урăхларах. Çĕр чăмăрĕ тавра сарăлнă уйăн пĕчĕкрен те пĕчĕк вăйне ĕçлеттересси... Эсир ыйтма хатĕр: "Епле-ха апла, пĕчĕк вăй йывăр япалана çĕклеме пултарĕ-и?" – тесе. Чăнах та, ку ĕçре маншăн питĕ пысăк хирĕçӳсем сиксе тухрĕç. Ну, ун çинчен каярах. Çапла, хальхи пекех е кăшт урăхларах каласа патăм хамăн ĕçсем çинчен. Ман атте, тĕрĕллĕ кĕпе тăхăнса янăскер, пĕр сăмах чĕнмесĕр итлесе ларчĕ. Çак тĕнчере тĕлĕнмелли нумай текелерĕ. Манра та ак, кур, юмах, вĕçев. Хăй чăвашлă кĕпине кăтартать. Мĕншĕн тетĕр-и?

Ача чухнех илтсе эп ун çинчен. Анне каласа панăччĕ. Аттене вăрçа ăсатнă чух асамлă кĕпе тăхăнтартса янă тет. Асанне тĕрленине. Асатте ăна пĕрремĕш тенче

вăрçин уйĕнче вилĕме хирĕç çапăçнă чухнех тăхăнса çӳренĕ пулать. Тĕрленĕ кĕпене нимĕнле пуля та, штык та тивмен-мĕн. Юратнă тăвансем салтак чĕрĕ юлассине шанни ăна хурçă пек çирĕп тунă.

– Аслаçун кĕпипе вĕçев хушшинче мĕнле çыхăну пултăр вара?

– Эпĕ те сирĕн пекех малтан нимĕн те ăнланаймарăм çав. Каярах вара? Ну, ун çинчен калаçма тăхтар. Малтанрах? Малтанрах левитаци çинчен мĕнле информаци пур йăлтах пуçтарма тытăнтăм. Акă, итлесе пăхăр-ха. Кун евĕр пулăмсем çинчен мĕн паллă? Пĕрремĕшĕ, вăл "йогсем вĕçме пултараççĕ" тени. Паллах, пурте: "Вĕсем улталаççĕ", – теççĕ. Анчах темле пулсан та ку питĕ интереслĕ. Иккĕмĕшĕ – Магомет тупăкĕ çинчен хывнă халап. Çав тупăк ниçта перĕнмесĕр сывлăшра çакăнса тăрать имĕш. Виççĕмĕшĕ – магнитлă çакăсем (подвескăсем). Вĕсен шутĕнче магнитлă уйпа шăвакан поездсем, подшипниксем тата ытти те. Акă, куратăр ĕнтĕ, ку темăпа информаци пит чухăн. Эпĕ çапла шутлатăп: çынсем тахçан авал вĕçме пĕлнех. Ахальтен мар ĕнтĕ пĕчĕккĕ чухне тĕлĕкре кашни ача тени çӳлте вĕçсе çӳрет.

– Мĕнрен килнĕ вăл вĕçме пултарни? Эсир те ăна пултаратăр пулас, – тетĕп хайхи эпĕ тинех ун çине хăюллăн пăхса. Хăрамалли пурах ĕнтĕ. Ман çумра, тен, фантастсем çырса кăтартнă, тем тума та пултаракан мутант текенни выртать? Пăхма çын евĕрех те...

– Пĕтĕм ĕç материалсен сверхпроводимость текен палăрăмĕнче. Чăвашла ăна çав тери витĕрлĕх теме те пулать. Физика теорийĕпе материал витĕр тухма нимĕнле чăрмав та юлмасан, унăн çав тери витĕрлĕх токĕ вĕçĕ-хĕррисĕр ӳсме пултарать. Ăна çав тери вăйăмлă куçăм тейĕпĕр. Çав ток куçĕмĕнчен сарăлса тăракан магнитлă уй тепĕр обьектăн магнитлă уйĕпе хирĕçле тапса тăрсан, вĕсен вăйĕ темле йывăр япалана та çĕклеме пултармалла. Анчах кунта та хирĕçӳсем. Пӳлĕмри температура çителĕксĕр. Чылай пĕчĕкрехху кирлĕ. Ку хирĕçӳсенчен епле сиксе тухмалла, никам та пĕлмест.

Çапла пĕринче килте сĕтел хушшинче сăнав туса лараттăм. Мĕншĕн килте? Атте-аннене итлеме лекрĕ. Мускавран яла куçса килтĕм. Аспирантурăра вара... халĕ те заочно вĕренетĕп. Çапла, сĕтел хушшинчеччĕ. Аллăмра атте-асаттен кĕпи. Леш, асанне тĕрлени. Ытла та кăсăклантарса ячĕ вăл мана. Çĕтĕлсе пĕте пуçланă кĕпе пульăран та, штыкран та хӳтĕлеме пултарать-ши? Тĕрри илемлĕ вара... Тĕшмĕртерех пăхсан, унта тĕнчене тытса тăракан йывăçа, лаша кӳлепипе пăлансене, Вавилон башнине уйăрса илме пулать. Тем тĕрлĕ фигурăсем ăсра сăнарланă темĕнле юмаха, çук, тахçан пулнă чăн-чăн пурнăçа куç умне кăларса тăратаççĕ. Мĕн кăна çук унта?! Акă, тусем çумĕнче "сухаланă çĕр", йĕритавра "вĕт ура" йĕрĕсемпе "чĕп куçĕсем". Авкаланчăк йĕр... Çул мар-и тем? Чăвашăн ĕлĕкхи ăслăлăхне ӳкерсе кăтартнă пулать çак тĕрĕсенче. Вуласа пăхасчĕ.

Тĕрĕленĕ кĕпене курса тăраннă хыççăн магнитлă çакăма ĕçлеттерме пуçларăм. Чылай пысăк листа, тимĕртен тунăскер, электромагнитсем çийĕн ярăнса тăрать. Аппаратри токăн тăтăшлăхне ӳстертĕм çеç хайхи... Мĕн куратăп? Юнашартарах хунă кĕпе сĕтел çинчен çĕкленсе илчĕ те çакăна хупласа хучĕ. Эпĕ ку тем туса хурĕ тесе туртса илме тăрăшатăп. Ăçта унта? Тем пысăкăш вăй кĕпене электромагнитпа

пĕрле ҫыхсах хунă. Эккей тетĕп тарăхса, хам вара нимĕн те ăнланса илме пултараймастăп. Ара, чип-чипер выртакан кĕпе епле сывлăша ҫĕкленме пултартăр? ăна тимĕртен туман-ҫке?

– Асамлăхĕ кĕпе магнитлă пулнинчен килнĕ вĕт! – кăшкăрса ятăм хамăр сыватăшрине мансах.

– Эсир те ăна ăнланса илтĕр апла.

Кĕпене тĕрлеме хатĕрленĕ ҫипе темле сăрăпа, ҫав тери витĕрлĕх материалĕпе, сăрланă пулнă. Тĕррĕн ҫевви электромагнитсен контурĕсене аса илтерет. Кашни контурта, кашни чикĕмре пысăк ток ҫаврăнмалла. Токпа ҫыхăннă магнитлă уйăн вăйĕ хирĕҫ тăчĕ те ĕнтĕ мана. Ҫавах, пуля кĕпе ҫумне ҫапăнсан, каялла сиктерсе яма пултарнă. Пĕлетĕр ĕнтĕ, енчен те катушкăн магнитлă уйне пĕр-пĕр тимĕре ҫапса кĕртсен, вăл ăна йĕтрене тупăран персе янă пек, тĕртсе кăларса ярать. Акă мĕн пулăшнă асаттепе аттене.

– Эсир вара урăх кĕпе туса хатĕрлерĕр-и?

– Тĕрĕсех. Акă курăр, – кўршĕ халат айĕнчен аялти кĕпине уҫса кăтартать. Чăнах та, ун пек кĕпене магазинта сутнине эпĕ нихăҫан та курман. Хĕп-хĕрлĕ кĕпе. Юмахри кĕпе.

– Малалла мĕнле вара?

– Малалла? Малтан ҫăмăл япаласене сывлăша ҫĕклекен энерги аппаратне шухăшласа кăлартăм. Кайран йывăртараххине те ал ҫитрĕ. Халĕ, ҫав аппаратри токăн вăйĕпе усă курса, ҫĕр чăмăрĕн магнитлă уйĕпе темĕнле япалана та ҫĕклесе ҫўреме пулать.

– Эх, – терĕм хам сисмесĕрех, – манăн та ҫавăн пек кĕпе тăхăнса вĕҫсе курасчĕ.

– Ан васкăр, вĕҫĕпĕр-ха! Эпир пурте вĕҫме ҫуралнă. Ҫитет ҫĕр ҫинче упаленсе ҫеҫ ҫўрени.

– Ха-ха-ха, – кулса ятăм эпĕ. – Йывăҫ ҫинчен кайăк евĕр вĕҫекен епле ўкме пултарнă-ши?

– Пурнăҫра тем те пулать. Надьăпа вăрҫнă хыҫҫăн чылайччен курнăҫмасăр пурăнтăмăр. Пит тунсăхласа ҫитрĕм. Пĕринче чечек ҫыххи туянтăм та балкон ҫинчен пăрахса хăварас тесе вăл пурăнакан хута ҫĕклентĕм. Аялалла вĕҫсе аннă чух кĕпе пиҫиххи салтăнса кайрĕ, шăпах энерги парса тăракан аппарат тĕлĕнчен. Эх, ўкрĕм те вара. Ҫўле ҫĕкленесси ҫĕре ўкмесĕр пулмасть-мĕн, – манпа пĕрле кулса ячĕ Шупашкар Икарĕ. Хăй епле ҫăтăл-ҫатăл ҫапăна-ҫапăна ўкнине аса илчĕ-ши? Унта вара кулмалли нимех те ҫук пек. Ак каллех кулать ăнланма майсăр ҫын. Ҫăварне хăлхи таранах карса пăрахнă. Куҫĕпе ман ҫине мар, алăк еннелле тĕлленĕ. Ҫаврăнса пăхатăп та – алăк патĕнче шурă халат тăхăннă чипер хĕр тăра парать. Ку хĕр Надя пулнине кирек кам та паллаштармасăрах ăнкарса илĕ тетĕп.

Хĕр кравать патне чупса пычĕ те хăвăрт калаҫма тытăнчĕ. Эпĕ, паллах, вĕсене кансĕрлеме нихăҫан та килĕшес ҫукчĕ, Ҫавăнпа та Шупашкар левиавторĕпе хĕрĕ ҫине тепĕр хут пăхса илтĕм те пўлĕмрĕн хăвăрт тухрăм.

# Ăнланаймастăп!

Ăшăма яланах пĕр шухăш шĕкĕ пек кăшлать: кама кирлĕ пулĕ эпĕ çырни тепĕр çĕр çултан – халех чăваш сăмахĕн ИЛЕМĔ сÿннĕçемĕн сÿнсе пырать пулсан. Республикипех, пĕтĕм чăвашĕпех!.. Тепĕр çĕр çултан та мар-ха – ку яхăнах!

Пĕтĕм Раççейĕпех вулама пăрахса пыраççĕ пулмалла. Ара, техника аталанса кайнă май тем тĕрлĕ илĕртÿ те капланса килчĕ те. Киленĕç масаран тухса маларах ларни вăл – ахăртне, этем хăйне йÿнетсе пынине кăна пĕлтерет. Ман шутпа, хатĕррипе кăна утьăкка сикекен çын ăс-тăнĕпе мăкалать, çуратнă ашшĕ-амăшĕ те ашшĕ-амăшĕ вырăнĕнче мар пулса тăрать, тăван çĕршывĕ те тăван мар уншăн, тăван халăхĕ те ют. Тăван чĕлхи те. ЮНЕСКО чăваш чĕлхине сÿнекен чĕлхесен шутне кĕртрĕ. Эпĕ çак ылханлă япалана Чăваш наци конгресĕ хăйĕн черетлĕ пухăвне ларас умĕн вуласа пĕлнĕччĕ. "Ну, – терĕм ун чухне çак хăрушă хыпара вуласан, – ну, пулать ĕнтĕ Чăваш наци конгресĕнче вĕри калаçу!" Асту, тет! Ни республика ертÿçин (ун чухне Федоровчĕ) çак кун тĕлне хатĕрленĕ ятарлă докладĕнче те, ни ЧНК пуçлăхĕн сăмахĕнче çак ырату кăштах та палăрмарĕ. Питĕ тĕлĕнтĕм!

Унтанпа виççĕмĕш çул та иртсе пырать пулĕ. Халь ĕнтĕ ЮНЕСКО çинчен те аса илместпĕр, чăваш чĕлхине упраса аталантарма та нимĕнле татăклă йышăну туни те пулмарĕ. Пурнăçĕ вара вăл паян пулса пырать. Халĕ. Ĕнер те, виçĕм кун та мар. Пурнăç ыранĕ вара – иртнĕ кунсен йăнăшĕ е тĕрĕс йĕре ÿкнĕ тулăхĕ...

Мĕн хăтланатпăр эпир, чăвашсем? Хамăр вырнаçса ларнă туратах пăчкăпа ырми-канми хăшкатпăр. Çав туратпа пĕрле хамăр та татăлса анса хамăра пĕтерсе хурасса та тавçăраймастпăр. Çÿлте ларма çÿлти турат çеç кирлĕ тесе шутлаççĕ пулĕ çав халăх пуçĕ çине пусса çÿле кармашса çитнисем. Чăваш халăхĕ вара хăй ятне çухатасси патнех çитнĕ. Шупашкарне тухан – Шупашкар сана аçу-аннÿ чĕлхипе сывлăх сунмасть, хĕсмечĕсем те чăваш чĕлхине ют. Чăваш Республикинче нивушлĕ чăваш пулса чăваша юратса пурăнма намăс вара? Ăнланаймастăп!

Раççейре пурăнакан кашни халăх çынни пĕр-пĕрне тĕревлесе, юратса пурăнсан Раççейĕ хăй те пысăк утăмсемпе малалла яра-яра пусмалла пек-çке...

Ăнланаймастăп...

Пĕрле пĕр вăхăтра пурăнма пÿрнĕ икĕ питлĕ, пичĕсене кĕççе çĕленĕ чăвашсен "телейлĕ" ыранĕсене эпĕ ăнланаймастăп. Ăнланаймастăп!..

Эпĕ çĕр çинче чăваш пулсах пурнасшăн, чăваш пулсах çĕре кĕресшĕн.

**Хветĕр АГИВЕР**

# Ахмед ибн Фадлан Атăлçи Пăлхар патшалăхне çитсе курни

Ку сыпăка "Перевод основного текста "Книги Ахмеда ибн-Фадлана" на основе Мешхедской рукописи, Йакута, Наджиба Хамаддани и Амина Рази" текстран куçарса илнĕ, вырăсла текст А. П. Ковалевскин "Книга Ахмеда ибн Фадлана о его путешествии на Волгу в 921-922 гг." кĕнекинче пичетленнĕ (Харьков, 1956, 131-141 с).

Атăлçи Пăлхар патши Алмуш ыйтнипе Багдат халифĕ ал-Муктадир кунти халăха ислам тĕнне кĕртме 921 çулта элчĕлĕх (посольство) янă, вăл Атăлçи Пăлхар патшалăхне 922 çулта килсе çитнĕ. Элчĕлĕх çыруçи (секретарĕ) Ахмед ибн-Фадлан хăш çул çинче мĕн курни-илтнине арабла çырса хăварнă. Унăн алçырăвĕ огузсен, пушкăртсен, пăлхарсен, сăварсен, хазарсен, вырăссен тата ытти халăхăн X ĕмĕр пуçламăшĕнчи пурнăçĕ çинчен каласа кăтартакан палăк шутланать.

Алçыру оригиналне халиччен те тупайман. Хăй вăхăтĕнче, XII–XVI ĕмĕрсенче, унпа тата унăн копийĕсемпе чылай çын усă курнă, унăн сыпăкĕсене çыра-çыра илнĕ, унта мĕн çырнине каласа хăварнă. Вырăсла куçару вĕсене пурне те шута илсе реконструкциленĕ текст шутланать, кунта Мешхед библиотеиинче (хальхи Иранра) упраннă алçырăва (XIII ĕмĕр) тĕпе хунă, ăна та чылай редакциленĕ: унăн пайĕсене вырăнтан вырăна куçарса лартма та, кĕскетме те пултарни сисĕнет.

Вырăсла текстра хăшпĕр вырăнсемпе çаврăнăшсене ытти алçырусенчен илнине кăтартса курсивпа пичетленĕ, куçаруçă текста уçăмлăрах ăнланма хушса панă сăмахсене скобкăна илнĕ, Мешхед алçырăвĕнче редактор тĕл-тĕл автор пирки хăйĕнчен хушса: "Вăл каланă" тенине урăх шрифтпа кăтартнă. Вулама ансатрах пултăр тесе вĕсене чăвашла текстра нимĕнле те палăртса хăварман. Автор "вăл", "вĕсем" сăмахсемпе тăтăшах усă курнă: сăмах мĕн е кам çинчен пынине ăнланма питĕ кансĕр пуласран ку кĕнекере асăннă сăмахсем вырăнне япала ячĕсене тӳреммĕн каласа куçарнă. Скобкăна илнĕ сăмахсем арабла çырнине транскрипцилесе вуланине пĕлтереççĕ. Кунта Ахмед ибн Фадлан ĕçĕн чăвашсен мăн аслашшĕсем – пăлхарсемпе сăварсем – çинчен калакан пайне çеç кĕртнĕ.

Чăвашла Геннадий Юмарт куçарнă.

Эпир вара çак çынсен[1] çĕршывĕнчен тухса кайрăмăр та Çарăмсан (Джарамсан) шывĕ урлă, унтан Урен (Уран) шывĕ урлă, унтан Вăрăм (Урăм) шывĕ урлă, унтан Майна (Байнах) шывĕ урлă, унтан Вăта (Ватыг) шывĕ урлă, унтан Пасна (Басна) шывĕ урлă, унтан Гаушерма (Джавшир)[2] урлă каçрăмăр. Эпир асăннă шывсем хушши – икĕ е виçĕ, е тăватă кун, унтан сахалтарах е ытларах каймалăх. Эпир хамăр çитме тухнă сакалиб[3] патши патне çитесси кунпа çĕр каймалăх юлсан, вăл пире кĕтсе илме хăйне пăхăнса тăракан тăватă тăрăна, хăйĕн шăллĕсене тата хăйĕн ывăлĕсене хирĕç ячĕ. Пире вĕсем çăкăрпа, ашпа, вирпе кĕтсе илчĕç те пĕрле пычĕç. Эпир патша патне çитесси икĕ фарсах[4] юлсан вăл пире хăй тухса кĕтсе илчĕ: пире курсанах ут çинчен анчĕ те аслă та хăватлă Аллаха ыр сунса ўксе пуççапрĕ. Унăн çаннинче дирхем[5] пулнă, вара вăл ăна пирĕн çине сапрĕ. Вăл пире валли юртăсем ларттарчĕ те, эпир унта вырнаçрăмăр. Эпир патша патне çитнĕ чух вырсарни кунччĕ, виççĕр вуннăмĕш çулхи[6] мухаррем уйăхĕн[7] вуникĕ каçĕ иртнĕччĕ. Джурджанипе[8] ун çĕршывĕ хушши – çитмĕл кун каймалăх.

Çапла вара, çырăва вуланине[9], итлеме ун çĕршывĕн тăрăнĕсем, çарпуçĕсемпе ун çĕршывĕнче пурăнакансем пухăниччен вырсарни кун, тунти кун, ытлари кун тата юн кун эпир хамăра валли лартнă юртăсенчех пурăнтăмăр.

Кĕçнерни кун, вĕсем пухăнса çитсен, эпир хамăрпа пĕрле илнĕ икĕ элеме çакрăмăр, елтĕпере[10] парнелĕх парса янă ута йĕнерлерĕмĕр, ăна савадпа[11] витрĕмĕр, елтĕпере тюрбан[12] сыртартăмăр. Вара эпĕ халиф çырăвне кăлартăм та ăна: "Ку çырăва вуланă чух пире ларма юрамасть", – терĕм. Вара вăл ура çине тăчĕ,– вăл хăй тата ун патшалăхĕнче пурăнакансен йышĕнчен килнĕ ятлă çынсем те тăчĕç, хăй вара вăл – питĕ хулăн та хырăмламас этем. Эпĕ вулама тытăнтăм та çыру пуçламăшне вуласа патăм, унтан эпĕ: "Тăнăçлăх сана, эпĕ Аллаха чăннипех ятран каласа мухтатăп,– унсăр пуçне урăх турă çук",– тенĕ тĕле çитсен ăна çапла каларăм: "Тĕрĕс тĕне ĕненекенсен пуçлăхне тăнăçлăх сун",– терĕм. Вăл вара хуравларĕ, ыттисем те пурте хуравларĕç.

Тăлмач эпĕ вуланине тĕплĕн куçарса пычĕ. Эпир вуласа пĕтерсен вара вĕсем: "Аллах аслă!"– тесе çĕр чĕтретсех кăшкăрчĕç. Елтĕпер ура çинче тăнă вăхăтра вара эпĕ Хамид ибн-ал-Аббас визирь[13] çырăвне вуласа патăм. Унтан эпĕ ăна ларма сĕнтĕм, Назир ал-Харами[14] çырăвне вуланине вăл ларсах итлерĕ. Ăна вуласа пĕтерсен елтĕперпе пĕрле çўрекенсем ун çине дирхем нумай сапрĕç. Унтан эпĕ унпа ун арăмĕ валли парнелĕх хатĕрленĕ ырă шăршăллă япаласене, тумтирпе ĕнчĕ тавраш не кăлартăм та вĕсене пĕрин хыççăн теприне япалисем мĕн пĕтиччен пара-пара тăтăм. Унтан эпĕ ун арăмĕ çине çынсем умĕнчех чыс халачĕ уртса ятăм, – хăйсен йăли-йĕрки тăрăх вăл ун чухне елтĕперпе юнашар ларчĕ. Эпĕ ун çине чыс халачĕ уртса ярсан хĕрарăмсем ун çине дирхем сапрĕç, вара эпир уйрăлтăмăр.

Пĕрер сехет иртсен елтĕпер пире хăй патне чĕнтерчĕ, вара эпир ун патне кĕтĕмĕр, вăл ун чухне хăй юртинчеччĕ. Тăрăнсем унăн сылтăм енче ларатчĕç, пире вăл хăйĕнчен сулахай енне ларма сĕнчĕ, ун чухне ывăлĕсем ун умĕнче ларатчĕç, вăл хăй вара византи парчипе витнĕ трон çинчеччĕ. Вăл ĕçме-çиме лартнă сĕтел илсе килме хушрĕ те, сĕтеле ун патне илсе килсе лартрĕç. Ун

çинче пĕçернĕ аш кăначчĕ. Çапла вара, елтĕпер çиме тытăнчĕ: çĕçĕ илчĕ, пĕр татăк касрĕ те çирĕ, унтан – иккĕмĕшне, виççĕмĕшне. Унтан вăл пысăк татăк касрĕ те ăна Сусан элче[15] пачĕ. Лешĕ ашне алла илсен ун умне пĕчĕк сĕтел илсе килсе лартрĕç. Йăли тăрăх, елтĕпер татăк тыттариччен çиме патне никамăн та алă тăсмалла мар. Пĕр-пĕр çынна аш татăкĕ тыттарсанах ун умне сĕтел пырса лартаççĕ.

Унтан вăл мана аш пачĕ, вара мана валли те сĕтел пырса лартрĕç. Унтан вăл пĕр татăк аш касрĕ те хăйĕнчен сылтăм енче ларакан тăрăна тыттарчĕ, вара ăна валли те сĕтел илсе килчĕç: унтан иккĕмĕш тăрăна пачĕ, вара ăна валли те сĕтел илсе пырса лартрĕç [...][16]; унтан тăваттăмĕш тăрăна пачĕ, вара ăна валли те сĕтел илсе пырса лартрĕç; унтан хăйĕн ывăлĕсене пачĕ, вĕсем валли те сĕтел илсе пырса лартрĕç. Хăй умĕнче ларакансене пурне те сĕтел илсе пырса париччен йăлтах çакăн пек пулса пычĕ, эпир вара пурте харпăр хăй сĕтелĕ çинче çирĕмĕр, пĕри те никампа та пĕр сĕтел хушшинче лармарĕ, унсăр пуçне, никам та теприн сĕтелĕ çинчен нимĕн те илмерĕ. Елтĕпер çисе тăрансан пирĕнтен пурте харпăр хăй сĕтелĕ çинче юлнă аша хăй килне илсе кайма чикрĕ. Эпир çисе тăрансан елтĕпер пыл шерпечĕ илсе килме хушрĕ, ăна унченхи кун каçхине çĕрле хатĕрленĕ, ăна "сăджув"[17] теççĕ. Вара елтĕпер ăна пĕр алтăр ĕçрĕ. Унтан вăл ура çине тăчĕ те: "Ку вăл эпĕ хамăн хуçашăн, тĕрĕс тĕне ĕненекенсен пуçлăхĕшĕн, – Аллах ăна упраса усратăр,– савăннине пĕлтерет,"– терĕ. Вара вăл ура çине тăнине кура тăватă тăрăн та, хăйĕн ывăлĕсем те тăчĕç, вăл çапла виçĕ хут ĕçиччен эпир те тăтăмăр. Унтан эпир ун патĕнчен кайрăмăр.

Ун минбарĕ[18] çинчен эпĕ пырса çитиччен: "Эй Аллах! Елтĕпере, пăлхарсен патшине, упрасам!"– тесе, ун ячĕпе хутба[19] калама пуçланă. Эпĕ ăна ка-ларăм: "тупата, патша вăл – Аллах, минбар çинчен ку ятпа, унсăр пуçне, аслă та хăватлă тесе никама та асăнмаççĕ. Акă санăн хуçу, тĕрĕс тĕне ĕненекенсен пуçлăхĕ, уншăн ун минбарĕсем çинчен тухăçпа анăçра: "Эй Аллах! Хăвăн чуруна, хăвăн халифун ĕçĕсене туса пыракана, ал-Муктадир-биллах имама[20], тĕрĕс тĕне тытакансен пуçлăхне, упрасам!"– тесе каланипе çырлахать. Унăн халиф пулнă ашшĕ-аслашшĕсем те çакнашкалах кĕлтунă. Пихампар[21],– Аллах пиллетĕрччĕ те хăтартăрччĕ ăна,– каланă: "Христоса ĕненекенсем Мария ывăлне Иисуса мухтанă пек, мана виçесĕр ан мухтаса тăрăр,– эпĕ, тупата, Аллах тарçи, вăл янă çын",– тенĕ.

Елтĕпер мана каларĕ: "Ман ятпа хутба калама мĕнле май пур-ши?"– терĕ. Эпĕ каларăм: "Сан ятупа аçу ятне каласа",– терĕм. Вăл каларĕ: "Анчах та ман атте тĕрĕс тĕне ĕненекен çын пулман, манăн та минбар çинчен ун ятне асăнас килмест, эпĕ те унчен ют тĕнпе пурăннă – манăн хамăн ятăма асăнтарас килмест, мĕншĕн тесен мана ят параканĕ çак тĕне тытакан çын пулман. Ман хуçа, тĕрĕс тĕне тытакансен пуçлăхĕ, мĕн ятлă?"– терĕ. Эпĕ каларам: "Джафар",– терĕм. Вăл каларĕ: "Мана ун ятне илме юрать-и?" – терĕ. Эпĕ каларăм: "Юрать", – терĕм. Вăл каларĕ: "Апла эппин, эпĕ хама Джафар тесе, аттене Абдаллах тесе ят хутăм ĕнтĕ, кун пирки хатиба[22] пĕлтерме хуш", – терĕ. Эпĕ çапла турăм та, хатиб ун ячĕпе хутба калама пуçларĕ: "Эй, Аллах! Хăвăн чуруна, Джафара,

Абдаллах ывăлне, пăлхарсен пуçлăхне, тĕрĕс тĕне тытакан пуçлăхне пăхăнаканне, упраса усра!" -терĕ.

Çыру вуласа парнесем панăранпа виçĕ кунтан елтĕпер мана хăй патне чĕнтерчĕ. Вăл тăвату пин динар[23] пирки пыракан ĕçе тата укçана Христианин[24] хăй патĕнчех хăварас тесе епле чееленнине пĕлнĕ. Çав укçа çинчен çырура та пĕлтернĕччĕ. Вара, эпĕ ун патне кĕрсен, елтĕпер мана ларма сĕнчĕ те, эпĕ лартăм, вăл вара тĕрĕс тĕне тытакансен пуçлăхĕн çырăвне мана пăрахса пачĕ те: "Кам илсе килнĕ ку çырăва?"– терĕ. Эпĕ каларăм: "Эпĕ",– терĕм. Унтан вăл ман ума визирь çырăвне пăрахса пачĕ те: "Куна та-и?"– терĕ. Эпĕ каларăм: "Куна та",– терĕм. ВăлKаларĕ: "Вĕсенчен иккĕшĕнче те асăннă укçапа мĕн тунă?"– терĕ. Эпĕ каларăм: "Ун чухлĕ пухма хĕн пулчĕ, вăхăт хĕсĕнчĕ, эпир хĕл ларсан кунта çитме май пулмасран хăрарăмăр, çавăнпа эпир вăл укçана хăвартăмăр, хамăра хăваласа çитме хушрăмăр",– терĕм. Вара вăл: "Чăн та, эсир пурте килнĕ, ман хуçа сирĕншĕн тăкакланни вăл ман валли укçа илсе килессишĕн, унпа мана хама пăхăнтарнă иудейсенчен[25] сыхланма карман тутарассишĕн пулчĕ. Парне тесен, ăна хамăн çын[26] та чип-чипер илсе çитернĕ пулĕччĕ",– терĕ. Эпĕ каларăм: "Ку вăл тĕрĕсех ĕнтĕ, анчах илсе килме эпир те пĕтĕм вăя хутăмăрçке",– терĕм.

Вара вăл тăлмача каларĕ: "Пĕлтер ăна: "Эпĕ ку çынсене[27] ĕненместĕп. Чăннипе, эпĕ сана кăна ĕненетĕп, мĕншĕн тесен ыттисем арабсем мар[28]. Вĕрентекен[29],– Аллах пулăшса пытăрах ăна,– эсĕ мĕн калассине вĕсем каласса пĕлнĕ пулсан, хăй мана калама ыйтнине асра тытма сана яман пулĕччĕ: ун çырăвне вуласа параттăн та ман хурава илтĕттĕн. Эпĕ сансăр пуçне никамран та пĕр дирхем те ыйтмастăп, çавăнпа укçана пар, ку вăл саншăнах питĕ лайăх пулĕ",– терĕ. Вара эпĕ ун сăн-питĕнчен хăраса кайрăм, хуйха ӳксе тухрăм. Ку çыннăн кĕрнеклĕхĕпе танлăхĕ пур, вăл мăнтăр, сарлака, калаçнă чух пысăк кăкшăм ăшĕнчен калаçнă пек калаçать. Вара эпĕ ун патĕнчен тухрăм та хамăн юлташсене пухрăм, елтĕперпе иксĕмĕр хушшăмăрта тин кăна мĕн-мĕн пулса иртнине пĕлтертĕм. Эпĕ вĕсене çапла каларăм. "Эпĕ сире ку япаларан сыхланма хушсаттăм",– терĕм.

Елтĕпер муэдзинĕ[30] çынсене кĕлле йыхăрнă чух икамăна[31] икшер хут калать. Эпĕ елтĕпере каларăм: "Тупата, санăн хуçу, тĕрĕс тĕне тытакансен пуçлăхĕ, хăй килĕнче икамăна пĕр хут калаттарать",– терĕм. Вара елтĕпер муэдзина каларĕ: "Вăл сана каланине ту, ăна ан хирĕçле",– терĕ. Çапла вара, вăл манран укçа пирки тĕпчерĕ, манпа çавăншăн хирĕçсе калаçрĕ, эпĕ ăна ку тĕлĕшрен аптăратсах çитернĕччĕ, çав вăхăтра муэдзин эп хушнине темиçе кун хушши тытса пычĕ. Елтĕпер укçа илес шанчăка çухатсан, вăл муэдзина икамăна икшер хут калама хушрĕ те, лешĕ çапла турĕ. Елтĕпер çакна манпа тавлашу пуçарма сăлтав пултăр тесе турĕ.

Çапла вара, эпĕ муэдзин икамăна икĕ хут каланине илтрĕм, апла тума чарса хăтăрса тăкрăм. Елтĕпер çакăн çинчен пĕлнĕ те мана хăй патне чĕнтерчĕ, юлташăмсене те пыма хушрĕ. Эпир пурте пуçтарăнсан елтĕпер тăлмача каларĕ: "Кала ăна, – мана ĕнтĕ: "Икĕ муэдзинран пĕри икамăна пĕр хут, тепри икĕ хут калани пирки, кайран вĕсенчен кашниех халăхпа пĕрле кĕлтуни пирки мĕн теме пулта-

ратăн? Кун пек кĕлтума юрать-и е юрамасть-и?"– терĕ. Эпĕ калараăм: "Кĕлтума юрать",– терĕм. Вара вăл каларĕ: "Ку тĕлĕшрен муджтехидсем[32] каланине хирĕçлемест-и е вĕсемпе пĕтĕмпех килĕшсе тăрать-и?"– терĕ. Эпĕ каларăм: "Пĕтĕмпех килĕшсе тăрать",– терĕм. Вăл каларĕ: "Кала ăна: "Тыткăнри, чуралăхри чухăн çынсене памалли укçана темле çынсене, вĕсем хăйне улталанăскерсене, панă çын пирки мĕн каланă пулăттăн?"– терĕ. Эпĕ каларăм: "Ун пек тума юрамасть, леш çынсем вара пўтсĕрскерсем",– терĕм. Вăл каларĕ: "Пĕтĕмпех çапла-и е юрамасть-и?"– терĕ. Эпĕ каларăм: "Пĕтĕмпех çапла",– терĕм. Вара вăл тăлмача каларĕ: "Кала ăна: "Пĕлетĕн-и эсĕ, енчен те халиф,– Аллах упраса усратăрах ăна,– ман çине çар ярас пулсан, вăл çĕнтернĕ пулĕччĕ-и?"– терĕ. Эпĕ каларăм: "Çук",– терĕм. Вăл каларĕ: "Хорасан эмирĕ?"– терĕ. Эпĕ каларăм: "Çук",– терĕм. Вăл каларĕ: "Ку вăл хушшăмăрсем инçерен тата унта тĕне кĕмен йăх нумайран-и?"– терĕ. Эпĕ каларăм: "Çавăнпа",– терĕм.

Вăл каларĕ: "Кала ăна: "Эппин, тупата, Аллах ячĕпе тупа тăватăп, аякри тăрăхра тăратăп пулсан та, мана эсĕ унта куратăн ĕнтĕ, эпĕ сан хуçунтан, тĕрĕс тĕне тытакансен пуçлăхĕнчен, чăнласах хăратăп. Ун патне ман çинчен мĕнле те пулин япăх хыпар çитĕ те, ун ылханĕнчен вара эпĕ хамăн çĕр çинчех пĕтме пултаратăп, çав вăхăтра вăл хăй çĕршывĕнчех юлĕ, манпа ун çĕршывĕ хушшинче пысăк çĕршывсем сарăлса выртĕç. Эсир вара, ун çăкăрне çиекенскерсем, ун тумтирне тăхăнса çўрекенскерсем, ăна кирек хăçан та куратăр, эсир ăна хайхи мана валли парса янă парнесене пĕтĕмпех памасăр улталарăр, эсир çавăнпа мăсăльмансене улталарăр, – ман пата тўрĕ кăмăллă, яланах тĕрĕсне каласа паракан çын килмесĕр эпĕ хама тĕн тĕлĕшĕнчен сире ертсе пыртарма килĕшместĕп. Çавнашкал çын ман пата килес пулсан эпĕ ăна ертсе пыртарма килĕшетĕп",– терĕ. Çакă вăл пире çапса хуçрĕ[33], эпир ун патĕнчен нимĕн хуравлаймасăрах тухса кайрăмăр.

Çак калаçу хыççăн вăл мана уйрăмах хисеплеме тытăнчĕ, мана хăй çывăхнерех ячĕ, манăн юлташсене вара хăйĕнчен аяккарах сирме тăрăшрĕ, мана "Тўрĕ кăмăллă Абу-Бекр"[34] тесе чĕнме пуçларĕ.

Эпĕ ун çĕршывĕнче çав тери нумай тĕлĕнтермĕш япала куртăм, вĕсем нумайййипе пурне те асăнса тухаймăп: сăмахран, ун çĕршывĕнче эпир малтанхи хут çĕр выртнă чухне шăпах хĕвел анса ларнă вăхăтра, кĕлĕ вăхăтĕнче, тўпе хĕрри хĕп-хĕрлĕ пулчĕ[35]. Эпĕ сывлăшра çўлте хыттăн шавланине тата хулăн сасăсем илтрĕм. Пуçа çĕклесе пăхрăм та хамран инçех те мар вут пек хĕрлĕ пĕлĕт куртăм, çав сасăсем çавăнтан илтĕнеççĕ иккен. Акă унта çынсемпе утсем евĕрлĕ мĕлкесем, çав çын евĕр мĕлкесен тăснă аллисенче – ухăсемпе çĕмренсем, сăнăсемпе йĕнĕрен кăларнă хĕçсем курăнаççĕ. Вĕсем мана пĕрре питĕ уçăмлăн курăнчĕç, тепре курăннăн çеç туйăнчĕç. Акă юнашарах тата çавнашкал тепĕр хура ушкăн, унта та эпĕ арçынсене, вĕсен учĕсемпе хĕçĕ-çĕмренĕсене асăрхарăм. Вара ку ушкăнĕ тепĕр ушкăнне çар çине çар тапăннă пек тапăнма пуçларĕ. Эпир çакăнтан хăраса ўкрĕмĕр те йăлăнма та кĕлтума тытăнтăмăр, кунти çынсем пирĕнтен кулаççĕ, эпир хăтланнинчен тĕлĕнеççĕ.

Çар çине çар тапăннине эпир чылайччен пăхса тăтăмăр. Пĕр вăхăтра вĕсем иккĕшĕ пĕрле хутăшрĕç, унтан пĕр-пĕринчен уйрăлчĕç, çапла вара çак япала

çĕрле те пĕр хушă пычĕ. Кайран вăл куçран çĕтрĕ. Эпир ун çинчен елтĕпертен ыйтрăмăр та, вăл çапла пĕлтерчĕ: унăн аслашшĕсем каланă тăрăх, çак юланутсем тĕне кĕнĕ тата тĕне кĕмен вăйсен мĕлкисене пĕлтереççĕ имĕш. Вĕсем каçсерен çапăçаççĕ, вĕсем, чăн та, хăйсем пулса кайнăранпа çапăçмасăр пĕр каç та ирттермен, елтĕпер аслашшĕсене те вĕсем ялан çапла курăннă имĕш.

Эпĕ кĕтĕм те, ман юртăна пĕрле калаçса ларма елтĕпер патĕнче çĕвĕçре пурăннă Багдад çынни кĕчĕ. Вара эпир Коранăн çиччĕмĕш пайĕн çуррине вуламалăх вăхăт хушши калаçса лартăмăр. Çав вăхăтра эпир çĕрлехи азан[36] çитессе кĕтсе лартăмăр. Акă азан та çитрĕ. Эпир юртăран тухнă çĕре шуçăм çĕкленнĕччĕ ĕнтĕ. Вара эпĕ муэдзина ларăм: "Эсĕ хăш азана каларăн?"– терĕм. Вăл ларĕ: "Ирхи азана",– терĕ. Эпĕ каларăм: "Каçхи азана вара?"– терĕм. Вăл ларĕ: "Эпир ун кĕллине хĕвел аннă чухнехипе пĕрле калатпăр",– терĕ. Эпĕ каларăм: "Каçхине вара?"– терĕм. Вăл ларĕ: "Куратăн ĕнтĕ! Унччен каççем кĕçĕрхинчен кĕскерехчĕ, анчах та халĕ ун тăршшĕ вăрăмланчĕ ĕнтĕ",– терĕ. Вăл акă мĕн пĕлтерчĕ: ирхи кĕлĕ вăхăчĕ çитнине сисмесĕр юласран хăраса вăл пĕр уйăх ĕнтĕ çĕрле çывăрмасть, çакна акă мĕншĕн тăвать: хĕвел аннă чухнехи кĕлĕ вăхăтĕнче вут çине хуран çакас пулсан, вăл ирхи кĕлĕччен вĕреме кĕме те ĕлкĕреймест.

Эпĕ акă мĕн куртăм: вĕсем патĕнче кун тăршшĕ питĕ вăрăм, тĕрĕсрех каласан, вăл çулталăкăн пĕр пайĕнче вăрăм, каçĕ вара кĕске, кайран каçĕ вăрăм, кунĕ кĕске. Çапла вара, иккĕмĕш каçхине эпĕ юрта тулашне лартăм та тӳпене сăнама пуçларăм, унта çăлтăр питĕ сахалччĕ, астунă тăрăх – пĕр вунпилĕк çăлтăра яхăн çеç пăт-пат курăнатчĕç. Çĕрлехи кĕлĕ умĕн тухакан хĕрлĕ шуçăм сӳнсех лармасть, каçĕ акă кăшт кăна тĕттĕмленет, унăн çутинче çынна çĕмрен вĕçмелĕхрен те палласа илме пулать.

Эпĕ акă мĕн куртăм: уйăх пуç тӳпинех çитмест, тӳпе хĕрринчен пĕр сехетлĕх пек çеç тухать, унтан шуçăм çĕкленет те, вара уйăх пытанать.

Елтĕпер мана ун çĕршывĕнчен леш еннелле, виçе уйăх каймалăхра, вису[37] текен халăх пурăнни çинчен каласа пачĕ. Вĕсем патĕнче вара каç тăршшĕ пĕр сехет те çук.

Ку çĕршывра хĕвел тухнă чух пĕтĕм япалана, сăмахран, çĕр питне, сăртсене тата этем куракан мĕнпур япалана хĕрлĕ тĕс çапать. Хĕвел пĕлĕт пысăкăш тухать те вăл çӳле улăхса çитиччен хĕрлĕреххĕн курăнса тăрать.

Ку çĕршывра пурăнакансем мана акă мĕн каласа пачĕç: чăнах та, кунта хĕл ларсан, каç тăршшĕ çуллахи кун пек вăрăм, кунĕ çуллахи каç пек кĕске пулать. Çапла вара, пирĕнтен хăшĕ те пулин Атăл (Атл) текен çĕре[38] шуçăм килнĕ чух тухса утсан,– пирĕнпе ун хушши вара фарсахран та кĕскерех, – вăл вара ун патне сĕм каç пулнă тĕле, мĕнпур çăлтăр пĕтĕм тӳпене хупланă вăхăта, çитет.

Эпир вара ку çĕршывран каççем вăрăмланиччен, кунĕсем кĕскеличчен тухса каймарăмăр.

Кунти çынсем йытăсем ӳлесессĕн ырă пуласса пĕлтерет тесе шутлаççĕ, уншăн савăнаççĕ, тулăх, ырă та ăнăçлă çул килесси çинчен калаçаççĕ.

Тата çакна куртăм: вĕсен çĕленсем çав тери нумай, йывăç туратти çине, чăн та, тепĕр чухне вуннăн е унтан та ытларах явăнаççĕ. Вĕсем çĕленсене вĕлермеççĕ, лешсем те хăйсене сиен кӳмеççĕ. Чăн та, пĕррехинче пĕр çĕрте эпĕ

вăрăм йывăç куртăм, тăршшĕ çĕр чикерен те ытларах. Хăй ўкнĕ ĕнтĕ. Унăн вулли вара калама çук пысăк. Ун çине пăхса эпĕ чарăнса тăтăм, сасартăк вăл йăшăлтатма пуçларĕ. Çакă мана хăратса пăрахрĕ. Эпĕ ун çине тимлĕнрех пăхрăм та вулă çинчи çĕлене курах кайрăм, хăй пысăкăшĕпе йывăçах капашать. Çĕлен мана курчĕ те вулă çинчен анса ытти йывăççем хушшинелле кĕрсе çухалчĕ. Эпĕ каялла сехĕрленсе таврăнтăм та хам курнине елтĕпере тата çав вăхăтра ун патĕнче пулнă çынсене каласа кăтартрăм. Вĕсем унран пĕртте тĕлĕнмерĕç, елтĕперĕ каларĕ: "Ан пăшăрхан, çĕлен сана сиен тăвас çук",– терĕ.

Пĕррехинче эпир елтĕперпе пĕрле пĕр вырăнта чарăнса тăтăмăр. Вара эпĕ, манăн юлташсем – Текин, Сусанпа Парăс – тата елтĕпер çыннисенчен пĕри йывăççем хушшине кĕтĕмĕр. Вăл вара пире лутра курăк туни кăтартрĕ: хăй ешĕл, йĕке вĕçĕ хулăнăш, тăсăлса ўсет, ун çинче – ешĕл çипписем. Çипписен вĕçĕсерен сарлака çулçă, çĕр çине сарăлса выртнăскер, ун çумĕнчен çĕнĕ хунав шăтса тухнă. Çулçисем хушшинче çырлисем. Çав çырлана çисе пăхаканĕсем ăна имлисси гранатĕнчен уйăрса илеес çук. Çапла вара, эпир ăна çисе пăхрăмăр та вăл чуна питĕ усăлтарса яма пултарнине пĕлтĕмĕр, çавăн хыççăн эпир ăна татах шырарăмăр, татса çиме чарăнмарăмăр[39].

Эпĕ унта эрех йўçекĕ тутиллĕ симĕсрех улма куртăм: вĕсене хĕрсем çинĕрен ятне те çапларах панă[40].

Эпĕ вĕсен çĕршывĕнче шĕшкĕ чухлĕ нумай йывăç урăх нимĕн те курмарăм. Чăнах та, эпĕ шĕшкĕ вăрманĕсем куртăм, вăрманĕсен тăршшĕ хĕрĕх фарсах, урлăшĕ те çапла.

Эпĕ вĕсен çĕршывĕнче йывăç куртăм, мĕн йывăçне пĕлместĕп: питĕ çўллĕ, унăн вулли çулçăллă мар, тăрри вĕтĕ туратлă пальма тăрри евĕрлĕ, анчах ку туратсем пуçтарăнса[41] тăраççĕ. Кунти çынсем çак йывăç вуллине пĕр-пĕр тĕлтен суйласа илеççĕ те ăна пăраласа шăтараççĕ, ун айне савăт лартаççĕ, унта çав шăтăкран пылтан та тутлă шĕвек юхать, çын çавна ытларах ĕçсен вăл ăна эрех пек е унтан та хытăрах ўсĕртет.

Çими вĕсен – вирпе лаша ашĕ, анчах тулă та, урпа та нумай, кам мĕн акать, ăна хăйне валли илет. Елтĕпер вĕсенчен çуллен килсерен кăш[42] тирĕ илсе тăнисĕр пуçне унăн урăх нимĕн илме те ирĕк çук. Енчен те вăл çар ушкăнне пĕр-пĕр çĕршыва тапăнма сĕнсен, лешсем çаратса килсен, вара елтĕпер пурлăха вĕсемпе пайласа илет. Кам та кам хăй килĕнче туй иртterет е хăна-вĕрле пухса ĕçет, ĕçкĕ-çикĕшĕн вăл елтĕпере парне уйăрса пама тивĕç – пĕр чăм пыл шерпечĕ тата пăсăлнă тулă кўмелле. Хăйсен çимĕçне пухса хума вĕсен çурт-йĕр çук, – чăнах та, вĕсем çĕре пусă пек алтаççĕ те унта çимĕççем хураççĕ, темиçе кун иртсенех вĕсем пăсăлаççĕ, шăршланаççĕ, вара унпа усă курма çук.

Вĕсен олива çăвĕ те, сезам[43] çăвĕ те, выльăх çăвĕ те пачах çук, вĕсем, чăнах та, ун вырăнне пулă çăвĕпе усă кураççĕ, ăна мĕнле çимĕçпе çиеççĕ, çав çимĕçрен çу шăрши кĕрет, вĕсем хăйсем те çу шăршиллĕ.

Вĕсем урпаран шўрпе тăваççĕ, ăна хăрхăмсемпе[44] яш тарçăсем çиеççĕ. Хăшпĕр чухне вара урпапа аш пĕçереççĕ, çитменнине, хуçисем ашне çиеççĕ те урпине хăрхăмне параççĕ. Анчах качака такин пуçне пĕçерсен хăрхăмсене те аш çиме тўр килет.

Вĕсем пурте çĕлĕкпе çӳреççĕ. Елтĕпер утпа пынă чух пĕчченех, тарçăсăрмĕнсĕрех çӳрет, унпа пĕрле никам та çук. Вара вăл пасар витĕр утпа иртсе пынă чух пурте ура çине тăраççĕ, никам та лармасть, пур çын та хăй çĕлĕкне хывса хул хушшине хĕстерет. Вăл вĕсен тĕлĕнчен иртсенех лешсем каллех çĕлĕкне тăхăнаççĕ. Елтĕпер патне кĕрекен мĕнпур çын, ватти-вĕтти, хăй ывăлĕсем таранах, лешĕ вĕсем çине пăхсанах, пурте шăпах çавăн пек хăйсен çĕлĕкĕсене хываççĕ те хул хушшине хĕстереççĕ. Унтан вĕсем елтĕпер енне пуç тайса çăкăнаççĕ[45] те вăл ларма сĕнического ура çинче тăраççĕ, çитменнине, ун умĕнче лараканĕсем пурте чĕркуççи çинче лараççĕ,– хăйсен çĕлĕкне хул хушшинчен кăлармаççĕ, кăтартмаççĕ; елтĕпер патĕнчен тухсассăн çеç ăна пуçа тăхăнса яраççĕ.

Вĕсем пурте юртăра пурăнаççĕ, елтĕпер юрти çеç ыттисенчен пысăкăшĕпе уйрăлса тăрать, вăл юртăра пин çын е ытларах та вырнаçать, унта эрмен кавирĕсем сарнă. Ун юртин варринче патша пуканĕ пур, ăна византи парчипе витнĕ.

Вĕсен йăлисенчен пĕри çапла: камăн ывăлĕн те пулин ача çуралсан ăна ашшĕнчен малтан аслашшĕ хăй патне илет те çапла калать: "Ăна ар шутне кĕриччен пăхса ӳстерме эпĕ ашшĕнчен те тивĕçлĕрех",– тет.

Вĕсенчен кам та пулин вилсен ун еткерлĕхне ывăлĕсенчен маларах унăн пĕртăван шăллĕ е пиччĕшĕ илет. Çакна пĕлсен эпĕ елтĕпере ун пек тума юраманни çинчен каларăм, еткерлĕх йĕрки çинчен вăл мĕн ăнланса иличченех тăнлантартăм.

Эпĕ вĕсен çĕршывĕнчи пек çиçĕм нумай çиçнине урăх ниçта та курман. Эхер те пӳрте аçа çапсан вĕсем ун патне çывхармаççĕ, ăна мĕнле пулнă çаплипех, унта мĕн пуррине те – çыннипе пурлăхне те, тата ыттине те – пăрахса хăвараççĕ, унта вара вĕсем пӳрт йăлтах çĕрĕшсе пĕтиччен те пымаççĕ. Хăйсем ăна: "Ку вăл – ылханлă çын килĕ",– теççĕ.

Вĕсенчен кам та пулин теприне ятарласа вĕлернĕ пулсан, вĕсем уншăн ăна асаплантарса вĕлереççĕ. Эхер те ăна асăрхамасăр вĕлернĕ пулсан ăна валли хурăн хăмаран арча тăваççĕ, çынна çавăнта хупаççĕ те çиелтен пăтапа çапса лартаççĕ, хăйпе пĕрле виçĕ икерчĕпе пĕр курка шыв хурса яраççĕ. Вĕсем ун валли виçĕ пĕренене тĕве йĕнерĕн патакĕсем пек тăратса лартаççĕ, ăна вĕсем хушшине çакаççĕ те калаççĕ: "Эпир ăна çумăрпа хĕвел пĕтертĕр тесе çĕрпе тӳпе хушшине хуратпăр. Тен, Аллах каçарĕ ăна",– теççĕ. Вăл вара вăхăт иртнĕçем хăйне хăй пĕтиччен, ăна çил вĕçтерсе пĕтеричченех çапла çакăнса тăрать.

Эхер те темĕн те пĕлекен чĕрĕ çынна курсан вĕсем: "Ку çын туррăмăра кĕлтума пуринчен те тивĕçлĕрех",– теççĕ. Вара ăна тытаççĕ те мăйĕнчен вĕренпе йăлмакласа çыхаççĕ, кайран йывăç çине çакаççĕ, унта вара вăл татăкăн-татăкăн татăлса пĕтиччен çакăнса тăрать. Тупата, елтĕпер тăлмачи ку çĕршыва пĕр синдиец[46] килсе лекни çинчен тата вăл пĕр вăхăт елтĕпер патĕнче ĕçлесе тăни çинчен каласа пачĕ. Çынни вăл чĕрĕ те ăнкаруллă пулнă. Кунти çынсен пĕр ушкăнĕ суту-илӳ тума каймашкăн шутланă. Çак синдиец елтĕпертен хăйне вĕсемпе пĕрле яма ирĕк ыйтнă. Елтĕперĕ çапла тума чарнă-мĕн. Синдиец вара хăйне мĕн ирĕк париччен çине тăнă. Çапла вăл вĕсемпе пĕрле караппа тухса кайнă. Акă хайхи вĕсем вăл чĕрĕ те тавçăруллă пулнине курнă та хăйсем хушшинче

çапла калаçса татăлнă: "Ку çын туррăмăра кĕлтума питĕ юрăхлă, турă патне ярар эппин ăна",– тенĕ. Хăйсен çулĕпе вăрман çумĕн иртсе пынă. Вара вĕсем ăна вăрман патне илсе тухнă, синдиеца мăйран вĕренпе йăлмакланă та çӳллĕ йывăç тăррине çыхса лартнă, вара ăна унтах хăварса малалла кайнă.

Эхер те вĕсем çулпа пыраççĕ пулсан, вĕсенчен пĕри тула тухас тесен, вăл вара хĕç-çĕмрене хăй çумĕнчен илсе хумасăрах тула тухсан, ăна хăйне йăлтах çаратса хăвараççĕ,-хĕçпăшалне те, тумтирне те, ун çумĕнчен мĕнпур пек япалине хывса илеççĕ. Ку вăл – вĕсен йăли. Кам хăй çумĕнчи хĕç-çĕмрене хывса аякка хурать те вара тула тухать, ăна вĕсем тула тухма чармаççĕ.

Арçынсемпе хĕрарăмсем шыв хĕрне анаççĕ те çаппа-çарамасланса пурте пĕрле шыва кĕреççĕ, пĕр-пĕринчен нимĕнле те хупланмаççĕ, нимĕнле намăс ĕç те тумаççĕ. Эхер те кам та пулин намăс ĕç тусан, вăл кирек кам пулсан та, ун валли тăвата суха тимĕрĕ çапса лартаççĕ те вĕсен çумне унăн икĕ аллипе икĕ урине çыхса хураççĕ, вара ĕнсерен пуçласа пĕççисем таранах пуртăпа касса çураççĕ. Хĕрарăма та вĕсем çавăн пекех суд тăваççĕ. Кайран арçынпа хĕрарăм пĕвĕн кашни татăкне йывăç çине çакаççĕ. Шыва кĕнĕ чухне хĕрарăмсем арçынсенчен хупланччăр тесе эпĕ нумай тăрăшрăм, анчах та никама та ӳкĕте кĕртеймерĕм.

Вĕсем вăрра та аскăн ĕç тунă çынна вĕлернĕ пекех вĕлереççĕ.

Вĕсен вăрманĕсенче пыл хурчĕсен йăвисенче пыл нумай, вĕсем вăл вырăна йăлтах пĕлсе тăраççĕ те çав пыла пухма çӳреççĕ. Хăшпĕр чухне вĕсем çине хăйсен тăшманĕсем тапăнаççĕ те вĕсене вĕлереççĕ.

Вĕсен сутуçă нумай, вĕсем тĕрĕксен çĕрне каяççĕ те сурăхсем илсе килеççĕ, Вису[47] текен çĕршыва каяççĕ, унтан кăшсемпе хура тилĕсем илсе килеççĕ.

Эпир вĕсем патĕнче пĕр килйышра пилĕк пин хĕрарăмпа арçынна куртăмăр. Вĕсем пурте ислам йышăннă. Вĕсене баранджарсем[48] тесе чĕнеççĕ. Вĕсем валли йывăçран мечет лартса панă, унта вĕсем кĕлтăваççĕ. Вĕсем кĕлĕ вулама пĕлмеççĕ, эпĕ пĕр ушкăнне мĕнле кĕлтума кирлине вĕрентрĕм.

Тупата, пĕррехинче эпĕ кăтартса пынипе Талут ятлă çын ислам тĕнне йышăнчĕ, эпĕ вара ăна Абдаллах тесе ят хутăм. Хăй вара вăл: "Манăн сана хăвăн ятупа хама Мухаммед[49] тесе ят хуртарас килет",– терĕ. Эпĕ çапла турăм. Вара унăн арăмĕ, унăн амăшĕпе унăн ачисем те ислам тĕнне йышăнчĕç, ун хыçăн вĕсене пурне те Мухаммед тесе чĕнме тытăнчĕç. Эпĕ ăна "Аллаха мухтав" тата "Аллах вăл пĕртен-пĕр" тесе кала" текен сурасене[50] калама вĕрентрĕм. Çак икĕ сурана калама вĕреннĕшĕн çав тери савăнчĕ: сакалиб елтĕперĕ пулас пулсан та вăл ун чухлĕ савăнас çук.

Эпир елтĕпер патне пырса çитсен, ăна Хĕллече (Хеллече)[51] текен çĕрте чăрăнса тăнă чухне тĕл пултăмăр, ку вăл – виçĕ кӳлĕ вырăнĕ, вĕсенчен иккĕшĕ пысăк, пĕри пĕчĕк[52]. Анчах вĕсенчен пĕрин тĕпне те çитме çук. Çав вырăнпа вĕсен хазарсен çĕршывнелле юхакан, Атăл текен пысăк шывĕ хушши фарсаха яхăн. Çак шыв çинче пасар вырăнĕ пур, унта кирек хăш вăхăтра та халăх йышлă. Унта хаклă йышши тавар нумай сутаççĕ.

Мана Текин кунта елтĕпер çĕрĕ-шывĕнче пĕр калама çук пысăк пӳллĕ этем пурри çинчен каласа панăччĕ[53]. Вара çак сĕршыва çитсен эпĕ ун çинчен елтĕ-

пертен ыйтрăм. Вăл вара çапла каларĕ: "Чăн та, пирĕн çĕршывра ун пекки пурччĕ, анчах вилчĕ. Вăл ку çĕршыв çынни пулман, çитменнине, ахаль çын та мар. Ун халапĕ акă мĕнле. Хăшпĕр сутуçăсем, яланхи пекех, Атăл шывĕ хĕрне тухнă. Ку шывĕ тулса хăпарнă та çырантан тухса сарăлнă. Пĕррехинче вара, эпĕ ун çинчен пĕлме ĕлкĕричченех, сутуçăсен пĕр ушкăнĕ ман патăма çитрĕ те, сутуçăсем çапла門 каларĕç: "Эй, елтĕпер! Шыв тăрăх çын юхса килнĕ,– вăл пирĕнтен инçех мар пурăнакан халăх çынни пулсан, ку вырăнта тăма пире май пулас çук, пирĕн вара урăх çĕре куçса кайма кăна тивет",– терĕç. Вара эпĕ вĕсемпе пĕрле шыв хĕрне çитиччен юланутпа кайрăм. Акă ман умра хайхи çын, ун çӳллĕшĕ, манăн "чикепе"[54] виçсен, вуникĕ чике, унăн пуçĕ чи пысăк хуран пек, сăмси чĕрĕк чикерен[55] ытла мар, куçĕ пысăк, пӳрнисем вара – пурте чĕрĕк чикерен иртеççĕ. Ăна курни мана хăратса пăрахрĕ, эпĕ те ытти çынсем пекех хăраса кайрăм. Вара эпир унпа калаçма тытăнтăмăр, вăл хăй ним те шарламарĕ, пирĕн çине кăна пăхса тăчĕ. Эпĕ ăна хам пурăнакан вырăна илсе çитертĕм те ун çинчен ыйтса пĕлме Вису çĕршывĕнче пурăнакансем патне çыру ятăм,– вĕсем пирĕнтен виçĕ уйăх каймалăх çĕрте.

Ман пата вĕсем ку çын йаджуджсемпе маджуджсен[56] йышĕнчен тесе пĕлтерсе çырса ячĕç: "Вĕсем пирĕнтен виçĕ уйăх каймалăх çĕрте. Пире вĕсенчен тинĕс уйăрса тăрать, мĕншĕн тесен вĕсем унăн леш çыранĕнче. Вĕсем выльăх евĕрлĕ, çарамас, çара уран, пĕр-пĕринпе выльăх пек ерĕшеççĕ. Аслă та хăватлă Аллах вĕсем валли тинĕсрен кунсерен пулă кăларса парать, вĕсем пурте хăйсемпе çĕçĕ илсе пыраççĕ те пулă пĕвĕнчен хăйпе хăйĕн килйышне çитмелĕх касса илеççĕ. Эхер те пĕри хăйсене тивĕçтерекен виçерен ытларах илсен, унăн хырăмĕ ыратма пуçлать, унăн килйышĕнчисен те хырăмĕсем ыратма пуçлаççĕ, хăшпĕр чух вăл вилсех каять, вĕсем те пурте вилсе каяççĕ. Вĕсем пулăран хăйсене кирлĕ чухлĕ касса илсен, пулли каялла çаврăнать те тинĕсе путать. Çапла, вĕсем куллен çакăн пек пурăнаççĕ. Вĕсемпе пирĕн хушăри тинĕс вĕсен пĕр енче пулать, вĕсене тепĕр енчен тусем хупăрласа тăраççĕ. Вĕсем ялан тухса кĕрекен хапхаран вĕсене Хӳме[57] уйăрса тăрать. Аслă та хăватлă Аллах вĕсене хăйсем пурăнакан çĕрсене кăларас тесен, вăл вĕсене Хӳме уçса парать, вара тинĕс типсе ларать, вĕсемшĕн пулăсем те пĕтеççĕ".

Унтан эпĕ елтĕпертен хайхи пысăк пӳллĕ çын çинчен ыйтрăм та, вăл çапла каларĕ: "Вăл ман патăмра пĕр вăхăт пурăнчĕ. Çапла та пулатчĕ: ун çине пĕр-пĕр арçын ача пăхсанах вилсе каятчĕ, йывăр хĕрарăм пăхсан – хырăмне пăрахатчĕ. Вăл пĕр-пĕр çынна ярса тытсассăн, ăна икĕ аллипе мĕн вĕлеричченех чăмăртатчĕ. Эпĕ, çакна курсан вара, хăй виличчен кĕтесси тесе ăна çӳллĕ йывăçран çирĕп сăнчăрпа çакрăм. Унăн шăмми-шаккипе пуçне курас тетĕн пулсан, вĕсене сана илсе кайса кăтартма пултаратăп",-терĕ. Эпĕ вара каларăм: "Аллах ячĕпе тупа тăватăп, çавна манăн питĕ курас килет",– терĕм. Çапла вара, вăл манпа пĕрле юланутпа пысăк вăрмана пычĕ, унта капмар йывăçсем ӳсетчĕç. Мана пысăк йывăç кутне илсе пычĕç, ун айĕнче çав çын пуçĕ. Эпĕ вара унăн пуçĕ пысăк катка пек иккенне куртăм, аяк пĕрчисем вара унăн пальмăн типнĕ пысăк тураттисем евĕрлĕ, унăн ура тунипе чавса шăммисем те çавăн майлах. Эпĕ çакăнтан тĕлĕнсе кайрăм та çаврăнса утрăм.

Елтĕпер Хĕлleче текен çĕртен Гаушерма (Джавшыр) текен шыв хĕррине куçрĕ те ун хĕрринче икĕ уйăха яхăн тăчĕ. Унсăр пуçне вăл ытти йăхсене те куçарасшăн пулчĕ, хăйпе пĕрле куçма хушса сăвар (сувар) текен халăх патне чĕнме ячĕ. Лешсем куçма килĕшмерĕç, вара икĕ ушкăна пайланчĕç. Пĕр ушкăнĕнче – тĕрлĕ йăх-ях, вĕсен пуçлăхĕ, темĕнле Вырăх текенскер, хăйне хăй тăрăн тесе пĕлтернĕ пулнă. Пăлхарсен елтĕперĕ вĕсем патне çын ячĕ те çапла калама хушрĕ: "Тупата, аслă та хăватлă Аллах мана ислам тĕнне пиллерĕ, тĕрĕс тĕне ĕненекенсене тытса тăма ирĕк пачĕ, эпĕ – унăн чури, çавă вăл – мана хушнă ĕç, кам мана хирĕç пырать, ăна эпĕ хĕçпе парăнтаратăп"! – теме хушрĕ. Тепĕр ушкăнĕ вара эскел йăхĕн тăрăнĕпе пĕрле пулчĕ. Эскелсен тăрăнĕ хальлĕхе ислам тĕнне йышăнман пулин те пăлхарсен патшине пăхăнса тăрать. Елтĕпер сăварсем патне çыру ярсан, кусем вăл шухăшласа хунинчен хăраса ӳкрĕç те пурте унпа пĕрле Гаушерма (Джавшыр) шывĕ еннелле кайрĕç.

Ку шыв сарлака мар – ун сарлакăшĕ пилĕк чике. Шывĕ кăвапа таран, вырăнăн-вырăнăн йĕтес шăмми таран, чи тарăн вырăнĕ – пӳ çӳллĕш. Унăн ик енĕпе йывăç ӳсет, йывăçсенчен чылайăшĕ хыр тата ытти те. Шывран инçех мар пушă çĕр сарăлса выртать, вăл çĕр çинчен çапла калаççĕ: унта тĕверен пĕчĕкрех, вăкăртан пысăкрах чĕрчун пурăнать. Унăн пуçĕ – тĕве пуçĕ пек, хӳри вара – вăкăр хӳри пек, пĕвĕ – мул пĕвĕ пек, ура чĕрнисем вăкăр ури чĕрнисем евĕрлĕ. Пуçĕ енчен унăн пĕр хулăн çавра майрака. Вĕçнелле вăл шĕвĕрĕлсе, сăнă вĕçĕ пек çинçелсе пырать. Вĕсен майраки тăршшĕ пилĕк чикĕрен виçĕ чикĕ таран, унтан вăрăмрах е кĕскерехххи те пур. Вăл питĕ ешĕл туратлă хурăн йывăç çулçипе тăранса пурăнать. Вăл, юланутçа курсан, ун патне васкать; юланутçă урхамахпа пулсан, вăл унран аран тарса хăтăлать; юланута хăваласа çитсен вăл юланутçа лаша хыçĕ енчен хăй майракипе лектерет те ăна сывлашăлла ывăтать, унтан каллех ăна хăй майракипе тытать те мĕн вĕлерипченех çапла тăвать. Лашана вара вăл нимĕнле сиен те тумасть. Унти çынсем ăна тытасшăн çын çӳремен çĕрте тата вăрманта йĕрлесе çӳреççĕ. Тытмашкăн çав чĕрчун çӳрекен тĕлте çӳллĕ йывăçсем тăррине хăпараççĕ. Апла тума наркăмăшлă ӳхĕсем илсе темиçе тĕкĕрç[58] пухăнаççĕ, хайхискер вĕсем хушшине лексен, ăна амантса вĕлеричченех сăнăпа переççĕ.

Тупата, елтĕпер патĕнче эпĕ Йемен ониксĕ[59] тĕслĕ виçĕ пысăк савăт куртăм, елтĕпер вĕсене çав чĕрчун майраки тĕпĕнчен туни çинчен пĕлтерчĕ.

Çĕршывра пурăнакансенчен хăшпĕрисем çак чĕрчун вăл киркитун тесе ĕнентереççĕ[60].

Вĕсем хушшинче эпĕ хĕрлĕ питлĕ пĕр çын та курмарăм, анчах вĕсенчен нумайăшĕ чирлĕ. Унта вĕсем чылай чухне вар ыратнипе вилеççĕ, вăл чир, чăнах та, кăкăр ачисен те пулать.

Вĕсем патĕнче мăсăльман вилсен,– акă унта Хорезм хĕрарăмĕ те пур, – ăна мăсăльмансен йĕркипе çăваççĕ. Унтан ăна пытарас тĕле çитиччен кӳмепе илсе каяççĕ, ун умĕн элемпе пыраççĕ. Унта çитсен ăна кӳме çинчен илеççĕ те çĕр çине вырттараççĕ. Унтан ун тавра йĕр туса çаврăнаççĕ те хăйне аяккарах илсе хураççĕ. Йĕр туса çаврăнсан ун картинче çĕре алтса анаççĕ, виле валли айккинелле татах шăтăк чаваççĕ те вилене унта пытараççĕ.

Вĕсем хăйсен виллисене те çакăн пек пытараççĕ. Хĕрарăмĕсем виле çинче йĕмеççĕ, анчах ун çинче вĕсен арçыннисем йĕреççĕ, вĕсем вăл вилнĕ кун пыраççĕ те юрта алăкĕ умĕнче чарăнаççĕ, сасăпа май пур таран йĕрĕнчĕк те тискер кăшкăрашаççĕ. Кусем– ирĕклĕ çынсем. Вĕсем йĕрсе пĕтерсен чурасем пыраççĕ, вĕсем явнă чĕн йатнă, хăйсем чарăнмасăр йĕреççĕ, хăйсен аякĕсене ӳт çинче чăпăрккапа çапнă хыççăнхи пек йĕрсем пуличчен çав чĕнпе çапаççĕ. Вĕсем кирек хăçан та виле юрти алăкĕ умне элем çакаççĕ. Вĕсем унăн хĕçĕ-çĕмренне илсе килеççĕ те унăн вилтăпри тавра хураççĕ. Икĕ çултан вĕсем элеме илеççĕ те хăйсене çӳçрен ывăçласа тытаççĕ...[61] Вилнĕ çын тăванĕсем, ятарласа чĕнсе, хăна пухаççĕ, çапла майпа вĕсем асăну вăхăчĕ иртнине пĕлтереççĕ, унран арăм юлнă пулсан вăл качча тухать. Пуçлăх пулнă çын вилсен çапла тăваççĕ-мĕн. Хура халăха илсен виле тĕлĕшĕпе пытарнă чух çак йала-йĕркерен хăшпĕрне çеç туса ирттереççĕ.

Сакалибсен патшин парăм пур, ăна вăл хазар патшине тӳлесе тăрать: хăй çĕршывĕнче килсерен кăш тирĕ парать. Эхер те сакалибсен çĕршывне хазарсен çĕршывĕнчи карап килсе çитсен, елтĕпер юланутпа тухать те карапра мĕн пуррине шутласа пăхать, вара пĕтĕм япалан вунă пайĕнчен пĕр пайне илет. Эхер те вырăссем (руссем) е ытти йăхсенчен мĕнле те пулин урăх çынсем чурасем илсе килсен, елтĕпер, чăн та, кашни вунă чураран пĕрерĕшне суйласа илет.

Сакалибсен патшин ывăлĕ хазарсен патши патĕнче аманатра[62] тăрать. Хазарсен патши патне сакалибсен елтĕперĕн илемлĕ хĕр пурри çинчен хыпар çитнĕ те, хазарсен патши çав хĕре çураçма янă. Ку вара пăлхарсен елтĕперĕн кăмăлне килмен, вăл çураçма килĕшмен. Лешĕ вара хăй иудей тата хайхи хĕр мăсăльман пулин те çар янă та хĕре вăйпа туртса илнĕ. Çапла вара, хĕр ун патĕнче вилнĕ. Вара хазарсен патши хăйне иккĕмĕш хĕрне пама ыйтнă. Çак хыпар сакалибсен елтĕперĕ патне çитсенех, куна та аппăшне илнĕ пек вăйпа илсе каясран хăраса, сакалибсен елтĕперĕ лешĕ киличчен хĕре хăйне пăхăнса тăракан эскел тăрăнне качча панă. Çакăн пирки, чăн та, сакалибсен елтĕперĕн халиф патне çыру çырма тата унран хăй валли хазарсен патшине хăратса тăракан карман ларттармашкăн пулăшу ыйтма тивнĕ.

Пĕррехинче эпĕ елтĕпертен çапла ыйтрăм: "Çĕршыву санăн пысăк, пурлăху иксĕлми, тупăшун та шучĕ çук, эсĕ халифран унăн хисепсĕр укçипе карман ларттарма пулăшу мĕн сăлтавпа ыйтрăн?"– терĕм. Вăл вара çапла каларĕ: "Эпĕ Ислам çĕршывĕ телей кӳрессе шантăм, унăн пурлăхĕ тĕн йĕрки хушакан мелпе пухăнса пырать. Çав сăлтавпа карман пирки пулăшу ыйтрăм та ĕнтĕ эпĕ. Тупата, эпĕ хамăн пурлăхпа, ылтăнпа та кĕмĕлпе, карман тăвас тенĕ пулсан, ку вăл мана, паллах, йывăр пулас çукчĕ. Тупата, эпĕ тĕрĕс тĕне тытакансен пурлăхĕн укçи-çарминчен пил илесшĕнччĕ, çавăнпа унран çапла ыйтрăм",– терĕ...

## ĂНЛАНТАРНИ

[1] Çак çынсен... Кунта пушкăрт йăхĕсем çинчен сăмах пырать.

[2] Тутар АССРĕн Чистай районĕнче çак юханшыв ятне çывăх Яв-çырми юханшыв ячĕ тĕл пулать (В. Ахун пĕлтернĕ).

[3] *Сакалиб*. Ку сăмахпа автор "çурçĕрте пурăнакан халăх", "славян", "пăлхар" сăмахсен пĕлтерĕшĕпе усă курать.

[4] *Фарсах* – çул тăршшĕ виçи (6-7 км).

[5] *Дирхем* – арабсен вăтам ĕмĕрсенчи кĕмĕл укçи.

[6] *Виççĕр вуннăмĕш çул*. Хиджра календарĕпе кăтартнă вăхăт, Григориан календарĕн 922-мĕш çулĕпе пĕр килет.

[7] *Мухаррем уйăхĕ* – май уйăхĕ.

[8] *Джурджани* – Гургандж (Кивĕ Ургенч, хула ячĕ).

[9] Ç ы р ă в а вуланин е... Кунта Багдад халифĕ ал-Муктадир пăлхар патши патне янă çыру çинчен сăмах пырать.

[10] *Елтĕпер* – Пăлхар патшалăхĕнчи чи аслă пуçлăх титулĕ. Ку сăмах "эл" (ял, çĕршыв) тата "тĕпер" (пуçлăх) сăмахсенчен пулса кайнă.

[11] *Савад* – халиф çумĕнчи аслă сановниксен хура тĕслĕ официаллă тумĕ.

[12] *Тюрбан* – Хĕвелтухăçĕнчи халăхсем пуçа çыхакан чалма.

[13] *Визирь* – Хĕвелтухăçĕнчи мăсăльман тĕнлĕ хăшпĕр патшалăхсенчи министр, аслă пуçлăх.

[14] *Назир ал-Харами* – ал-Муктадир халифа чи çывăх çынсенчен пĕри.

[15] Сусан элче... Кунта Багдадран Атăл тăрăх килнĕ элчĕ (посол) çинчен сăмах пырать.

[16] Мешхед алçырăвĕнче ку вырăнта виççĕмĕш тăрăн çинчен каланине сиктерсе хăварнă, вăл вырăн ытти алçырусенче те тĕл пулмасть.

[17] *"Сăджув"*. Ку сăмахăн этимологийĕ паллă мар. Иккĕмĕш сыпăкне "шыв" тесе вулама пулать.

[18] *Минбар* – мечĕтри кĕлĕ каламалли вырăн (кафедра).

[19] *Хутба* – проповедь.

[20] *Имам* – мăсăльмансен аслă мулли.

[21] *Пихампар* – пророк.

[22] *Хатиба* – кĕлĕ калакан.

[23] *Динар* – Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсен вак укçи.

[24] *Христианин* (ал-Фадл ибн-Муса Христианин) – халифат финансĕн пуçлăхĕн çурт-йĕрне тытса тăраканĕ.

[25] Хама пăхăнтарнă иудейсенчен... Кунта Хазар патшалăхĕн пуçлăхĕсем çинчен сăмах пырать.

[26] Х а м ă н ç ы н... Кунта пăлхар патшин халиф патне янă элчи Абдаллах ибн-Башту Хазарин çинчен сăмах пырать.

[27] Ку çынсене... Кунта Багдадран килнĕ элчĕлĕхĕн ытти çыннисем çинчен сăмах пырать, Алмуш вăл шута ибн Фадлана кĕртмест.

[28] Ыттисем арабсем мар. Елтĕпер ибн Фадлана кăна чăн-чăн араб вырăнне хурса калаçать.

[29] *Вĕрентекен* – ал-Муктадир халиф.

[30] *Муэдзин* – минарет çинчен кĕлĕ вăхăчĕ çитни çинчен пĕлтерекен.

[31] *Икама* – кĕлле чĕнсе калани.

[32] *Муджтехидсем*... Кунта тĕнпе саккунсем çинчен вĕрентекенсем çинчен сăмах пырать.

[33] Пире çапса хуçрĕ. Оригиналта: "Пире йĕвен тăхăнтартрĕ" тенĕ.

[34] "Тӳрĕ кăмăллă Абу-Бекр... Кунта 632-634 çулсенче халифра ларнă Абу-Бекр çинчен сăмах пырать. Ăна халăх хушшинче "питĕ тӳрĕ кăмăллă", "хăй сăмахне тытакан" тесе каланă.

[35] "Тӳпе хĕрри хĕп-хĕрлĕ пулчĕ". Кунта тӳпере çурçĕр шевли выляни çинчен сăмах пырать.

[36] *Азан* – кĕлле пыма йыхăрни.

[37] *Вису* (весь) – Çурçĕрте Шурă кӳлĕ çывăхĕнче пурăннă халăх.

[38] Атăл (Атл) текен çĕр е... Кунта Атăл шывĕ çинчен сăмах пырать. Ку вырăна ибн Фадлан малтан хăй унта çитсе куричченех, çынсем каланă тăрăх çеç çырса хунă пулас.

[39] Кунта сăмах хурăн çырли çинчен пырать.

[40] Автор "хĕр" тата "хир" сăмахсене пăтраштарса ăнлантарнă, тĕрĕссипе "хир улми" тесе каламалла.

[41] Кунта хурăн турачĕсем усăнса тăни çинчен сăмах пырать.

[42] *Кăш* – соболь.

[43] *Сезам* – çу тухакан ӳсентăран (кунжут).

[44] *Хăрхăм* – чура-хĕр.

[45] *Çăкăн* – кукленсе пуç тай.

[46] *Синдиец* – Индири Синд тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ çын.

[47] 37-мĕш ăнлантарăва пăхăр.

[48] Историре хазарсен пĕр хули "Беленджер" ятлă пулни паллă. Ибн Фадлан курнă çынсем çав хуларан арабсенчен тарса килнĕскерсем пулма пултараççĕ.

[49] Ибн-Фадланăн ятне алçырусем пурте Ахмед тесе асăнаççĕ. Анчах мăсăльмансемшĕн çак икĕ ят пĕр пек пĕлтерĕшлĕ.

[50] *Сура* – мăсăльмансен тĕп кĕнекин "Коранăн" сыпăкĕ (çаврăмĕ).

[51] *Хĕлleче*. А. П. Ковалевский ăнлантарнă тăрăх, юркăн (куçса çӳрекен) пăлхарсен хĕл каçма чарăнса тăнă вырăнĕ. Вăл "хĕл" сăмахранах пулнă. Ку сăмахăн хальхи варианчĕ "Хĕлеç" пулма пултарать, вăл Чăваш АССРĕн Красноармейски районĕнчи ял ятне пĕлтерет, ку ял пăлхарсен Çавал çинчи Пăлаху хулашне çывăх ларать.

[52] Асăннă кӳлĕсене Çутă кӳлĕ, Курăш кӳлли тата Атман кӳлли тесе калаççĕ, вĕсем Атăла юхса кĕрекен Вăта тата Пасна шывĕсем хушшине вырнаçнă.

[53] Текин ку хыпара ибн Фадлана Багдадрах каласа кăтартнă. Хăй вăл унччен пăлхарсем патĕнче те пулса курнă.

[54] М а н ă н "ч и к е п е"... Кунта пăлхарсем хушшинче çирĕплетнĕ чике тăршшĕ çинчен сăмах пырать.

[55] Чĕрçи чикерен... Оригиналта "чĕрĕкрен" тесе çеç каланă.

[56] Йаджудсемпе маджудсем – халапра асăнакан гог тата магог халăхĕсен çыннисем.

[57] Хӳме... Кунта халапра Александр Македонский çурçĕрте ылтăнпа кĕмĕлтен хывтарнă тесе шутлакан хӳме çинчен сăмах пырать. Кун йышши халап тусем çинчен çӳрекен сăмахюмахран тухса кайнă.

[58] *Тĕкĕрç* – ухăпа перекен.

[59] *Оникс* – çурма хаклă йышши чул.

[60] Киркитун тесе ĕнентереççĕ... Киркитун – носорог. Кунта авал ку тăрăхра пурăннă чĕрчунсен шăммисем çинчен сăмах пырать пулас, ибн-Фадлан вăхăтĕнче Атăл тăрăхĕнче носорогсем юлман.

[61] Çӳçрен ывăçласа тытаççĕ... Ку вырăнта малалла каланине Мешхед алçырăвĕн редакторĕ сиктерсе хăварнă пулас, унта пĕр-пĕр йăла-йĕркене сăнласа пама пултарнă.

[62] *Аманат*– саклат, пĕр-пĕр çынна салукра тытни.

**Арсений**
**ТАРАСОВ**

# Мунча кунĕ

## Икĕ пайлă драма

**ПЬЕСĂРИ СĂНАРСЕМ:**

ВИТАЛИЙ – Раççей çарĕн офицерĕ, капитан
ГЕОРГИЙ – унăн пиччĕшĕ
ПРАСУК КАРЧĂК – вĕсен амăшĕ
МИСАИЛ – кӳршĕ ачи, пуçран айванскер
ЛЕША – ялти çамрăк учитель
МАРИША – унăн мăшăрĕ
СОНЯ – Георгийĕн çамрăклăхри юратăвĕ
ТАРЬЕ АППА – Леша амăшĕ

***Пьесăри истори пĕтсе пыракан ялта хальхи вăхăтра пулса иртет.***

**ПĔРРЕМĔШ ПАЙ**

**Пĕрремĕш курăну**

***Кил карти. Пĕрре пăхсан, питĕ кăмăллă курăнать: сипсимĕс курăк ашкăрса ӳсет. Çын ури таптаман çĕрте çеç вăл çапла ирĕккĕн ӳсме пултарни çинчен шухăшласа илетĕн те ку киленӳ туххăмрах сĕвĕрĕлет, чунра хурлăх çуралать.***

***Хуралтисем самаях кивĕскерсем. Çĕрĕшнĕ хăмасем хушшинче тĕл-тĕл çутăраххисем – хальтерех çапнисем – курăнкалани кăна кунта пурнăç çапах та пачах сӳнсе ларманнине палăрать. Тата хутран-ситрен çак таврашрах автансем авăткалани ку ӳкерчĕке кăштах чĕрĕлĕх кӳрет.***

***Хĕвел тухнă вăхăт. Çатан картан тăкăрлăк енче, улахрах вырăнта, пӳ янă арçын ачан мĕлки курăнса каять. Ыйхинчен вăрансах çитменни палăрать - чăмăрĕпе куçне сăтăркалать, карăнкаласа илет. Унтан карта çумне лăпчăнса хушăкран пăхма пикенет. Ку Мисаил пулчĕ.***

***Алăк чĕриклетет. Тайăларах панă пусма картлашки çинче Прасук карчăк курăнать. Кăштăртатса картиш варрине иртет, тухакан хĕвел енне тăрса кĕлĕ пуçлать.***

ПРАСУК КАРЧĂК. Эй, ырă Турă! Çӳлти Турă!
Пире пулăшакан Турă,
пирĕн хута кĕрекен Турă,
пире шеллекен Турă,
пире çылăхран çăлакан Турă!
Тав сана каç выртса канлĕхне панăшăн,
ырлăх парса, сывлăх парса
çак тĕнчене тепĕр хут курма пӳрнĕшĕн.
Эй, ырă Турă! Çӳлти Турă!
малашне те ырлăх парса,
кун кунлама кун пар,
çĕр çĕрлеме çĕр пар,
ĕмĕр ĕмĕрлеме ĕмĕр пар.
Эй, Турă! Ырă Турă! Çӳлти Турă!
Пире пулăшакан Турă,
пирĕн хута кĕрекен Турă,
пире шеллекен Турă,
пире çылăхран çăлакан Турă!
Аминь! Аминь! Аминь!

***Мисаил та картаран хăпать. Аллисене тӳпенелле кăнтарать. Пĕр авăк хытса тăрать, унтан хĕрӳленсе кайса кĕлĕ тума тытăнать: аллисемпе кăнтаммăн хăлаçланать, авăна-авăна пуç çапать.***

***Хĕрсе, темле пуç çухатнă манер кĕл тăваканскер, Прасук карчăк пӳрте каялла кĕрсе кайнине те, унăн ывăлĕ Георгий алкум алăкĕ умĕнче тăп хытса тĕлĕнсе сăнанине те асăрхамасть. Унтан сасартăках лăш кайнă пек пулать, вара тин Георгие курать. Ун енне çиллессĕнрех куç ывăтать те çаплах кăмăлсăррăн пăрахса утать.***

***Георгий пахчана кĕрсе каять.***

***Картлашка çинче Виталий курăнать. Пилĕк таран çарамас. Тĕреклĕ пӳ-си. Пĕрхĕнсе тăракан сывлăх. Тутлăн карăнса анаслать.***

ВИТАЛИЙ. Здорово, хĕвел! Çĕнĕ кун пуçлас терĕн? Пуçла. Кăмăллă кун туса пар пире. Честь имею представиться: капитан бронетанковых войск Российской Федерации Виталий Орлов! Здрави желаем! Здравие желаем, Эрĕмкасси ялĕ! *(Тата та хыттăнрах кăшкăрса)* Здрави желаю, тăван тавралăх! Капитан бронетанковых войск Российской Федерации Виталий Орлов приветствует вас! Здрави желаю, çуралнă кĕтес! Шуйттан илесшĕ, хăçантанпа курман сана? Мĕн чухлĕ тунсăхланă эпĕ саншăн! Здрави же-е-ла-ем!!!

***Пĕтĕм тавралăх янраса тăрать: Здрави желаем-м!..***

***Виталий çапла янрашнă вăхăтра тăкăрлăкра каллех Мисаил курăнать, карта çумне лăпчăнса Виталие тĕсет.***

***Пӳртрен Прасук карчăк кăштăртатса тухать.***

ПРАСУК. Темĕн сиксе тухман-тăр вĕт? Мĕн шăв-шавĕ ир-ирех?

ВИТАЛИЙ *(çаплах вылянса)*. Здрави желаем, анне! Капитан бронетанковых войск Виталий Орлов приветствует Вас! Ура! Ура! Ура! *(Амăшне ыталаса çупăр-*

*лать.)* Эх, анне, мĕнле ырлăх кунта! Тĕлĕксенче тĕлленеттĕм вĕт хамăр яла, киле! Здрави желаю, Эрĕмкасси ялĕ! Здрави желаю, тăван ен! Здрави желаю, еклмн и так далее и тому прочее! Здрави желаю-ю-ю!!!

***Картишне Георгий пырса кĕрет.***

ГЕОРГИЙ. Эсĕ, мĕн, ирех аташан? Яла çывăрма памастăн?

ВИТАЛИЙ. Çитет çывăрса! Раççейĕн тахçанах вăхăт вăранма! Çапла çывăрсах вăрлаттарса ячĕ ĕнтĕ хăйĕн мĕнпур пурлăхне. Да-а... пĕтерчĕç Раççее. Эх, Рассея, Рассея, азиатская сторона!.. Ну, ничего, вăрататпăр эпир Раççее. Вăрататпăр та ура çине тăрататпăр! *(Карташ варринерех иртсе физзарядка тума пуçлать. Ачалăхран юлнă турникрен çакăнасшăнччĕ те – юписем çĕрĕшнĕ-мĕн.)* Раççей духĕ вăл - ялта. Провинцире! Ак çакăнта! Хуласем тахçанах америкăланса, европăланса кайнă.

ГЕОРГИЙ. Санăн депутата каймалла.

ВИТАЛИЙ. Ничего, ниче! Яла таврăнатăп та Раççее ура çине тăратма пуçлатăп. Унччен чăтать. Раççей кĕтме те, чăтма та пĕлет вăл. (*Хĕрсе кайса, темле ытлашшипех çиллессĕн физзарядка тума тытăнать.)* Çапла-и, анне?

ПРАСУК. Чăтатпăр ĕнтĕ. Мĕн тăвăн? Çурт хупăнтăр-им-ха? Чăтасах пулать. Пурнăçа каялла таврăнтараймастăн вĕт. Чăтатпăр та кĕтетпĕр, кĕтетпĕр те чăтатпăр ĕнтĕ.

ВИТАЛИЙ *(физзарядка тунă майăнах)*. Темех мар, нумаях юлмарĕ ĕнтĕ. Тепĕр пилĕк çул анчах.

ПРАСУК. Пилĕк кун та пилĕк эрне çеç мар çав вăл пилĕк çул. *(Хăй тĕллĕнрехххĕн)* Халь маншăн кашни кунĕ хăй ĕмĕр тăршшĕ манер те.

***Прасук карчăкăн чунĕ хурланса килчĕ пулмалла - пăрăнса картлашка еннелле кăштăртатать.***

***Кăштахран тем шухăша путса тăрать, унтан каялла таврăнать, кăштах тайкаланса утать.***

ПРАСУК *(Георгие)*. Эс, Георги, ку хăлаçланаканнипе кăштах асăрхануллă пул-ха. Тем курса тăрăн. Ӳсĕр çынна пĕлейместĕн.

ГЕОРГИЙ. Ӳсĕр мар вăл.

ПРАСУК. Мĕнле ӳсĕр мар пултăр? Епле хăлаçланать те! Куратăп вĕт! Ăçтан йăтăнса анчĕ-ха вăл пирĕн пата? Лăпкăн кăна пурăнаттăмăр. Шухăш тупса пачĕ пире.

***Виталий амăшĕн калаçăвне илтсе физзарядка тума чарăнать, йывăç каски çине ларса итлеме пуçлать.***

ГЕОРГИЙ. Анне, эс пăтранатăн. Виталий вĕт вăл. Хăвăн ывăлу. Кĕçĕнни.

ПРАСУК. Ман тата та пурччĕ-им-ха ывăлсем? Астумастăп çав. Курман та ĕнтĕ. Витали?.. Витали... Ара, вăл вăрçăра вилнĕ вĕт-ха пирĕн. Пĕтĕм ял калаçрĕ те ун чух – астăвап ĕнтĕ. Лайăхах астăвап. Эп кашни кун çурта лартатăп вĕт ăна асăнса.

ГЕОРГИЙ. Вилмен. Вăрçăра пулнă кăна. Ав чĕрĕ. Сывах. Салтакра халь. Офицер. Ĕнер çĕрле килсе çитрĕ. Канма. Сана курма. Манăçрăн-им? Атя, санăн кăштах выртса илес пулать пуль – тăна кĕрĕн.

***Виталий амăшĕпе Георгий патне пырать.***

ВИТАЛИЙ. Виталий эпĕ, анне, Виталий. Ак пăх, *(пилĕкне кăтартса)* ман кунта турпалли пур. Ак, ак, куртăн-и?

ПРАСУК (*пăхать*). Э-э... *(Туххăмрах тăна кĕрсе)* Вăт çапла аташатăп çав, пăтранап хушăран. Пăтранатăп. Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ манăн, мĕн тăвас? Ĕмĕрĕ иртнĕ, ăсĕ кайнă, кунĕ кăна юлнă. Епле те пулсан пурăнса ирттерес пулать ĕнтĕ *(çапла мăкăртаткаласа пӳрте кĕрсе каять.)*

***Георгийпе Виталий ун хыççăн пăхса юлаççĕ.***

ВИТАЛИЙ. Мĕн, анне пăтранкалать-им?

ГЕОРГИЙ. Пулкалать хушăран.

ВИТАЛИЙ *(ăшталанса)*. Екламн! Тăван анне уйăрайми пулнă! Ăçтан паллатăр ĕнтĕ вăл? Ултă çул анне патне килмен. Мĕн, килме май пулман-им хамăн? Отпусксенче пулнă вĕт. Пурнап та вара! Анне патне килейместăп пулать. *(Картиш тăрăх кума пуçлать.)* Раççей пирки шухăшлатпăр: мĕнле шăпа кĕтет ăна, мĕнле тавăрмалла ăна унчченхи хăватне? Аннесем пирки пуçра та çук. Айванлăх! Мĕнле чунсăрланса кайнă иккен эпир.

***Георгий пусăрăнчăклăн пахчаналла иртсе çухалать.***

***Виталий сасартăках урса кайса физзарядка тума пуçлать.***

***Кăштахран хăйне карта хушшипе сăнакан Мисаила асăрхать.***

ВИТАЛИЙ *(хуçкаланма чарăнса)*. Эсĕ Мисаил-и? Здорово! Çавах пулан пуль? Мĕнле пурăнан? Сиккипе-и? Ха! Еплерех каччă пулса кайнă эс. Гардемарин! Хамăн батальона илсе каймалла чтоль сана? Пыратни? Кил-ха кунта!

***Мисаил асăрханчăклăн хӳмерен хăпать.***

ВИТАЛИЙ. Эсĕ, мĕн? Мана манса та кайнă-им-мĕн? Виталий тетӳ пулатăп вĕт эп. Виталий тетӳ. Кил кунта, здороваться тăвар.

***Мисаил вырăнтан тапранмасть.***

ВИТАЛИЙ. Ну уж... Если гора к Магомету не идет, то Магомет идет к горе. *(Мисаил енне утать.)*

***Мисаил сисчевлĕн чакса тăрать.***

ВИТАЛИЙ. Эс, мĕн, манран шикленетĕн-им? Да ладно, тивместĕп эпĕ сана. Мĕн хăран? Ах, шел, шăпăрлан ачи, ăнланаймастăн эс мана. Ну кил кунта! Кил! Сан мыскарусене аса илсе сахал мар култарнă эп лере хамăн служаксене.

***Виталий карта урлă ярт сикет те çаплах тăп хытса тăракан Мисаил енне алă тăсать.***

ВИТАЛИЙ. Ну-у, давай, здороваться тăвар. Шарт пар!

***Мисаил Виталий аллине капах ярса тытать те ярт! туртать, лешĕ сиссе-ăнланса иличчен çĕр çине хап! çавăрса çапать. Унтан шăлавар кĕсйинчен çăвар купăс кăларса кĕвĕ каласа çав тери кăмăллăн пăрахса утать. Çаврăнса та пăхмасть.***

ВИТАЛИЙ *(кĕтмен çĕртен пулнипе анраса кайнăскер)*. Еклмн!.. Фу!.. Опрст!.. Ну-и упа!.. Ну, что, капитан бронетанковых войск эРФэ, получил боевое крещение? Ха-ха-ха!..

***Виталий пĕчĕк ачалла курăк çинче йăвалана-йăвалана ахăлтатса кулма пуçлать. Антăхса кайсах.***

### Иккĕмĕш курăну

***Велосипедпа Мариша пырса тухать. Ахăрашса выртакан Виталий айккипе питĕ асăрханусăр пăрăнса иртме тăрать.***

***Виталий те Маришăна асăрхать.***

ВИТАЛИЙ *(çаплах ахăрашма чарăнаймасăр)*. Здрасьте! Сывлăх сунап!

МАРИША. Здравствуйте. Сире, мĕн... тытамак тытса пăрахрĕ-им?

ВИТАЛИЙ. Тытамак? Ха-ха-ха!.. Точнă! Так точнă - тытамак. Ха-ха-ха!..

МАРИША. Эсир хырăм çине çаврăнса выртăр. Е хăяккăн. Çăвара кашăк хыпмаллаччĕ пуль ун пек чух.

ВИТАЛИЙ. Кашăк? Мĕн тума?

МАРИША. Сурчăкпа е сĕлекепе чыхăнса ларасран. Çавнашкал илтнĕ.

ВИТАЛИЙ *(вылянарах)*. Точнă! Так точнă! Эпĕ те çавнашкалах илтсе. Кашăкĕ вырăнне çак патак хуçăкне çыртсан мĕн пулать? Юрать-и? *(Виталий турат хуçăкне çăвара хыпать те ашкăнса йытă евĕр хăртлатма пикенет.)*

МАРИША. Э-э, эсир ултавçă иккен. Эпĕ сире чăнласах тытамак тытса пăрахнă тесе.

ВИТАЛИЙ. Сирĕн мана тытамак тыттарасах килет-тĕк, эпĕ хирĕç мар - тархасшăн. *(Палт кайса ӳкет те тапкаланма пуçлать.)* Ă-ă!.. Ой-ой!..

МАРИША. Пĕрре те кулăшла мар. Эпĕ вăл сирĕн Чечня хыççăн тесеччĕ.

ВИТАЛИЙ *(тăруках ашкăнма чарăнса)*. Чечня вăл Чечня, это - святое. Каçар. Просто ман кăмăл лайăх паян – чунра тапса тухассăн туйăмсем, эп ирĕлетĕп ерипен, хуллен, тута çинчи черчен юр пĕрчилле. Эпĕ тăван яла таврăннă! Итле-ха, ярăнтар-ха велосипедупа. Тахçанхи ĕмĕт. Ача чухне ярăнса тăранасси пулмарĕ. Ыттисене питĕ ăмсанаттăм.

МАРИША. Мĕн, сирĕн велосипед пулман-им?

ВИТАЛИЙ. Çук çав. Анне туянса памарĕ. Укçи хĕсĕкрех пулнă пуль ĕнтĕ. Ытти ачасеннипе пан улмилле ярăнаттăм.

МАРИША. Мĕнле вăл пан улмилле?

ВИТАЛИЙ. Эпĕ вĕсене пан улми, вĕсем мана – велосипедне. Пилĕк пан улми – çур сехет. Эп сире те пан улми илсе тухса пама пултаратăп.

МАРИША *(шухăшлăнрах)*. Ача кăмăлне хăварни вăл япăх. Ыттисен пур, санăн çук пулсан вăл кĕвĕç чунлă çитĕнме пултарать. Хамăн ача пулнă пулсан, мĕн ыйтнине йăлт илсе параттăм эпĕ.

ВИТАЛИЙ. О, ача пулассисем сирĕн малта-ха. Качча каятăр та – пулать те. Пĕрре кăна та мар, сак тулли пулать: *(вылянса шутлама пуçлать)* пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăват...

МАРИША *(Виталие чарса, сивлеккĕн)*. Качча кайнă эпĕ. Ĕнтĕ тăваттăмĕш çул. Пулмасть çав.

ВИТАЛИЙ. Каçарăр, эппин эпĕ вырăнсăр шӳтлерĕм. Ан кулянăр, пулать - эсир халь çамрăк-ха. Велосипедăрпа ярăнтаратăр-и? Пĕрер çаврăм хăть.

МАРИША. Тархасшăн. *(Велосипедне Виталие тыттарать.)*

ВИТАЛИЙ. Çакăн пек лармаллаччĕ-и-ха? Çирĕм çул та пуль ларса курман. Ĕрĕхсе каймасть-и?

***Виталий велосипедпа ярӑнма пуҫлать. Пӗчӗк ача евӗрех чӑвлатать, улать.***

***Карта леш енче каллех Мисаил курӑнать. Сӑнать.***

ВИТАЛИЙ *(Мариша умӗнче чарӑнса).* Атя лар. Леҫсе яратӑп. Эпӗ такси пулатӑп, эсӗ - манӑн пассажир. Ытти чухне пулсан, паллах, эпӗ самаях хаклӑ ыйтӑттӑм, ну сана, хитре хӗрачана, – тӳлевсӗрех.

***Мариша велосипед ҫине хӑпарса ларать.***

ВИТАЛИЙ. Эсӗ кам хӗрӗ пулатӑн вара?

МАРИША. Мӗнле "кам хӗрӗ"?

ВИТАЛИЙ. Ну ӗнтӗ... Ҫумӑр ҫунипех кӑмпа пек шӑтса тухман вӗт-ха.

МАРИША. А-а... Эпӗ кунтисем мар.

ВИТАЛИЙ. Капла тата та кӑсӑклантарса ятӑн-ха эс. Ӑҫта ҫуралма пултараҫҫӗ вара ҫакнашкал селӗм хӗрсем?

МАРИША. Самара облаҫӗнче.

ВИТАЛИЙ. Точнӑ! Ӑҫта курнӑ сӑн-ха тетӗп. Точнӑ – Самара. Эпӗ унта службӑра пулнӑ. Кучумра. Илтнӗ-и?

МАРИША. Пирӗнтен аякрах мар вӑл. Манӑн аппа унта Потапов лейтенанта качча тухнӑ. Тен, пӗлетӗр те?

ВИТАЛИЙ. Потапов?.. Ҫук пуль. Эпӗ унта пӗр 8 ҫул каяллах пулнӑ. Пирӗн тӑрӑха вара мӗн шыраса килмелле пулчӗ?

МАРИША *(вылянараххӑн).* Паллах, телей.

ВИТАЛИЙ. Вара? Тупрӑр-и?

***Мариша хулпуҫҫине сиктеркелет.***

ВИТАЛИЙ. Ӑнланмарӑм.

МАРИША. Тепӗр чух тупнӑ пек, тепӗр чухне... *(Каллех хулпуҫҫине сиктерет.)*

ВИТАЛИЙ. Пулать ун пекки: тепӗр чухне хӑв та пӗлместӗн – те телейлӗ, те телейсӗр эсӗ. Паян вара эпӗ пӗлетӗп, точнӑ! – телейлӗ! Ытлашшипех те. Кирлех пулсан, сана та пама пултаратӑп. Ыйт. Паратӑп. Ыйт! Ыйт, именсе ан тӑр. Ҫак самантра эпӗ халь ҫав тери ырӑ ҫын, хамӑн телейпе кирек кампа та пайлашма хатӗр. Эсӗ эппин пирӗн ял кинӗ пулатӑн. Камсен?

МАРИША. Бадановсен.

ВИТАЛИЙ. Владимир Кирилловичсен чтоль? Кам пур вара вӗсен сан пеккине тивӗҫҫи? Толикӗн арӑмне курнӑччӗ тахҫан.

МАРИША. Леша. Вӑл – кӗҫӗнни.

ВИТАЛИЙ. Леша? Ҫук, астумастӑп.

МАРИША. Шкулта ӗҫлет вӑл. Биолог.

ВИТАЛИЙ. Вара мӗнле, лайӑх вӗрентет-и? Владимир Кириллович лайӑх учительччӗ.

МАРИША. Ачасем юратаҫ.

ВИТАЛИЙ. Эсӗ, паллах, тата та ытларах юрататӑн. Самара тӑрӑхӗнченех кунта ҫити килме кӑмӑл тунӑ пулсан, паллах. Впрочем, ку вӑл сирӗн личное дело. Так, мӗнлерех пулать пирӗн маршрут?

МАРИША. Хӗрлӗ вар таран. Малалла эпӗ хамах.

ВИТАЛИЙ. Ӑҫта ҫити вара вӑл "малалла эп хамах" тени? Унтах ҫитерме пултаратӑп. Танки грязи не боятся!

МАРИША. Малалла – юрамасть.

ВИТАЛИЙ. Понял. Шлагбаум. Малалла – тăшман позицийĕ. Заминировано. Ну, хытăрах тыт эппин: эпĕ хăвăртлăха юрататăп. *(Каллех ашкăнса газ хушнă пек тăвать.)* Чăв-чăв! Твинь! Твинь! Чăв!.. Пи-пип! Камăн ăçта каймалла, пирĕн инçе каймалла!. Чăв-в!..

***Мариша та хаваслă. Вăл та пипиплетет, чăвлатать.***

***Виталипе иккĕшĕ çапла ачалла ашкăнса ярăнса кайса курăнми пулаççĕ.***

**Виççĕмĕш курăну**

***Мисаил хăйĕн вăрттăн кĕтесĕнчен тухать. Пĕр вăхăт велосипедпа ярăннă пек хăтланма пăхать - ниепле те пуласшăн мар. Чăвлатать, хăртлатать. Ку вăйă ăна астарсах ячĕ курăнать.***

***Леша чупса килет.***

ЛЕША. Мисаил! Леш арçынĕ Мариша аппуна ăçта лартса кайрĕ? Мĕн каларĕ? Мариша аппу мĕн терĕ? Ма унпа ларса кайрĕ вăл?

***Мисаил хăй чĕлхипе темĕн ăнлантарасшăн: велосипедпа ярăннă пек тăвать, чăвлатать, пипиплетет, улать. Унтан велосипедне вăрçма тытăнать.***

ЛЕША. Эх, санпа! *(Алă сулать те хĕремесленсе Маришăпа Виталий кайнă еннелле чупать.)*

***Соня пырса тухать. Хĕрĕнкĕ пулни палăрать.***

***Мисаил Соньăна асăрхать те шухăшĕнчи велосипедпа айланма чарăнать. Питĕ тарăхуллăн лач! сурать.***

***Соня Мисаила кăчăк туртса чĕнет. Лешĕ пĕр вăхăт пырас-и, пырас та мар-и тенĕн аптракаласа тăнă хыççăн карта патне утать.***

СОНЯ. Кивçен пар-ха мана, Мисаил. Эпĕ сана часах тавăрса паратăп. Улталамастăп, ак кур. *(Сăхсăхать.)* Эсĕ лайăх ача вĕт, Мисаил. Тархасшăн. Соня аппун чунĕ ыратать. Эсĕ ăнланатăн вĕт манăн чун ыратнине? Паратăн-и?

***Мисаил хăй чĕлхипе тарăхарах мăкăртаткалать.***

СОНЯ. Эх, Мисаил, эсĕ те ăнланасшăн мар манăн чун ыратнине. Эсĕ те хĕрхенесшĕн мар мĕскĕн Соня аппуна. *(Йĕме пуçлать.)*

***Мисаил çаплах кăмăлсăртараххăн мăкăртаткаласа măйĕнчен çакнă хутаçран ывçăпа укçа кăларать, шутланă пек тăвать, унтан Соньăна тыттарать. Темиçе укçине каялла илсе хутаçа ярать.***

СОНЯ. Эпĕ ыранах тавăрса паратăп. Ыранах. Эсĕ ан пăшăрхан. Соня аппу улталамасть вăл. Ыранах парать.

***Георгий пырса тухать. Вут-шанкă йăтнă. Соньăна курать те тăп хытать вăхăтлăха, унтан мунчана кĕрсе каять. Вут-шанкине хурса тухать. Йывăррăн каска çине ларать. Пирус тивертет.***

СОНЯ. Салам, Георгий. *(Йӳççĕн куларах)* Эсĕ мана сывлăх та сунасшăн мар курăнать. Çапла çав вăл, тăхăнса кивелнĕ тумтире кăларса пăрахаççĕ. Вăл тек кирлĕ мар.

ГЕОРГИЙ. Кун пирки калаçнă эпир санпа, Соня. Пĕрре кăна та мар. Эсĕ каллех ӳсĕр.

СОНЯ *(вылянарах).* Тахçан эп хĕрĕнкĕрех пулни сана килĕшетчĕ те. Ху та тутлă эрехпе хăналаттăн. Халь, мĕн, йĕрĕнтерет-им? Паллах...Эс хула çынни. Пысăк çын. Журналист. Арăму та – интеллигенци. Эпир вара кам? Ял çынни кăна. Тата... ĕçсе супнă хĕрарăм. Эпир ĕç тума кăна кирлĕ. Ĕçне тунă та кăларса пăрахнă, çапла-и? Турăçăм, мĕн калаçатăп эпĕ? Мĕн калаçатăп? *(Сасартăках Георгий умне чĕркуçленет.)* Каçар, каçар, Георги. Каçар. Мĕн хăтланнине хам пĕлместĕп. Эпĕ чăнах та халь йĕрĕнчĕк. Каçар...

***Картлашка çинче Прасук карчăк курăнать. Соньăпа Георгий ăна асăрхамаççĕ.***

ГЕОРГИ. Соня, каçар та, анчах та манăн санпа, çакнашкалскерпе, калаçма халăм пĕтрĕ. Эпĕ сана текех итлеме пултараймастăп. Тĕрĕссине каланăшăн ан кӳрен те, мана ку йăлтах йăлăхтарчĕ.

***Георгий тăрса кайма тăрать, Соня та сиксе тăрать.***

СОНЯ *(хĕремесленсе).* Ах, эп сана йăлăхтартăм? Апла иккен-ха? *(Йӳççĕн ахăлтатса ярса)* Курăр-ха, вăл халь манран йĕрĕнет! Ăна йăлт йăлăхтарнă! А эс пĕлетĕн-и, манăн пĕтĕм инкек – сана пула! Эп санччен чипер-р-рех пурăнаттăм. Эсĕ килтĕн те йăлт пăсса хутăн. Эпĕ халиччен ĕçнĕ-и? Çакăн пек çапкаланса çӳренĕ-и? Çын ретлех пулнă! Чим, мĕн сӳпĕлтететĕп эпĕ каллех? Георги, каçар мана, ухмаха. Каçар! Вăрç мана, Георги! Ятла! Хытă вăрç! *(Георгие ăскама пуçлать.)* Çап! Хĕне! Тен, тăн кĕрĕ? Мана упăшка çапатчĕ, хĕнетчĕ хăйне юратманшăн, эп çавăнпа ун чух çын ретлех çӳренĕ. Эсĕ те çупса яр мана!

***Прасук таплаттарса пырать.***

ПРАСУК. Эп час хĕнеттереп ăна! Çавăн пек иртĕхет-и-ха вăл? Çавăн пек намăс тăвать-и? Георги, эс ман ывăл-и? Мĕн хăтланатăн? Мĕн-ма пăсмалла санăн унăн пурнăçне? Вăл ахаль те телейсĕр хĕрарăм. Ах, Тур, Тур...

ГЕОРГИ. Анне, ан хутшăн. Эпир хамăрах майлаштаратпăр.

ПРАСУК. Ан чĕн! Ялта ахальтен сăмах сарман иккен Суня сана пула ĕçке ерчĕ тесе. Намăссăр!

СОНЯ. Прасук аппа, ун пек ан кала. Айăпли – эп хам... хам айăплă. Вăл - çук. Хам ухмахне пула... Хам айăплă... Георги мар. Эп тăна кĕреп. Хамах йĕркене кĕреп. Георгие айăплама кирлĕ мар...

ПРАСУК. Эс хутне кĕрсе ан тăр. Айăплă-тăк айăплă. Мана çавăн пек намăс кăтартса хăвармалла-и? Вĕсем килеççĕ те каяççĕ, манăн кунта пурăнмалла. Ман кайран мĕнле ял куçĕнчен пăхас? Сан куçунтан та. Ав, мĕнле пулса кайрăн. Чип-чипер хĕрарăмран. *(Георгие)* Сунькkана качча илмелле пулнă сан, Георги. Илсе ятăр темле майрасене. Ни килсе курăнни çук. Тĕсне те курман. Мĕн усси пулчĕ вĕсенчен? Сунькkапа иксĕмĕр чиперех пурăнаттăмăр. Мана та канăçĕ пулатчĕ.

ГЕОРГИ. Эс мĕн, сӳтĕле пуçларăн-им, анне? Арăмран уйăрттарасшăн-и? Мĕн калассине пуçупа шутласа калаçатăн-и?

ПРАСУК. Калаçмăттăм та... *(чĕрине шаккаса)* ак калаçтарать. Пурăн-ха пĕччен. Ватлăхра. Ирĕксĕр калаçан. Халь ак Сунькkана кӳрентертĕн. Килме те пăрахĕ текех. Вăл хăть пăхкаласа тăратчĕ.

ГЕОРГИ. Анне, ан хускат-ха ку калаçăва. Чĕрене ахаль те йывăр.

ПРАСУК *(ӳпкелесе)*. Мана йывăр мар, ман чĕре ыратмасть! Мĕн усси пулчĕ иккен ачасем çуратнинчен?

ГЕОРГИ. Анне, тархасшăн, ан пуçла!

ПРАСУК. Вилсе кăна выртмалла та çав... Эх, Тур, Тур... Ма çаплах асапланмалла пулчĕ-ши манăн? Мĕнпе çавăн пекех çылăха кĕтĕм-ши пӳлĕх умĕнче? *(Куççульне шăлса пăрахса утать. Картлашка умĕнче чарăнать. Çаврăнса)* Ак тытатăп та ваттисен çуртне пăрахса каятăп.*(Пуçĕ çаврăннă пек пулать. Ӳкет.)*

***Георгипе Соня хыпаланса ăна пӳрте йăтса кĕреççĕ.***

***Соня тухать. Пĕчченех. Каска çине ларать те йĕме пуçлать. Мисаил юнашар пырса ларать. Соньăна хĕрхенсе пуçĕнчен шăлать, йăпатнă манер мăкăлтатать. Унтан хĕвĕнчен çăвар купăс кăларса хурлăхлă кĕвĕ калать. Унтан тăруках карта урлă пахчана яртах сикет те Соньăна кăчăк туртать.***

СОНЯ *(шикленереххĕн)*. Эсĕ мĕн... мĕн... Мисаил?

***Мисаил çине тăрсах кăчăк туртать.***

СОНЯ. Çук, çук... Эсĕ мĕн? Çук... (Хăрасарах çапах та пахчана кĕрет.)

***Мисаил ăна алăран çавăтать те патаксем кăнтарса тăракан тĕмескесем патне илсе пырать. Пĕр тĕмескине чакаласа кĕленче савăт кăларать, силлет – чăнкăртатать. Мисаилăн кăмăлне каять пулмалла çак сасă, вăл тата та хыттăнраххăн силлет. Хăй çав тери савăнăçлă. Укçине Соньăна тыттарасшăн.***

СОНЯ. Çук, çук, тек илместĕп. Мĕн пани те çителĕклĕ мана. Çитет.

***Мисаил хăй чĕлхипе темĕн калаçать. Ирĕксĕрлесех тыттарать. Хăй çав тери кăмăллă.***

СОНЯ. Тек кирлĕ марччĕ. Кирлĕ марччĕ. Мĕн пани те çитетчĕ. Эп ыранах тавăрса парап. Соня аппу улталамасть вăл. Улталаса çылăха кĕмест. Унăн ахаль те çылăхсем нумай. Нумай çав. *(Каллех йĕме пуçлать.)* Пурăнма пĕлеймерĕм. Çылăхлă ĕнтĕ, çылăхлă. Ку юлашки пулать. Юлашки! Эпĕ ыранах тавăрса парап сана. Соня аппу улталамасть. Улталамасть вăл. *(Тăкăрлăк енне танкăлтатса каять.)*

***Прасук таврăнать. Соньăна хĕрхенерех пăхса ăсатса ярать.***

ПРАСУК *(Мисаила)*. Эх, мĕскĕн, пĕтерет хăйне. Каллех укçа патăн-и-ха? Тек ан панă пултăр терĕм вĕт сана. Ан пар, терĕм. Ак унпа мĕн те пулин пулать те, эсех айăплă пулса юлан. Эрех ĕçме ыйтать вĕт вăл укçине. Эрехне ĕçет те хăйне хăй пĕтерет. Ăнлантарап сана, ăнлантаратăп – тулкки çук санран, апăрша ачи. *(Хыттăнраххăн)* Тек ан панă пултăр.

***Мисаил ӳсĕр çын пек хăтланса аташма пуçлать. Тайкаланать. Тӳнетӳне каять.***

ПРАСУК *(пĕр самант Мисаила пăхса ларнă хыççăн. Вылянарах)*. Ӳсĕр пирĕн Мисаил. Ӳсĕр. Вил ӳсĕр. Мĕн тăвас пулать ĕнтĕ халь? Мĕн тумалла?

*Мисаила çакнашкал айкашу тата унăн вăйăйине Прасук карчăк хапăл пулни астарсах ячĕ курăнать - вăл киленсех, каçăхсах ахăлтата-ахăлтата вылять.*

ПРАСУК. Ай артис, ай артис Мисаил! Чистиех артис!

***Тепĕртакран Мисаил, ашкăнса ĕшеннĕскер, ăшша пиçнĕскер, çаплах***

***ӳсӗр пек тайкаланса карлăк çине Прасук карчăкпа юнашар пырса ларать.***

ПРАСУК *(Мисаила пуçӗнчен шăлса).* Эх апăрша ачи!.. Шăпу тӗрӗс-тӗкел пулнă пулсан, артисах та кайма пултарнă та. Пулаттăн та пулӗ. Талайӗ те пулнă курăнать. Кашнин хăйӗн шăпи çав. Санăн, авă, çавнашкал çаврăнса тухрӗ. Мӗн тăвăн ӗнтӗ – Турă çырни-тӗр ӗнтӗ. Тулӗк мӗншӗн шăп санăн çапла пулмалла пулнă? Эсӗ те манăн Виталипе Георги пекех тӗнчене юрăхлă пулмаллаччӗ те вӗт. Вӗсен шăпи вăн мӗнле ăнăçлă пулчӗ, çавă савăнтарать. Çынна тухрӗç. Çын çинче халь. Пурнăç айккинче юлмарӗç. Турри пăхса пурăнтăрах ӗнтӗ вӗсене. Малашне те. *(Хӗрес хывать.)*

***Мисаил Виталий ятне илтсен велосипедпа ярăннă манер хăтланма пикенет. Унтан карчăка тем ăнлантарса Виталий кайнă енне кăтартса аллисемпе сулкалашать, сăнарланă велосипедне тапса вăркăнтарнă пек туса кăтартать. Каллех карлăк çине пырса ларать.***

ПРАСУК. Телейӗсем пулччӗрех çав, эпӗ мӗн ӗнтӗ текех... Вӗсен пурăнмалла... Эп хамăнне Турри касса панă çăкăр чӗллине çисе янă ӗнтӗ, тӗпренчӗкӗсене пуçтарасси кăна юлнă.

***Мисаил карчăк куçӗнчи куççульне питех те асăрхануллăн шăлать, ачашшăн, хӗрхенӳллӗн ыталать, карчăк çумне тата та таччăнрах тайăлать. Çăвар купăсӗпе кӗвӗ пуçлать. Икӗ çывăхран та çывăх, пӗр-пӗрин ăшшине, хăйсем пӗр-пӗрне мӗн тӗрлӗ кирлине туйса тăракан, çак самант кăмăллăхӗпе çемӗçнӗ икӗ чун. Кăштахран иккӗшӗ те кăштăртатса тухса каяççӗ.***

**Тăваттăмӗш курăну**

***Маришăпа Леша килсе тухаççӗ.***

ЛЕША. Ху мӗн хăтланнине пӗлетни эс?

МАРИША. Мӗн тунă вара эп?

ЛЕША. Мӗн-ма хăпарса ларнă ун патне велосипед çине?

МАРИША. Велосипечӗ унăн мар вӗт вăл - хамăрăн.

ЛЕША. Эппин мӗн тума лартнă эсӗ ăна велосипед çине?

МАРИША. "Ярăнтар-ха", – терӗ те – эп килӗшрӗм. Çавă çеç.

ЛЕША. Çынсем курсан...

МАРИША. Вара мӗн?

ЛЕША. Мӗн калаççӗ? Шутласа пăхасчӗ.

МАРИША. Мӗн калаччăр вӗсем?

ЛЕША. Ют арçынпа... Велосипедпа... Ахаль те сăмахлаççӗ.

МАРИША *(хӗререх).* Кам сăмахлать? Аннӳ хăй сăмахласа çӳрет. Сăмах сарса. "Кин хӗсӗр пулчӗ çав", – тесе. Хăшӗ хӗсӗр-ха кунта? Эсӗ-и, эпӗ-и? Ак тытатăп çуратап!

ЛЕША. Çавăнтан-и?

МАРИША. Унран! А мӗн... вăл - военнăй, здоровăй. *(Пăрахса кайма тăрать.)*

ЛЕША *(чарса).* Эс мӗн? Тăхта!

***Тарье пырса тухать.***

ТАРЬЕ. Каллех хирĕçетĕр-и-ха? Ах Турă сирĕнпе... (*Маришăна*) Пĕтерен иккен ман ывăла. Пуçĕпех. Ăçтан кăна йăтăнса антăн эс пирĕн тĕле, пуççиесшĕ? Турă мар, шуйттан ярса панă пуль сана. Хоспати! Тульккă мĕн айăпне пула?

ЛЕША. Анне, эс кай-ха кунтан лучшă. Эпир хамăрах калаçса татăлатпăр.

ТАРЬЕ. Мĕн калаçаян эс? Арăмун арки айне кĕрсе ларнă. Халех çапла та, кайран мĕн пулать санпа? Ну-ка сывла.

ЛЕША. Эс мĕскер, анне?

ТАРЬЕ. Мĕскерлетсе ан тăр, сывла тенĕ сана!

ЛЕША. Мĕн тума?

ТАРЬЕ. Çĕр хут ан ыйттар. Сывла!

***Леша сывласшăнах мар, çапах та амăшĕ енне сывлать.***

МАРИША. Леша, эсĕ, мĕн, ĕçнĕ-им?

ТАРЬЕ. Фу-у!.. Туйăнчĕ кăна иккен. Асту, пĕр тумлам кăна сыпнă пултăр!.. Эп сана!.. (*Маришăна*) Эс тата... пĕлмĕше персе ан тăр, кин – вăл сыпкаламасть пек. Сана пула йăлт пăсăлчĕ ман ача. Вăл кун пек пулман. Нихăçан та. Яланах лайăх пулнă. Эпир лайăхпа çитĕнтернĕ ăна. Ашшĕ те эрех тĕлне пĕлмен. Хам та. Пирĕн йăхра никам та эрехпе иртĕнмен. Мĕнпе тухатрăн тӳлĕк эс ăна?

ЛЕША. Анне, чарăн!

ТАРЬЕ. Во,во! Аннӳне хирĕç сăмах чĕнме пуçларăн. Юрать, аçу илтеймест. Тупăкĕнчен тăрса ларатчĕ пуль.

ЛЕША. Анне теп!

ТАРЬЕ. Эс арăмна тытма вĕрен малтан аннелетиччен! Ăна хирĕç сăмах чĕнейместĕн, ман çине сикен. Илсе килтĕн таçтан такама. Каларăм сана ан васка тесе. Илмеллеччĕ качча Галина Петровнăна. Ачаллă та пулаттăр халиччен. Халь пурнан вăн - ни çемье, ни...

МАРИША. Эпĕ сире халиччен усал сунманччĕ, калас сăмаха та каламан. Хама кӳрентернине те чăтса пурăнтăм. Йĕркеленсе каять пуль тенĕччĕ. Анчах чăтăмлăхăн та вĕçĕ пур иккен. Çитет! Айăпсăр çĕртен айăп курас килмест. Тăвăрах Галина Петровнăна хăвăр кин. Эпĕ пĕрех телейлĕ пулатăп! Пулать манăн ача! Ак курăр! (*Хăвăрттăн чупса каять.*)

ЛЕША. Эх, анне, мĕн-ма аркатмаллаччĕ санăн пирĕн çемьене? (*Мариша хыççăн чупать.*)

ТАРЬЕ. Ха, вĕсен хăйсен çемье иккен... Эп, мĕн, çемье мар-им текех? Чуп, чуп арăму хыççăн, ман патах чупса таврăнăн ак. (*Тухса каять.*)

## Пиллĕкмĕш курăну

***Виталий таврăнать. Картиш варринчи каска çине ларать те пекĕпе тăрăнтарса выляма пуçлать.***

***Карта леш енче Леша курăнать. Хĕрĕнкĕ.***

ЛЕША (*Виталие чĕнсе*). Эй!

***Виталий сасă енне çаврăнса та пăхмасть – çаплах вылять.***

ЛЕША. Эй! Эй теп!

ВИТАЛИЙ (*пуçне çĕклесе, Лешăна асăрхаса*). Мана калатни эсĕ?

ЛЕША. Сана, паллах. Сана. Йывăç тункатине чĕнместĕп ĕнтĕ. Слышь.

ВИТАЛИЙ. Вара?

ЛЕША. Слышь, атя япалусене пуçтар та тухса вĕçтер. 45 минут сана. Ну, тепĕр 5 минут хушса пама пултаратăп.

ВИТАЛИЙ. Ăнланмарăм.

ЛЕША. Это понятно. Прапорсем пуçран айваннине тĕнче пĕлет. Анекдот каласа кăтартас мар-и? Вообщем-то, санăн вăхăт сахал, хăвăртрах пуçтарăн. *(Сехетне пăхса)* О, виçĕ минут иртрĕ те. 42 минут çеç юлчĕ.

ВИТАЛИЙ. Мĕн кирлĕ сана? Кам пулатăн эс?

ЛЕША. Итле-ха, эсĕ прапор та мар-им, ниепле те ăнкарса илейместĕн. Ăнланмастăн пулсан, тăн кĕртме пултарап. *(Карта рычакне ярса тытать.)*

ВИТАЛИЙ (ура çине тăрса). Пăхатăп та, эсĕ ырăпах килмен пулмалла. *(Карта еннелле утать.)*

ЛЕША. Ан çывхар! Эпĕ шутласа тăмастăп!

ВИТАЛИЙ *(чарăнса).* Калаçмалли пур пулсан, кил, лар, калаçар.

ЛЕША. Санпа мĕн калаçмалли? Эпĕ хамăнне каланă, 45 минут сана, вара звонок. Тепĕр сехетрен килеп тĕрĕслеме. Тухса каймасан, ху айăплă. Эпĕ сана асăрхаттарнă. Все! Конец связи, прапорщик... Ăнлантăн? Время пошло, атя пуçтар япалусене! *(Рычакне пăрахать те тайкаланарах пăрахса утать.)*

***Виталий аптраса тăрса юлать. Çĕççине ывăтса каскана тăрăнтарать.***

***Карта леш енче Мисаил курăнать. Виталий еннелле шикленерех пăхса Леша пăрахнă рычака ярса тытать.***

ВИТАЛИЙ *(ятарласа Мисаил илтмелле)* Сирĕн, мĕн, кунта шайка-им? Банда? Эсир, мĕн, кавар тунă-им мана хирĕç? *(Мисаил рычакпа хăмсарасран асăрханарах)* Асăрхаттаратăп, эпĕ вĕт çиленсен... Эпĕ тамăкра пулса курнă çын.

***Мисаил рычака хăй вырăнне майлаштарса хурать те çăвар купăс кăларса, кĕвĕ каласа пăрахса каять.***

***Георгий шыв ăсса килет, мунчана кĕрсе хурана ярать те каялла тухать.***

ВИТАЛИЙ. Мунча вăл лайăх япала. Тахçанах ĕмĕтленсе ял мунчи пирки. Хулан мĕн вăл? Ни çăвăнни, ни тарлани. Пар витрӳне, хам ăсса килем тата. Ахалех ларап. *(Кайма тăрать, çавăнтах айлатса кукленсе ларать.)* Ой-йой-й!.. Еклмн!..

ГЕОРГИЙ. Мĕн пулчĕ? Суранусем?

ВИТАЛИЙ. Суранĕсем тарам-ха. Вĕсем иртсе кайнă. Çурăмран тем тăрăслаттарчĕ. *(Тем шыранăн хăй йĕри-тавра пăхкалать.)* Темле артналет пулчĕ чтоль? Ăнланмарăм.

ГЕОРГИЙ *(сасартăках кулса ярса).* А-а... конкурентсен çулне каçса кайнă эсĕ.

ВИТАЛИЙ. Кам çулне татнă вара эпĕ?

ГЕОРГИЙ *(çаплах кулса).* Витрӳне ларт та çаплах айлатса ман пата кил.

***Виталий Георгий хушнă пек тăвать.***

***Кăштахран çав тери хаваслă Мисаил курăнать. Велосипедпа ярăннă манер чăвлатса Виталий умĕпех витрене йăтса вĕçтерет.***

ГЕОРГИЙ. Халь ĕнтĕ ăнлантăн-и?

ВИТАЛИЙ. Тытса пěрре тăн кěртсе илетěп те-ха ěнтě – хренов артиллерист. Ытлаванах шаплаттарчě.

ГЕОРГИЙ. Бизнес вăл бизнес. Унта шеллесе-хěрхенсе тăмаççě.

ВИТАЛИЙ. Вăйě пур унăн. Упа пекех. Тěрěс-тěкел пулас-тăк илсе кайнă пулăттăм хам пата. *(Кăштах тăхтанă хыççăн).* Шел ачана. Пирěн пекех пулма пултарнă вěт. Итле-ха, ăçтан вěреннě вăл купăс калама?

ГЕОРГИЙ. Ашшě – Костя тете – ăстаччě унăн. Астăватни?

ВИТАЛИЙ.Тěрмерех вилнě тенěччě пуль анне ăна? Астăвап, Маюк аппана бензин сапса çунтарса янăччě. *(Чěтренсе илнě евěр)* Тăрр! Асилме хăруш. Кěркуннеччě ун чух. Шăп улма кăларса пěтертěмěр те апат çиме кěнěччě. Мисаил çавăнтан çапла пулса кайрě пулě вăл?

***Шăпах Мисаил пырса кěрет. Тулли витрине Виталий умне лартать те аллине тăсать.***

ВИТАЛИЙ *(асăрханарахăн алă тăсса).* Ну, здоров. Благодарю за службу.

МИСАИЛ *(аллине картах туртса илсе хăй чěлхипе "çук" тенěн).* Ě-ě-ě!..

ВИТАЛИЙ. Ăнланмарăм.

ГЕОРГИЙ. Укça ыйтать вăл.

ВИТАЛИЙ. Укça?.. Мěн укçи? Ăнланмарăм.

ГЕОРГИЙ. Сан вырăнна шыв кўрсе килчě-и? Ку – унăн бизнесě. Карчăксем хăнăхтарса янă. Карчăксене шыв кўрсе парать вăл, лешсем укça параççě ěнтě.

ВИТАЛИЙ *(кěсйинчен портмане кăларать).* Вăт, хренов бизнесмен. Ман кунта 10 тенкěлěххисем кăна. Сана, мěн, пěр витрешěнех вуннах парас пулать-им? *(Пěр вунă тенкěлěххине кăларать.)* Ме, тытса кур 10 тенкěлěххине. Капитализм тени пирěн яла çитнě иккен. Тыт, коммерсант.

МИСАИЛ. Ě-ě-ě-ě...

ВИТАЛИЙ. Сахал?

МИСАИЛ *(çиллесреххěн).* Ă-ă...

ВИТАЛИЙ. Апла вуçех памастăп, акă.

***Виталий енчěке кěсйине чикме тăрать, çав самантрах Мисаил сасартăках хăвăрттăн кăна портманене тăпăлтарса илет те тара парать.***

ВИТАЛИЙ. Еклмн! Опрст! *(Мисаил хыççăн тапса сикет.)*

***Картишěнче хěвěшў, тěпěртетў.***

***Мисаил картасем урлă ялт-ялт! сиксе каçса аслăк хыçне тарать, Виталий - ун хыççăн. Кěçех иккěшě те Георгий умěпе вирхěнсе иртсе каяççě. Георгий Мисаил çулне пўлесшěн хăтланать – Мисаил çапах та чěрěрех.***

ГЕОРГИЙ. Аннене чěнмелле-тěр, ăна итлет вăл. Анне! Анне!

***Амăшě курăнать.***

ПРАСУК. Темěн сиксе тухман-тăр вěт?

ГЕОРГИЙ. Мисаил, вăн, Виталий укçине вăрласа тарчě. Эс чěн-ха ăна, сана итлет вăл.

ПРАСУК. Ай, тур-тур... Унашкалах пулакан марччě-çке. Çыннăнне тыткалакан марччě халиччен. Пěрре те асăрхаман. Пěлсе пěтерме çук çав, темěн унăн пуçěнче. Мисаил! Мисаил!

***Мисаилпа Виталий тепӗр ҫаврӑм тӗпӗртеттерсе чупса иртеҫҫӗ.***

ВИТАЛИЙ (Георгине). Вӑл по кругу чупать! Сулахай флангпа тух! На опережение!

ПРАСУК. Мисаил! Мисаил! Кил-ха кунта! Кил! Кӑнахвит парап! Мӗн тӑван унӑн укҫипе, хамӑнне парап! *(Кӑкӑр умӗнчен укҫа енчӗкӗ кӑларать. Чӑнкӑртаттарать.)* Ак пӑх-ха, мӗн чухлӗ ман укҫа! Ай, мӗнле хитре чӑнкӑртатать! Ай, сасси епле хитре! Чӑнкӑр-чӑнкӑр-чӑнкӑртик! Чӑнкӑртӑк! Чӑнкӑртӑк!

***Тепӗр самантран каллех Мисаилпа Виталий вирхӗнсе килеҫҫӗ. Мисаил Прасук карчӑк хыҫне пытанать. Виталий ӑна тытасшӑнччӗ – амӑшӗ чарать.***

ПРАСУК. Ан тӗкӗн, ан тӗкӗн, эпир хамӑрах майлаштаратпӑр. Ун пекех усурник марччӗ. Лайӑх ачахчӗ-ха, чипер ачахчӗ. *(Мисаила)* Эс лайӑх ача пуль? Маттурккахчӗ пуль халиччен? Мӗн аташтарчӗ-ши ӗнтӗ сана каплах, хваспатиех?

ВИТАЛИЙ. Кӑтартать вӑл, авӑ, лайӑх ача. Манӑн унта ҫирӗм пин ытла вӗт.

ГЕОРГИЙ. Вӑт пулатчӗ ӑҫта та пулин персе хӑварнӑ пулсан.

ПРАСУК. Парать, парать ҫичас. Ҫыннӑнне тытакан марччӗ вӑл. Ну-ка, ну-ка, Мисаил, мӗн-ха унта санӑн? *(Вылянса)* Кӑтарт-ха мана. Пӑхса илер-ха, мӗн пур унта Витали тетӳн?

МИСАИЛ *(памасса систерсе)*. Ӑ-ӑ-ӑ!

ВИТАЛИЙ. Мӗн ачашланса тӑмалли унпа, туртап та илеп Хӑлхине пӑрса илеп кӑштах акӑ.

ПРАСУК. Ан тив, курайми пулӗ тата хӑвна. Манран та сивӗнӗ. Унсӑр мӗнле пурӑнас кайран? Йӑлт ӑнланать вӗт вӑл.

**Мисаилӑн кӑмӑлӗ кӑштах ҫаврӑнчӗ пулмалла – карчӑка картлашка патне ҫавӑтса каять. Параҫҫӗ.**

**Мисаил портманене пӑхма пуҫлать. Хут укҫасене пӗрерӗн-пӗрерӗн кӑлара-кӑлара тӗсет те ҫӗре пӑрахать.**

ПРАСУК. Апай, мӗн тӑватӑн эсӗ? Каялла вырӑнне хур. *(Упаленсе укҫа пуҫтарма пуҫлать.)* Апла юрамасть. Апла эпӗ йӗме пуҫлап. *(Йӗнӗ пек пулать.)* Эс мана йӗртесшӗн-и?

***Мисаил карчӑка пуҫран шӑлать, лӑплантарать. Унтан хут укҫасене пӗтӗмпех кӑларать те карчӑка тыттарать. Ваккисене ывӑҫне силлет те чӑнкӑртаттарса сассипе киленме пуҫлать. Унтан вӗсене мӑйӗнчен ҫакнӑ хутаҫа тултарать.***

ПРАСУК. Укҫишӗн те мар вӑл, чӑнкӑртатни килӗшет ӑна.

ГЕОРГИЙ. Ӑнлантӑн-и ӗнтӗ халь? Эсӗ унӑн бизнесне туртса илетӗн вӗт шыв кӳрсе. Карчӑксем ӑна уншӑн укҫа параҫҫӗ.

ВИТАЛИЙ. Чертов бизнесмен... Чунсӑр хӑваратчӗ – ҫирӗм пин вӗт! Вӑт ухмах те эсӗ ӑна.

ПРАСУК. Юрать, Мисаил пур-ха пирӗн. Вӑл пулӑшмасан, укҫине купипе парсан та, тытӑнса тӑраяс ҫуккӑ. *(Мисаила ҫупӑрласа)* Маттуркка вӗт вӑл, пирӗн ҫур пурнӑҫ.

***Мисаил Прасук карчӑка ҫавӑтса патаксем тӑратса тухнӑ тӗмескесем патне илсе каять. Кӗвӗ каласа пырать.***

***Георгийпе Виталий вĕсене пăхса ăсатаççĕ.***

ВИТАЛИЙ. Йăшнă, питĕ йăшнă пирĕн анне.

***Георгий пахчаналла кĕрсе çухалать.***

***Карта тепĕр енче Мариша курăнать.***

МАРИША *(шăппăнраххăн).* Капитан! Капитан бронетанковых войск! Орлов!

ВИТАЛИЙ *(пуçне çĕклесе).* А-а, эсĕ-и?

МАРИША *(кăчăк туртса).* Кил-ха кунта, кил. Калаçмалли пур.

ВИТАЛИЙ *(асăрханарах тăрса карта патне утать. Халĕ вăл унчченхилле савăнăçлах мар).* Итлетĕп.

МАРИША *(хыпăнарах).* Капитан бронетанковых войск, эсĕ, мĕн... манăн...

ВИТАЛИЙ. Ман ят вообще-то – Виталий. Эсĕ Маришăччĕ вĕт-ха?

МАРИША. Манăн Леша кунта килчĕ-и?

ВИТАЛИЙ. Леша? Санăн-и, санăн мар-и – пĕлместĕп, пĕри килсе кайрĕ. Ăнланмарăм тӳлĕк, мĕн сăлтавпа. Санăн ботаник пулчĕ-и вăл?

МАРИША. Ботаник мар, биолог. Эсĕ ăна хĕнемерĕн-и?

ВИТАЛИЙ. Айван ачасене кӳрентерсе хама варлас çук эпĕ. Чĕрре кĕме хăтланса пăхрĕ вăл, паллах, ну, хăравçă хăй.

МАРИША. Çук, Леша хăравçă мар. Çапăçма кăна пĕлмест. Вăл нихçан та никампа та тытăçса курман вĕт. Леша лайăх çын вăл. Кăмăлласкер.

ВИТАЛИЙ. Кăмăлли пирки иккĕленнĕ пулăттăм. Ĕçки пĕлмест пулмалла.

МАРИША. Мĕн, ӳсĕрччĕ-им?

ВИТАЛИЙ. Урă пекех туйăнмарĕ. Урăлла та çапла пулсан, эсĕ пирĕн тăрăха мĕнле телей шыраса килнине эпĕ ăнлансах пĕтереймен те пулăттăм. Пĕр тесен, ку сирĕн хăвăрăн ĕçĕр, паллах.

МАРИША. Вăл ĕçмест вĕт. Тепĕр чух кăштах кăна. Пĕреххут, ма каларăм эпĕ ăна санран ача çуратасси çинчен. Асăнмалла марччĕ манăн. Эпир унпа пĕрпĕринчен нихăçан та нимĕн те пытарман та, çавăнпа çеç каларăм.

ВИТАЛИЙ. Манран? Ача? Ăнланмарăм, мĕнле ача?

МАРИША. Эп санран ача çуратасси çинчен.

ВИТАЛИЙ. Эсĕ ху та пĕрер черкке яман-и?

МАРИША. Мĕн эсĕ? Эрех шăршине те чăтма пултараймастăп эпĕ.

ВИТАЛИЙ. Эсĕ мана йăлт анратса ятăн-ха. Мĕнле ача çинчен калаçатăн эсĕ? Мĕншĕн ача санăн манран çуратмалла вара, хăвăн ботаникунтан мар?

МАРИША. Ну, эсĕ – çар çынни, эппин тĕрек сывлăхлă. Тепĕр енчен, *(именчĕклĕн)* эсĕ – хитре арçын. Лешăпа пирĕн пулмасть. Тăваттăмĕш çул пурăнсан та.

ВИТАЛИЙ. Пĕрле çывăрас пулать... Каçар, кăнттамла персе ятăм.

МАРИША. Эпир ача пирки тунсăхлатпăр. Пире ача кирлĕ. Ялтисен умĕнче те аван мар капла.

ВИТАЛИЙ. Ну, ĕнтĕ... Ăнланатăп.

МАРИША. Эсĕ манпа çывăрса илме хирĕç марччĕ-и?

ВИТАЛИЙ *(именерех).* Халь тӳрех-и?

МАРИША. Мĕн тăсмалли пур? Халех юрать.

ВИТАЛИЙ *(аптраса тăнă хыççăн).* Эпĕ çапла тӳрех пултараймастăп пуль.

МАРИША. Мĕн, вăрçă хыççăнхи проблемăсем-и?

ВИТАЛИЙ. Унпа мар. Малтан çывăхрах паллашмалла ĕнтĕ. Пĕр-пĕрне хăть кăштах пĕлмелле. Унсăрăн мĕнле? Ача çурататпăр çапах та. Малтан шухăшласа пăхам.

МАРИША. Мĕн вăхăт кирлĕ сана шухăшлама? Кала та, эпĕ килетĕп çав вăхăтран.

ВИТАЛИЙ. Мĕн чухлĕ? Ну-у... Тӳрех калаймастăп та.

МАРИША. Тсс! Вырт! *(Лапах выртать, Виталие те туртса антарать.)*

***Тулли витресем йăтнă Георгий курăнать. Мунчана кĕрсе каять.***

МАРИША *(шăппăн).* Манăн хыççăн пыр.

ВИТАЛИЙ. Ăçта? Мĕн тума?

МАРИША. Калаçса татăлмарăмăр вĕт-ха.

ВИТАЛИЙ. Ăсатса яма хирĕç мар.

***Маришăпа Виталий каяççĕ.***

***Мисаил курăнать. Маришăпа Виталий кайнă енне пăхса тăрать, унтан мунчаналла васкаса кĕрсе каять. Георгие ертсе тухать, карта патне илсе каять, хăйĕн чĕлхипе хĕрсе ăнлантарма пуçлать. Георгий ăнланаймасть, Мисаила йăпатмалла хулпуççинчен лăпкаса каялла мунчана кĕрсе каять. Мисаил пĕр самант нимĕн ăнланмасăр Маришăпа Виталий кайнă енне пăхкалать, унтан питĕ кăмăлсăр, хăй тĕллĕн вăрçăннă пек пулса пăрахса утать.***

***Прасук карчăк курăнать.***

***Виталий каялла килет. Амăшĕ патне утать.***

ВИТАЛИЙ. Анне, Соньăна мĕн пулнă? Ĕçкелет-им? Халь акă куртăм та. Йăлт улшăнса кайнă-çке вăл.

ПРАСУК. Каллех Мисаил патне укçа ыйтма килчĕ-и-ха? Каларăм вĕт çав ачана, хăнăхтарса яран, тек ан панă пултăр укçа тесе. Каллех килчĕ-им Суня?

***Мисаил курăнать. Прасук карчăкпа Виталий калаçăвне итлет.***

ВИТАЛИЙ. Самаях янă пек туйăнчĕ.

ПРАСУК. Ĕçкелет çав. Упăшки кайнă пек те илтрĕм. Ĕçлеме таçта тухса çӳретчĕ те-ха вăл, хальхаççăн курман. Хам та тухса çӳрейместĕп те ĕнтĕ. Çав Суняна кăна кин тумаллаччĕ те манăн. Пирĕн Георгипе сăмахлакаланă та тетмĕн тахçан, эп пĕлсех кайман, çынсем калаçаççĕ. Атту сирĕн майрусене курса пулмасть. Кунта хама пулăш пулатчĕ. Халь те хушăран килкелесе тĕрĕслесе каяканччĕ унччен сенче. Халь ĕçкипе минресе çӳрет те килмен кутемĕн.

ВИТАЛИЙ. Георгин арăмĕ, инке, килкелемест-им-мĕн? Пит аякра мар вĕт.

ПРАСУК. Тахçан пĕрре килнĕччĕ пуль. Пысăк çын хĕрĕ теç те, пире тиркеререх парать пуль. Хăта-тăхлачсене те курман. Мана вĕсен усси кирлех те мар-ха та, Георги хăй чипер пурăнсан. Эпĕ вĕсемсĕрех пурнăç тунă. Çурт та лартнă, хуралтă та çавăрнă. Хам вăйпах.

ВИТАЛИЙ. Сана хам пата илсе каяс-тăр?

ПРАСУК. Тĕнче хĕрне кайса вилес мар-ха. Манăн тĕнче хĕрри кунтах, аякра мар, укăлчаран кăштик çеç иртмелле. Килтех вилес, хамăр ялсемпе, аçупа пĕрлех выртас. Тӳлĕк темшĕн илме килмеççĕ-ха çаплах. Кĕтсе те йăшрăм ĕнтĕ. Мунчи пулмарĕ-и-ха?

ВИТАЛИЙ. Кĕçех пулать пуль. Кайса пăхам.

***Виталий мунча патнелле утать.***

***Прасук карчăк  картлашка çине ларать.***

***Мисаил юнашар пырса ларса хăйĕн тунсăх кĕввине пуçлать.***

***Леша курăнать. Мисаил купăс калама чарăнать.***

ЛЕША. Прасук аппа! Прасук аппа! Прапор ăçта?

ПРАСУК. Тем ыйтатăн ĕнтĕ эсĕ? Тăн илейместĕп çав.

ЛЕША. Прапор кайрĕ-им тетĕп. Леш военнăй.

ПРАСУК. Ачасенчен ыйтса пăх, вĕсем чухлаççĕ пуль. Эсĕ кам пултăн-ха - уйăрса илеймерĕм. Курнă сăн та-ха.

ЛЕША. Владимир Кирилловичăн. Кĕçĕнни. Лешши.

ПРАСУК. Ă-ă, Владимир Кирилччăн. Алюшши пултăн-им-ха? Хальхаççăн курсах кайман та тӳрех уйăраймарăм. Çапла пуç пăтранкалать çав. Маришпа иксĕр улма лартма пулăшнăччĕ вĕт эсир. Те тав тума пĕлейрĕм ĕнтĕ ун чух? Тавах сире, тавах. Турă пулăшса пытăр.  Лайăх çынсем эсир. Аçуна та аван пĕлеттĕм. Учитлĕччĕ. Манăн ачасене вĕрентсе вăл.

ЛЕША. Прасук аппа, эпĕ мĕн... çавна ыйтасшăнччĕ... Ывăлна чар-ха, атту ырăпа вĕçлемест вăл.

ПРАСУК. Атьсем лайăх-ха, лайăх. Тавах Турра, вĕсемшĕн хăть чун лăпкă. Тĕнчене юрăхлă пулса çитĕнчĕç. *(Тăруках).* Чим, эсĕ, Алюшша, мĕн чарасси пирки калаçан çак? Мĕн начарпа вĕçленет тетĕн?

ЛЕША. Ман Маришăна çулăхнă.

ПРАСУК. Ман ывăлсем-и?

ЛЕША. Военнăйĕ. Эпĕ хама мăшкăллаттармастăп.

ПРАСУК. Эс чухăммăн калаçатăн пуль? Ман атьсем унашкал хăтланас çук. Мариша мăшкăллама-и?..

ЛЕША. Сăлтавсăр  калаçмастăп.

ПРАСУК. Кай, кай, кай... Ман атьсем çапла хăтланнă-и? Апай Турă! Намăс! Намăс! Çавăн пек ывăлсем çитĕнтернĕ-и вара эпĕ? Намăс! Намăс! *(Йĕме пуçлать.)* Манăн атьсем хĕрарăма мăшкăланă... Кай, кай, кай...

ЛЕША. Мăшкăллаттаратăп эпĕ ăна! Тĕкĕнсе кăна пăхтăр. Кала эсĕ ăна, мантăр манăн Мариша çинчен. Пĕри Соня аппа пурнăçне аркатни çитмен, тепри манăнне пăсасшăн. Эпĕ хамран култармастăп. Япалисене халех пуçтартăр та тухса кайтăр. Атту ырăпа вĕçленмест ку.

ПРАСУК. Ай Турах, ай  Турах... Намăс! Намăс!..Халăха мĕнле курăнан кун хыççăн? *(Йĕрет.)* Лайăх пулччăр тесех çитĕнтертĕм вĕт-ха. Ăс парса тенĕ пекех.

ЛЕША. Мăшкăллама... мăшкăлламан-ха вăл, анчах та çулăхнă.

ПРАСУК. Çиччас тăн парса илетĕп! Мана ватлăхра çапла намăс кăтарччăр-и? Хăйсен пурнăçне пăсса хуччĕр-и? Эпĕ вĕсене... эп вĕсене хам пурнăça катса ӳстернĕ. Юлашки çăкăр тĕпренчĕкне пуçтарса! Вĕсем халь çапла иртĕхе пуçланă-и? Ăса кĕртетĕп çиччас!

***Мисаил, картлашка çинче лараканскер, тăрса Лешăпа Прасук карчăк патне пырать. Лешăна шăмарса пăхать, рычак ярса тытать.***

ЛЕША *(хăраса, чакса).* Эс мĕскер? Кăштах катăк-им? Пăрах рычакна!

***Мисаил хăмсарнă пек тăвать.***

ЛЕША *(чакса).* Санпа, ухмахпа, тем курасси пур тата. *(Прасук карчăка)* Прасук аппа, вообщем, эпĕ хамăнне каларăм. Асăрхаттартăм. Кайран ӳкĕнмелле ан пултăр. Манăн Маришăран хăптăр. Çывăха ан пытăр.

***Леша пăрахса утса каять. Мисаил ăна хыçалтан рычакпа хăмсарнă пек пулать.***

ПРАСУК. Ăçта-ха вĕсем? Çавнашкал иртĕхме пикеннĕ-и? Ача чухне хĕстерменнине халь кăтартатăп пĕрре! Çиччас тăн парса илетĕп. Пăх-ха, мĕн хăтлана пуçланă? Атя тухчăр те кайччăр хăйсен хулине калла. Ку таран вĕсемсĕрех майлашăнкаласа пурăннă, малалла та пурăнап. Усси вĕсен килнинчен, çапла намăс кăтартаççĕ пулсан...

***Прасук карчăк каллех тăнне çухатать. Мисаил пăлханса ăна çĕклесе илет, пӳрте йăтса кĕрсе каять. Кĕçех каялла таврăнать те рычака йăтса тухса чупать.***

## ИККĔМĔШ ПАЙ

### Улттăмĕш курăну

***Çав вырăнтах. Виталий мунчаран тухать те пӳрте кĕрсе каять. Çавăнтах сиксе тухать.***

ВИТАЛИЙ. Георгий, аннепе тем пулнă пулмалла унта, сывламасть, выртать. Урайĕнче.

***Георгийпе иккĕшĕ васкаса пӳрте кĕреççĕ. Кăштахран тухаççĕ. Георгий мунчана кĕрсе пĕр алтăр шыв йăтса тухать, питне çăвать.***

ГЕОРГИЙ. Ну хăратрăн та.

ВИТАЛИЙ. Эпĕ хам та хăрарăм. Урайĕнче выртать-ха та. Йăтăнса аннă пуль тенĕччĕ.

***Картлашка çинче Прасук карчăк курăнать. Кăштăртатса анать.***

ВИТАЛИЙ. Эсĕ мĕншĕн урайĕнче çывăратăн вара? Кравать çинче мар.

ПРАСУК. Урайĕнче сулхăнрах. Пӳртре пăчă вĕт, тĕпсакайран кăштах хăть сулхăн çапать. Уçăрах сывлăш.

ВИТАЛИЙ. Хăратрăн эс пире. Вилсе выртман-и ку тесе.

ПРАСУК. Эй, уншăн мĕн хăрамалли? Вилме тахçанах вилмелле те-ха, срукĕ иртсе те кайрĕ пулĕ ĕнтĕ, тем килмеç-ха çаплах илсе кайма. Кĕтсе те ывăнтăм. Те ман çинчен манса та кайнă?

ВИТАЛИЙ. Пурăнмалла-ха санăн. Унта кайма ан васка.

ГЕОРГИЙ. Мăнукусене курмасăрах каясшăн-и вара?

ПРАСУК. Пĕрле илсе килмеллеччĕ вăт халь.

ГЕОРГИЙ. Кĕçĕнни ытла пĕчĕк-çке, кăшт çирĕпленсенех илсе килетĕп.

ПРАСУК. Аслине тахçан курнăччĕ. Чĕрçе çинче сиктернĕччĕ. Халь пысăкланчĕ пуль? Миçере пырать-ха? Шкула та чупать пуль?

ГЕОРГИЙ *(каласах мар тенĕн).* Вунсаккăр тултарать кăçал.

ПРАСУК. У-у-юй... Çавăн пек нумай пурăнатăп-и эпĕ? Кай-кай-кай...

ВИТАЛИЙ. Кӳрсе ямалла ăна яла çулла, пурăнтăр кунта асламăшне пăхса. Хулара пăчăхса ларıччен. Ма килсе ямастăн?

ГЕОРГИЙ. Амăшпе тинĕс хĕррине кайкалаççĕ. Çулласенче.

ВИТАЛИЙ. Ырлăхĕ кунта унтинчен лайăхрах. Хырлăх шăрши хăех мĕне тăрать. Хăнăхчăр ял пурнăçне. Раççей чунĕ - ялта! Çĕртен хăват илмелле пирĕн. Ăслă пулнă авал Руç çулпуçĕсем: Европăна çĕнсе илес темен, хĕвелтухăç енне куç хывнă, унти çĕрсене ярса илнĕ. Европăра мĕн пур? Ни çĕрĕ, ни нефчĕ, ни газĕ, ни вăрманĕ, ни тимĕрĕ, ни ылтăнĕ. Пире пăсаканни пĕтĕмпех Хĕвел анăç енчен килет. Хĕвелтухăç енне ытларах пăхмалла халĕ. Çĕнĕ кун хĕвел тухнипе пуçланать.

ГЕОРГИЙ. Европи темшĕн пирĕнтен пуянрах пурăнать.

ВИТАЛИЙ. Хамăр тăрантса пурăннă та, пуйнă ĕнтĕ. Ĕмĕр ăна юравлă пулас тесе тăрăшнă. Халь самана улшăнать пек-ха. Улшăнать.

ПРАСУК. Эсĕ Владимир Кирилчă пек учитлĕ мар пуль, ăслă калаçнă пек сăмахлан? Вăл пĕлсе-чухласа калаçатчĕ.

ВИТАЛИЙ. Анне, эсĕ мĕн? Манса кайрăн-им, çар çынни вĕт эпĕ. Салтак.

ПРАСУК. Араччĕ çав, салтакчĕ çав. Пăтранатăп çапла хушăран кăнтăрла çывăрса илнĕ хыççăн. Кăнтăрла çывăрмалла мар та ĕнтĕ, ыйхă пусса килет çав. Пите çуса илмелле, уçăлса каятăп вара. Тек пăтрашмасп.

***Георгий мунчана кĕрсе алтăрпа шыв илсе тухать.***

***Прасук карчăк питне çăвать.***

ПРАСУК *(питне çунă май )*. Шикленкелетĕп те тепĕр чух, çапла пăтранса килтен тухса кайса çухаласран. Мисаила пăхса тăма хытарсах калап. Халь ăçтаха вăл – курăнмасть? Эсир кӳрентермерĕр пуль? Ан кӳрентерĕр. Вăл манăн çур пурнăç вĕт. Унсăр мĕнле эпир кунта карчăк-кĕшĕк? Алăсăр, урасăр пекех. Ăçта курăнмасть-ха вăл. Кайса пăхкалам-ха. Мунчи пулмарĕ-и-ха сирĕн?

ГЕОРГИЙ. Хатĕр.

ПРАСУК. Пулнă пулсан, кĕрĕр. Кайран сивĕнсен, ăшши пулмасан, мĕн мунчи пултăр вăл? Вутта сая яни кăна. Эп те кайран çăвăнса илем. Лидя кумана та кайса систерес, хатĕр тăтăр мунчана. Вăл та самайранпа кĕменччĕ-ха. Тăтăш хутаймастпăр та ĕнтĕ эпир, пĕр хутнă чух тасалса илес.

***Прасук карчăк кăштăртатса каять.***

***Виталийпе Георгий ăна хĕрхенӳллĕн пăхса ăсатаççĕ.***

ВИТАЛИЙ. Тăван яла килнипе тапса тухнă туйăмсем хăйсен çыраннех кĕре пуçларĕç пулмалла, чун пусăхлансах пырать – йывăр аннене капла курма.

ГЕОРГИЙ. Ватăлнă ĕнтĕ, ватăлнă. Юлашки вăхăтра уйрăмах йăшса кайрĕ. Нимĕн те тăваймастпăр.

ВИТАЛИЙ *(татăклăн)*. Мĕнле нимĕн те тăваймастпăр? Тумалла! Мĕнле те пулин шухăшласа тупмалла. Кун пек юрамасть! (*Алтăрта юлнă шыва пуçĕ тăрăх ярать.)* Хăçанччен çапла пĕччен пурăнтаратпăр?

ГЕОРГИЙ. Мунча пулнă. Кăварĕсем çук. Пĕрре лайăх ăшши парса кăлар та, йӳççисем тухса кайччĕр. Эпĕ çиччас шăлăнмаллисем илсе килетĕп. *(Пӳрте кĕрсе каять. Часах тухать те мунчана кĕрет.)*

**Çиччĕмĕш курăну**

***Мариша килет.***

МАРИША *(кайма тăнă Виталие чарса)*. Виталий!

ВИТАЛИЙ. Эсĕ каллех килтĕн-и?

МАРИША. Хавас мар-им курма? Кĕтсе илен те вара.

ВИТАЛИЙ. Кĕçех вăл вĕçтерсе çитет акă. Эпĕ сериалсене килĕштерместĕп.

МАРИША. Леша килмест. Эпĕ ăна ăнлантартăм. Вăл мана итлет.

ВИТАЛИЙ. Хăюллă хĕрача эсĕ.

МАРИША. Ĕç тунă чухне хăюллă пулмалла.

ВИТАЛИЙ. Манăн хăюлăх тени çитсех каймасть, ахăртнех.

МАРИША. Хăюллă мар пулсан, мĕнле Чечняра пулнă? Унта хăрушă пуль?

ВИТАЛИЙ. Пулнă хăрушши те.

МАРИША. Халь мĕншĕн хăюллă мар? Эпĕ çар çыннисем харсăр та чăрсăр тесе. Е эпĕ санăн кăмăлупа мар? Ирхине килĕшнĕ пек туйăннăччĕ.

ВИТАЛИЙ. Сăлтавĕ унта-им?

МАРИША. Эппин мĕнре?

ВИТАЛИЙ. Ача! Ăнланатăн-и?

МАРИША Ача кирлĕ те пире. Пĕрре тĕл пулнă та уйрăлса кайнă. Кашни хăй çулĕпе.

ВИТАЛИЙ. Кайран мĕнле пурăнмалла?

МАРИША. Эсĕ аса ан ил, манса кай.

ВИТАЛИЙ. Таçта манăн ача пур... Ун çинчен шухăшламасăр пултараймастăп вĕт-ха эпĕ?

МАРИША. Унăн пурнăçĕ лайăхах пулать. Йĕркеллĕ. Санран алимент шырамастпăр эпир. Пирĕн хамăрăнах укçа çитет.

ВИТАЛИЙ. Ача пуррине пĕле-тăркач... çук, эпĕ ун пек пултараймастăп.

МАРИША. Лайăх çын пекех туйăнатăн, анчах чунсăртарах эсĕ, капитан. Тепĕр çын чунне ăнланмастăн. Эпĕ сана шаннăччĕ. Шел.*(Пăрахса утать. Кăштахран чарăнса)* Эпĕ ăна, пĕчĕкскере, сĕмленме пуçланăччĕ, унăн куçĕсем мĕн тĕслĕ, сăмси мĕнле...Шухăшăмра эпир унпа уçăлса çӳреттĕмĕр, чучупа ярăнаттăмăр, чечек татса пуçкăшăль тăваттăмăр. Эсĕ... *(Чунĕ хурланса килнĕрен малаллине калаймасть, куççуль çăтса чупса каять.)*

ВИТАЛИЙ. Тăхта! *(Мариша хыççăн кайма тăрать, Чарăнать.)* Çук! Çук! Вăл ача вĕт! Чĕрĕ чун! Вăл манăн тĕпренчĕк пулать! Манăн сывлăш! Манăн юн! Пулмасть нимĕнле инди фильмĕ те, нимĕнле сериал та! *(Урса кайса физзарядка тума пуçлать.)*

***Тăкăрлăкра ӳсĕртерех Соня курăнать. Хӳме çумне лăпчăнать те мунча енне тинкерсе пăхма пуçлать.***

***Мунчаран пушă витресемпе Георгий тухать.***

***Соня картах туртăнать, Георгие чĕнесшĕнччĕ те пулас, анчах хӳме кутне кукленсе ларать.***

***Георгий Соньăна асăрхамасть, шыв ăсма каять.***

***Виталий Соньăна асăрхаса чарăнать.***

ВИТАЛИЙ. Соня? Эсех-и ку? Е эпĕ пăтраштаратăп?

***Соня Виталие тĕсесе пăхать.***

СОНЯ. А-а, Виталий. Зрастье.

ВИТАЛИЙ. Тем сиксе тухман пулĕ вĕт? Аптраса ӳкмен-и?

СОНЯ *(кулма хăтланса).* Эпĕ акă ӳсĕр. Ӳсĕр. *(Тăрасшăн пулса)* Вăт çапла намăс курать халь санăн умăнта Соня. Ай намăс мана, намăс.

ВИТАЛИЙ. Вăл тарама-ха, эпĕ темĕн пулман-и терĕм. *(Соньăна тăма пулăшма тăрать.)*

СОНЯ *(хирĕçлесе).* Çук, эпĕ хамах. Хамах. Пуç çаврăннă пек пулчĕ те. Эпĕ хамах тăрап.

ВИТАЛИЙ. Ăсатмалла пулсан, ăсатса яратăп. Килĕр тĕлне манман-ха.

СОНЯ. Çук, çук, хамах каятăп. Чиперех каятăп. Аван мар пулчĕ капла. Аван мар. Хамах каятăп. *(Тайкаланарах утса каять.)*

***Виталий ăна пăхса ăсатса ярать. Карта урлă ваштах каçса мунча енне утать.***

***Карта леш енче Леша курăнать. Хыр шишкипе Виталие перет.***

ВИТАЛИЙ. Каллех артналет-и? *(Ун-кун пăхкалать.)*

ЛЕША *(шăл йĕререх).* Мĕн, вĕтеленсе ӳкрĕн?

ВИТАЛИЙ. Каллех килтĕн?

ЛЕША. Эсĕ Маришăна кӳрентернĕ.

ВИТАЛИЙ. Эпĕ? Манăн ăна мĕншĕн кӳрентерес?

ЛЕША. Эпĕ те çавăн çинчен ыйтасшăнччĕ санран.

ВИТАЛИЙ. Хăй каларĕ-и кӳрентерни çинчен?

ЛЕША. Куçĕсем хĕрелнĕччĕ унăн, эппин йĕнĕ.

ВИТАЛИЙ. Тен, сана пула йĕнĕ вăл? Санăн мыскарусемшĕн намăсланса. Ыйтса пĕл малтан хăйĕнчен. Санăн вырăнта эпĕ чĕркуçленсе каçару ыйтнă пулăттăм унран. Манран та ыйтма юрать.

ЛЕША. Санран? Чĕркуçленсех?

ВИТАЛИЙ. Ӳретĕн пăтранса. Арăмна ним сăлтавсăр çылăха кĕртсе.

ЛЕША. Ан асăн манăн арăм ятне!

ВИТАЛИЙ.  Унашкал арăма алă çинче çĕклесе çӳремелле, Турăш вырăнне хумалла.

ЛЕША *(урарах).* Эсĕ лайăх пĕлетĕн-çке манăн арăма. Ăçтан? Мĕнле? Мĕн, çывăхлантăр-им?

ВИТАЛИЙ. Итле-ха, ăçтан тупăнтăн эсĕ, сӳтĕкскер?

ЛЕША. Мĕн, чĕнместĕн? Эпĕ санăн хуравна илтместĕп. Ăçтан пĕлетĕн манăн арăм мĕнлине?

***Хĕрӳ калаçăва илтсе Георгий тухать.***

ВИТАЛИЙ. Санпа чипер калаçма çук курăнать, чăмăрпа кăна калаçма пулать пулмалла. Эсĕ мана йăлăхтарса çитертĕн. Эпĕ, урса кайсан, хăрушă çын.

ЛЕША. Ан çывхар! *(Чакса тăрать.)* Эпĕ санран та хăрушăрах пулма пултаратăп! Хамран култармастăп! Эпĕ килеп сан пата! Килеп!  *(Пăрахса каять.)*

***Виталий,  хăйне аран алăра тытса, кил карти тăрăх кума пуçлать.***

ГЕОРГИЙ. О! Чăн-чăн сериалах кайнă пулас кунта сирĕн? Вăхăтра вĕçлемесен, кайран каю шăтма пултарать. Чавса çывăх та çыртма çук пулать.

ВИТАЛИЙ. Эсĕ Соньăна аса илсе калатăн-и? Сирĕн тата мĕн пулса иртнĕ унта? Анне калать, упăшки те пăрахса кайнă, тет. Сана пула-и? Мĕн, çамрăк-

лăхрине аса илес терĕр-им? Эсĕ ун хыççăн чупкалаттăн пулас. Вăл сивленĕ пек ас тăватăп сан юратăвна. Халь, мĕн, ытлашши шала кĕрсе кайрăр-им?

ГЕОРГИЙ. Ху асăрхан.

ВИТАЛИЙ. Çук, манăн нимĕнле лав стори те пулмасть. Офицер сăмахĕ! Салтакшăн çирĕп тыл - свято.

ГЕОРГИЙ. Ну, ну... Инди фильмне куçса ан кайтăр. Асăрхан.

ВИТАЛИЙ. Унта сюжет тенине аталанма сăлтавĕ çук. Пĕр геройĕ, ĕçме пултарайманскер, ĕçсе лартнă та... – çавă çеç.

ГЕОРГИЙ. Пуçна ан çухат. *(Пăрăнса утать.)*

ВИТАЛИЙ *(Георгий кайнă енне кăшкăрса).* Эпĕ Инди фильмĕсене мар, боевиксене ытларах кăмăллатăп. *(Çавăнтах хăй сăнарланă тăшманпа çапăçнă манер каратэ хăтланăвĕсене тума пуçлать, сикет, тапать, чăмăрĕпе карта хăмине тăнлаттарать те хуçса пăрахать. Çĕнĕ хăма шырама каять.)*

***Карта хушшипе сăнаса тăнă Мисаил та Виталий хăтланнă пек айкашма пуçлать. Вăл та чăмăрĕпе хӳмене тăрăслаттарать, çавăнтах аллине ыраттарнипе нăйкăшса ярать, сасăпах йĕме тытăнать.***

***Картлашка çинче Прасук карчăк курăнать.***

***Мисаил ыратакан аллине кăтартса, куççуль витĕр ăна хăй чĕлхипе темĕн ăнлантарма тытăнать.***

ПРАСУК. Мĕн пулчĕ-ха ĕнтĕ? Мĕн турăн аллуна?

МИСАИЛ ***(Виталий кайнă енне кăтартса).*** Ăă-ă! Ăă-ă-ă!

ПРАСУК. Тем калан ĕнтĕ? Апап турăн-и? Атя, вĕрсе ярам, кил, вĕрем. *(Мисаил аллине вĕрет.)* Уф! Уф! Иртсе каять, иртсе каять. Хуçсах пăрахман пуль-ха? Ыратать, ыратать те тӳрленет.

***Мисаил çаплах Виталий кайнă енне кăтартать, ăнлантарма хăтланать.***

***Шăпах Виталий курăнать. Хăма, мăлатук йăтнă.***

***Мисаил карчăк хыçне пытанать.***

ПРАСУК. Мĕн, Виталий тетӳ-им айăпли? *(Виталие)* Эсĕ кӳрентермен пулĕ вĕт Мисаила? Унашкал ан хăтлан, вăл айван ача. Шăпи ахаль те кӳренӳллĕ унăн. Чипер, йĕркеллĕ çынах пулмаллаччĕ те. Сирĕн пекех. Ан кӳрентер.

ВИТАЛИЙ. Мĕн калаçатăн эсĕ, анне? Ăна кӳрентерме мĕнле пултараям?

ПРАСУК. Ара, аллине ыраттарнă та вăл, эсĕ мар-и терĕм. Сан енне кăтартать те.

ВИТАЛИЙ. Мисаил, эпĕ сана кӳрентертĕм-и? Мĕнле кӳрентертĕм? Çук ĕнтĕ, ăна кӳрентерсе çылăха кĕместĕп ĕнтĕ.

ПРАСУК *(Мисаила).* Атя, отьколонпа сĕрсе çыхса ярам. *(Алине пăхса)* У-у! Шыçа та пуçланă-çке ку санăн. Атя, атя, хăвăртрах çыхар. *(Мисаила çавăтса пӳрте илсе кĕрсе каять.)*

***Виталий хуçăлнă хăма вырăнне урăххи çапса лартать. Мунчана кĕрсе каять.***

***Аллине тутăрпа чĕркесе лартнă Мисаил курăнать. Карта патне пырса аллине ыраттарнă хăмана хăй чĕлхипе вăрçма пуçлать. Ятлать, урипе тапса хăварать.***

***Георгий килет.***

ГЕОРГИЙ. Çат! Çат! Çатçаçать,
Милĕк вирлĕн ятлаçать.
Мунча пултăр тухтăрĕ,
Тирĕк-мирĕк тухтăр-и?

ВИТАЛИЙ *(мунчаран тухать)*. Куçарса каясчĕ мунчана лере, виç кунта пĕрре хутаттăмах.

ГЕОРГИЙ. Милĕк тутине те манса кайнă пулĕ-ха атту.

ВИТАЛИЙ. Хутса тултарнă та вара эсĕ, сывлама çук - çунтарать.

ГЕОРГИЙ. Хăнăхманран кăна вăл.

ВИТАЛИЙ. Кун пек мунчара мĕнле чăтаян? Манăн тир ултă хут кăна вĕт!

***Мунча умĕнче выртакан йывăç каски çине ларaççĕ.***

ВИТАЛИЙ. Тепĕр чухне шухăшлатăп та, мĕн шыраса тухса кайнă эпир тĕнчене? Пурăн ĕнтĕ тăван ялтах. Асаттесем, аттесем пурăннă вĕт-ха, ĕмĕрленĕ ĕмĕрне. Ялта пурăннăран пурнăçа ӳпкелешсе сăмахланине пĕрре те ас тумастăп. Чипер пурнăçах тунă, пире те ыттисенчен нимпе те катăк ӳстермен. Юрăхлă çынах тунă. Таçта унта хула пурри çинчен асра та пулман пуль вĕсен? Пире хула кирлĕ. Çӳретпĕр пăтранса. Сапаланă пăрçа пек. Пĕр шутласан, хăрушă: йăх тăванлăхĕ татăлать, çемье арканать. Санпа та, акă, тăван пиччепе, курнăçасси теплере пĕрре.

ГЕОРГИЙ. Эсĕ çамрăк чухнех çапла философ пулнă-и? Эпĕ сана пĕлместĕп те-им?

ВИТАЛИЙ. Аслисем вĕт-шакăра картне хуни хăçан пулнă вăл? Эпир ăна урапан кайри кустăрмисем малтисен йĕрĕпе чупнă пек аслисем евĕр пулма тăрăшнă. Эсĕ ху ун чухне мĕнле пулнине ас тăватăн-и хăть? Çуталса, çиçсе тăраттăн. Правурччĕ питĕ. Пĕрехмай хаваслăччĕ. Халь пăхатăп та, йăлт пусăрăнчăк эсĕ.

ГЕОРГИЙ. Ватăлатпăр.

ВИТАЛИЙ. Пурнăçĕ чипер пулсан, çын ватăлни туйăнмасть вăл. Санăн, мĕн, килте йĕркеллех мар-им?

ГЕОРГИЙ *(калаçăва малалла тăсма кăмăл тумасăр)*. Чиперех. Атя, кĕрер. Мунча ăшши сая ан кайтăр.

ВИТАЛИЙ. Кунти ыйтусене татса парасах пулать – аннепе мĕн тумалла? Капла хăварма юрамасть. Çын умĕнче те аван мар. Икĕ ывăл çинче - хăр-пĕччен.

ГЕОРГИЙ. Пирĕн кăна-им? Кунта ялĕпех çапла.

ВИТАЛИЙ *(хĕререх)*. Çыннăн кирек мĕнле пултăр, пирĕн çынла пулмалла.

ГЕОРГИЙ. Туятăп, эсĕ мана айăплатăн.

ВИТАЛИЙ.Эсĕ çывăхарах пурăнатăн.

ГЕОГИЙ. Эпĕ ахаль те, кашни пушă вăхăт тупăнсан, килсе кайма тăрăшатăп. Ну манăн хамăн çемье пур, вĕсемпе те пулас пулать.

ВИТАЛИЙ. Çемйӳпе пурăнма ĕлкĕрен, анне ĕмĕр пурăнмасть. Мĕншĕн хĕл каçма хăть илсе каймалла мар? Сирĕн хваттер пысăкчĕ вĕт, пĕр кĕтес тупса параян ĕнтĕ. Пĕр тесен, килтисем те ăнланма тивĕç.

ГЕОРГИЙ. Сана калама çăмăл, эсĕ аякра пурăнатăн та.

ВИТАЛИЙ. Ăнланмаççĕ пулсан, мĕнле çемье вăл? Ку вăл сана хăвна, аннене хисеплеменниех!

ГЕОРГИЙ. Виталий, эсӗ ӑнланмастӑн. Вӗсем пирӗн пек мар, урӑхла ҫынсем! Вӗсем – интеллигентсем!

ВИТАЛИЙ. Вара мӗн? Пулччӗрех интеллигентсем! Вӗсен, мӗн, чунӗсем ҫук-им? Карчӑка хӗрхенмелле мар-и? Вӗсемшӗн ют ҫын-им вӑл? Ҫывӑхран ҫывӑх тӑван. Кӗрӳ амӑшӗ.

ГЕОРГИЙ. Анне хӑй те пурӑнаймасть вӗсемпе. Шухӑшласа пӑх хӑвах, хуньӑм манӑн хулари чи пысӑк заводра тӗп инженер пулса ӗҫленӗскер, хуняма - медицина наукисен докторӗ, профессор. Пирӗн анне кам? Мӗнле пӗр чӗлхе тупайччӗр вӗсем? Эпӗ шухӑшласа пӑхман мар ӗнтӗ. Чуна нумай ыраттарнӑ.

ВИТАЛИЙ. Юрӗ, текех, анне ҫинчен шухӑшласа пуҫна ан ват, чунна та ан ыраттар, эпӗ хамӑн шухӑша турӑм: кунтан кайсанах рапорт ҫыратӑп, ҫаврӑнса пӑхмасӑрах киле! Пурнӑҫа кунта та тума пулать! Манӑн пӗрех генерал пулас ӗмӗт ҫук.

ГЕОРГИЙ. Эпӗ хам куҫса килетӗп.

ВИТАЛИЙ. Мӗн, хӑвӑн лӑпкӑ та канӑҫлӑ, *(ӳӳҫӗн кударах)* интеллигентла ҫемйӳне аркатса-и? Вӗсем сана ӑнланмӗҫ. Ху та кунта, упа пек пӗччен пурӑнса, ӗҫке ерсе кайма пултаратӑн. Кампа пӗрле чуна уҫса ӗҫмелли пур. Соньӑпа пӗр чӗлхе тупнӑ пек ӑнлантӑм.

ГЕОРГИЙ. Соньӑпа пӗрлешетпӗр.

ВИТАЛИЙ. Пӗрлешетӗр?

ГЕОРГИЙ. Хӗрача шкул пӗтерессе ҫеҫ кӗтнӗччӗ. Татӑклӑ шухӑш.

***Пӗр вӑхӑт иккӗшӗ те чӗнмеҫҫӗ.***

ВИТАЛИЙ. Эсӗ халь чухӑммӑн персе ятӑн-и? Тӗплӗ шухӑшламасӑр.

ГЕОРГИЙ. Хӑвах тӗртсе илтӗн-иҫ Соня пирки.

ВИТАЛИЙ. Чӑнласах калаҫатӑн-и?

ГЕОРГИЙ. Пытармалли ҫук. Мана пула Соньӑн пурнӑҫӗ арканчӗ, эппин ӑна хамӑнах майлаштарас пулать. Куратӑн вӗт, ӗҫкӗпе тӗпренех пӗтет. Хамӑн пурнӑҫ пирки каласан, унта арканмалли нимех те ҫук. *(Мунчана кӗрсе каять.)*

***Мариша килсе тухать. Виталие асӑрхаса чарӑнать.***

МАРИША *(пӑшӑлтатарах)*. Виталий! Капитан!

ВИТАЛИЙ *(Мариша патне пырса)*. Эпӗ сана каларӑм вӗт, вӗҫтер кунтан хӑвӑртрах, курӑнса ан ҫӳре текех, анне асӑрхасан патак ҫитерет.

МАРИША. Эпӗ урӑххи пирки.

ВИТАЛИЙ. Мӗн пирки?

МАРИША. Леша тек килмерӗ-и? Вӑл йӑлт анраса кайнӑ. Урмӑшса. Сана кӑштах асӑрхан тесшӗнчӗ. Атту вӑл мӗн те пулин туса хурать те кайран хӑех айӑплӑ пулса тӑрать.

ВИТАЛИЙ. Юрӗ, асӑрханӑп. Хӑвӑнпа нимех те пулмӗ-и?

МАРИША. Ҫук, мана тӗкӗнмест вӑл. Леша лайӑх ҫын, халь урмӑшнипе кӑна ҫапла. Урӑлать те лӑпланать.

***Леша курӑнать.***

ВИТАЛИЙ. Ак сӑмах ҫинех.

ЛЕША. Ха! Каллех пӗрле? Шӑкӑл-шӑкӑл калаҫу, да? Нарспипе Сетнер?

МАРИША. Леша, эс мӗскер? Тӑна кӗр, эпӗ сана веҫ ӑнлантаратӑп кайран.

ЛЕША. Мĕн ăнлантарса парасшăн эсĕ? Эпĕ, мĕн, суккăр-им? Курмастăп-им? Пăрăн кунтан! *(Рычак ярса тытать.)*

МАРИША. Леша! Чарăн! Ним те пулман. Илтетĕн-и? Нимĕн те!

ЛЕША. Пăрăн терĕм сана! Эп малтан унпа сăмахлап. Прапор, эпĕ сана мĕн терĕм? "Япалусене пуçтар та тухса вĕçтер!" терĕм-и? Эсĕ халĕ те шăлман-и кунтан? Хĕрĕх пилĕк минут тахçанах иртсе кайнă. Звонок пулнă. Эпĕ сана асăрхаттарнăччĕ.

ВИТАЛИЙ. Эс, ботаник, çаплах урăлса çитеймен-им? Çаплах минресе çӳретĕн-и?

ЛЕША. О, эпĕ биолог пулнине те пĕлен, да? Мариша каларĕ-и? Çывăхах паллашнă курăнать апла.

ВИТАЛИЙ. Итле-ха, тăванăм.

ЛЕША. Эпĕ санăн тăвану та пулса тăтăм-им? Хăçантанпа? Пуçану мар-и тата? Ха-ха-ха!..Тупнă тăванне! Пăрăн, Мариша! Атту сана та лекет.

ВИТАЛИЙ *(тарăхсах)*. Пăхатăп та, эсĕ ăнланакан йышши мар курăнать. Арçын-тăк, атя, арçынла калаçар эппин. Асăрхаттаратăп, ӳкĕнмелле ан пултăр кайран. Эпĕ сана ыррăн пăрахса кайма сĕнтĕм-и? Сĕнтĕм. Паçăр та, халь те. Анчах та эсĕ эпĕ каланине ăса илесшĕн те мар курăнать. Ун пек чух, каçар та, урăх саккунсем хута каяççĕ. *(Маришăна айккинелле тĕксе ярать.)* Айккинелле кай-ха.

МАРИША. Эс мĕскер? Чарăн!

ЛЕША. Ан тĕкĕн Маришăна!

ВИТАЛИЙ. Кĕленче мар, ванса каймасть. Ну кил! Кил кунтарах! Ан хăра! Ытлашши ыраттармастăп. *(Леша патнелле утать.)*

ЛЕША *(тискеррĕн)*. Ан çывхар тек – рычакпа яратăп! (Сулкалашма пуçлать.) Ан çывхар!

***Виталий пăрăнкалама ĕлкĕрет. Унтан тахăш самантра ялт! сикет те Лешăна урапа тапать. Леша чикеленсе каять.***

ВИТАЛИЙ. Арăмна ахалех айăпа кĕртетĕн. Сăлтавсăрах.

***Мариша Леша патне ӳпĕнет.***

МАРИША. Леша! Леша! *(Йĕме пуçлать. Унтан сасартăках Виталий çине сиксе ӳкет.)* Эсĕ ăна вĕлерсе пăрахрăн вĕт, вăл сывламасть. Сывламасть! Васкавлă пулăшу чĕнмелле! Мĕн туса хутăн эсĕ? Чунсăр! Эсĕ тискер çын! Тискер! Эпĕ сана ăна ан хĕне терĕм вĕт! Вăл сывламасть! Сывламасть! *(Леша умне пĕшкĕнсе)* Леша! Лешенька! *(Йĕрет.)*

ВИТАЛИЙ. Кĕçех тăна кĕрет. *(Пăрăнса утать.)*

***Георгий васкаса тухать.***

ГЕОРГИЙ. Мĕн çĕмĕрĕлетĕр эсир кунта?

ВИТАЛИЙ. Ав пĕри ĕçсе лартнă та...каштах тăнне çухатнă. *(Пӳртелле кĕрсе каять.)*

***Леша тăна кĕрет. Ăнланмасăр унталла-кунталла пăхкалать.***

ЛЕША *(Маришăна)*. Ма йĕретĕн эсĕ? Ан йĕр. Ан йĕр, Мариша. Эпĕ сана юрататăп вĕт.

МАРИША. Эпĕ те сана, Леша. *(Лешăна тăма пулăшать.)* Атя тăр, тăр. Эс асăрханарах. Ыратать-и? Санăн килмелле марччĕ. Килместĕп терĕн вĕт-ха эсĕ. Атя, ерипен утатпăр. Эсĕ асăрханараххăн, асăрханарах. *(Çавăтса тухса каять.)*

***Георгий мунчана кӗрсе каять.***

***Мисаил курӑнать. Виталий кӗрсе кайнӑ енне шиклӗн пӑхкаласа илет те пахчине вирхӗнсе кӗрсе ҫухалать.***

***Тӑкӑрлӑкпа картаран тыткаласа Соня килет. Чӑрӑнать. Мунча енне пӑхса хытать.***

***Георгий мунчаран тухать. Соньӑна асӑрхать. Ун патне утать.***

ГЕОРГИЙ. Эсӗ каллех ӗҫнӗ. Ӗнер калаҫрӑмӑр вӗт-ха.

СОНЯ. Эпӗ ӗҫесшӗн марччӗ – чӑтаймарӑм. Чӑтаймарӑм ҫав. Эсӗ каҫар мана, Георгий. Ку манерех пулакан марччӗ, юлашки вӑхӑтра тем ҫавнашкал ҫемҫешкеленсе кайрӑм. Хампа хам хуҫа мар, хама чараймастӑп.

ГЕОРГИЙ. Капла хӑвӑн пурнӑҫна пӗтеретӗн эсӗ, Соня. Пусӗпех.

СОНЯ *(йӳҫҫӗн кулса).* Мӗн пурнӑҫӗ ӗнтӗ манӑн текех? Кама кирлӗ вӑл? Хама та кирлӗ мар та.

ГЕОРГИЙ. Кӑштах алла илес пулать хӑвна.

СОНЯ. Мӗн тума? Пурӑнма-и? Манӑн пурӑнас килмест.

ГЕОРГИЙ. Унашкал юрамасть. Пурнӑҫ пӗтмен вӗт-ха.

СОНЯ. Манӑн пӗтнӗ. Эпӗ никама та кирлӗ мар. Хама хам та кирлӗ мар. Тахҫан манӑн питӗ кирлӗ пулас килетчӗ сана. Пулаймарӑм.

***Георгий чӗнмест.***

СОНЯ. Чӗнместӗн. Эпӗ ӑнланатӑп. Ӑнланман пулсан, ҫӑмӑлрах пулатчӗ пуль мана. Анчах та ҫӑмӑллӑн пурӑнма пӗлеймерӗм.

ГЕОРГИЙ. Атя, ӑсатса яратӑп сана.

СОНЯ *(йӳҫҫӗн кулса).* Юлашки ҫула-и? Ха-ха... *(Юрласа ярать.)*

Ӑсатса яр, савни, ӑсатса яр,
Чӗнтӗр кӗпер урлӑ каҫарса яр.

Тек ан ӑсат. Малалла эпӗ хамах. Ял умӗнче намӑс кӑтартас мар сана. Эсӗ хисеплӗ ҫын вӗт, эпӗ кам? Ӗҫсе супнӑ Соня. Пирӗн ҫинчен ахаль те нумай сӑмах вакласҫӗ пуль. Сана та намӑса кӗртрӗм. Вӑрттӑн юратма пӗлмерӗм. Вӑт, ҫавнашкал айван, ҫемҫешке ҫын пулса кайнӑ эпӗ халӗ, Георгий. Ӗҫме-и? Пӗр тесен, ӗҫме пӑрахма та пултаратӑп пулӗ. Хама алла илесси кӑна. Ӗҫес килнипе те ӗҫместӗп вӗт эпӗ. Чуна пусарса лартас тенипе кӑна. Пӑрахатӑп. Пӑрахатӑп. Акӑ эсӗ каятӑн та, пӗчӗккӗн чунӑм лӑпланӗ. Пусӑрӑнӗ. Вӑхӑт сыватать вӑл. Манӑҫтарать. Е хӑвӑн асапна хӑнӑхса ҫитетӗн те, вӑл пысӑк та мар пек туйӑнма пуҫлать. Ӑнланатӑп вӗт, иртнине каялла тавӑраймӑн. Санӑн хӑвӑн пурнӑҫ, килйыш. Манӑн арканчӗ. Хамах аркатрӑм. *(Вӑхӑтлӑха шӑпланать.)* Юрӗ, мӗн пулнӑ пулнӑ. Акӑ хӗл ҫитет те пӗтӗмпех юрпа шӑлса, хӳсе лартать. Вара пурнӑҫ та ҫӗнӗлле пуҫласла шап-шурӑ хут пек туйӑнма пуҫлать. Темшӗн килӗштеретӗп эпӗ хӗле, шурӑ юра. Мӗн тума каласа паратӑп кусене сана? Сан халь пуҫунта пачах урӑх шухӑшсем вӗт. Хӑвӑртрах манран хӑпас килет, ҫапла-и? Йӑлӑхтарса ҫитертӗм хамӑн пӑтравсемпе? Отпускна та чипер канӑҫлӑ ирттерме памарӑм. Ытла ан ҫилленсем мана, Георгий. Каҫарсам. Эсӗ, чӑннипех те, маншӑн питӗ хаклӑ ҫын пулнӑ пулмалла. Сана пула пурнӑҫа аркатрӑм, анчах та сана пӗрре те ӳпкелеместӗп. Айӑпли эсӗ мар вӗт, хамах. Хам пуҫларӑм ҫак пӑтрава. Вӑл мӗнле вӗҫленессе пӗле-тӑркачах. Ҫавӑншӑн кӑна ӳкӗнетӗп, мӗншӗн вӑй ҫите-

реймерĕм ĕçсе кĕрсе каясран асăрханма? Халь, акă, йăнăша ăнланатăп та пек - чарăнма, хам урлă каçма хальлĕхе хевтем çитмест. Юрĕ, текех минретем мар. Каях. Çаврăнса ан пăх, *(Утса каять. Юррине малалла тăсать.)*

Чĕнтĕр кĕпер урлă каçарса яр,
Кĕмĕл çĕрĕ витĕр, ай, пăхса юл.

***Виталий пӳртрен тухать. Георгипе Соньăна курса тăпах хытать. Унтан хăвăрттăн анса пахчана кĕрсе çухалать.***

***Георгий таврăнать. Мунча умĕнче чарăнать. Вутă каски çине ларать, пирус тивертет.***

***Виталий килет.***

ВИТАЛИЙ. Эсĕ, мĕн, туртатăн-им? Асăрхаманччĕ.

ГЕОРГИЙ. Хушăран. Пăт-пат.

ВИТАЛИЙ. Экстрималлă самантсенче-и? Чун тăвăлса çитсен?

ГЕОРГИЙ. Ахăртнех.

ВИТАЛИЙ. Халь, мĕн, Соня пирки-и?

***Георгий чĕнмест.***

ВИТАЛИЙ. Эсĕ пирус туртатăн ăна пула, вăл ĕçет.

***Георгий шăпăртах. Пирусне кăна таrăннăн ĕмсе илет.***

ВИТАЛИЙ. Каçар та, эпĕ ăнлансах илеймерĕм, сирĕн, мĕн, Инди фильмĕ-им?

ГЕОРГИЙ *(сăмаха пăрса)*. Мунча сивĕнсе каять.

***Георгийпе Виталий мунчана кĕрсе каяççĕ.***

***Прасук карчăкпа Мисаил курăнаççĕ. Карлашка çине пырса лараççĕ.***

***Мунчаран эхлете-эхлете çапăннă сасăсем илтĕнеççĕ.***

ВИТАЛИЙ САССИ. Ой, ăшшине тек ан пар!

ГЕОРГИЙ САССИ. Чăт, чăт, салтак, генерал пулан! Ап-паппа, ап-паппа!

***Мисаил тăрса мунча патне пырса итлесе тăрать, унтан милĕкпе çапăннă манер ашкăнма пуçлать.***

***Прасук карчăк ăна кăмăллăн пăхкаласа ларать.***

ПРАСУК. Ай-йа-йай, ай-йа-йай... Тетӳсемпе мунча кайса кĕр эсĕ те. Кӳрентермеç сана вĕсем. Милĕкпе çапса яччĕр. Атту тусан ăшĕнче чăхсем пек чакаланса çӳрен.

***Мисаил çаплах ашкăнать.***

***Мисаил, ăшша пиçнĕскер, Георгийпе Виталийĕн хĕрӳ калаçăвне илтсе ашкăнма чарăнать, мунча патнерех пырса итлесе тăрать, Прасук карчăк патне чупса кайса ăна ăнлантарма пикенет - Георгийпе Виталий вăрçăнаççĕ имĕш.***

ПРАСУК. Çапăнаççĕ çав, çапăнаççĕ. Мунчара милĕкпе çапăнмалла. Ăшши парса. Чăшш! тутармалла та çапăнмалла. Пĕтĕм кирĕк тухтăр. Эсĕ те кайса кĕр-ха тетисемпе, сана та милĕкпе çапса ярĕç. Çăт-çат! Çăт-çат! Милĕк вăл ӳте те тасатать, чуна та.

МИСАИЛ *("Çук" тенĕн)*. Ĕ-ĕ-ĕ-ĕ! Ĕ-ĕ! *(Прасук карчăка мунча патне сĕтĕрет.)*

***Прасук карчăк ирĕксĕртереххĕн тăрса мунча патнелле лăкăштатать. Ывăлĕсен калаçăвне итлеме пуçлать. Мисаил та унпа пĕрлех.***

ВИТАЛИЙ САССИ. Унӑн пурнасси те шутлӑ кӑна юлнӑ ӗнтӗ! Ну тӑсма пултарӗ тепӗр икӗ-виҫӗ ҫул, нивушлӗ ҫав вӑхӑта чӑтса ирттерме ҫук?

ГЕОРГИЙ САССИ. Ытлашши хамӑрла шутлатӑн. Ялтилле.

ВИТАЛИЙ САССИ. Ӑнланмастӑп, эсӗ, мӗн, хӑвӑн татӑклӑ сӑмахна калама пултараймастӑн-им? Е ху та хваттере кӗнӗ пек ҫеҫ пурӑнатӑн? Нивушлӗ аннене, хамӑра кун ҫути панӑскере, ватлӑхра хӑть кӑшт канӑҫ пурнӑҫ туса пама ҫук? Мӗнле ывӑлсем ун пек пулсан, эпир? Илсе кайӑттӑм хам пата – аякра. Ҫул ҫинчех аптраса ӳкӗ, ҫурма ҫулранах таврӑнма тивӗ. Тупӑкпа. Эсӗ ҫывӑхра! Сан вырӑнта пулсан, каҫар та, послал бы всех куда следует, аннене илсе кайнӑ пулӑттӑм е хам пӑрахса килеттӗм. Анне вӗт вӑл! Пурнасси те унӑн шутлӑ ҫеҫ юлнӑ пулӗ.

***Георгийпе Виталий мунчаран тухаҫҫӗ. Георгий чӗнмест. Итлесе тӑракан амӑшне курмаҫҫӗ.***

ВИТАЛИЙ. Чухлатӑп, анне пирки те санӑн "папӑпа мама", манӑн тӑхлачӑпа хӑта тенӗскерсем, (йӳҫҫӗн кулса) мӗнлерех ӑс пама пултараҫҫӗ. Ваттисен ҫуртне ӑсатма, ҫапла-и? Хӑйсем нихҫан та ватӑлмассӑн. Пирӗн анне, ан тив, хутла ан пӗлтӗр, вӗсенчен ҫӗр хут ытларах интеллигент, ҫынлӑрах.

ГЕОРГИЙ. Тен, ваттисен ҫуртӗнче аннене, чӑннипех те, кӑмӑллӑрах пулать? Ҫынпа хутшӑнма пулать, сӑмах ваклама. Хам та кашни кунах пырса кайма пултаратӑп.

ВИТАЛИЙ. Эсӗ ху мӗн каланине илтетӗн-и, Георгий? Аннене ваттисен ҫуртне? Иксӗмӗр, икӗ сывӑ вӑйпитти ывӑлӗ, пур ҫинче? Хамӑра пурнӑҫ панӑ аннене пурнӑҫӗн вӗҫӗнче ҫавнашкал намӑс кӑтартма-и? Чим, санпа иксӗмӗр эпир ытлашширех хӗрсе кайрӑмӑр пулас. Атя, кӳлле чӑмса килер. Сивӗнер кӑштах. *(Шыва кӗме тухса каяҫҫӗ.)*

***Прасук карчӑкӑн тек итлеме хал ҫук - йывӑррӑн, питӗ пусӑрӑнчӑклӑн пӑрӑнса утать..***

ПРАСУК. Эпӗ ывӑлсемшӗн чӑрмав кӑна пулса тӑнӑ иккен. Манӑн пурнӑҫ вӗсемшӗн – шухӑш. Турӑҫӑм! Мӗн-ма ярса памастӑн ҫаплах ман тӗле вилӗмне? Мӗн-ма мана ҫавӑн чул пурӑнтарса ачамсем валли асап тӑватӑн? Ман пирки вӗсен канӑҫ пурнӑҫ ҫук, лӑпланса пурӑнаймаҫҫӗ. Эпӗ вӗсене телейлӗ пулма ҫуратнӑ вӗт, ӗмӗрӗме вӗсемшӗн ӗмӗрленӗ. *(Йӗме пуҫлать.)* Хамӑн ачасене асап ҫеҫ кӳрсе пурӑнатӑп иккен. Мӗн-ма мана кунашкал пурнӑҫ?

***Мисаил ӑна лӑплантарма тӑрӑшать. Пӳрте кӗрсе ҫухалаҫҫӗ.***

**Саккӑрмӗш курӑну**

***Соня курӑнать. Самаях ӳсӗр пулни палӑрать.Пӗр вӑхӑт мунча енне тӗмсӗлсе пӑхса тӑрать, унтан мунча еннелле утать.***

СОНЯ. Георгий! Георгий! Эсӗ каллех ӳпкелешетӗн ӗнтӗ мана, анчах эпӗ ӗҫмесӗр пултараймарӑм. Манӑн пӗтӗмпех манӑҫас килет. Хама хам пӗлми, туйми. Эпӗ пур та пек, ҫав вӑхӑтрах ҫук та пек. Ӑнланатӑп, саншӑн, тен, халӗ эпӗ ҫук та пулӗ, анчах пӗр шухӑшсӑр, ытахаль пек ҫеҫ тӗл пулнӑ хыҫҫӑн хыпса илнӗ вут-ҫулӑма эпӗ ниепле те сӳнтерме вӑй ҫитерейменӗм. Эрех те путлантарай-

масть иккен ӑна. Ҫунать те ҫунать, хама та ҫунтарать. Астӑватӑн-и, эсӗ ун чухне те мунча хутнӑччӗ. Эпӗ хам килтӗм ун чухне сан пата. Санӑн чарӑлса кайнӑ куҫусене халӗ те питӗ лайӑх астӑватӑп. О, мӗнлерех ҫухалса кайнӑччӗ эсӗ ун чухне! Хальхинче те ҫаплах аптраса ӳкӗн-и? *(Мунчана кӗрсе каять.)* Георгий! Георгий! Эпӗ килтӗм! Эп хам килтӗм! Эсӗ ӑҫта? Ӑҫта? Ха-ха-ха! Лапка айне пытантӑн-и? Е мана йышӑнасшӑн мар? Эсӗ мана килӗштереттӗн вӗт.

***Карта леш енче Леша курӑнать. Аллинче – сенӗк.***

ЛЕША. Эй, прапор! Тух! Дуэле чӗнетӗп эпӗ сана! Джентельментла! Карта урлӑ сенӗксемпе перетпӗр пӗр-пӗрне. Вырӑнтан хускалма юрамасть. Хӑшӗ маларах лектерет! Е эсӗ, е эпӗ! Гладиаторсем пек. Шӑпа хӑй татса патӑр, кампа пулмалла Мариша?

СОНЯ САССИ *(мунчаран).* Уй, мӗнле вӗри кунта! Эпӗ хывӑнатӑп. Эсӗ ҫаврӑнса тӑр.

ЛЕША *(анраса кайнӑн).* Мариша? Мариша! Эсӗ-и? Эсӗ унта? Мунчара? Унпа?

СОНЯ САССИ. Чур, ан пӑх. Вӑтантаратӑн. Ҫук, ҫук, пӗтӗмпех ҫаврӑнса тӑр.

ЛЕША. Мариша!

СОНЯ САССИ. Ха-ха-ха... Эпӗ ҫаплах вӑтанатӑп иккен санран.

***Соньӑн кулли илтӗнет, савӑт-сапа чӑнкӑртатать.***

***Леша урса кайнӑнах.***

ЛЕША. Мариша! Мариша теп! Ах, эсӗ мана илтесшӗн те мар? Тух унтан! Тух! Хӑвӑртрах! Тухмастӑн? Эппин... Эппин... пӗл, эпӗ хамран култармастӑп!

***Леша кӑшкӑрашнӑ сасса илтсе Мисаил курӑнать. Пӑхса тӑрать.***

***Леша чупса каять.***

***Прасук карчӑк пӳртрен кӑштӑртатса тухать. Аллинче пысӑк тӗрке. Мисаил ӑна тимлесе пӑхать.***

МИСАИЛ *(тӗркене кӑтартса, хӑй чӗлхипе "Ку мӗн?" тенӗн).* Ӑ-ӑ-ӑ?

ПРАСУК. Каяс пуль терӗм ӗнтӗ, каяс пуль. Хӑйсем илме килмеҫ, хамӑнах каяс пуль. Мӗн, кунта ачасен пурнӑҫне пӑсса пурӑнас. Вӗсене чӑрмантаратӑп кӑна вӗт пурӑнма. Мана пула вӗсем хӑйсен пурнӑҫне тӑваймаҫҫӗ, авӑ. Ҫулҫӑ та ҫитӗнет, ҫитӗнет те сарӑхса татӑлса ӳкет, ҫӗнӗ ҫулҫӑсем валли ирӗк тӑвать. Ҫӗре ӳксен те ҫӗрмесӗр выртмасть, ҫӗрет, ҫӗнӗ курӑк лайӑх ашкӑрса ӳстӗр тесе тислӗк пулать. Пирӗн те ӗнтӗ, вӑхӑт ҫитсен, каймалла. Каяп ӗнтӗ эп халь, каяп. *(Пӑтранса)* Эсӗ Витали пултӑн-и-ха?

МИСАИЛ. Ӗ-ӗ.

ПРАСУК. Эппин, Георги. Чипер ҫын пулса пурӑн. Мисаила ан кӳрентер. Ӑҫтаха вӑл, курӑнмасть. Пахчана выльӑха кӗртсе ан ятӑр, сыхлатӑр. Аттуш йӑлт таптаса пӗтереҫ. Каҫхине кӗҫналӑксене питӗрсе тӑтӑр, усалсем ан кӗччӗр. Пӑхтӑр. Эпӗ ӑна кайран канихвет илсе парӑп-ха. Юратать вӑл пылака. Хей, пӑтрансах кайнӑ-ҫке эпӗ. Ун валли вак укҫа хатӗрленӗччӗ, парса хӑварам. *(Хӗвӗнчен енчӗк кӑларать. Чӑнкӑрттарать.)* Юратать вӗт вӑл чӑнкӑртатнине. Эсӗ ӑна пар. Асту, хӑвна ан ил. Ҫын япалине ан тыт. Пар вара эсӗ. Савӑнтӑр. Эпӗ каям ӗнтӗ. Мана усалпа аса ан илӗр. Кӳрентересси пулнӑ-тӑр та ӗнтӗ, уншӑн каҫарӑр. Ҫиленсе ан пурӑнӑр. *(Кӑштӑртатса утса каять. Чарӑнать.)* Мунча хутнӑччӗ-им-ха? Шӑрши пур пек. Тасалса кайнӑ пулсан, аванччӗ пулӗ те - хӗвел аниччен

çитес тесе шутлатăп-ха. Каçхи çул усал пулма пултарать вăл. Усал шухăшсем каç енне çуралаççĕ. Каç пуличчен çитесех. Пуçĕпех илсе кайиччен мунча кĕме араç пуль-ха.*(Утать.)*

***Мисаил ăна ярасшăн мар.***

ПРАСУК. Çук, çук, ман каяс пулать. Каймалла. Кунта эпĕ сирĕншĕн шухăш кăна. Сирĕн пурнăç мана пула аркантăр-и?. Эпĕ сире лайăх пултăр тесе тăрăшнă-тăрăшнă та ĕмĕрĕпе, халь, акă, хамах пăсса тăраканни пулса тухрăм. Унашкал юрамасть. Хамăн атьсем вĕт-ха эсир. Хам чун панăскерсем. Ман сирĕн пурнас пурнăçăра пӳлсе пурăнмалла мар. Юрĕ, утам. Атту нумай сăмах вакласа тăрсан, чун хурланĕ. Каям. *(Утса каять.)*

***Мисаил аптраса тăрса юлать. Кайран Прасук хыççăн чупать.***

***Леша васкаса килет. Бензин канистрĕ йăтнă.***

***Мунчаран Соня ахăлтатни илтĕнет.***

***Леша канистра уçса бензинне мунча çине сапать.***

ЛЕША. Прапор! Сана каларăм-и, хăрушă çын пулма пултаратăп тесе? Эппин, кур! Вăхăт панăччĕ сана тухса кайма – итлемерĕн. Халĕ хăвна ӳпкеле! Мариша! Çак самантран эсĕ маншăн çук. Эппин, çуках пул. Эсĕ ман чуна таптарăн. Асăрхаттартăм, унпа çыхланма кирлĕ мар тесе. Ачине Ача çуртĕнчен те илме пулатчĕ. Мана унăн ачи кирлĕ мар! *(Шăрпăк тивертме хăтланать – тивертеймест. Тарăхса курупкине перет.)*

***Мариша пашкаса чупса килет.***

МАРИША. Леша! Леша! Турăçăм, мĕн хăтланатăн эсĕ? Тăна кĕрсем!

ЛЕША. Мариша? Эсĕ ăçтан? Мунчаран-и?

МАРИША. Эсĕ мĕскер, Леша? Мĕнле мунчаран? Анне каларĕ те, питĕ урмăш сăнлă тесе, эпĕ тӳрех ăнлантăм. Чупса килтĕм. Леша, Лешăçăм, тăна кĕрсем! Тархасшăн! Ухмаха ан тух! Эпĕ сана юрататăп! Мана сансăр пуçне урăх никам та кирлĕ мар. Пире иксĕмĕрех лайăх вĕт. Мĕнле чипер, йĕркеллĕ пурăнаттăмăр. Мĕншĕн çав киленӳллĕ пурнăçа пăсмалла? Атя киле. Лăплан. Эсĕ йăлт анраса кайнă.

ЛЕША. Мунчара кам?

МАРИША. Эпĕ унта пулман, ăçтан пĕлем?

ЛЕША. Камăн сассиччĕ? Кам кулатчĕ унта?

МАРИША. Мĕнле кулă пирки калаçатăн эсĕ, Леша? Тăна кĕр.

ЛЕША. Паçăр таках кулатчĕ унта. Хĕрарăм сасси!

МАРИША. Сана туйăннă кăна пулĕ?

СОНЯ САССИ *(мунчаран).* Георгий, эсĕ ăçта? Тин кăна пурччĕ-çке. Эсĕ, мĕн, манран пăрăнасшăн-им? Тин кăна мĕнле çепĕççĕ манпа, ăшă сăмахсем пăшăлтататтăн. Халь, акă, эпĕ сана текех кирлĕ мар. Эпĕ хама хам та кирлĕ мар. Манăн пурнăç никама та кирлĕ мар. Хама та. *(Йĕрĕшме пуçлать.)*

МАРИША. Соня сасси вĕт вăл.

ЛЕША. Соньăн? Эсĕ ăçта?

МАРИША. Эпĕ ăçта пулам ĕнтĕ? Паллах, санпа пĕрле. Эпир яланах пĕрле пулатпăр. Атя, кайрăмăр, манăн кĕвĕç Отелло. Эпĕ шутлама та пултарайман, мĕн тери кĕвĕç иккен эсĕ. Çапла юратаççĕ-и? Мана тасан юратни кирлĕ. Çавнашкал юратăн-и, Леша?

ЛЕША. Ухмах эпĕ, ухмах. Юрату вăл - чир тесе ахальтен каламаççĕ иккен. Эпĕ чирлĕ. Чирлĕ. Мĕншĕн тесен юрататăп сана, Мариша. *(Ыталанса тухса каяççĕ.)*

СОНЯ САССИ *(мунчаран)*. Георгий, эсĕ ыран каятăн, эпĕ пĕччен юлатăп. Тăр пĕччен. *(Йĕрет.)* Маншăн çакă тĕнче пушанса юлать. Мĕнле пурăнас манăн пушă чунпа? *(Ӳлесе йĕме пуçлать. Кăштахран сасартăках шăпланать.)*

***Мисаил пашкаса чупса килет. Мунча патне пырать те ăна тапать, аллисемпе сулкалашса çапать. Хăйĕн чĕлхипе вăрçать. Леша пăрахса хăварнă шăрпăка ярса тытать, сĕркĕчне сĕрме пуçлать. Тивертеймест. Тарăхса шăрпăка мунча еннелле ывăтать. Курăк çине ларать те йĕрсе ярать. Сасартăках йĕме чарăнса сиксе тăрать,***

МИСАИЛ *(питĕ тытăнчăклăн, пăшăлтатнăн)*. А-а-ан-н-не ç-ç-çу-ук! А-ан-н-не ç-ç-çук! Ан-не ç-ç-çук! Ç-çук! Çук! *(Хыттăн кăшкăрса)* Анне çук!.. Çук!.. Çук!!! *(Чупса тухса каять.)*

***Мунча алăкĕнче Соня курăнать.***

СОНЯ. Çук? Манăн та çук. Пурнăç та çук... Юрату та çук... *(Кăштах тăхтаса)* Георгий те çук. Çук... Çук... Георгий манран сивĕннĕ... *(Аташарах)* Георгий, мунчу та сивĕ санăн. Хăвăн чуну пекех. Йăлт сивĕннĕ. Астăватăн-и, ун чух вĕриччĕ. Питĕ вĕриччĕ. Сан ӳтӳ пекех. Сан ӳтӳ мĕнле вĕриччĕ ун чух. Пĕçертсе тăратчĕ. О! Вут-çулăмла хыпса илесле! Çунтарса ярас пек! Георгий, а, Георгий, атя мунчана çĕнĕрен хутатпăр. Вĕри тăватпăр. Унчченхи пекех. Эсĕ вуттине илсе кил. Юман вуттине. Вăл хĕрӳрех. Мунча ăшăнĕ те пирĕн чунсем те ăшăнĕç. Вара каллех вĕри юрату пулĕ пирĕн. Атя, эс вуттине илсе кил, эпĕ хутса яратăп. Манăн сана вĕрин юратас килет, сан хĕрӳлĕхӳнте çунса каяс килет. Георгий, атя пĕрле çунса каятпăр. Вĕри-вĕри, питĕ вĕри юратура.

***Соня мунча çумĕнчи сак çинчен шăрпăк илет. Тивертет. Пĕтĕм тĕнче сасартăках ялт! çуталса каять. Мунчаран тĕтĕм палкаса тухать.***

СОНЯ *(вут-çулăм ăшĕнчен)*. А-а, ытла вĕри сан юратăву, Георгий! Пĕçертет! Çунтарать! Эпĕ кун пек юратăва чăтаймастăп! А-а!.. *(Вут-çулăмран сиксе тухать* те аллисемпе сулкалашса чупса тухса каять.)

***Мисаил чупса килет. Шак хытса анраса тăрать. Унтан йывăррăн картлашка патне утать. Пĕр вăхăт мунча çуннине пăхса ларать. Çăвар купăсĕ кăларса кĕвĕ калама пуçлать. Вăл унăн чун ĕсĕклевĕ пек хурлăн вĕçленми янраса тăрать.***

ВĔÇĔ

**Марина**
**КАРЯГИНА**

# Кĕме юраман алăк

*Инçетрен ĕçлесе таврăннă чухне*
*Пенза тăрăхĕнче*
*аварине лексе вилнĕ*
*Вăрмар чăвашĕсене асăнса...*

Ларнă çĕртех ыйха путнă Виктăр кĕмсĕр-кемсĕр саспа тĕлĕкĕ-мĕнĕпех вăранса кайрĕ. Чип-чипер çĕнĕ çурт хăпартса çитернĕччĕ: сап-сарă пĕренисем кĕленче пек – пўрнепе перĕнсен янăраса каясла! Алăкĕ ярăнса уçăлнă май тăпси юрласа яни те хăлхарах-ха ак – урати урлă хуçалла ярса пусасси кăначчĕ... Чĕлхесĕр янавар темерĕн, мĕн каласшăн алкумне кĕрсе тăнă пуль – куçран чăрр пăхнă та сухалне сиктерсе тем кавлет. Пахча хыçне, курăк ашкăрса ўсекен вырăна, шалча çапсах кăкарса хăварнăччĕ – курăсăн, вĕçерĕнсе юнашар çитсе тăнă. Памарĕ çĕнĕ çурт алăкĕнчен кĕме...

Виктăр хăй керменккине чултан лартма ĕмĕтленет пулин те, йывăççи те, тĕлĕкĕнчи, хăйне кура мар ытла чеченччĕ çав... Халь ĕнтĕ куç умĕнче тĕллĕн-тĕллĕн сăрри хăйпăнса пĕтнĕ, хăми çийĕнсе чĕрпĕкленнĕ алкум картлашки çеç. Ашшĕнчен юлниех... Эх, сая кайрĕ мăн таран телейлĕ тĕлĕк! Мĕне пĕлтерет-ши? Ĕмĕт те çаплах путланасса-ши?..

Ыран мар тепĕр кун тухса каймалла. Улăштармалли кĕпе-йĕм – кутамккара. Ĕçлемелли хатĕр-хĕтĕр – пысăк сумккара. Пĕр нуша кăна: Манькkана такам патне хăварсан чунра канлĕ пулĕ ĕнтĕ? Ытла та иленнĕ-çке вăл Виктăра. Каяс килмест те çав – каймалла...

Уçă тăракан хапха айĕнчен такамсен чăх чĕпписем чĕмпĕлтетсе кĕчĕç. Çăмартаран тухнăранпа типсе те ĕлкĕреймен-тĕр-ха хăйсем, çапах ешĕл курăка кăльт-кĕльт чĕпĕткелем пекки тăваççĕ, шăрпăк пĕрчинчен те çинçе урисене вĕлтĕр-вĕлтĕр чуптарасшăн. Унччен те пулмарĕ, кăрарах çил варкăшĕ вĕçсе килчĕ те сап-сар çăмхасене туххăмра каялла шăлса тухса кайрĕ. Урамра кăлăк чăххи ятлаçать: сехрене хăпартрăр, ют хапха айĕ – вилĕм çăварĕ, мĕн, унта сăмса чикмесен апат çитмест-им аннĕр çумĕнче?..

Мĕнпур аннен сăмахĕ пĕр ĕнтĕ. Виктăрăн та çаплахчĕ. Вăтăра çитнĕ кĕçĕн ывăлне пĕчĕк ача майлах пăхатчĕ: капла çĕрлене юлса ан таврăн-ха, выçă çўремесни, ытла канăçа пĕлместĕн-çке, ывăнтăн пуль, ларса кан кăштах... Хăйне анчах хĕрхенме пĕлмерĕ çав: пĕлтĕр хĕле кĕрес умĕн тĕрĕс-тĕкел çўренĕ çĕртех ўксе вилчĕ, тăлăха хăварчĕ пĕччен ўстернĕ виçĕ ывăлне... Сўтĕлсех кайрĕ вара хальччен

«ЧĂВАШ КАЛАВĔ» КОНКУРС

чип-чипер эрешленсе пынăн туйăннă ăраскал чĕнтĕрĕ: ик-виç уйăхран тĕк тăмалăх тенĕ пек арăмĕ килтен тухса кайрĕ. Икĕ пĕчĕк ачине çавăтрĕ те... Пĕччен çуратнă тейĕн, ыйтса та тăмарĕ. Вара... Мĕн ĕнтĕ вара? Тунсăха качака туянса ячĕ те ăна Манькка теме пуçларĕ. Арăмне чĕннĕ пек. Çичĕ çул ирĕн-каçăн Манькка, Манькка тесе тăнă та – халь урăхла мĕнле сывлăш çавăрас...

Каяс та килмест те çав – каймалла... Пурнăça малалла сыпăнтармалла. Виçĕ хут кайса килнипех ытлаван ăнтарнăччĕ-ха, ăна-кăна туянса та хунă. Ĕçĕ-пуçĕ каплах кал-кал пырсан капăр кăна керменкке çĕклесе лартĕ те ак, пĕр телейлĕ кун арăмĕ икĕ пĕчĕк ачине çавăтса каялла çаврăнса çитĕ: "Пултаратăн-çке эс, Виктăр", – тейĕ...

Паян шухăшĕсем шуйхатнă кăткă тĕмми пек канăççăр Виктăрăн...

Ĕçĕ ялтах пулнă пулсан пуртă çакса килтен аякка тухса каясси пурччĕ-и? Ӳркенсе тăмĕччĕ, атя, укçине пит кĕсье мăкăрăлмаллах памасан та, пĕренелле те кĕрĕшме пулатчĕ. Эп сана çакна парап – эс мана çавна пар... Майлашăнса пырĕччĕ çапла пĕчĕккĕн пурнăç. Çук çав, апла пулса пĕтмерĕ. Ялти ытти вăйпитти арçынпа пĕрле тухса кайрĕ тĕпкĕч Виктăр та ялтан. Тепĕр хут çара кайнă пек. Салтак юрри юрласа килĕрен-киле çӳременни анчах...

– Темскер туса пăрахма шут тытнă-ха эс! – Чарăнса янахĕпе туйи пуçне тĕревленсе тăрать ял вĕçĕнче çынран писерех пурăнакан сухаллă Мучи. Куçĕ çинех усăнса аннă вăрăм та çăра куç харши витĕр ăшчикрине курас пек шăтарса пăхать. – Сăнап та, пĕр канăççăр каллĕ-маллĕ хутлатăн.

Виктăр хальччен ун сассине илтсех кайман. Ятне те пĕлмест. Пурте "Мучи" теççĕ те, кам пĕлет, тен, урăхла ячĕ çук та.

Мучи Виктăр чĕнме тăхтанине кура малалла шахвăртать.

– Тепре туй лартас теместĕн пуль те? Тĕлĕкĕ те тĕлленчĕ çав, аре... Аннӳ сана чăлт шурă туй каçчумĕ туянса панă пек. "Каснă чĕлĕ çыпçăнмĕ, мăшăрсăр тертленсе ан пурăн, ывăлăм, пăсăлса кайăн. Хальхинче арăмна хамах тупса парăп", – тет пек каçчумне сана тăхăнтартма хăтланса. Çанни темле хирĕнчĕклĕ пулчĕ те, эс ниепле те тăхăнаймастăн пек. "Тăвăр ку мана. Ав Шăпчăк Иллине кайса пар, ăна чухах пулма кирлĕ. Е Чышкă Ванине. Шăкăрин урçа-хусах, авланччăр", – терĕн те, вăранса кайрăм...

– Мĕн туйĕ? Кирлĕ мара ан калаçах, Мучи. Виçмине каллех Мускав леш енне ĕçлеме тухса каяс тетпĕр-ха. Ханттар Ваççи, Чышкă Вани, Шăпчăк Илли унта, хирĕçри Юман Арăмĕн мăнукĕ Вечча, Хавассен икĕ ывăлĕ... Сакăр килтен пурĕ тăххăрăн.

– Мускавне пылпа-çупа сĕрсе хунă пулсан çӳрĕрех ĕнтĕ йĕм çĕтсе. Ĕлĕк пире тăван çĕрех тăрантарнă... Чăтнă та ĕçленĕ миталь памалăх! Хальхи этем сахалпа çырлахми пулчĕ çав вăл. Ăна тӳрех курттăм кĕтĕр...

– Алăк уçса хупмасăр епле пурнăç тăвас тен-ха? Çӳремелле.

– Тĕнчен алăкĕ нумай пулĕ вăл... Кашнин хăлăпĕнчен пули-пулми пырса туртаймăн... Вăхăчĕ çитмесĕр урати урлă каçма юраманнисем те пур-тăр...

Мучи кăштăртатса иртнĕччĕ кăна, Юман Арăм тухса тăчĕ.

– Тика-тика-тика! – йыхăрать хурĕсене.

Мамăкĕ симĕсленичченех курăк çисе йăлăхнă пек пĕчĕк чĕпписем те урăх апат астивме пысăккисем хыççăн такана енне лĕкĕштетеççĕ.

– Виктăр! Каç-ха кунта, санпа ĕнерех ларса калаçас тенĕччĕ-ха, – аллине саппунĕпе шăлкаласа пахча карти çумĕнчи сак енне утрĕ кинеми. – Эс йĕркеллĕ ача, усал шĕвек таврашĕпе çăварна варламастăн. Пирĕнни унта та яркалать пуль теп шуйттан наркăмăшне пĕр иленнĕ япала. Пăхкаласах тăр-ха эс çав ярхуна. Ĕнер исленсе кайиччен кӳпсе лартнă вĕт, нуша хутаççи. Тем те пĕр сӳпĕлтетет: "Кукамай, çырма леш енчи Касак Кули мана кĕпер урлă йăтса каçас тейĕ те – тем парсан та ан йăттар. Патăма та ан пыртар! – тет. – Çавă вăл – пĕчĕк чухне ман кĕсьене вăрă-хурахла тасатса тăраканни, кукамай. Эс мана, тăлăха, вĕри апат çиме шкула вак укçа чиксе парса яраттăн – вăл туртса илетчĕ", – тет. Ĕсĕклесе йĕрет!.. "Аре, ачам, чипер пул, арçын пуçупа ним çук çĕртен сӳсленсе ан лар, – теп, – ĕлĕкхине ма хальччен хĕвре йăтса çӳрес?", – теп. Хама урăххи пăшăрхантарать-ха: ĕçе-ĕçе чире кайман-ши вăл? Ăсĕ пăраннă майлă ним çыхăнусăр перкелешет çапла... Касак Кули кĕпер урлă мĕн пĕлсе çĕклесе каçас тетĕр ăна? Ват ашшĕне те мунчана йăтса çитерме ӳркенет тет те, арăмĕ мĕкĕрлене-мĕкĕрлене кранкласа çӳрет теççĕ... Чĕн-ха мĕн те пулин, Виктăр, эс те пулин чĕмсĕр ан лар. Ярас мар пуль теп хальхинче Веччана, Виктăр. Мускаву-масару... Çитет! Тĕнче укçине ĕçлесе илсе пĕтерейрмĕн. Тем, чун-чĕре вырăнта мар... Ăш вăркаса тăрать...

Мĕн калас ĕнтĕ Виктăрăн? Пурте хăйĕнпе хăй хуçа. Пурин те хăйне кура хитре ĕмĕт пур. Унсăрăн мĕн хăшкăлса çӳрес...

– Авланас пек калаçмастчĕ-и-ха вăл? "Тепре кайса килес те – пулчĕ! Пурăнас этем ĕретлĕ, – текелерĕ иртнинче. – Турикасри пĕр чиперккене качча илес, виçтват ача та пулин çураттарас! Патшалăх йăх ĕрчетнĕшĕн укçине аван парать халь", – терĕ.

– Хам та çапла хăлхине çĕртсех тăрап-ха та... Урă чухне ăна çитекен çук! "Кукамай, çапла тăвас-и, кукамай, капла тăвас-и?" тесе кăна тĕпĕртетет. Ăсĕтăнĕ – ылтăн, кăмăлĕ – кĕмĕл! Ĕçме пăрахас тесчĕ ун пирвай. Капла кам чăкармийĕ качча килтĕр ăна?

– Пăрахать. Ĕмĕчĕ пур пулсан – пăрахатех! Курăн ак.

– Тем пекехчĕ те çав...

Юман Арăм сăнран çуталса килне кĕрсе кайрĕ.

Турикасран Чышкă Вани анать. Инçетренех тем хăлаçланса килет.

– Виктăр, хатĕрлен! Вăйлă каятпăр хальхинче! Çын тĕлĕнсе тăтăр!

– Эп ĕнерех хатĕр.

– "Яланах хатĕр!" – теççĕ ăна! Пионер пулман курăнать. Вопшĕм, юрласаташласа, ĕçсе-çисе тухса каятпăр. Эрнекун каçкӳлĕм, кĕтӳ кĕртсен, ял халăхĕпе çерем çине пуçтарăнатпăр. Çакна кăна кала: купăсу нăртлатать-и?

– Нăртлаттарсан нăртлатать пуль те... Тытманни çур çул ытла. Аннен çултапăкĕ çитмесĕр...

– Вопшĕм, ун тӳммисене пĕр вун пилĕк-çирĕм çул каялла Ханттар Ваççи те пускалама пĕлетчĕ-ха. Тен, Хавассен Кенипе Толикĕ те, ашшĕне хунă пулсан, Ваççана улăштаркалама пултарĕç. Хатĕрлесе хур купăсна, ялтăртатса тăтăр! Чĕлĕхĕсен сасси тин хăйранă çĕçĕ пек чĕрене чаш! пыра-пыра кастăр – хĕрсем куç çиçтернипе чĕре яш чухнехилле яш! та яш! туса кайнă евĕр!..

Урам пушанса юлчĕ. Алли ĕç патне пыманнипе аптăранă Виктăр çĕр улми йăранĕсем хушшипе çырма хĕррине анса ларас-ха терĕ. Утăм ярса пусаймарĕ – ура айĕнчех чĕлĕм выртнине асăрхарĕ. Хуралса ларнă хăй. Кĕмĕл пулас. Хÿхĕмскер пĕтĕм. Вĕтĕ-вĕтĕ çинçе эреш-çыруллă. Тем тесен те хальхи ăстасен алли витĕр тухнăскер мар, авалхиех. Камăн пулма пултарать ку? Ялта чĕлĕм паккакан та Мучи кăна, анчах унăн каплах чаплă йышши-ши?.. Кам пĕлсе пĕтерĕ ăна...

***

Ял халăхĕ çерем çине хăпса тухнă. Виçĕ вăйçă харăс ура тапса, пуçне ухса купăс калать. Ханттар Ваççи тахçанта пĕрре турткаланине куркаланă та, Хавассен ывăлĕсем çапла пÿрне чуптарма ăста пулнине кам шутлама пултарнă! Хуларан канмалли куна килнĕ хĕрсем малтан ним калайми ăнтан кайса тăчĕç: кун пеккине ĕмĕрне курман. Пултарулăхне çак таранччен черкке хыçне пытарса усрама мĕнле май çитернĕ ку йĕкĕтсем? Тепĕр авăкран йăлт чĕрĕлсе кайрĕç. Чăм шыва ÿкнĕ хусахсен пит-куçне сăмса тутрипе шăла-шăла типĕтеççĕ, шарт-шарт алă çупса такмак калаççĕ, ташша чĕнсен йăкăш-йăкăш шуса тухаççĕ – пĕри те турткалашса тутине пăрса тăмасть.

Ункă варринче Вечча ташша сĕвет. Вăл паян тумлам та сыпман. Каплах каснăлартнă артист! Куклене-куклене çÿлелле ывтăнать, арман çунатти пек пăлтăрпалтăр çаврăнать. Чышкă Ванин йăмăкĕ енне вĕлт çеç пăха-пăха илет те тата хĕрÿрех сикме пуçлать. Ак хайхи урисене çăмăллăн улăштарса пĕр хĕре пырса пуç тайрĕ те вĕçсе тухнă чиперкке хыççăн çуначĕпе хÿтĕлесе пыракан ăмăрт кайăк пек вирхĕнчĕ.

– Кай-кай-кай... – пĕççине шарт çапать Шăпчăк Иллин асламăшĕ. – Ку çамрăксене эп клубра çвет сÿнтерсе арçури пек айкашма кăна пĕлеççĕ тесе...

Мучи те кунтах. Куçĕ çийĕн усăнса аннă çăра куç харшийĕ витĕр яш-кĕрĕме сисчĕвленнĕн сăнаса тăрать. Ним те чĕнмест. Çамки тулли пĕркеленчĕкĕсем çеç тем кирли каласшăн пек ылмашăна-ылмашăна туртăнкалаççĕ.

Веччан пит-куçĕ тарланипе çу сĕрнĕ евĕр йăлтăртатса тăрать. Лăстăр кăна çÿç кăтрисем вырăнĕнче çĕлĕк пулнă пулсан, ăна, ислерсех кайнăскере, паçăрах лач анчах çĕре хывса перĕччĕ! Вăл çапла черетлесе кашни хĕрпе ташласа тухрĕ ĕнтĕ, Чышкă Ванин йăмăкĕ анчах юлчĕ... Каччă пĕр хушă хăюсăррăн, "чĕнес-ши, чĕнес мар-ши" тенĕн тур лаши пек вырăнта тăпăртатса тăчĕ. Ăна хавхалантарас тесе-ши, купăсçăсем ура çине сиксе тăчĕç те хиврен ухăнса тата вĕрирех калама пуçларĕç. Унччен те пулмарĕ, Вечча лапсăркка пуçне янках çÿлелле ывăтса пĕррех тапса сикрĕ тахçанах куç хывнă пике енне – ури тупанĕнчен вут тухса юлчĕ. Чăнах, тĕтĕмĕ витĕр çулăмĕ палăрмарĕ кăна! Çерем çĕтĕлсе çĕр тухнипе çĕкленнĕ тусан ăшĕнче Чышкă Ванин йăмăкĕн пичĕ хĕрелсе тĕлкĕшме пуçлани те ыттисене курăнмарĕ. Хĕрĕ юхать, юхать вĕттĕн-вĕттĕн пускаласа. Йĕкĕчĕ хум çийĕн вĕçекен мăнаçлă чарлана çаврăннă! Пăхса тăракан халăх илемлĕ мăшăр çинчен куç илеймест. Пăрăç чĕлхеллисем сасартăках йĕплешсе такмак çапма та манса кайрĕç. Унтан хĕрпе каччă хире-хирĕç тăрса пĕр-пĕринпе улшăна-улшăна ташларĕ, хулран хĕреслĕ çавтăна-çавтăна çаврăнчĕ, юлашкинчен пĕр-пĕрне хирĕç

тăрса пуç тайрĕ. Ытармалла мар! Купăссăсем лаштăр вăйран кайса харăссăн пукан çине кĕрсе ларчĕç. Шăпăрт пулчĕ тавралăх.

Чăтаймарĕ-тӳсеймерĕ Хавас Печчи, ярса тытрĕ пĕр ывăлĕн аллинчи купăсне, хытса кайнă чĕтрекен пӳрнисене итлеттерсе тăсса ячĕ пĕрмечине тăсăлнă таран!

Хайхи ĕçлеме тухса каякансем кăна ушкăнран уйрăлса тăчĕç те арçын ташши пуçларĕç. Саккăрăн харăс саккăрла çаптараççĕ. Сцена çинче пулсан купăс сасси путланĕччĕ те тавралăх тĕпĕр-тĕпĕр, тĕпĕр-тĕпĕр ура кĕввипе киленсе тăрĕччĕ!

– Нимле дискотека та кирлĕ мар! Ак вăл чăн-чăн уяв! – тантăшĕн хăлхинчен кăшкăрать алă çупса тăракан Чышкă Ванин йăмăкĕн хĕр тусĕ.

Лешĕ нихçанхинчен телейлĕн йăлтăр çиçет, пĕр сăмах та каламасть, ташлакансене чак та чак сăн ӳкерттерсе илет.

Виктăр кăна савăнăçлă йышран айккинерех – унăн хальлĕхе ташлама-юрлама юрамасть. Ун çумне пырса тăнă Юман Арăм те кулать, те йĕрет: пĕрехмай йĕпенсе тăракан куçне саппунĕн вĕçĕпе шăлать.

– Эх, вăрçа ăсатнă пек вĕт, вăрçă хирне ăсатнă пек... – тӳсеймесĕр ĕсĕклесех ярать упăшкине Гитлер вăрçинчен кĕтсе илеймен Шăпчăк Иллин асламăшĕ. – Пĕтĕм ăшчике тавăрса кăларать...

– Ан та кала, инке, ан та кала... Куçа курăнмасть те, чарăнман çав вăл, халь те пырать ав...

Хавас Толикĕн арăмĕ йĕркипе черкке сĕнсе çӳрет. Пĕр пек тăхăнтартнă йĕкĕреш ачисем аркинчен уртăннă: икĕ мăшăр куçĕ ташлакан ашшĕнчен çатăрласа тытнă, тяпписем амăш хыççăн танкăлтатаççĕ. Кӳме тĕксе çӳрекен аппăшĕ, хăй те шăпăрлансенчен пĕр шит анчах пысăкрахскер, вĕсене амăш çумĕнчен уйăрса айккинелле илĕртсе каясшăн, лешсем яхăнне те ямаççĕ: такам вĕсене ашшĕпе амăш хушшинчи çыхăнăва çапла майпа вĕçертми тытса тăма хушса хунă тейĕн çав. Çамрăк кин ури айĕнчи ачисемпе тăллана-тăллана йĕри-тавра виççĕ çаврăнчĕ – кĕленчине чакараймарĕ. Аптранипе пысăкрах куркапа пан улми сĕткенĕ ярса пама пуçларĕ те, виç литрлă савăчĕсем тепре пăхса илнĕ çĕре шăкăрин пуш-пушă...

– Ну, кăçал кĕр мăнтăрĕпе темиçе туя та çитсе курăпăр-ха, тăхлачă... Килĕрен-киле çӳресе сăйланăпăр, – ик аллипе туйи çине таяннă Мучин куçĕсем усăк куç харшийĕ витĕр тем пĕлсе тăнăн çӳçентерсе йăлтăртатаççĕ...

– Мучи, çак чĕлĕме эс ӳкерсе хăвармарăн-ши теп, хамăр умра тупрăм... – тинех ун патне пыма май тупать Виктăр.

Мучи кукăр мăйлă кĕмĕле аллине илсе пĕрремĕш хут курнăн çавăркаласа пăхать. Тутине сассăр кĕлĕ вуланă пек мăкăл-мăкăл тутарать. Унтан хаш сывласа васкамасăр каялла тăсса парать.

– Ахаль йышши мар ку... Кам тупнă – çав пуйнă. Телее пултăр...

***

Юман Арăм, кун каçа кишĕр кăларса ывăннăскер, тĕлĕрсе кăна кайнăччĕ – кантăкран тăкăр-тăкăр шаккани вăратрĕ. Сӳ! турĕ чун-чĕри. Кам çӳрет çĕр хута? Кушакĕн çавăн пек чӳречерен тяппипе этемле шан-шан тутарса алăк кутне пырса тăрас йăли пур та – çĕрле капла ăшчике шуйхаштарса ашкăнакан марччĕ. Чим, Вечча таврăнмарĕ пуль те? Çапла сасартăк пырса кĕрсе савăнтарас терĕ-ши?

Вĕри пуçа тем те пырса кĕрĕ. Ĕнертенпе шăнкăрав тавраш пулмарĕ. Йăтса çӳремелли телефонĕ ялан саппун кĕсийинче.

Кинеми çывăрмалли кĕпи çийĕн халат уртса ячĕ те урам енчи чӳречерен пырса пăхрĕ. Тутăр çыхнă пуç курăнать – такам: никам патне кайса хума пĕлеймерĕ.

– Кам унта?

– Юман Арăм, алăкна уç-ха, кĕрем...

Чишкăсен кĕçĕн хĕрĕ иккен.

– Кĕрех. Мĕн çĕр варринче ыйха татса çӳрен?

Юман Арăм çутă çутса ячĕ. Хĕр чĕнмест. Çӳхе тутине сăмахĕ ăнсăртран хĕсĕнсе тухасран хăранă пек тăп тытнă. Чечек евĕр ачашскер... тимĕрленсе кайнă хурăм темле... Шăппăн кăна пырса пукан çинчи вырăн çиттине илчĕ, унпа тĕпелти пысăк тĕкĕре витсе ячĕ. Мĕн хăтланать ку? Тата... ытти чухне сивĕре те çара пуçăн çиçкĕнсе çӳрекенскер, мĕншĕн тутăр... хура тутăр çыхса янă?..

– Пилĕк киле çитсе çаврăннă çĕре тĕттĕм те пулчĕ... Виктăрсем патне кĕмерĕм ĕнтĕ – пĕрех никам та çук... Сана выртса ĕлкĕреймен пуль-ха тенĕччĕ те... – çурта тивертнĕ май темле пăвăнса тухаççĕ хĕр сăмахĕсем.

Ялкăшса çунакан сакăр çурта çине хĕр куççулĕ шăпăртатса анать. Тăххăрмĕшĕ тĕлкĕшкелем пекки туса илчĕ те лап сӳнчĕ. Хĕр каллех чĕрене çӳçентерсе шăрпăкне сĕрет – татах сӳнсе ларчĕ, унтан татах сĕрет...

Юман Арăм сасартăк вăйран сулăнса-сулăнса пычĕ те ланк кайса ларчĕ. Хыçĕнче пукан пулман пулсан çĕре тĕшĕрĕлсе анатчĕ...

– Вечча! Чĕппĕм...

***

Виктăр сылтăмра, виççĕмĕш ретре, чӳрече çумĕнче ларса пыратчĕ. Автобусăн пĕр евĕрлĕ сасси ыйхă килтерет. Аван ĕçлесе илчĕç çу каçа. Хальхинче ăнмаллипех ăнчĕ çав. Пурте хаваслă. Çула тухас умĕн кафене кĕрсе кăштах шапăлтатса та ларчĕç. Халь кашни хăй ĕмĕчĕпе киленсе тĕлĕркелесе пырать.

Виктăр та вăхăта вăраха яриччен çитсенех кирпĕч туянас тет, цементне те илсе хурас, çăкăр ыйтмасть – хакланас пек калаçаççĕ... Амăшĕн вил тăпри çине палăк ларттарас. Йĕри-тавра карта тытас... Унччен те пулмарĕ, те тĕлĕкре, те чăнах шанн! пырса çапрĕ пуçĕнчен темле витĕр шăтаракан сасă...

Акă вăл нихçан утса курман сукмакпа утать. Сукмак та мар-ха ку, шап-шур хăвăл. Е пăрăх темелле-ши? Куçа шартарма кирлĕ шап-шурă пысăк пăрăх çул. Анчах куç алчăрамасть: Виктăр мĕн курăннине куççăр курать. Алăк çине алăк. Вĕçĕ-хĕрри çук. Шап-шурă хыпаланчăк вĕтĕ чĕрчунсем – чат çын хурăмах хăйсем – ĕçлĕн васка-васка кумаççĕ. Вĕсенчен темшĕн чăтма çук йĕрĕнет Виктăр: лешсем мĕнле чĕрчун иккенне ăнкарайманни, мĕн тăвасшăн пулнине чухлайманни кăмăла лĕклентерсе тăрать. Пырать, пырать çапла вĕçĕ-хĕррисĕр талккăша çăтăнса. Ĕшеннĕ вăл. Сăмахпа каласа пама май çук лаштăр ыватнă. Унăн хăвăртрах ăçта та пулин çитес килет – ниепле те çитсе чаранаймасть. Йăлтах çак пĕчĕк вĕткеленчĕк этемккесене пула! Кунта веçех вĕсем татса параççĕ. Сасартăк тăнч çухалаççĕ пурте: вĕçĕ-хĕррисĕр хăй ăшне ĕмсе тăракан шап-шурă пăрăх та, шап-шурă этемккесем те. Сĕрлев анчах юлать: хăйсем таçта çĕтнĕ, пуплевĕ кӳлепи-

сенчен татăлса юлнă пек. Виктăр мĕн те пулин ăнланса юласчĕ тет – çав сассене тăнлавĕнчи юн таппине тытса чарса итлет. Мĕн усси: юн тахçанах кĕлетке тăрăх чупми пулнă, ахалех шăп-шăпăрт. Унччен чĕре хĕмленсе сикнĕ вырăнта чăмăр пысăкăш чул çакăнса тăрать. Кĕтмен çĕртен талт! тапать çав чул. Тĕлли-паллисĕр тапăлтаткаласа илет те каллех шанк хытса выртать. Капла канлĕрех те. Ни тĕттĕм мар, ни çутă мар. Унччен те пулмарĕ, ниçтан та мар таçтан ĕмĕрне сăмахпа каламан шухăш сыпăкĕсем шуса килчĕç. Çурса пăрахнă çыру таткисем пек. Сасси хăйĕнех. Эх, астуса юласчĕ ку ăслă шухăшсене! Анчах пурнăçра нихăçан та пулмаст, пулас та çук... Ниепле те апла пулма пултараймасть, астуса юлайсассăн та уссăр... Унтан каллех шуралчĕ. Алăксем курăнса кайрĕç. Татах çине-çине алăк. Хăлăп-тăпсасăр, çăрасăр алăксем. Ăçта илсе çитересшĕн вĕсем? Хăшне те пулсан хăйĕнех хăюллăн пырса уçасчĕ те çитмелли çĕре çитсе канăçасчĕ. Анчах хăшĕ уçăлĕ ун тĕлне? Пĕрин патне пырса чарăнасшăн пулчĕ – пăхăсăн, алăк вырăнĕнче – куçкĕрет! – йĕрри-çĕвви те юлмарĕ. Акă тепри... Ку уçăлатех. Вара? Вара каялла çул çук. Мĕн пулать те мĕн килет... Уçмалла ăна! Çитет! Йăлăхтарса çитерчĕ сывлăшсăр хутлăхра сывлам пекки тăвасси!..

... Алăк енне утăмличчен шухăшĕпе куçне самантлăха кăна хупса канса илем тенĕччĕ, уçрĕ те – темле качака чармакланса киле парать. Шап-шурă качака. Сăвакан пулманнипе çиллисем хаàль-халь çурăлса каясла карăннă, тумласа пыраççĕ. Мĕнле лекнĕ вăл ку терте, мăнтарăн... Кунти шап-шурă – асаплă тĕс вăл. Чăн-чăн мар куçа çапла курăнать-ши? Е курăнни чăн-чăн мар-ши? Чим-ха, хăйĕн качакиех-иç ку!

Чĕлхесĕр янавар тууунсăхлă куçĕпе тӳррĕн пăхнă та сухалне сиктерсе канăçсăррăн тем кавлет.

– Ку – вăхăт çитмесĕр уçма юраман алăк, – тесе хурать вăл сасартăк этем чĕлхипе, Мучи сассипе.

– Ма-а-нь-кка! – тилмĕрсе чĕнесшĕн пулать Виктăр.

Чулланса ларнă тути чăнах та хускалать мар-и! Хăй сассине хăй илтрĕ теха! Паçăрах тутинчен вĕçерĕннĕ сăмахне халь тин илтрĕ пулсан та – ăнланчĕ: хăйĕнех вăл.

– Кунта эп, Виктăр...

Виктăр пĕтĕм вăйне пухса куçне уçса ячĕ. Умĕнче шурă халат уртнă арăмĕ тăрать.

– Манькка...

– Турра шĕкĕр...

# СУНТАЛ

ПУРНĂÇ
КУЛЬТУРА
ИСКУССТВО

Чăваш Республикин
культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ

# Галина Скворцова



*Пур пулăр, сыв пулăр, Пуртан ҫука юлăр мар!*

*Скворцова*

# Театр чуна сиплет

**"Илемлӗ, хастар чӑваш хӗрарӑмӗ, ырӑ кӑмӑллӑ, чунӗпе калама ҫук пуян ҫын. Турри талант валеҫнӗ чух уншӑн ним те хӗрхенмен: ӑнӑҫуллӑ ертӳҫӗ, режиссер, драматург, композитор, юрӑҫ..." – ҫавнашкал хаксем парса пуҫлаҫҫӗ чылай чухне журналистсем ЧР культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ, Шупашкарти "Ҫӑлкуҫ" халӑх театрӗн ертӳҫи Галина Скворцова ҫинчен ҫыракан статьясене. Ку илемлетсе ҫеҫ ҫырни мар иккен, чӑн сӑмах пулнине хӑйӗнпе сӑмахласа питӗ лайӑх ӗнентӗмӗр. Галина Моисеевна – "Тӑван Атӑл" журналӑн ҫак кӑларӑмӗн хӑни.**

## Кӗскен

***Галина Моисеевна СКВОРЦОВА 1951 ҫулхи кӑрлачӑн 21-мӗшӗнче Вӑрнар районӗнчи Вӑрманкас Хапӑс ялӗнче ҫуралса ӳснӗ. Ялти вӑтам шкул хыҫҫӑн Шупашкарти Ф.Павлов ячӗллӗ музыка училищин театр уйрӑмӗнче вӗреннӗ, каярах куҫӑмсӑр майпа Ленинградри (хальхи Санкт-Петербург) профсоюзсен аслӑ шкулӗнче режиссерсен курсӗнче ятарлӑ пӗлӳ илнӗ. 1972–1976 ҫулсенче Вӑрнарти халӑх театрне ертсе пынӑ, Шупашкара куҫнӑ хыҫҫӑн Трактор завочӗн ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх пайӗнче воспитатель пулса ӗҫленӗ. 1982 ҫулта Трактор завочӗ ҫумӗнче "Ҫӑлкуҫ" театр йӗркелесе (халӗ Культура министерствин ведомствине кӗрет) 31 ҫул ертсе пырать. Чӑваш Республикин культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ (1998), паллӑ юрӑҫӑ, халӑх килӗштерекен чылай-чылай юрӑ авторӗ. 1982 ҫулта Мускавра иртнӗ халӑх юррисене юрлакансен конкурсӗн лауреачӗ.***

## Тухтӑр сывлӑха сиплет, театр – чуна

Шкул хыҫҫӑн эпӗ Горький хулине (хальхи Чулхула) медицина институтне вӗренме кӗме кайрӑм. Манӑн пӗрре те чун туртмастчӗ тухтӑр пулма, артист е юрӑҫ пулас килетчӗ. Тухтӑр – паллах, питӗ пархатарлӑ професси, вӑл сывлӑха сиплет. Хальхи ӑсӑмпа театра та эпӗ сиплевҫӗ тетӗп. Вӑл ҫын чунне сиплет. Ун чухне ӑна-кӑна ӑнкарсах пӗтермен ӗнтӗ, паллах, Чулхулана мана килтисем ирӗксӗрлесе тенӗ пек янӑ. Чӑтаймарӑм, документсене каялла илтӗм те Ҫӗрпӳри культурӑпа ҫутӗҫ училищине кайса патӑм. Унта шӑпах театр уйрӑмӗ уҫӑлнӑччӗ. Вӗренме кӗрекенсем йышлӑ пулчӗҫ, пӗр вырӑна – вунӑ ҫын. Пӗринчен тепри пултаруллӑ. Вӗренме кӗме пултартӑм ҫапах та. Театрсем пурте Шупашкарта тесе пире кӗҫех музыка училищине куҫарса килчӗҫ.

Тӗлӗнмелле пултаруллӑ ушкӑнччӗ пирӗн. Валерий Молодцыгин, Валентина Степанова-Молодцыгина, Валентина Сурикова, Валентина Агеева–Музыкантова... Вӗсем пурте Ҫамрӑксен театрӗн халӑх питӗ юратакан артистсем-"ҫӑлтӑрсем" пулса тӑчӗҫ. Хаваслӑ пурӑнаттӑмӑр эпир. Пӗр-пӗринсӗр пурӑнма та пултараймастӑмӑр пулӗ. Курсра А.И.Наумов вӗрентекен пуҫарӑвӗпе тӑватӑ саспа юрлакан ушкӑн йӗркеленӗччӗ. Концертсемпе час-часах ялсене туха ҫӳреттӗмӗр. Пӗррехинче эпир





*Вăрнар Культура кĕрменĕнче методист пулса ĕçленĕ вăхăтра. 1974 ç. (Ку сăн ӳкерчĕк Мускавра тухса тăнă «Культпросвет» журналта тухнă).*

*Кукамайпа. Сулахара – шăллăм – Гена. 1958 ç.*

вырнаçнă хваттер хуçи пире валли мунча хутса пачĕ. Хĕрсем маларах кĕрсе кайнă. Çапăнаççĕ. Эп юлса çитнĕ. Мунча çенĕкне кĕтĕм те ятарласа арçын сассипе хыттăн калаçма пуçларăм. Манăн хĕрсем сасартăках шăпланчĕç. Юриех алăка уçам пекки турăм. Шари те шари кăшкăраççĕ. Вара çенĕк алăкне шалт-шалт уçса хупса илтĕм те ним пулман пек салтăнма пуçларăм. Хĕрсем сиксе тухрĕç. Ан хăрăр, хуçа мана хирĕç тухса кайрĕ тесе лăплантаратăп хайхисене. Ĕненчĕç.Кайран, паллах, ахăртăмăр кăна. Аннене те çапла хăратса курнă эпĕ. Канмалли кун киле каçа юлса çитрĕм те, атте калать: "Аннӳ улăм "шăхăртма" кайнă", – тет. Эпĕ тӳрех ăна пулăшмалла ял хĕрринчи улăм ури патне вĕçтертĕм. Пăхатăп – темиçе хĕрарăм кĕшĕлтетет. Шӳтлесе илес-ха терĕм. Шăпах тата аттен тумне тăхăнса янăччĕ. "Таа-ак, камсем кунта колхоза сăтăр тăваççĕ? Пурне те ятран-хушаматранах çырса хурас-ха!" – тетĕп арçын сассипе. Пĕри тӳрех çĕр çине йăванчĕ, тепри хăмла хушшипе тара пачĕ. Кăштахран киле çитрĕм те пăхатăп – анне анкарти хыçĕнче пăшпăш сывласа канать. Мана палласа илнĕ хыççăн: "Ай, тур-тур, пĕтрĕм иккен, ята ярса намăс кăтартать иккен тесе сехрем хăпрĕ вĕт", – тет. Театр уйрăмĕнче вĕрентнине практикăра çапла тĕрĕслесе пăхаттăм. Çавнашкал артистланасси пурччĕ çав манăн.

Училище хыççăн эпĕ тăван района таврăнтăм. Пĕр вăхăт методистра ĕçлерĕм, çав вăхăтрах драма кружокĕ йĕркелесе ятăм. Сцена ăсталăхне вĕренмен çынна спектакльте выляттарасси, сăнар калăплаттарасси – паллах, тертлĕ ĕç. Йывăрччĕ. "Паян ăнмарĕ пулсан, ыран кун пур, вăйсем пĕтмен-ха", – тесе йăпататтăм хама. Манăн çамрăксене питĕ искусствăна юраттарас килетчĕ. Вĕсем те ман пекех çав çулăмпа çунччăр теттĕм. Тăрăшни сая кайман пуль. Çийĕнчех пĕрин хыççăн теприне кăларма пуçларăмăр спектакльсене, умлăн-хыççăнах сцена çине "Хĕвел

тухнă чух", "Пурпĕрех мар-и?" камитсем тухрĕç. Пĕрремĕшĕ мари драматургĕ Арсий Волков çырнă "Туй икерчи" пулнăччĕ пулмалла. Вăрнар çыравçиех Петр Ялгир сăвăç "Çурхи каç" ятлă пьеса çырнăччĕ. Çавна лартрăмăр. Вăл спектакльпе пире вара Шупашкара Чăваш телевиденине те чĕнсе илчĕç. Начарах мар ĕçленĕ пулмалла эпир – пирĕн театр кĕçех "Халăх театрĕ" хисеплĕ ята та тивĕçрĕ.

Вăрнарта эпĕ тĕпленсех ĕçлесе каяттăм пулĕ, анчах Иван Аршинов композитора качча тухрăм та Шупашкара куçса килмелле пулчĕ.

## Пĕрремĕш юрă

Иван Аршинов – Чăвашри паллă композитор. Унăн юррисене халăх питĕ юрататчĕ. Кам пĕлмест пулĕ "Куккук" юррах? Тĕрĕссипе, эпĕ ăна качча тухасах та çукчĕ. Вăл манран чылай аслăрах, – халь ĕнтĕ 40 çул аслине те ним шухăшламасăрах качча тухаççĕ те, ун чухне пирĕн хушшăмăрти 18 çул пи-и-итĕ пысăк пек шутланнă, – эпĕ ун чухне çамрăк хĕрача. Юррисене ытарайманранах килĕшрĕм арăмĕ пулма. Шăпах тата эпир паллашнă вăхăтра унăн халăха питĕ килĕшнĕ тепĕр юрри тухрĕ – "Санпа курса калаçмасан". Малтанхи арăмĕнчен уйрăлнăччĕ вăл, пĕчченех пурăнатчĕ. Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа 90 çул çитнине уявланă концертра юрлама илсе килчĕç мана Шупашкара Вăрнартан. Георгий Краснов çыравçă (вăл ун чухне писательсен Союзне ертсе пынă пулмалла) эпĕ халăх юррисене юрланине илтнĕ иккен. Ăна килĕшнĕ. Петр Ялгир сăвăçа (вăл Вăрнартан) Георгий Васильевич: "Галина Скворцова юрăçа пĕрле илмесен ан та килĕр уява", – тенĕ пулать. Георгий Красновăн мăшăрĕ кайран манăн ывăлăн хреснай амăшĕ те пулчĕ. Эпĕ сцена çинче ун чухне "Ах, ишет-и пăлан, ах, ишет-и?" юрра юрланă пек астăватăп. Аршинов купăс калакан пулчĕ. Эпĕ ăна килĕшнĕ пулĕ ĕнтĕ. Шел пулин те, каярахри пурнăç пирĕн питĕ килĕшӳллех пулаймарĕ, эпир уйрăлтăмăр. Талантлă çынсен хăйсен тĕлĕнтермĕшĕсем пур вĕт. Çапах та халь тин эпĕ ăна ӳпкелеместĕп, тăпри çăмăл пултăр. Вăл мана ывăл парнелерĕ тата... юрăсем кĕвĕлеме вĕрентрĕ. Капла мана çапла çырмалла темен ĕнтĕ. Юрă çырма вĕрентейместĕн пулĕ. Анчах та, тав ăна, юрра ăнланма, мĕнлерех пулмалла унăн, ăна епле калăпламалла – çавсене питĕ ăнлантарнă. Пĕрремĕш хам тĕллĕн çырнă юрă "Аякри тăван" пулчĕ:

Ылтăнĕ пур ман, кĕмĕл те пур ман,
Вĕсенчен те хакли – аякри тăван.

*Хушса юрламалли:*
Ай, юрла, тăван,
Хăна эс паян,
Пĕрле савăннă чух
Юрлас килет ман.

Çулĕсем пит инçе, ир-каç курма çук,
Курас килсен вĕçсе пыма майĕ çук.

*Хушса юрламалли.*

Тинех килтĕн, тăван, тав курки сĕнем,
Кĕрекене лартса кукăль çитерем.

*Хушса юрламалли.*

Халăха килĕшрĕ пулĕ вăл – тӳрех анлă сарăлчĕ. Çунат сарчĕ темелле. Паянхи


Ывăлăмпа – Власпа. 1996 ç.


Мăнукăмсемпе. Юнашар – Влас, ытамра – Денис.

кун та юрлаççĕ ăна, радиопа янраттараççĕ. Чи тĕлĕнмелли хамшăн – хăшпĕрисем хальччен тавлашаççĕ халăх юрри тесе. Пĕр мыскара та пулса иртнĕччĕ кун пирки. Юрра эпĕ конкурса тăратнăччĕ. Жюрире Тамара Чумакова, Сарри Мишши çыравçă тата ыттисем пулнă. Манăн юрă пирки ку халăх юрри, çавăнпа конкурса хутшăнма пултараймасть тесе чутах йышăнман. Юрать, Аршинов комиссире пулнă, "Эпĕ ăна хамăн арăм пулнипе хӳтĕлеместĕп, кĕввине хăех çырнă. Сăвви те хăйĕнех. Юрий Сементер çирĕплетме пултарать", – тенĕ вăл. Эпĕ ăна кăтартнăччĕ юрра.. "Питĕ лайăх. Ак çакăнта кăна пĕр сыпăкĕ иккĕмĕш хут янăрать, шутла лайăхрах, – тенĕччĕ вăл. Юрий Сементер, сăмах май, вăл манăн ывăлăн хреснай ашшĕ пулать: "Пĕр сăмахне улăштармалла мар. Кунта санăн пурте хăй вырăнĕнче", – терĕ. Эпĕ ку сăвва çырса пĕр тетрадь пĕтерни харама каймарĕ-мĕн.

Тамара Чумакова жюрире каланă пулать: "Ку нимле халăх юрри те мар, ăна пĕрремĕш вырăн памалла!"

## Мĕншĕн юрă çырма пуçларăм-ха?

Аврам Бурундуков хорĕнче солисткăсем эпир Людмила Семеновăпа иксĕмĕрччĕ. Вăл сасартăк мала туха пуçларĕ. Композиторсем юрăсене пĕрех май ăна параççĕ. Чаплисене. Мана – çук. "Эппин, хамăн валли хамăн çырмалла ман!", – терĕм эпĕ. Çапла çуралчĕ пĕрремĕш юрă. Унтанпа юрăсен кĕнеки те кăлартăм эпĕ. "Юрату шăрçи" ятлă вăл. Унта 43 юрă кĕнĕ. Тепĕр кĕнекелĕх те пуçтарăннă ĕнтĕ. Укçа-тенки çитсех каймасть-çке кăларма. Чылайăн юрлаççĕ манăн



«Сентти» ушкăн (Шупашкарти 57-мĕш шкул).

юрăсене. Пĕртăван Малинăсем те, Альбина Сарри те, Олег Кăйкăр, хăй лайăх композитор пулсан та, ыйтать. Ольга Луковăпа питĕ килĕштерсе ĕçлетпĕр. Вăл манăн виçĕ юрра юрлать, теприне ыйтать-ха. Чылайăн юрлаççĕ. Вĕсен йышĕнче Людмила Семенова та пур. Ăна хортан театра куçарса кайрĕç. Мана та чĕннĕччĕ. Эпĕ каймарăм. Гастрольсене тухса çӳреме мана хĕн пулатчĕ – ача пĕчĕкчĕ ун чухне.

Хай вăхăтĕнче мана Людмила Зыкина та илсе каясшăнчĕ хăйĕн ушкăнне. Вĕсем Гриндинпа (упăшки, музыкант) иккĕшĕ 1980-мĕш çулсен пуçламăшĕнче Шупашкара килнĕччĕ. П.Хусанкай ячĕллĕ Культура керменĕнче концерт кăтартрĕç. Зыкина çавăн чухне пĕлтерӳ панăччĕ: камăн хăйĕн сассине, юрлас пултарулăхне тĕрĕслесе пăхас килет – тархасшăн. Хăюлăх çитерсе кайрăм. Юрласа кăтартрăм. Вăл питĕ тимлĕ итлерĕ. Вара каларĕ: "Галя, давай приезжай в Москву. Адресне парса хăварчĕ. "Мы тебя устроим", – терĕ.

Анне калать: "Ачуна кампа хăваран? Эпĕ пăхаймастăп". Аршиновпа уйрăлнăччĕ эпир ун чухне. Влас пĕр 3–4 çулсенче çеç. Каясси пулмарĕ. Питĕ кулянтăм. Паянхи кун та çав пăшăрхану пур.

## Мĕн калаяп-ши чăваш эстради пирки?

Трактор тăвакансен Керменĕнче ĕçленĕ май унта тăтăш ирттерекен концертсене кĕркелесе пăхатăп эпĕ. Чăваш эстрадин паянхи шайне аванах пĕлсе тăратăп. Ыррипе пĕрлех начарри те тӳрех куçа ӳкет. Хăшпĕр артист вунă çул пĕр юрра юрлать – хăй те йăлăхса çитмест-ши? Теприсем хăйсем мĕн çинчен юрланине те ăнкармаççĕ пек туйăнать – тунсăх юрă юрланă чухнех хуçкаланаççĕ, куракана алă çупма хистеççĕ. Ку мана килĕшмест. Манăн лирикăллă юрăсем çырас килет. Итлекенĕн чунне хускаччăр. Эпĕ хам А.Уляндина юрăçа кăмăллатăп. Унăн юррисем чунтан шăранаççĕ. Пысăк ăста.

Халăх умне тухасси питĕ йывăр вăл. Чылайăшĕ юрăççем пирки шутлаççĕ: мĕн

вёсем, тухнă та юрланă. Пĕрремĕш хут питĕ хумханса курни асра юлнă. Пирĕн ялта учительсен семинарне ирттерчĕç. Пĕтĕм республикипе пуçтарнă вĕсене. Лăк тулли халăх. Эпир, шкул ачисем, черетпе сăвăсем калатпăр. Эпĕ пăлханнипе сиксе чĕтретĕп. Сăвă вĕçленес тĕлелле çĕтрĕм кайрăм. Çавăн хыççăн 3 кун выртнă температурăпа. Хăраса ÿкнипе, намăс пулнипе чирлесех кайнă. Халь эпĕ сцена çине, халăх умне тухма хăраса тăмастăп, хама кăмака çинчи пекех туятăп. Çамрăкрах чухне именеттĕм çав.

## Çĕрулми юрри

Атте пирĕн, Моисей Игнатьевич Скворцов, купăс, балалайка ăста калатчĕ. Питĕ хитре ташлатчĕ тата. Ăна пурте ялта ĕçке-çике чĕнетчĕç. Анне, Евдокия Ивановна, ялтилле – Ултут, хитре юрлатчĕ. Сасси уçăччĕ. Хăнаран-мĕнрен килнĕ чух вара вăл ялан хыттăн юрлатчĕ. Асанне калатчĕ: "Кин хăнаран тухрĕ пулмалла – сасси илтĕнет", – тетчĕ. Пĕр виçĕ çухрăмранах.

Аттен ячĕ "Моисей" пулнăран вăл еврей мар-и тесе пĕрре мар ыйтнă манран, сăнпа та эсĕ еврей майлăрах теççĕ. Çук, чăн-чăн чăвашах вăл. Пирĕн ялта Муççасем тепĕр виççĕ те пур. Анне те хамăр ялтанах. Питĕ хавас çемьеччĕ пирĕн. Анне шÿтлеме юратаканскерчĕ. Атте те ĕçсен çăварне хупмасчĕ. Тем те каласа кăтартатчĕ. Эпĕ те çавăнпа питĕ калаçма юратнă ача чухне. Пакăлтиех пулнă ĕнтĕ. Çавăнпах мана концертсене, тĕрлĕ уявсене ертсе пыртаратчĕç. Юрлама тесен, эпĕ, паллах, чи пĕрремĕш пулнă.

Колхоз уйĕнче çĕрулми кăларса пĕтерсен килтине пуçлатчĕç. Пирĕн питĕ нумай лартатчĕç çĕрулмине. Кунĕпе кăларатчĕç те кайран урапапа туртса кĕртетчĕç. Эпĕ, пĕчĕккĕскер, çав урапа çине хăпарса тăраттăм та, хам та астăватăп, кунĕпе юрлаттăм. Ун чухне ĕнтĕ эпир хальхи ачасем пек темле юрăсем пĕлмен, ытларах туй, вăйă, ĕçкĕ юрри юрланă:

Калуш тăхăнмасан ман мĕн тăхăнас?
Тăхăнмалли те ман калуш анчах...

Е тата çакнашкал йышши:

Тăвансем, пирĕн пата ма пымастăр
Сăри пирĕн япăх тесе, ай, теетри?

Эпĕ юрлама пăрахсан вара ялти халăх калатчĕ, тет: "Муççасем улма кăларса пĕтерчĕç пулмалла, хĕрачи юрлама чарăнчĕ".

## Çăлкуç пысăк юханшыва тулли тăвать

"Çăлкуç" театр 1982 çулта йĕркеленчĕ. Вăрнартан Шупашкара куçса килсен эпĕ Трактор завочĕн общежитийĕнче воспитатель пулса ĕçлерĕм. Питĕ нумай мероприяти ирттереттĕм. Хастар пулнă. Пĕр минут та ахаль ларман, чупса çÿресе ĕçлеттĕм. "Чи лайăх воспитатель" ята та тивĕçсе куртăм. Манăн сăнÿкерчĕк заводăн Хисеп хăми çинче те çакăнса тăратчĕ. Манпа пĕр вăхăтрах воспитательре хальхи паллă музыкант, композитор Аврам Бурундуков та ĕçлетчĕ. Вăл çамрăксене пуçтарса хор туса хучĕ. Ултă саслă хор. Эпĕ çав хорăн солисткиччĕ. Вăл аслă воспитательччĕ те мана пĕрехмай хушать: "Ăна ту, кăна ту". Ку мана йăлăхтара пуçларĕ, "Хамăн та мĕн те пулин шухăшласа тупмалла", – терĕм. Начар-и, лайăх-и – хам тĕллĕн ĕçлес килнĕ ĕнтĕ манăн. "Чим-ха, – терĕм, – сцена ĕçне



*«Çăлкуç» театрĕн пуçламĕш тапхăрĕ. 1984 ç.*

чухлатăп, опыт тени пур, мĕншĕн йĕркелес мар завод çумĕнче театр?" Заводăн профсоюз ертӳçипе Вячеслав Дмитриевич Козинпа, çурт-йĕр хуçалăхĕн пуçлăхĕпе Михаил Михайлович Арбузовпа калаçса пăхма шутларăм. "Ырă шухăш, – терĕç вĕсем, – кăмăлу пысăк пулсан мĕншĕн хăтланса пăхас мар?" – терĕç. Ун чухне культура ĕçне чăнахах та пысăка хуратчĕç. Пысăк пӳлĕм уйăрса пачĕç мана. Общежитисенче пирĕн пурнăç вĕресе тăратчĕ. Çамрăксем питĕ хастарччĕ. Тăтăшах юрă-ташă смотрĕсем иртетчĕç. Эпĕ театр валли "артистсем" суйлама пуçларăм. Пĕр 50 çын пуçтартăм. Театр ĕçĕ çăмăл мар. Тӳрех пулмасть. Ăсталăхсăр пуçне чăтăмлăх та кирлĕ. Ман ушкăнран 15-20 çын тăрса юлчĕ. Театра чăн-чăн парăннисем. Пĕрремĕш спектакль



*«Çăлкуç» театр артисчĕсем канура.*

валли ҫӑмӑлрах пьеса суйласа илтӗмӗр – Николай Айзманӑн "Савни савнине илет" лирикӑллӑ камитне.

Тӑватӑ уйӑха яхӑн тӑрмашрӑмӑр. Сӑнарсен ҫипуҫне йӑлтах хамӑр хатӗрлерӗмӗр. Реквизит валли мӗн юрӑхлӑ кам мӗн тупать, ҫавна сӗтӗрсе килет. Тавах Ҫамрӑксен театрӗпе Чӑваш академи драма театрне, вӗсем пире усӑ курма пӑрахнӑ декорацисемпе пулӑшрӗҫ. Пирӗн нимӗн те пулман. Хуткупӑсне те ҫӳп-ҫап тухса пӑрахнӑ ҫӗртен хам тупса килтӗм. Тасатрӑм. Юсаттартӑм. Паянхи кунччченех пурӑнать ҫав купӑс.

Премьера ӑнӑҫлӑ иртрӗ темелле. Пурте кӑмӑллӑ. Хамӑр та, куракансем те. Пирӗн пуҫлӑхсем те. Халӑх нумай пуҫтарӑннӑччӗ общежитири 150 ҫын вырнаҫакан зала. Лӑк тулли. Ку спектакльпе ялсене те тухса ҫӳреме пуҫларӑмӑр. Автобус паратчӗҫ. Ун чухне транспорт енчен питӗ ҫӑмӑлччӗ. Хамӑр спектакльсемпе республика тулашне те ним те мар кайса килеттӗмӗр. Пушкӑр республикинчи чӑвашсем патне уйрӑмах тӑтӑш ҫӳреттӗмӗр.

Ӑнӑҫнӑ ӗҫ яланах хавхалантарать. Малалла ӗнтӗ спектакльсем пӗрин хыҫҫӑн тепри пула пуҫларӗҫ. Халиччен эпир 40 яхӑн спектакль хатӗрлесе кӑтартнӑ халӑха. Украина драматургӗпе Анатолий Ларченковпа питӗ туслӑ пирӗн театр. Чӑваш академи драма театрӗ унӑн пьесипе "Телей кайӑкӗ" спектакль хатӗрленӗччӗ. Эпир унӑн виҫӗ пьесине сцена ҫине кӑларнӑ: "Пӗр хурӑн ҫеҫ пӗлет", "Ҫӗрлехи чан сасси". Украина ҫыравҫисен ушкӑнӗпе вӑл Шупашкара пӗрре ҫеҫ мар килнӗ. Пӗринче вара хӑйӗн спектакльне пӑхрӗ. Кӑмӑллах пулчӗ. Артистсемпе тӗл пулчӗ. Ҫыхӑну паян кунччченех тӑсӑлать. Шел те, хамӑр драматургсен лартма кӑмӑл пур пьесисенех лартаймастпӑр. Пысӑк укҫа ыйтаҫҫӗ. Туянма майсем ҫукрах пирӗн. Ҫак инкек пире хамӑра драматурга кӑларса ячӗ темелле, ҫавна пулах хамӑр тӗллӗн "Телейлӗ-ши эсӗ, ывӑлӑм", "Аманнӑ турата кассан" спектакльсем ҫуралчӗҫ. Паянхи ҫыннӑн чунӗ, пурнӑҫӗ ҫинчен калакан спектакльсем лартас килет.

Халь телевидени, интернет халӑха театртан туртса илсе пырать теҫҫӗ те, аплах мар пулӗ тетӗп. Паллах, халӑх ӗлӗкхи пек йӑтӑнмасть театра, анчах эпир уйӑхра икшер-виҫшер тухса ҫӳретпӗр те, тепӗр чух тӑватӑ хутчен те, халӑх пуҫтарӑнать. Кӑмӑллӑнах йышӑннӑн туйӑнать. Театра, ман шутпа, чунлӑ ҫынсем, пурнӑҫ ҫинчен шухӑшлакан ҫынсем ҫӳреҫҫӗ. Вӗсем тепӗр ҫын чунне ӑнланма пӑрахман. Ҫынна хӗрхенме, ҫын хуйхине асӑрхама пултараҫҫӗ. Театр чуна тасатать тени тӗрӗсех вӑл. Театр шухӑшлаттарать. Ҫавӑнпа эпӗ ачасене шкул ҫулӗсенчех театра юратма вӗрентмелле тесе шутлатӑп.

Пирӗн шкулти драмкружок питӗ лайӑхчӗ. Урок вӗҫленессе кӑна кӗтеттӗм, Хӑвӑртрах драмкружока выляма каймалла. Чӑтма ҫук килӗштереттӗм. Эпӗ унта Мария Ухсайӑн "Ҫу, ҫумӑр, ҫу" пьесинчи тӗп сӑнара – Татюка вылянӑ. 9–10-мӗш классенче вӗреннӗ чух. Хампа пӗр шкулта вӗреннӗскер пӗри мана халӗ те ҫаплах, Татюк тесе чӗнет. Маншӑн – кӑмӑллӑ.

"Ҫӑлкуҫа" ертсе пынӑ вӑхӑтрах ачасемпе нумай ӗҫленӗ эпӗ. Вӗсене искусствӑна юратма вӗрентессишӗн ҫунаттӑм. Шупашкарти 57-мӗш шкулта манӑн питӗ лайӑх "Сентти" ушкӑн та пурччӗ. Республика тулашӗнчи чӑвашсем патне тухса ҫӳренӗ чухне ача-пӑча юррисене питӗ нумай пуҫтарнӑччӗ. Уйрӑмах Самар тӑрӑхӗнче. Ҫавсене юрлатчӗҫ вӗсем. Хитре юрлатчӗҫ. Питӗ йывӑрпа уйрӑлтӑм вӗсенчен. Шкултан питӗ ярасшӑн марччӗ.




*«Парне» ушкăн Мускавра.*

## "Парне" фольклор ушкăнĕ кураканшăн пултăр парне

Хамăр театрпа эпир нумай тухса çÿретпĕр. Мана хама уйрăмах Пушкăрт енчи чăвашсем патне çитме кăмăллă. Спектакльсем кăтартнисĕр, концертсем панисĕр пуçне эпĕ унти чăвашсенченчен халăх юррисене диктофонпа çырса илетĕп. Тĕлĕнмелле юрăсем. Фольклора питĕ юрататăп эпĕ. Сасă та манăн халăх юррисене юрламалли сасă. Халăх юррисене юратнипех "Çăлкуç" çумĕнче "Парне" фольклор ушкăнĕ йĕркелерĕм. Мана пĕр больницăри пултарулăх ушкăнĕсен смотрĕн жюрине чĕнĕччĕ. Пĕр ушкăнĕ çав тери килĕшсе кайрĕ. Тухса тăчĕç те, хăйсем чăваш тумĕпе, чăвашла питĕ таса та хитре юрларĕç. Çавсемпе пырса калаçрăм, халăх нумай кирлĕ спектакльсене хутшăнма кăмăл тумаççĕ-и тесе. Килĕшрĕç, "Эпир хаваспах", – теççĕ. Пиллĕкĕн–улттăн пычĕç. Унтан хам пĕлекенсем, фольклора юратакансем хăйсен пĕлĕшĕсене илсе пычĕç. Çапла 15 çын пуçтарăнтăмăр, чăмăртантăмăр. 12 çул ĕçлетпĕр. 70 çулхисем те пур унта пирĕн, 45-рисем те. Хушпуне, тенкине çакаççĕ те, капăр кĕписене тăхăнаççĕ те – илем! Пирĕн "Парне" кураканшăн чăн-чăн парне пултăр тесе тăрăшатпăр.

## Пурнăç пĕлтерĕшĕ

Ăста та пулсан ман ĕç ăнчĕ – татах та ĕçлес килет. Ах, пулмарĕ тесе кулянса лăпланса лармалла мар, ман шутпа. Çуккине пур тума тăрăшмалла. Пулманнине пур тумалла. Çĕнтермелле. Малалла каймалла. Вара, паллах, вăй, хăват тапса тăрать санра. Çăлкуç пек. Ахальтен çавăн пек ят паман вĕт эпир хамăр театра.

Театрăн йывăр вăхăчĕсем те пулнă. Пăчланса та ларма пултаратчĕ "Çăлкуç".



*«Телейлĕ-ши эсĕ, ывăлăм?» спектакль сыпăкĕ.*
*Наташа – А. Тимкова, Юра – А. Париков, Манюк аппа – Г. Скворцова.*

Саманасем пăтраннă вăхăтра эпир завода кирлĕ мар пулса тăтăмăр. Аврам Бурундуковăн хорĕ пĕтрĕ. Шутлăр-ха, ултă сасăпа юрлакан хор! Пире те ҫав шăпах кĕтетчĕ. Миҫе хутчен кайрăм эпĕ Культура министерствине. Артистсем ушкăнпа ларса ҫыру ҫырчĕҫ: "Пире чăваш театрĕ кирлĕ, эпир Чăвашра пурăнатпăр". Ну, хальлĕхе чиперех пек-ха. Ăнланаҫҫĕ пек туйăнать. Ку кăмăла ҫĕклет. Ăнăҫусем, ху кама та пулин кирли вăл хавхалану кӳрет. Пурнăҫăн пĕлтерĕшĕ ҫавăнта.

**Пичете Анастасия СЕНЬКОВА хатĕрленĕ**



*«Кăвак сирень айĕнче» спектакль сыпăкĕ.*

## ÇЕМЬЕ ВУЛАВĚ

**Елен НАРПИ**

# Турамăш çуралнă кун

## Калав

*Паянхи бизнес-ледисене халаллатăп.*
*Автор.*

...Мана темскерле вăй тĕксех тенĕн сывлăша çĕклерĕ те, эпĕ, супăнь кăпăкĕнчен те çăмăлскер, тин çеç-ха темĕнле хĕвĕшӳпе халтан кайса çитнĕскер, кăштах çеç маччана перĕнмерĕм, вара çав тери тĕлĕнсе йĕри-тавралла тинкертĕм. Тавралăх темле халичченхилле марри тăрук анратса ячĕ мана: эпĕ кĕç-вĕç пырса çапăнман маччa хăйĕн хытăлăхне çухатнă-ши вара – эпĕ ун витĕр çăп-çăмăллăн урăх çĕрелле вирхĕнсе тухма май пуррине ăнлантăм. Шăп çак самантра эпĕ анчахрах "вĕççе" хăпарнă пӳлĕмĕн ăш-чиккипе унта çаплах-ха пĕр çĕре пуçтарăнса тем хĕвĕшекен шурă тум-юмлă çынсем ман куç анине лекрĕç. Кăсăкланса аяларах антăм та сĕтел евĕр япала çинчи... хамăн кĕлеткене курсан чутах тăнсăр пулса урайне персе анмарăм. Анчах ... анчах урайне кĕрĕслетмелĕх ман халь кĕлеткем çук-мĕн, вăл авă, хирург çĕççи айĕнче, пач хускалмасăр выртать. Çакна курса хама-хам хыпашлама хăтлантăм та ... тинех тавçăру çиçĕмле хăвăртлăхпа пырса çапрĕ: "Турăçăм! Апла эпĕ ..?

– ...Виктор Андреевич, юн таппи çук!.. Давлени ӳкет... Эпир ăна çухататпăр... – варкăш çил пек пыра-пыра кĕреççĕ хăлхана медиксен сăмахĕсем.

"Турăçăм!.. Турăçăм, апла йăлтах тĕрĕс?.. Чун пурнăçне ĕненмесĕр ахалех каппайланнă апла эпĕ? Халь тин мĕн пулĕ ĕнтĕ, Турăçăм?.." – сиплемелли тĕрлĕ ăпăр-тапăрпа тухтăрсем кĕлеткем тавралла вĕткеленнине сехре хăппипе сăнанă май операци пӳлĕмне урлă та пирлĕ виçелерĕм эпĕ. Çавăнтах чуна тăвăрлатакан çак ӳкерчĕке тӳсме тек хал çитерейменнипе – хамран хам тарас тени те пулчĕ пулĕ – юнашарти пĕр пӳлĕме хĕвел пайăрки евĕр сăрхăнса пырса кĕтĕм. Сусăрланнă хĕрарăмсем выртакан палата-мĕн ку, чирлисем пурĕ тăваттăн иккен. Сасартăк вĕсенчен пĕри, пуçне, сулахай хулпуççине тата кăкăрне бинтласа хунăскер, çавна май Авалхи Египет фараонĕсен мумине аса илтерекенскер шăплăха татрĕ:

– Итле-ха, Полина, эс курмарăна, реанимацине паян кама пит васкаса илсе килчĕç çак?

Полина текенни, шурă бинтпа чăрканнă сылтăм урине кравать çине хурса, тепĕрне, сыввине, уранелле усса лараканскер, куçне аллинчи кĕнекерен уйăрса кӳрши çинелле тĕллерĕ те:

– Çамрăк хĕрарăм терĕç, аварине лекнĕ тет-и, – терĕ шеллевлĕ саспа.

– Татах авари, – хаш-ш кулянчĕ фараон мумийĕ, – миçе пин çынна сусăр хăварчĕç ĕнтĕ, мурсем. Çул çинче хăçан йĕрке пулать-ши пирĕн? Эпĕ иçмасса унта-кунта пит çӳрекен çын та мар, пурпĕрех лавккана çăкăр илме тухсан та пулин çапса хăварчĕç вĕт. Ара, арçури пек ĕрĕхтереççĕ те-ха...

– Ан та кала-ха, – килĕшрĕ унпа Полина ятли, – анчах ку хĕрачи хăй руль умĕнче пулнă тет, таçта çав тери хытă хăваланă та çул çаврăнакан тĕлте юпана пырса тăрăннă терĕç пĕлекенсем.

Пăшал кĕрĕслетрĕ тейĕн çак сăмахсемпе пĕрлех – ара, кусем ман çинчен сăмах сӳтеççĕ вĕт!.. Çари-и! çухăрса макăрса ярас килчĕ ман çакна илтсен, тем авăкра астăвăм ахрăмĕ синкер пулса иртичченхи самант патне тавăрчĕ...

...Хваттер алăкне сас кăлармасăр уçма тăрăшрăм эпĕ. Пĕлетĕп, мăшăрăн паян – канмалли, апла тăк çывăрса та тăман-тăр-ха. Эпĕ паянах таврăнасса та сунмасть-тĕр Вадим, кун сиктерсе çӳрекен автобус ыран çеç килет хулана. Эпĕ фирма ĕçĕсене пĕр талăк маларах вĕçлесе çула май урăх машинăпа ларса килессе вара ăçтан тавçартăр-ха вăл? Ирхи ыйхă тутлă пулакан, çавăнпа çывăрмалли пӳлĕм патне çитнĕскер хупă алăк умĕнче чарăнса тăтăм – эрне курман юратнă мăшăрăма вăратас-и е тăхтас кăштах? "Кофе вĕретес, ун шăршипе, тен, хăех вăранĕ", – тесе кухня еннелле çаврăннăччĕ кăна, пӳлĕмрен темле сас илтĕннĕ пек пулчĕ. Эпĕ тăп чарăнса тăтăм – Вадим вăранмарĕ пуль те? Çывăрмалли пӳлĕмрен татах мăкăр-мăкăр туни илтĕнчĕ, такам ихĕл-ихĕл кулса ячĕ. Эй, тĕнче! Хĕрарăм сасси! Эпĕ, самантрах ни чĕрĕ, ни вилĕ пулса кайнăскер, пĕтĕм сулăмпа алăка тĕксе уçрăм та – сапаланчăк сар çӳçлĕ хĕрарăм ытамĕнчи упăшкан чарăлса кайнă куçĕпе шăп тĕлме-тĕл тăрăнтăм. "Ва-дим..." – сарăмсăр ура тĕрекне çухатнăскер, ун ятне çăлăнăç шыранăн асăнтăм пулинех эпĕ, анчах пыр тĕпĕ самантрах пуш хирти майлă типсе ларчĕ-ши – хам сассăма хам та илтеймерĕм. Вара çак намăс ӳкерчĕкрен калама çук йĕрĕнсе вăрт! çаврăнтăм та алăк патнелле ыткăнтăм. Хыпаланса пушмака тăхăннă хушăра алăк патĕнчи çӳлĕк çинче Вадим машинин уççи куç тĕлне пулчĕ. Ăна ярса илтĕм те пушартан тарнăн хваттертен тухса сирпĕнтĕм. Капланса юхакан куççуле чыхăна-чыхăна çăтса ик-виç картлаç чухлĕ антăм-и, çук-и – çӳлтен Вадим сасси илтĕнсе кайрĕ:

– Мариша!.. Тăхта, ан кай!.. Каçар мана-а-а!

Куç умĕнчен каллех çывăрмалли пӳлĕмри – иксĕмĕрĕн сăваплă вырăнĕ тенĕ-çке-ха эпĕ çавна! – чуна шăнтса яракан сĕрепсĕр ӳкерчĕк кино кадрĕ манерлĕ ярăмланса иртрĕ те, подъездран васкавар тухса Вадимăн "Ауди" машини патне ыткăнтăм. Руль тытма тинтерех кăна вĕреннĕччĕ эпĕ, упăшкам хăех инструктор вырăнне пулнăччĕ. Экзамен тытса машина çӳретме ирĕк илесси çеç юлнăччĕ тĕрĕссипе. Антăхса йĕрекенскер "Ауди" ăшне кĕрсе ларнине, ирхи хула урамĕпе ăмăрту трасси çинчи Шумахер пек вирхĕнсе пынине, пĕр çĕрте машина таçти сулнăка сирпĕннине усал тĕлĕкри майлă кăна ас тăватăп. Ытти, халь кунта мĕн курни-илтни, апла тăк йăлтах чунăм ӳтрен тухсан пулса иртет-мĕн...

***

Эпĕ каллех тухтăрсем ман кĕлеткене чĕрĕ пурнăç сывлăшĕ вĕрсе кĕртессишĕн ăшталанакан палатăна таврăнтăм. Мĕн вăхăт иртнĕ-ши? Тĕлĕнмелле те, стена çинчи электронлă сехет чарăнса ларнă тейĕн – эпĕ таçта та çитсе килнĕ, тем те аса илнĕ хушăра виç минут çеç иртнĕ пулать-и? Кай, тĕрĕс мар кăтартать пулĕ ку вăхăт хуралçи? Ӳлесе макăрас килнине, салху туйăм кăмăла

пусарса тăнине епле çĕнтермеллине ниепле тавçăраймасăр чӳрече ани çине пырса лартăм. Мĕн тăвас тупата? Ман тавралла чуна сăрлаттаракан пушăлăх, никамсăрлăх, вĕçсĕрлĕх. Вăхăт чуппипе япаласен чикки те таçта йăмнă иçмасса. Кашни этемĕн чунĕ ӳтрен тухнă-тухманах çапла пĕчченлĕхе кĕрсе ӳкет-шим вара? Кунпа танлаштарсан пурăннă чухнехи пĕчченлĕх ним те мар иккен! Нивушлĕ никама та кирлĕ мар эпĕ? Çынсем çав тĕрлĕ мухтакан Турăпа ун пирĕштийĕсем ăçта тата? Е ултав кăна-и çакă?..

–...Ултав мар, пурте тĕрĕс, – сасартăк янкăс сасă илтнипе кăрт! сикрĕм.

Сулахаялла пăхрăм – никам та, сылтăмалла – куçа шартаракан çутă, анчах никам та курăнмасть.

– Ан шыра халь тин, пĕрех кураймăн, – илтетĕп çав сассах.

– Мĕншĕн? Кам эсĕ?

– Шыва кĕртнĕ чухне Турă сан пата янă Пирĕшти эпĕ. Пурăннă чухне мана пĕлес темерĕн, çавăнпа халĕ суккăр пекех эсĕ – ман çине пăхсан куçу шарса каять.

– Мĕн кĕтет мана, Пирĕштийĕм?

Çак самантра таçтан муртан сехре хăппиллĕ сасăсем илтĕннĕ пек пулчĕç, ерри-ерипен армак-чармак хура кĕлеткесем шуса тухрĕç те мана йĕри-таврах сырса илме хăтланчĕç.

– Эпир кĕтетпĕр сана, çылăхлă чун, – унтан та кунтан ихĕлтетрĕç хайхи сасăсем. – Çылăхусем хăйсемех пирĕн патăмăра сĕтĕрсе пырĕç сана...

Кураймасăр çĕленле чашкăрни, шатăртаттарса шăл хăйрани кăна илтĕнсе тăчĕ пĕр ăстăркка. Эпĕ, вилесле (кунтан та ытла епле вилме пулать-ши?) хăраса ӳкнĕскер, сылтăмри çутă еннелле тĕршĕнсе Пирĕштирен çăлăнăç ыйтрăм: "Пулăшсам..."

– Акă мĕн, Турă чури Мария, – паçăрхи янкăс сасă янраса кайсан усал-тĕсел сасси самантрах путланчĕ, – сана, Турамăш çуралнă кун тĕне кĕртнĕскере, Таса хĕр Мария хăй хӳттинче усрать. Санăн чуну çăлăнтăр тесе вăл Аслă Турăран пил ыйтса илнĕ, анчах малашнехи пурнăçра та Турра манса пурăнсан чуну кам аллине лекесне халĕ хăвах куртăн. Этеме иртĕхсе пурăнма çут тĕнче кăтартмасть Çӳлхуçа, вилĕмсĕр пурнăç валли хатĕрленме çуратать. Эсĕ вара, хĕрарăм, хăвăн тивĕçне те маннă...

"Епле тивĕçе маннă?! Эпĕ упăшкана улталаман, юратнă ăна, вăл вара..." – хама сăлтавсăр айăпланипе пĕртте килĕшес килмерĕ манăн.

– "Юратнă" тетĕн? Апла мĕншĕн пепке пуласран сыхланатăн? Эрнешер командировкăсенче çĕтсе çӳретĕн? Укçа ĕçлесе илессишĕн пĕтĕм чунна паратăн? Хĕрарăм тивĕçĕ-и çакă? Тĕнче мулĕ куçна шур илтернĕ санне. Турă вара хĕрарăма урăх тĕллевпе тĕнчене килтерет: унăн чунĕ хăйне пӳрнĕ ачасене çуратса çăлăнать. Çавăнпа та мăшăрна айăпласа тӳрре тухма ан тăрăш: эсĕ килӳнте мĕн курни – Турăсăр пурнăçăн пуçламăшĕ кăна-ха. Ӳлĕмрен эс хăш çулпа утассине те сана никам та ирĕксĕрлеймест – суйла. Халĕ вара кĕлеткӳ ăшне таврăн, Çӳлхуçан ирĕкĕ çапларах...

Мана çăмăлкка хум варкăшĕ çупăрласа илчĕ тейĕн. Сывлăх хуралçисем çаплах шăпăр-шăпăр тар юхтарса электрошокпа ман чĕрене ĕçлеттерсе яма тапа-

ланаççĕ-ха. Хывса пенĕ тумтир евĕр кĕлеткем патне чуччу ярăннă чухнехилле чӳхенсе çывхартăм та...

– Çитет!.. Пульс пур!.. – тенине илтрĕм. – Ай-ай, тĕлĕнтермĕш – çухатрăмăр пуль тенĕччĕ: кускер вара вунă минутран таврăнчĕ. Тем тесен те Турă пурах иккен!..

"Пурах çав, пур!" – кăшкăрас килчĕ манăн та, анчах тухтăр мĕн каланине йăлтах ăнлантăм пулин те çур сăмах та тавăрса хуравлаймарăм – паçăр çеç хама акăш тĕкĕ евĕр çăмăл туйнăскер, халĕ ал-урана кăна мар, куç хупанкипе чĕлхеçăвара та тăхлан шăратса тултарнă тейĕн. Шăм-шакăм кĕрĕс-мерĕс те шалпар тумтире аса илтерчĕ, пуç вырăнне çурăк тăм чӳлмек тăхăнтартнăн туйăнчĕ. Пĕр ăстрăм çапла ку тĕнчен виçисемпе чăркăшса выртрăм-выртрăм та, кăштахран эмел чупакан пăрăхсемпе, сывлама пулăшакан ăпăр-тапăрпа йĕри-таврах пиелесе пĕтернĕ халсăр кĕлеткеме ыйхă тĕнчи шурлăх евĕр çăтса янине сисрĕм.

***

Пĕр вăранми икĕ талăк хуп турттарнă-мĕн эпĕ. Куçа уçнă чух тухтăрсем обход тăватчĕç пулĕ-и – ман тавралла шурă тумлă темиçе çын тăратчĕ. Эпĕ ăна, хама операци сĕтелĕ çинче çăлса хăварнă çамрăках мар хирурга, тӳрех палласа илтĕм те тав тăвас тесе çăвара уçрăм:

– Виктор... Ан... Ан-дреич, – татăклă-сыпăклă аран хĕсĕнсе тухрĕ имшер сассăм, – та-тавах сире...

Тухтăрсем пĕр-пĕрин çине кăнн! тинкерчĕç – епле паллать терĕç-ши? Çумрах тăракан Виктор Андреевич хăйĕн хирург пурнăçĕнче кунашкал тĕлĕнтермĕшсене пĕрре мар курнă-тăр та тĕлĕнни-тунине палăртмарĕ. Шурса кайнă аллăма ачашшăн чăмăртарĕ те:

– Мана мар, Турра тав ту, хĕрĕм. Чĕрӳ тапма чарăнсан вунă минутран пурнăç парнелерĕ Вăл сана. Медицина ун пекех хăватлă мар, кăна тума тĕнчене тытса тăракан Вăй кăна пултарать. Çĕнĕрен çуралтăм тесе шутла. Сентябрĕн çирĕм пĕрремĕшĕ иккĕмĕш çуралнă кун пулĕ ӳлĕмрен саншăн, хĕрĕм, – терĕ кăмăллăн.

Ман унпа татах та татах сăмахлас килчĕ, ӳт тулашĕнче чун мĕн-мĕн курнисене каласа парас хевте те пурччĕ, анчах куçăмран куççуль ярăнса анчĕ те, урăх сăмах чĕнеймерĕм.

– Ну-ну, хĕрĕм, ан макăр. Халь ăплан, сан канмалла, вăй пухмалла, вара тепĕр чух калаçăпăр, – терĕ хирург ман шухăш-туйăма пĕлнĕ пекех.

Тухтăрсем темĕн кăсăклансах сӳтсе явса майĕпен пӳлĕмрен тухрĕç. Эпĕ йĕри-тавралла куç ывăтрăм: хĕвел шевлипе чăпăл тунă палатăра пĕчченех-мĕн. "Йывăр операци хыççăн чирлисене вырттаракан пӳлĕм ахăртнех ку", – хам тĕллĕн тĕшмĕртрĕм çавăнтах. Темшĕн Виктор Андреевич калани хăлхара тепĕр хут янăраса кайрĕ: "Турра тав ту... вунă минутран пурнăç парнелерĕ Вăл сана". Клиника вилĕмĕ хыççăн пациента ку тĕнчене тавăрмалли вăхăт ултă-çичĕ минутран ытла мар тенине унччченех таçта вуланăччĕ. Апла... Апла эпĕ ку таранччен Турăсăр пурăнсан та Вăл мана самантлăх та манман пулса тухать-и-ха? Вăл мана, айван та суккăрскере, çапла тăна кĕртрĕ пулĕ эппин.

Шăп çак самантра палата алăкĕ уçăлнă пек пулчĕ, анчах никам кĕни-туни те сисĕнмерĕ.

"Тăхта, юлташăм, унта кĕме юрамасть, – илтĕнчĕ коридортан хĕрарăм сасси. – Йывăр операци пулнă, пăлханма пачах юрамасть ăна."

Медсестра такампа ман пирки сăмахланине ăнкарса хам ăссăн йăл култăм – Турă хăй упраса хăварнă тăк халь тин пит шикленме те кирлĕ мар-тăр?

"Ман питĕ курмалла ăна, сестра. Эпĕ айăплă ун умĕнче, – тăванран та тăван сасă (Вадим сасси!) хăлхама пырса кĕчĕ çак вăхăтра. – Ман каçару ыйтмалла унран..."

"Кам пулатăр эсир пациентшăн?"

"Упăшки эпĕ, Вадим ятлă."

"Итлĕр-ха, упăшки, – çирĕппĕн тухрĕç хĕрарăм сăмахĕсем, – кунта айăп каçарттарса çӳреме чиркӳ мар. Арăмăр ахаль те пĕрре вилсе чĕрĕлнĕ сирĕн, юн нумай çухатнă вăл, пуç купташки те сиенленнĕ. Виктор Андреевич ун патне никама та кĕме ирĕк паман, çав шутрах упăшкине те. Уссăр павраса тăриччен юн илекен центра кайса хăварăн юнăра парăр. Мăшăрăр патне ăна ытти пациентсем выртакан палатăна куçарсан тин килме пултаратăр."

Вадим нимĕн калама аптăрарĕ курăнать, пĕр кана сас-чӳ илтĕнмерĕ. "Апла тăк çак чечек çыххине те пулсан илсемĕр," – упăшкан тилмĕрӳллĕ сассине илтрĕм вăрахран.

"Палатăна чечек-таврашĕпе те кĕме юрамасть, – хальхинче шураппа кăшт йăвашланнăн туйăнчĕ. – Ну юрĕ, Вадим терĕр-и çак, хурса хăварăр çакăнта. Илем тени кăмăла çĕклет вăл..."

Куç хупанкисем сăмалапа çыпăçтарнăн йывăрланса-йывăрланса пычĕç. Эпĕ каллех çăра кĕсел пек туйăнакан ыйха путнă.

***

Реанимацинче пилĕк кун майлă сипленнĕ хыççăн шăм-шаккăм вăй илсе пынине туя пуçларăм. Тăрса ларакан пулсан пĕтĕмĕшле сусăррисен палатине куçарчĕç мана. Пĕрре куç ывăтса илнипех ăнлантăм – эпĕ ку пӳлĕмре унччен пулнă. Авă, кĕтесре, фараон мумине аса илтерекен хĕрарăм выртать, ун çумĕнче сылтăм урине амантнă Полина. Тăвата чирлĕ хĕрарăмран халь иккĕн çеç юлнăмĕн, тепĕр иккĕшĕ сывалса тухнă ахăртнех.

Медсестрапа санитарка Полина çумĕнчи шурă çиттиллĕ кравать çине вырнаçтарчĕç мана. Шураппа пăт-пăт тумлакан эмел пăрăхне каллех аллăмри юн тымарĕпе çыхăнтарчĕ те: "Шĕвекĕ юхса пĕтес умĕн çак хĕрлĕ тӳме çине пусса систерĕр," – тесе палатăран тухрĕ. Çĕнĕ çын пуррипе-тĕр, хĕрарăмсем тăруках чĕмсĕрленчĕç, пӳлĕмре пĕр авка шăплăх хуçаланчĕ. Сăмах çăмхине ăçтан сӳтме пуçламаллине чухлайманран эпĕ те шарламарăм-ха. Çапла мĕн вăхăт иртрĕ-ши – калама хĕн, анчах куç хупанкисем йывăрланса çитнине туйрăм та хам сисмесĕрех персе ятăм:

– Полина, эпĕ çывăрса кайма пултаратăп. Эмел тумлама пăрахсан сестрана систер, тархасшăн...

Эпĕ ăна хам палланипе питĕ çывăх çын пек туйса илнĕччĕ çав самантра,

анчах хĕрарăм мана пуçласа курни çинчен пач маннăччĕ пулас. Ку яхăнта манран хăпма та пĕлмен йăлăхтармăш ыйхăран вăрансан пĕрремĕш ыйту çапларах пулчĕ:

– Каçарăр та, эсир мана епле паллатăр? Эп сире пĕлместĕп-çке?..

Полина иккен. Эпĕ хăйне ятран чĕннипе шалт аптăранă-тăр мăнтарăн. Сывă урине кравать хĕрринчен усса ман çине тĕлĕнĕçлĕн тинкерсе ларать.

– А-а, – йăл кулма хăтланса ятăма каларăм эпĕ. – Ан тĕлĕн, Полина, эсир юмахланине ăнсăртран тăнлама тӳр килнĕччĕ. Мĕн... леш... операци сĕтелĕ çинче чун тухса тарсан килсе лекрĕм сирĕн палатăна. Эсир тăваттăн выртаттăрччĕ. Сире вара, – эпĕ пуçăма фараон мумийĕ еннелле сĕлтрĕм, – лавккана çăкăр илме тухсан çул çинче машина çапса хăварнă. Çапла вĕт?

– Çапла, – тĕлĕнсе сăмах чĕнчĕ хайскер.

– Ятăра пĕлейместĕп тульккӑш, эсир каламарăр ун чух...

– Света эпĕ. Хăçан вăл – "ун чух"? Ас тумастăп-çке нимĕн те, – пушшех аптăранăн сас пачĕ хĕрарăм.

– Калатăп-çке, "чун ӳтрен тухса тарсан" тесе. Вилсе чĕрĕлнĕ вĕт эпĕ, илтмен-и?

Чирлисем пĕр-пĕрин çине кăлин! тинкерчĕç, те аташать терĕç ĕнтĕ, анчах пурне те пĕлес килекен туйăм этемре нимрен те хăватлă ларать-мĕн. Полина çав кăсăкланăва çĕнтереймесĕр пĕр вырăнта йăкăлт! сиксе илчĕ те такам илтесрен шикленнĕн çурма саспа ыйтрĕ:

– Вара?.. Мĕнле унта? Каласа парăр-ха...

Чун кĕлеткерен уйрăлсан мĕн курни-илтни каллех куç умне капланса килчĕ. Çавăнтах Пирĕшти сăмахĕсем ахрăмланса хăлхара янăраса кайрĕç: "Этеме иртĕхсе пурăнма çут тĕнче кăтартмасть Çӳлхуçа, вилĕмсĕр пурнăç валли хатĕрленме çуратать..." Эпĕ... эпĕ вара ку таранччен мĕнле пурăннă? Турра сума сăвасси çеç мар, Вăл пур тесе шухăшласси те пулман. Хам ĕмĕрте чиркӳре икĕ хут – тĕне кĕртнĕ тата венчет тунă чух – пулнă. Çакă йĕркеллĕ тесе сĕмленнĕ-çке иçмасса. Пурнăçăм яп-яка кăлтăртатса кусса пынинче те хамăн тӳпене çеç курман-и тата? Ятлă-сумлă фирма ертӳçи-çке! Урăх мĕн кирлĕ? Сăмса пĕлĕте перĕнменни кăна. Çитменнине çемьере те тату пурнăç, упăшкам мана çеç юратать тесе шутланă мар-и? Турă валли ăçта вырăн унта? Ăна ăраскалсăррисемпе пурнăç сакăлтине сирпĕнсе юлнисем тилмĕрччĕр. Вĕсем валли те ĕç мăй таран унăн. Турă мана нимĕн те туса паман, йăлтах ак çак ылтăн пуçăмпа тата ик ĕçчен аллăмпа меллештернĕ тесе каппайланмастăм-и мăшăрăм умĕнче те? Эй, айван! Çав "ылтăн" пуç купташки чăл-пар саланса каясран Турă упраса хăварман тăк, усал-тĕсел ман хӳтлĕхсĕр чунăма хăйсен Турăсăр сивĕ тĕнчине туххăмрах сĕтĕрсе каятчĕ ĕнтĕ. Хăйне пĕлмен, сума суман ачисене те çав таран юратма пултаракан Туррăн хăвачĕ упраса хăварнинчен тепĕр хут вышкайсăр тĕлĕнсе выртаканскер, эпĕ хĕрарăмсене шăппăн çеç сăмах хушрăм:

– Пĕлетĕр-и, хĕрсем, Турă пур... Эпĕ халь çакна тин ĕнентĕм. Мана Вăл чунăма çăлма тепĕр хут çуратрĕ.

***

Унтанпа шăп çулталăк иртрĕ. Вăхăт урапи шав малалла кăлтăртатнăçемĕн

пирĕн çемьере те улшăнусем пулса иртрĕç – Вадимпа иксĕмĕр уйăх каялла аттепе анне пулса тăтăмăр. Çитменнине икĕ хут аттепе анне! Йĕкĕреш ачасем – ывăлпа хĕр – парнелерĕ пире Турă. Мана çăлса хăварнă тухтăра асра тытса Виктор тата Виктория ят патăмăр вĕсене.

...Паян сентябрĕн çирĕм пĕрремĕшĕ, манăн иккĕмĕш çуралнă кун. Таврара сап-сар шевлепе çиçсе тăракан юмахри евĕр ылтăн кĕркунне. Пушкин ытахальтен çак вăхăта ытараймасăр каçăхсах сăвă çырман-тăр ĕнтĕ. Аллейăри сарăхĕрлĕ-хăмăр çулçăсене чăштăртаттарса чиркӳ еннелле утатпăр Вадимпа. Мăшăрăм тĕксе пыракан икĕ вырăнлă кӳмере ывăлпа хĕрĕмĕр тутисене тĕлĕкре те чăпăрт-чăпăрт тутарса паппа тăваççĕ. Эпĕ, çулталăк каялла шăп çак кун пулса иртнĕ пăтăрмаха аса илкелесе шухăш сĕлкĕшĕнче ашса пыраканскер, чипер утнă çĕртех тăп чарăнса тăтăм.

– Итле-ха, Вадим, – эпĕ пĕлейменни ун куçĕнче мар-и тенĕн упăшкама куçран тинкертĕм, – Турă амăшĕ хăçан çуралнă?

Чун тĕнчи еннелле ман евĕрлех пирвайхи утăмсем тăвакан мăшăрăм эпĕ мĕн шухăшпа çапла ыйтнине тавçăраймасăр хулпуççине сиктерчĕ:

– Пĕлместĕп, Мариша. Мĕн пулчĕ сасартăк? Чиркӳре пĕлеççех ĕнтĕ, ыйтатпăр ак...

Хăй çавăнтах тем самантра куçне уçнă хĕрĕмпе сассине йăвашран та йăвашлатса калаçма та пуçларĕ. Тĕлĕнмелле çын иккен ман Вадим. Ачасем çуралнă хыççăн çеç эпĕ ăна пачах çĕнĕлле куçпа курса хаклама вĕрентĕм мар-и. Тавах Турра çакăншăн.

– Турамăш çуралнă кун тĕне кĕртнĕ мана, ятăм та Мария. Пĕлмеллех ман çак уяв хăçан иккенне...– чиркӳ картишне кĕнĕ май те хампа хам калаçрăм, те упăшкана ăнлантартăм.

Курман та: пĕр çамрăках мар хĕрарăма пырса çапăнасран аран пăрăнса ĕлкĕртĕм. Хĕрес хывса илчĕ те хайхискер пирĕн енне çаврăнса:

– Каçарăр, ачамсем, уяв ячĕпе сире, – терĕ, унтан айккинелле пăхса хушса хучĕ, – Таса хĕр Мария, эсĕ те каçар,васкатăп, нумай тăраймарăм, çырлах мана, çылăхлăскере...

Çакна илтсен Вадимпа иксĕмĕр те пĕр харăс персе ятăмăр:

– Калăр-ха, мĕнле уяв паян?

– Турамăш çуралнă кун паян, ачамсем.

Хапха алăкĕн шашулкки хăй вырăнне шăнкăрт! кĕрсе ларнă майлах пулчĕ ку. Мĕн пулни-иртнине пĕр чĕрĕм самантра йăлт ăнланса илнĕскер, мăшăрăм çумне тĕршĕнтĕм те савăнăç куççулĕ тăрук килекен çумăрла куçран шапăр-р! юхса аннине сисрĕм. Турамăш çуралнă кун апла мана Турă нимле виçене те шăнăçайми парне кӳнĕ – чунăма çăлмалли иккĕмĕш пурнăç парнеленĕ.

ӲНЕР

# Юрий Бубнов



Юрий Бубнов.
В. Чураков ӳкернӗ.

*(12.08.1948 – 27.08.2009)*

***Куславкка районӗнчи Кинер ялӗнче çуралнӑ. Палехри ӳнер училищинчен, Санкт-Петербургри И.Репин ячӗллӗ живопись институтӗнчен вӗренсе тухнӑ. ЧАССР тава тивӗçлӗ художникӗ. Ытларах чиркӳсем илемлетнӗ, турӑшсем ӳкернӗ.***







Лак миниатюри.
«Андрей Рублев» триптих
1979 ç.



**Ирĕклĕхшĕн.**
**(Пугачев Чăваша çитни).**
**1988 ç.**







Турăшсем.
1987 ç.



**Саша. (А.А. Комаров художник-реставратора асăнса). 1988 ç.**

***Ю.А. БУБНОВ 2007 ÇУЛХИ АКА УЙĂХĔНЧЕ СЕРГЕЙ ЖУРАВЛЕВА ПАНĂ ИНТЕРВЬЮРАН:***

**– Юрий Александрович, мĕншĕн-ха пурнăçăрта пир, палитра, киçтĕк, сăрă суйласа илтĕр? Тĕрĕссипе пач урăхла пулма пултарнă-çке: гримерка, сцена, роль...**

– Ачалăх, чăн та, театрта иртнĕ. Çывăрма çеç киле таврăннă. Шкул çулĕсенче кулленхи çул та улшăнман: ирхине вĕренме кайнă, ун хыççăн – ӳнер шкулне, унтан – театра. Уроксене гримеркăра хатĕрленнĕ, тӳрех вара аттепе анне выляКан спектакле курма васканă. Пĕтĕм пьесине пăхмасăр калама вĕреннĕ, суфлер кирлĕ пулман мана. Çавăнпа пĕррехинче аслă класра вĕреннĕ чухне атте вырăнне выляма та лекрĕ.

Эпĕ сăрă тĕнчине музыка шкулĕнчен пырса кĕнĕ. Вун пĕре çитсен фортепьяно калама вĕренес килчĕ. Виçĕ-тăватă хутчен унта кайсан аттепе анненни евĕрлĕ пултарулăх çуккине ăнкарса илтĕм. Тантăшăмсем Пионер çуртĕнчи изокружока çӳреме сĕнчĕç. Унтан мана 1-мĕш номерлĕ ӳнер шкулне куçарчĕç, вĕрентекенĕм Виктор Леонтьевич Немцев пулчĕ. Вăл Шупашкарти ӳнер училищине вĕренме кĕме ӳкĕтлерĕ. Унпа килĕшнĕччĕ те ĕнтĕ. Юлташăмсем мана нумай тĕспе тухакан «Советский Союз» журнал кăтартрĕç. Ăна пăхса ларнă чухне Палех миниатюрин репродукцийĕсене асăрхарăм та çапла шутларăм: «Çав училищĕне çеç вĕренме кĕретĕп». Пĕтĕм Совет Союзĕнчен темĕн чухлĕ абитуриент пынăччĕ унта. Мана кăштах çăмăлрах пулчĕ, мĕншĕн тесен ăсталăха ӳнер шкулĕнче ӳстернĕ-çке, уйăх çурă хатĕрлев курсне çӳренĕ. Çавăнпа вĕренме кĕрейрĕм.

**– Палехра вĕреннĕ чухне пĕр ăнсăртлăх сан шăпуна чутах улăштарайман тенине илтнĕччĕ.**

– 3-мĕш курсра училище директорĕ чĕнтерчĕ. «Юра, санăн художество пултарулăхĕ йĕркелемелле», – терĕ. «Манăн? Эпĕ юрлама та, ташлама та...» «Санăнах, – сăмаха пат татрĕ вăл алри папкине уçса. – Эпĕ сан биографипе паллашрăм». Сасăпа вулама пуçларĕ: Ашшĕ – Александр Иванович Бубнов – Чăваш академи театрĕн артисчĕ, амăшĕ Светлана Никифоровна та... Артистсен ывăлĕ, апла эпĕ хушнă ĕç саншăн – шăл çемми».

Тавлашни усăсăр пуласса ăнлантăм, юрлама та, ташлама та хăнăхма тиврĕ. Эпĕ хавхаланса кайрăм, комисси пирĕн концерта курсан, мана музыка училищин ташă уйрăмне çӳреме сĕнчĕ. Эпĕ килĕшрĕм те икĕ çĕрте пĕр вăхăтрах вĕренме пуçларăм. Çакăнпах вĕçленмерĕ-ха, музыка училищинче диплом ĕçĕ хӳтĕленĕ чухне «Щелкунчик» балетри пĕр сыпăка ташласа патăм. Ун хыççăн комисси председателĕ патне чĕнтерчĕç. Вăл Ваганов ячĕллĕ балет училищин преподавателĕ пулнă-мĕн. Каллех ăмсанмалла сĕнӳ илтрĕм: «Художество училищине пăрах, эпир сана хамăр пата экзаменсăрах 3-мĕш класа илетпĕр». Анчах эпĕ çак сĕнӳпе пачах килĕшмерĕм. Ташă коллективĕн художество ертӳçин дипломне илтĕм те миниатюра ĕçĕпе аппалантăм, каçсерен Культура керменĕнче художество ертӳçинче ĕçлесе пурăнтăм. Училищĕрен вĕренсе тухсан, 1969-мĕш çулта, тăван ене таврăнтăм, кĕркунне çара илчĕç – киçтĕкпе сăрра тинĕс тумĕпе «ылмаштарма» тиврĕ. Ленинград флотне çаклантăм. Штаба лекрĕм, чертежсем тăваттăм, çыру ĕçĕпе аппаланаттăм. Документсене штаба леçнĕ чухне И.Репин ячĕллĕ акаде-

ми умĕнчен иртнĕ май манпа пĕрле утакан 3-мĕш рангри капитана: «Эпĕ гражданкăра Палех художество училищинчен вĕренсе тухнă вĕт», – терĕм. «Пирĕн пушă вăхăт пур, академие кĕрсе тухар», – сĕнчĕ офицер. Искусство храмĕн алăкĕ урлă каçсанах тĕлĕннипе шак хытса кайрăм, чĕлхе çаврăнми пулчĕ, ӳт чĕтрене ерчĕ. «Çартан таврăнсанах кунта вĕренме килетĕп», – çирĕп тĕллев лартрăм.

Чӳк уйăхĕнче çар вĕренĕвĕ пуçланчĕ, унта эпĕ шăнса пăсăлтăм. Тухтăрсен комиссийĕ манăн сывлăхăм япăххине çирăплетрĕ, киле ячĕ. Киле таврăнсан телевидение художника вырнаçрăм. Ĕçĕ йывăрах марччĕ. Института вĕренме кĕме хатĕрленме кансĕртерех пулчĕ. Художество училищинче вĕрентекен Ермолаева патне кайрăм, рисовани урокĕсене çӳреме ирĕк пама ыйтрăм. Розалия Михайловна хирĕçлемерĕ, анчах çапла каларĕ: «Пире 36 сехетлĕх натурщик кирлĕ, пулма килĕш, вара – тархасшăн». Пуçланчĕ хайхи кашни саманта шута илнĕ пурнăç: кăнтрăла – телевидени, каçхине – училище.

**– Розалия Михайловна шкулĕ вĕренме кĕме еплерех пулăшрĕ?**

– Абитуриентсене икĕ натюрмортран пĕрне суйласа илме ирĕк пачĕç. Пурте пĕрремĕш варианта кăмăлларĕç, ăна ӳкерме ларса тухрĕç, ман валли вырăн юлмарĕ, эпĕ «шурри» текенни патне пĕр-пĕччен утрăм. Мĕн ӳкернине айккинчен пăхрăм та хăраса ӳкрĕм. Япаласене уйăрса илме те çук, йăлтах шап-шурă, çĕнĕрен ӳкерме кая юлнă. «Йăлтах харама кайрĕ, йăлтах харама кайрĕ», – çав тери пăшăрханса ӳкрĕм. Сасартăк çав вăхăтра килте тĕртнĕ кавире асăрхарăм, ăна хамăн натюрморта кĕртрĕм. Ман пата комисси пырса та тăчĕ.

– Эсир ăçтан килнĕ? – ыйтрĕ пĕри.

– Шупашкарти художество...

– Чăваш Енче лайăх шкул. Ермолаева патĕнче вĕренмен-и ăнсăртран?

– Ун патĕнче.

Манпа калаçнă педагог Розалия Михайловнăпа пĕрле вĕреннĕ иккен.

**– Тăваттăмĕш курс пуçламăшĕнче сире кăларса яма пуçланă-мĕн.**

– Çуллахи каникул вăхăтĕнче Шупашкарти художник юлташсем пĕр чиркĕвĕн турăшĕсене çĕнетме хутшăнма сĕнчĕç. Килĕшрĕм. Практика. Кайран, хавхалануллăн института таврăнсан, куратор мана пăлхануллăн çапла пĕлтерчĕ: «Юра, сана институтран кăларса ярасшăн». Тĕлĕнсе кайнăскер ректор патне кĕтĕм. Профессор тӳрех çыру вулама пуçларĕ: «Бубнов студент çулла чиркӳре турăшсем ӳкернĕ». Эпĕ ăна тимлĕн итлерĕм, унтан хăюлăх тупса çапла каласа хутăм: «Эпĕ реставраци уйрăмĕнче вĕренетĕп-çке. – Ун умне 16 сăн ӳкерчĕк кăларса хутăм. – Кусем реставрациличчен, çаксем – кайран. Уйрăмлăх пур-и?»

Ректор тимлесех пăхрĕ те аллине сулчĕ: «Йăлтах ăнлантăм, кайса вĕренех».

## КАШНИ ÇЫН – ХĂЙ ТĔНЧЕ

# Шăхачсен çăлтăрĕ



**Çапла калаççĕ ун çинчен ялта. Вăл хăйĕн чĕринче кашни çын валли çутă хĕлхем, ăшăлăх тупма тăрăшать. Вырăс çемйинче ÿснĕ пулин те шкулта вунă çул ытла чăваш чĕлхине вĕрентнĕ. Чăвашла çепĕç те илемлĕ пуплет, ваттисен сăмахĕсемпе халăх каларăшне питĕ нумай пĕлет. Вырăс, ирçе юррисене чăвашла куçарать. Хăй те кĕвĕлет. Тăван ялĕнче "Умарина" ("улмуççи" тени пулать) ирçе фольклор ушкăнĕ йĕркеленĕ. Унтанпа ансамбль тăван тăрăхра кăна мар, республикăра та палăрнă. Чылай концерт кăтартнă, кураканшăн чăн-чăн хĕпĕртев пулса тăнă. Кăçал вара "Умарина" халăх ятне илме тивĕç пулнă. "Кашни çын – хăй тĕнче", – теççĕ, Патăрьел районĕнчи Шăхачра пурăнакан Зинаида Михайловна Гугушкинăн тĕнчи чăнласах та пысăк та пуян, тулли.**

– Питĕ учитель пулас килетчĕ те... Шкулта аван ĕлкĕрсе пыраттăм – укçа çуккипе малалла вĕренме каясси пулмарĕ. Эпĕ И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтне вĕренме те кĕнĕччĕ, чĕнсе те янăччĕ ĕнтĕ... Сакăр ачаллă çемьере çитĕннĕ эпĕ. Атте инвалидчĕ. Нимĕн тума та çук, фермăна пăру пăхма вырнаçрăм. 1957 çулта вара йывăçран тĕрлĕ япала тăвакан Шăхачри комбината кайрăм. Вăл вăхăтра председательте пирĕн тăван ĕçлетчĕ. "Эсир – пултаруллă çынсем, шăллусем купăс калаççĕ, клуба ĕçе вырнаç-ха",– терĕ вăл. Районти (ун чухне Первомайски районĕччĕ) культура пайĕнчен мана Чăваш Çармăса (халĕ Йĕпреç районне кĕрет) ăсатрĕç. Ялти культура шайне ÿстерес тесе çине тăрсах ĕçе пикеннĕччĕ ĕнтĕ – "Таçта тăрмашса ан çÿре, тăван ялах кил", – терĕ председатель. Эпĕ вара таврăнтăм юратнă Шăхача! Завклуб та, библиотекарь те, илемлĕх ертÿçи те, водитель те – хамах. Билет та сутатăп. Кĕçех фольклор ушкăнĕ йĕркелерĕм. Малтанах вăл "Березка" ятлăччĕ. Каярах, ирçе халăх юррисене шăрантарнăран, "Умарина" пултăр терĕç. Эпĕ ирçе каччине Николая качча тухнăччĕ. Хуняма

вырăсла та, чăвашла та пĕлместчĕ, ирçелле кăна калаçатчĕ. Ирĕксĕрех вĕсен чĕлхине вĕренме тиврĕ. Чăваш ялĕнче пурăннă май чăваш чĕлхине ачаранах пĕлеттĕм. Çавăнпа репертуарта ирçе, чăваш, вырăс юррисемччĕ,– каласа парать Зинаида Михайловна.

Шăхачсем районти пултарулăх ушкăнĕсен фестивалĕнче пĕрремĕш вырăна тухаççĕ. Вĕсене ĕнтĕ Шупашкар сцени кĕтет!

– Тĕп хулара эпир, агроном, комбайнер, доярка, сысна самăртакансен бригадирĕ, культработник ĕçченĕ, бухгалтер, чăх-чĕп пăхакан, пĕрин хыççăн тепри тухса такмак шăрантартăмăр. "Сирĕн кунта кĕтӳç кăна çитмест",– тĕртсе илчĕ пире концерта ертсе пыраканни. Эпĕ çухалса каймарăм: "Кĕтӳç кĕтӳ кĕтет, эпир вара юрлатпăр", – терĕм. Такмак шăрантарнă хыççăн пирĕн чăх-чĕп пăхакан пикен пĕр карçинкка çăмартапа ташламаллаччĕ. Чĕрĕ çăмартапа май килмест-ха тесе ялти комбинатра йывăçран ăсталаттартăмăр. Çиеле пĕçернĕ çăмартасем хутăмăр. Сцена умĕнче (эпир урамра юрласа ташланăччĕ) кӳленчĕк пурччĕ. Люба Разина ташланă чухне вăрр! çаврăнчĕ – карçинккари пĕр йывăç çăмарта тухрĕ ӳкрĕ, сцена çинче сикрĕ-сикрĕ те шыва кусса кĕрсе кайрĕ. Ишсе çӳрет... Йывăç çăмарта пулнине пĕлчĕç ĕнтĕ вара",– кула-кула аса илет ансамбль ертӳçи.

Пуçарullă, мал ĕмĕтлĕ Зинаида Гугушкина аслисемпе ĕçленипе пĕрлех пултарулăха шкул ачисене те явăçтарма тăрăшнă. Вĕсене ташлама вĕрентнине асăрханă директор ăна шкула ĕçлеме чĕнет. "Çитет, ĕмĕрĕпех тринккитринкки сикеймĕн, вĕренме каймаллах",– шухăшласа илет вырăнти "артистка". Чĕннĕ çĕре, культура çуртĕнчен пĕлӳ çуртне, тухса утать.

– Эсĕ ырантан 4-мĕш классене вĕрентетĕн",– терĕç мана шкулта. Тĕрĕслев ĕçĕ ирттеретĕп: ачисем шутлама пĕлмеççĕ те – йĕретĕп. "Санран çын пулать, эсĕ йĕретĕн-ха",– хавхалантарма тăрăшатчĕ директорăн çумĕ, аслă çулсенчискер. Каярах мана аслă классенче вырăс чĕлхипе литературине вĕрентме шанчĕç. Çав çулсенче Шупашкарти пединститутран куçăн мар мелпе вĕренсе тухрăм. Чăваш чĕлхипе литературин учительници пенсие кайрĕ те каллех мана "çураçрĕç". Шкулта ку чĕлхепе пĕлӳ илмен пулин те килĕшме тиврĕ. Шаннине тӳрре кăларас тесе вунă çул хушшинче чăваш чĕлхипе литературин программине пăхмасăр вĕренсе çитрĕм. Ачасене сочиненисем çырнă чухне яланах эпиграфсем туптараттăмччĕ. Ăна паянхи кунччен ас тăваççĕ вĕренекенĕмсем. Унтан тата икĕ çул нимĕç чĕлхи те вĕренттерчĕç. Тивĕçлĕ канăва тухсан та шкулта 7 çул ĕçлерĕм,– пĕлтерет Зинаида Михайловна. – Пĕрре, шкул директорĕнче вăй хунă тапхăрта, Канашран брикет тиесе килтĕмĕр. "Кăна кам пушатĕ–ха ĕнтĕ?"–ыйтрĕ вăл аптраса. "Эпĕ"–терĕм те ĕçе пикентĕм. Çур прицепа пушатсан тӳсеймерĕ арçын – пулăшма хăпарчĕ. Çирăп кăмăллă пулнăран мана ун чухне хăшĕсем "Михалыч" тетчĕç.

Шкулта ĕçленĕ вăхăтра та вăл хăйĕн пултарулăх ушкăнне ертсе пынă. Халĕ "Умарина" ансамбле çӳрекенсен чăваш, вырăс, ирçе тумĕсем пур.

Маларах ватăсенчен илнĕ, хăйсем çĕленĕ çи-пуçпа та сцена çине тухнă.

– Шупашкарти пĕр фестивальте эпир чăн-чăн вырăс туйне кăтартрăмăр. Авланакан каччи те, качча каякан хĕрĕ те пурччĕ. Вĕсем авалхилле шупка кĕпесемпеччĕ. Эпĕ, тĕп евчĕ, хама валли плюш чаршавран кĕпе çĕлетнĕччĕ. Пиçиххипе хытă туртса çыхнăччĕ. Чăтма çук шăрăх, пилĕке касать. Пултарулăхпа паллаштарнă хыççăн пирĕн пата пĕр арçын пычĕ те: "Эсир ăçтан килнĕ? Вырăс туйне халĕ никам та çакăн пек тĕплĕн кăтартмасть. Эх, тумĕ сирĕн чăн-чăн вырăсли пулсанччĕ...",– хăпартланăвне пытармарĕ хайхи. Пирĕн телее, вăл Культура министерствинче ĕçленĕ иккен. Çакскер пире 15 хĕрарăм кĕпи пама шантарчĕ. Хăйĕн сăмахне тытрĕ! Нумаях пулмасть ирçе салтакĕсен юррине çыртăм. Йĕкĕтсене ĕлĕк çара епле ăсатнине ваттисенчен ыйтса пĕлтĕмĕр. Халĕ çак йăла-йĕркене сцена çинче кăтартатпăр. Шел, çамрăксем юрра-ташша хутшăнасшăнах мар. Ваттисем вилсе пыраççĕ. Пĕлтĕр Пăлапуç Пашьелте иртнĕ Патăрьел районĕн кунĕнче ирçе юррисене шăрантарсан район администрацийĕн пуçлăхĕ Николай Глухов та мухтанăччĕ, "Аван юрлатăр, тепĕр çул Мордовине Атяшевăна илсе каятăп, ĕнĕрсене сутăр",– тенĕччĕ вăл ун чухне шӳтлерех. Эпĕ ĕнене сутрăм ĕнтĕ",– кулкалать Зинаида Михайловна.

Авалхи йăла-йĕрке ан манăçтăрччĕ, яш-кĕрĕмпе хĕр упраç вĕренсе юлччĕр тесе тăрăшаççĕ Шăхачсем. Кунта çулсеренех Çимĕкре ял кунне сумлă уявлаççĕ. Урамсене арçынсем вăрмантан касса килнĕ йывăççемпе хитрелетеççĕ, хĕрсемпе каччăсем урамра пухăнса юрăсем юрласа вăрмана каяççĕ. Унта купăс каласа юрлаççĕ, ташлаççĕ. Пикесем вĕрене çулçисенчен пуç кăшăлĕ туса тăхăнаççĕ. Вăрмантан виçĕ мăшăр – туслă пурăнакан виçĕ халăх ячĕпе – хурăн касса килеççĕ. Вĕсене тутăрсемпе, хăюсемпе капăрлатаççĕ. Çимĕк йывăççисене йăтса пыракансем юрлаççĕ, ташлаççĕ. Урэ (ирçелле – тарçă) çырми патне çитсен чарăнаççĕ. Хурăн тураттисене шыва ывăтаççĕ. Вĕсем путманни – лайăха, путни ырă мара пĕлтерет имĕш. Уявра виçĕ наци юррисене шăрантараççĕ. Кăçал та хурăн касса мĕнпур йăлана тунă вĕсем.

– Пирĕн хыççăн Чеменсем, Тури Чакăсем, Пăлапуç Пашьелсем хурăн касма пуçларĕç. Вăл та хăйне май культура, майĕпен пулсан та сарăлма тытăнчĕ. Пурнăç юрлани-ташлани, сĕтел хушшинче ларни çеç мар, чун валли мĕн те пулсан кирлĕ. Патăрьел районĕнче ирçесем сахаллансах пыраççĕ. Пăлапуç Нурăсри ирçесем йăлт чăвашланнă. Пирĕн ялта та таса ирçе çук. Вĕсем чăвашсемпе, вырăссемпе хутшăннă. "Умарина" ансамбль вара авалхипа малашлăха çыхăнтаракан тĕвĕ, – чунне уçрĕ пысăк чĕреллĕ хĕрарăм.

Нумаях пулмасть Зинаида Михайловна хăйĕн "Умарина" фольклор ушкăнĕпе Пăрачкав районĕнчи Напольное салинче иртнĕ ирçе культурин фестивальне хутшăннă. Ăна унта культурăна аталантарассишĕн ырми-канми ĕçленĕшĕн Хисеп хучĕпе чысланă. Патăрьел районĕнче нумай çул пĕрле пурăнакансене чыслаççĕ–и е пĕр-пĕр уяв ирттереççĕ – Шăхачсен "çăлтăрĕсĕр" ниепле те май çук.

Зинаида Михайловна алă ĕçне те питĕ ăста. Сĕтел валли чĕнтĕрлĕ çитти-

сем, салфеткăсем, тутăрсем çыхать, пит шăллисем тĕрлет. Икĕ ывăлпа икĕ хĕр пăхса ӳстернĕ вĕсем мăшăрĕпе. Савнă çынни пурнăçран уйрăлнă ĕнтĕ, ачисем тĕрлĕ хулара çемье çавăрнă. "Ывăлсем–кинсем валли, хĕрсем кĕрӳсем валли пулчĕç",– шӳтлет Зинаида Михайловна. Амăшне манăçа кăларса пурăнмаççĕ вĕсем, тăтăшах килсе çӳреççĕ. Улма йывăççинчен аякка ӳкмест тенешкел мăнукĕ Сергей çулсерен ирçе юррисен "Солнышко" фестивальне хутшăнса малти вырăнсене йышăнать. Асламăшĕ ăна ирçе халăх тумĕ те çĕлесе панă.

– Тĕпренчĕкĕмсем килте мар, ялта тăвансем çук. Тавах кӳршĕсене, ансамбле çӳрекенсене. Мана пăрахмаççĕ. Чунăм халĕ те çамрăк, анчах ватлăх хăйĕннех илет. Чирлесен эмел ĕçме пулать, ватлăхран вара нимĕнпе те сиплеи нейместĕн. Ватă çын тăвата çын тĕшшине тăни кăна кăштах лăплантарать. Тата юрă-кĕвĕ кăмăла çĕклет. Хавхалантарать.

Шăхач ялĕ пысăк ял,
Ларать вăрман хĕрринче.
Туслăх ӳсет кунсерен
Виçĕ халăх хушшинче.
Аслă уяв пуçланать,
Пĕтĕм халăх савăнать.
Вырăс юрлать вырăсла,
Ирçе юрлать ирçелле,
Пурте пĕрле пухăнсан
Яраç юрра чăвашла,

– çапла юрланăн каласа ăсатрĕ мана пултаруллă хĕрарăм. Мĕн калăн, Шăхачсен чунĕ те, чĕри те вăл чăнахах та.

**Роза ВЛАСОВА,**
**Патăрьел районĕ,**
**Шăхач**

# Универсиадăпа Олимп вăййисем таран

Пĕлтĕр Раççейре пирĕн çĕршывра наци Олимп комитетне туса хунăранпа 100 çул çитнине анлăн паллă турĕç. 1912 çулта Швеци тĕп хулинче Стокгольмра пулса иртнĕ çуллахи V Олимп вăййисенче хăйсен ăсталăхĕпе пултарулăхне 169 Раççей спортсменĕ кăтартнă. Шел пулин те, ĕлĕкрех те, иртнĕ ĕмĕр пуçламăшĕнче те Хусан тата Чĕмпĕр кĕпĕрнисене кĕнĕ чăваш хулисемпе ялĕсенче физкультурăпа спорт аталанманпа пĕрех, Атăл тăрăхĕнчи хăш-пĕр пысăк хулара ирттернĕ ăмăртусемпе турнирсене те хутшăнман. Вăл вăхăтра ют çĕр-шывсенче чăвашсене питĕ сахал пĕлнĕ, хăш-пĕр патшалăхра пачах илтмен. Совет Союзĕнчи аякри регионсенче те пирĕн мухтавлă та авалхи халăх çинчен çур ĕмĕр ытларах каялла кăна Шуршăл кăйкăрĕ, тĕнчери тăваттăмĕш космонавт Андриян Николаев тĕнче уçлăхне вĕçсе кайнă тата пирĕн чи вăйлă та çивĕч атлетсем Ардалион Игнатьевпа Валериан Соколов Австралири Мельбурнта тата Мексикăра Олимп вăййисен медальне çĕнсе илнĕ хыççăн тĕплĕнрех пĕлме пуçларĕç. Вĕсем хыççăн Чăваш Ен чапне СССР тава тивĕçлĕ спорт мастерĕсем Валерий Ярды велосипедист, Владимир




*«Хусан-Арена» спорт комплексĕ.*

Воронков йёлтёрçё, Валерий Львовпа Валерий Лаптев боксерсем, Мая Костина парашютистка, Светлана Чиркова фехтовальщица, Валентина Егорова, Елена Николаева, Алина Иванова çăмăл атлетсем, Ирина Солдатова ухăç тата çӳллĕрех шая çĕклерĕç. Пурте вĕсем хăй вăхăтĕнче тĕнче чемпионачĕсенче тата тăвата çулта пĕрре ирттерекен Олимпиадăсенче çĕнтерсе чăваш спорчĕн аталанăвĕн историне ĕмĕрлĕхе кĕрсе юлчĕç.

Чĕрĕк ĕмĕр каялла пăтрашуллă та шавкăн самана пуçланчĕ. 1990-мĕш çулсенче СССР салансан тĕнче карти çинче часах никама пăхăнман вун пилĕк çĕршыв курăнса кайрĕ. Унчченхи хăватлă та мăнаçлă, экономика тĕлĕшĕнчен тĕнчери чи тĕреклĕ çĕршывра пысăк спорта тимлĕх уйăрма мехел çитерейменĕç. Нимĕн тĕлĕнмелли те çук: ку тапхăрта ирттернĕ тĕнче ăмăртăвĕсенче тата Олимп вăййисенче Раççейĕн пĕрлештернĕ команди АПШ, Англи, Китай, Канада, Япони тата ытти хăш-пĕр патшалăх спортсменĕсене выляса яма пуçларĕ. 2006 тата 2010 çулсенче Италире тата Канадăра пулса иртнĕ хĕллехи Олимпиадăсенче те пирĕн çĕршывăн пĕрлештернĕ команди комплекслă зачетра пĕрремĕш теçеткене лекме пултараймарĕ.

Чăваш спортсменĕсем вара темĕнле йывăр саманара та çухалса каймарĕç. Çĕнйĕркелӳччен пулса иртнĕ çуллахи тата хĕллехи Олимп вăййисенче Совет Союзĕн пĕрлештернĕ командин йышĕнче 14 чăваш спортсменĕ ăмăртнă пулсан, 1992 çултан пуçласа кăçалччен ирттернĕ çакăн пек тĕнчери чи пысăк ăмăртусенче Раççей чысне пирĕн республикăран 35 çын (!) хӳтĕленĕ. Испанири Барселонăра, Америкăри Атланта, Австралири Сидней хулисенче, унтан Афинăра, Пекинра тата Лондонра пулса иртнĕ XXV-XXX çуллахи Олимп вăййисенче Валентина Егоровăпа Елена Николаева ылтăн, Олимпиада Ивановăпа Ирина Калентьева кĕмĕл, Владимир Андреев, Татьяна Архипова тата Дмитрий Древин бронза медальсем çĕнсе илчĕç. Вĕсемсĕр пуçне çĕнĕ ĕмĕр пуçланнăранпа тĕнче тата Европа чемпионачĕсенчен Светлана Захарова, Ольга Егорова, Людмила Петрова, Ирина Тимофеева, Екатерина Блескина, Надежда Леонтьева, Андрей Андреев, Вера Соколова, Сильвия Шемеева, Петр Трофимов çăмăл атлетсем, Татьяна Моисеевăпа Раиса Матвеева, Вячеслав Акимов, Павел Магазеев биатлонистсем, Виталий Сергеев, Александр Бондарев, Николай Лапшин, Сергей Иванов самбистсемпе дзюдоистсем, Алексей Соловьев кикбоксер, Дмитрий Фомиряков, Алман Тимофеев, Александр Федоров кикбоксерсем, Сергей Кирилловпа Любовь Эллина кире пуканĕ йăтакансем тата ыттисем тăван Чăваш Ене ылтăн е кĕмĕл медальсемпе таврăнчĕç.

Иртнĕ ĕмĕр варринче вăй илсе чи çӳллĕ шая çĕкленнĕ спорт ăмăртăвĕсене илес пулсан, студентсен Пĕтĕм тĕнчери Универсиади хăйĕн пĕлтерĕшĕпе Олимп вăййисем хыççăн иккĕмĕш вырăнта тăрать. Вĕсенче чăваш каччисемпе хĕрĕсем уйрăмах юлашки çулсенче лайăх ăмăртаççĕ, тăван çĕр-шыв чысне хӳтĕлесе чи вăйлă спортсменсем икĕ çулта пĕрре ирттерекен спорт,

мир тата илемлĕх уявĕсенче тăтăшах малти вырăнсене йышăнма пуçларĕç.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Малти Пукаш ялĕнче çуралса ӳснĕ Ольга Михайлова 2009 çулта 20 çухрăма хăвăрт утса Раççей чемпионатĕнче виççĕмĕш вырăн йышăнчĕ, унтан, тепĕр уйăхранах, Белградра пулса иртнĕ XXV Универсиадăра финиша чи малтан çитсе ылтăн медале тивĕçрĕ. Виçĕм çул Китайра иртнĕ студентсен тĕнчери спорт уявĕнче Раççей чысне ултă чăваш спортсменĕ хӳтĕлерĕ. Велосипед спорчĕн чи йывăр кăсăклă енĕпе – маунтинбайкра ăмăртса, Канашри ачасемпе çамрăксен 1-мĕш спорт шкулĕнче вĕреннĕ, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУн студентки Ксения Кириллова ылтăн медаль çĕнсе илчĕ. Унăн командăри юлташĕсем Вячеслав Ластухин штангист, Марина Максимовăпа Людмила Кузьмина çăмăл атлетсем – иккĕмĕш, Нина Охотникова хăвăрт утаканпа Екатерина Горбунова стайер виççĕмĕш вырăнсем йышăнчĕç.

Пĕтĕм тĕнчери XXVII Универсиада кăçалхи июлĕн 6-мĕшĕнче Тутарстанăн тĕп хулинче, "Хусан-Арена" стадионта савăнăçлă лару-тăрура уçăлчĕ. Раççей Президенчĕ Владимир Путин тата студентсен Пĕтĕм тĕнчери союзĕн президенчĕ Клод-Луи Гальен 160 çĕршывран килнĕ 13 пин ытла спортсмена чаплă уяв ячĕпе ăшшăн саламларĕç. Владимир Владимирович ун чухне те, каярахпа Атăл хĕррине тепĕр хут килсен те Хусанти Универсиадăна тăватă çулта пĕрре ирттерекен Олимп вăййисемпе танлаштарчĕ.

Студентсен тĕнчери спорт уявĕ уçăлнă хыççăн тепĕр куннех пирĕн ентешсенчен старта тĕнче спорт мастерĕсем Алина Прокопьевăпа Наталья Пучкова тухрĕç. 10 çухрăмлă дистанцире пĕрремĕш çаврăмсенчех Япони стайерĕсем Сузукипе Цуда, Раççейĕн кăçалхи чемпионки Наталья Леонтьева тата Етĕрне районĕнчи Наталья Пучкова малалла ыткăнчĕç. Шел те, шăрăх çанталăкри çивĕч ăмăртура Леонтьева лайăх результатпа савăнтараймарĕ, Пучкова пиллĕкмĕш вырăн йышăнчĕ. Дистанци варринче лидерсем хыççăн 5-6-мĕш пыракан Алина Прокопьева вара финиша çитиччен пурĕ тепĕр çухрăм юлсан Цуда японкăран тата хамăр çĕршыври хĕрсенчен иртсе кайрĕ те мĕнле те пулин медаль илес тесе пĕтĕм вăйне пухса чупрĕ. Анчах та Цудăн тантăшне Аюко Сузукине хăваласа çитеймерĕ. Япони чемпионки йывăр дистанцие 32 минут та 32, 54 çеккунтра вĕçлесе Универсиадăн ылтăн медальне çĕнсе илчĕ. Алина Прокопьева ăна пурĕ те темиçе метр выляса ярса иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ.

Универсиадăн тăваттăмĕш кунĕнче ир-ирех тĕрлĕ çĕршыв спортсменкисем 20 çухрăма  хăвăрт утас енĕпе ăмăртрĕç. Кунта Раççей чысне çуркунне вĕçĕнче Словакири Дудинце хулинче Европа кубокне çĕнсе илессишĕн иртнĕ ăмăртура çак дистанцирех 1-4 вырăнсене йышăннă тĕнче спорт мастерĕсем – чăваш хĕрĕсем Вера Соколова, Марина Пандакова, Ирина Юманова, çĕршывăн кăçалхи чемпионки, Челябинскри Лина Бикулова тата тĕнчери паллă çăмăл атлет Саранскри Анисия Кирдяпкина хӳтĕлемеллеччĕ. Шел те, тух-




*Сулахайран иккĕмĕшĕ – Вера Соколова. Хусан, 2013 ç.*

тăрсем Хĕрлĕ Чутай районĕнче çуралса ӳснĕ Пандаковăна щит евĕрлĕ парĕн чирне пула старта тухма ирĕк памарĕç. Хĕрарăмсен хăйне евĕрлĕ йывăр марафонĕнче Бикуловăпа Кирдяпкина тата тĕнчен экс-рекордсменки 23 çулти Муркаш районĕн хĕрĕ Соколова çур сехет ытларах малта пычĕç. В.С.Черномырдин ячĕллĕ Мускав патшалăх уçă университечĕн Шупашкарти политехника институчĕн студентки Вера Соколова юлашки çулсенче мĕнле кăна çитĕнӳ тумарĕ-ши? Анчах, шел те, унăн Универсиадăн медалĕ пулманччĕ. Тен, çавăнпах Вера 16-17 çухрăмах Анисия хыççăнах тăрăшса, пысăк хăвăртлăхпа утрĕ. Анчах тахăш самантра чăваш хĕрĕ хăй те сисмерĕ пулас – ăмăрту йĕркине икĕ хут пăсрĕ, ăна судьясем сарă паллă çине кăтартрĕç те дистанцирен тухма ыйтрĕç. И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн журналистика факультетĕнчен вĕренсе тухнă Патăрьел районĕн хĕрĕ Ирина Юманова, Вера хыççăн пынăскер, финиша кăçал Европа кубокне çĕнсе илнĕ Анисия Кирдяпкина хыççăн иккĕмĕш çитрĕ. Командăпа ăмăртса, Раççей спортсменкисем пĕрремĕш вырăн йышăнчĕç. Çапла вара пирĕн Ира Юманова кĕмĕл медальпе пĕрле ылтăннине те тивĕçрĕ.

Çак Универсиадăра спорта юратакансене Алина Прокопьевăн ăсталăхĕпе чăтăмлăхĕ тепĕр хут та тĕлĕнтерчĕ. Вăл спорт уявĕ вĕçленеспе çурма марафонра та ăмăртрĕ, каллех иккĕмĕш вырăн йышăнса тепĕр кĕмĕл медале тивĕçрĕ. Çав кунсенчех пирĕн тепĕр икĕ ентеш, Шупашкарти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕсенче вĕреннĕ Антонина Савельева теннисисткăпа ирĕклĕ



*Хĕрӳ ăмăрту саманчĕ. Хусан, 2013 ç.*

майпа кĕрешекен Екатерина Краснова виççĕмĕш вырăн йышăнчĕç. Чăваш спортсменĕсем кăçалхи Универсиадăра тăхăр медаль çĕнсе илчĕç.

Июлĕн 17-мĕшĕнче Хусанта савăнăçлă лару-тăрура хупăннă XXVII Универсиада студентсен спорчĕн Пĕтĕм тĕнчери союзĕн тата Раççей спорчĕн аталанăвĕн историне ĕмĕрлĕхе кĕрсе юлчĕ. Атăл хĕрринчи шĕкĕр хулара икĕ эрне пурăннă Универсиадăна йĕркелекенсемпе спорт специалисчĕсем Универсиада питĕ пысăк шайра иртнине палăртрĕç. Вĕсенчен нумайăшĕ Хусан тепĕр 10-15 çултанах Олимп вăййисен тĕп хули пулма тивĕçлине пĕлтерчĕ.

**Петр СИДОРОВ,**
**Раççей Федерацийĕн физкультурăпа спорт отличникĕ**

## ÇĔНĔ КĔНЕКЕ – ÇĔНĔ ТĔНЧЕ




**Ангелина ПАВЛОВСКАЯ**

Ку романăн журнал варианчĕ «Тăван Атăлта» пичетленчĕ. Вулакансем ырласа йышăнчĕç ăна. Акă халĕ вăл уйрăм кĕнекен тухрĕ.

Ытти çĕршер чăваш ялĕ пекех, Йӳçкасси чухăнлăхра та тĕттĕмлĕхре пурăнать. Выçлăх, çити-çитми пурнăç, танмарлăх хăшне авать те хуçать, хăшне тискер кайăка кăларать. Октябрьти революци хыççăн яла урăх варкăш кĕрет. Йӳçкассинче колхоз йĕркеленет. Майĕпен-майĕпен ял пурнăçĕ те çĕнелме пуçлать. Анчах тĕрĕс çул суйласа илесси çăмăл мар иккен. Халăх пуçĕ çине çĕнĕ нуша-асап йăтăнса анать: репресси, ссылка... Çеменпе Аннана Архангельск облаçне яраççĕ. Телейĕ тĕппипех пĕтмен иккен: шăпа вĕсене тăван яла çавăрса килет.




**Константин ИВАНОВ**

Аслă поэтăмăрăн поэми ку кĕнекере вырăсла, тутарла, пушкăртла, украинла, пăлхарла, венгрла пичетленнĕ. Çакă питĕ пархатарлă. Чăваш Республикинче тĕрлĕ халăх çынни пурăнать. Вĕсем те çав илемлĕ хайлавпа паллашасшăн ĕнтĕ. Кĕнекене Çеçпĕл Мишшин обществăлла ыркăмăллăх фончĕ пуçарнипе кăларнă. Пухса хатĕрлекенĕ – чăваш халăх поэчĕ В.В.Тургай.

**А.А.ПЛЕШАКОВ**

Учебника вĕренĕвĕн çĕнĕ стандарчĕсемпе килĕшӳллĕн хатĕрленĕ.

Кашни сыпăк умĕн вĕрену ĕçĕн тĕп тĕллевĕсемпе задачисене ăнлантарса панă. Кашни темăра "Хăвна тĕрĕсле" рубрика, вĕренӳ материалĕн содержанине кĕскен çырса пани тата килте тумалли ĕçсем пур. Кашни урок вĕçĕнче çитес урокри вĕренӳ ĕçĕн тĕллевĕсене тата задачисене палăртнă. "Пирĕн проектсем" рубрика вĕренӳ ĕçĕсене планлас, ĕç результачĕсене пĕлес ăсталăха аталантарма пулăшать.



# «Шур перчетке»

## Чăваш халăх сăвăçи Георгий ЕФИМОВ аса илнинчен

Чăвашрадио паракан передачăсенчен пĕринче диктор: "Нумаях пулмасть Чăвашсен паллă композиторĕ, СССР Патшалăх премийĕн лауреачĕ Филипп Миронович Лукин Куйбышев (халь Самара) облаçĕнчи чăвашсем патне кайса çÿрерĕ. Унтан вăл халăхран чылай юрă çыра-çыра илнĕ. Халĕ Куйбышев облаçĕнче пурăнакан чăвашсенчен çырса илнĕ "Шурă перчетке" юрра итлеме сĕнетпĕр..."

Пуçларăм итлеме. Илемлĕ кĕвĕ.

Шур перчетке çыхса куçăм шăтрĕ...

Ара, эпĕ çак юрра илтнĕччĕ вĕт-ха? Ăçта илтнĕ? Чим-ха, чим! 1965 çулхи утă уйăхĕн каçĕ аса килчĕ.

Эпĕ вăл вăхăтра чăваш писателĕсен канашĕн правленийĕнче яваплă секретарьте ĕçлеттĕм. Пĕр калаçура И. С. Максимов-Кошкинский драматург мана:

– Якур шăллăм, пĕлетĕн-и, кăçал чăваш драматургине пуçараканĕсенчен пĕри, "Вăхăтсăр вилĕм" авторĕ Михаил Филиппович Акимов çитмĕл çул тултарать вĕт, – терĕ.

– Вăл пурăнать-и вара? – тĕлĕнсе ыйтрăм эпĕ асла юлташран.

– Пурăнать, учительте ĕçлет, – лăпкăн хуравларĕ И. С. Максимов-Кошкинский.

М. Акимов çинчен илтнĕ-ха эпĕ. Анчах та вăл чĕрĕ-сывă иккенне пĕлмен. Çакăншăн ăшра питĕ хытă вăтантăм, питĕм те хĕрелчĕ пулмалла, мĕншĕн тесен хăлха тăрри пĕçернине аванах туйрăм.

И. С. Максимов-Кошкинский мана "Вăхăтсăр вилĕм" пьесăна сцена çинче епле лартни çинчен каласа пачĕ. Куракан халăх питĕ хавхалануллăн, хыттăн алă çупса йышăннă-мĕн М. Акимов пьесине.

Кун çинчен М. Ф. Акимов, тĕл пулсан, çапла каласа панине астăватăп:

– 1918 çулта эпĕ "Канаш" хаçат редакцине ĕçлеме кĕнĕччĕ. Пирĕн патăмăра тăтăшах чăваш артисчĕсемпе вĕсене ертсе пыракан Иоаким Максимов-Кошкинский пырса каятчĕç. Вĕсен театрне, вĕсем лартакан спектакльсене эпĕ те курма çÿреттĕм. Анчах пьесисем пурте вырăсларан чăвашла куçарнисемччĕ. Пĕррехинче Максимов-Кошкинскирен: «Чăваш пурнăçне кăтартса паракан оригиналлă пьесăсем çук-и вара?» – тесе ыйтсаччĕ те, вăл мана: «Хальлĕхе çук-ха»,– терĕ.

М. Акимов çакăн хыççăн хăй пьеса çырма пуçăнать. 1919 çулта "Вăхăтсăр вилĕм" драмăна Чĕмпĕрте пичетлесе кăларать.

Чăваш драматургине пуçласа янă çынсенчен пĕри çуралнăранпа 70 çул тултарать! Мĕнпе савăнтармалла ăна? Акă, Чăваш писателĕсен Канашĕн правле-

нийĕ лару ирттерет. Çав ларура М. Ф. Акимовăн икĕ пьесине пичетлесе кăларас тесе йышăнать. Кĕнекине пичете хатĕрлеме мана хушрĕç.

Кĕнекене "Вăхăтсăр вилĕм", "Илюк" драмăсене кĕртнĕччĕ. Кĕнеке редакторе çамрăк автор М. Н. Ильин (пулас паллă писатель Юхма Мишши) пулчĕ. Алçырăвне набора хăвăрт патăмăр. Кĕнеки те хăвăрт тухса кайрĕ.

Иккĕн, эпĕ тата М. Н. Ильин, Çĕнĕ Эйпеç ялне, Улатăр районне, М. Ф. Акимова числама тухса кайрăмăр. Ял клубĕнче чысларĕç драматурга. Кайран ун килĕнче хăналанса та лартăмăр. М. Акимов мана хăй кĕнекине "Георгий Андреевич Ефимова, кĕнеке хатĕрлекене, автортан" тесе çырса пачĕ. Ку 1965 çулхи июлĕн 29-мĕш кунĕнче пулчĕ.

Сĕтел хушшинче Михаил Филиппович иртнисене аса илнĕ май пĕр юрă юрласа пачĕ.

– Ку юрра "Илюк" пьесăра юрлатчĕç, – терĕ вăл именчĕклĕн. Сасси вăйлах марччĕ унăн. Çитмĕлти çын ĕнтĕ – мĕн тăвăпăр?

Шур перчетке çыхса пӳрнем шăтрĕ,
Тусăм, саншăн йĕрсе куç пăсăлчĕ.
Тусăм, уйрăлатпăр аллăна пар...

"Илюк" драмăра юрланă çак юрра артистсем. Драмăри юрă халăх хушшине сарăлса чăн-чăн халăх юрри пулса тăнă. Юрать-ха, Самар чăвашĕсем юрра упранă. Юрать-ха, Филипп Лукин çырса илнĕ! Çапла çур ĕмĕр иртнĕ хыççăн "Шур перчетке" юрă чăваш тĕп хулине çитсе Шупашкарти радиопа юрланă хыççăн çĕнĕрен чăваш çĕрĕ тăрăх саланать! Чăн-чăн юрă çухалмасть иккен. Çухалма-и? Вăл таса çăл шывĕпе çăвăнса якалакан чул евĕр çирĕпленсе, илемленсе çеç пырать.

"Илюк" драмăра сцена çинчен анса халăх хушшине кайнă юрă пĕр пĕчĕк кĕтесре сыхланса юлнă та – халĕ вара, композиторăн çăмăл аллине пула, тепĕр хут çуралса тăван халăхăмăр патне хăнана мар, яланлăхах килет.

"Шур перчетке" юрă мана М. Ф. Акимова тепĕр хут ырăпа аса илтерчĕ. Аплатăк ахаль вăй хуман драматург.

ШУР ПЕРЧЕТКЕ

Шур перчетке çыхса пӳрнем шăтрĕ,
Тусăм, сана кĕтсе куç пăсăлчĕ.

Ăсатса яр, савни, ăсатса яр,
Чĕнтĕр кĕпер урлă каçарса яр.

Чĕнтĕр кĕпер урлă каçарсассăн
Кĕмĕл çĕрĕ витĕр пăхса юл.

**Алексей МЕДВЕДЕВ**



# Пăрчăкан

**Калав**

Пĕррехинче çулла Анюк ашшĕ колхозран килне лаша кӳлсе килчĕ. Урамра вылякан Анюк ашшĕне курчĕ те ун патне чупса пычĕ. Ашшĕ лашине чарса хĕрачана урапа çине лартрĕ.

– Атте, ăçта каян? – ыйтрĕ Анюк ашшĕне куçран пăхса.

– Паян Типвара чул турттарма каятăп,– пĕлтерчĕ ашшĕ.

– Мана та илсе каятăн-и? Манăн та пырас килет. Эпĕ сана урапа çине чул тиеме пулăшăп,– вĕткелене пуçларĕ Анюк. – Ну, атте, илсе каятăн-и?

– Тем тумалла ĕнтĕ, – иккĕленнĕ пек пулчĕ ашшĕ. – Чулĕсем пысăк-çке, эсĕ вĕсене çĕклейместĕн.

– Эпĕ, атте, пĕчĕк чулĕсене тиесе парăп, – хăйĕн сăмахĕ çинех тăчĕ Анюк.– Ну, атте, кала, илсе каятăн-и?

– Юрĕ апла, – килĕшрĕ юлашкинчен ашшĕ. – Куратăп, мана та пулăшас килет иккен-ха сан.

Анюка чул патне илсе каясси пирки амăшĕ те хирĕçлемерĕ.

– Ашшĕ, санăн Анюка хăвармалла марах, – терĕ вăл. – Укçа тени çичĕ чул айĕнче выртать.

Хĕрача амăшĕ сăмахне ăнланаймарĕ:

– Укçа мĕнле çичĕ чул айĕнче выртма пултартăр? – ыйтрĕ вăл.

– Ну, нумай чул турттаратăр, укçи те нумай пулать. Укçа нумай пулсан сана чипер çипуç илсе паратпăр, – ăшшăн кулса ăнлантарчĕ амăшĕ.

– Эпĕ чул турттарма каятăп! Эпĕ аттене пулăшатăп. Анне мана чипер çипуç илсе парать. Çапла вĕт, анне? – хĕпĕртесе кайрĕ Анюк.

– Ну, мĕнле калаçса татăлнă, çавăн пек пулать те, – терĕ амăшĕ.

Анюкăн ашшĕ кашни çулах çул сарма чул кăларать. Кайран ăна автомашина пыма пултарнă вырăна лашапа турттарать. Анюк ку таранччен уйра пулман мар, тем чухлех пулса курнă. Анчах хальхи пек ир кӳлĕм тата урапа çине ларса нихçан та тухса курман. Вăл паян питех те телейлĕ. Куç умĕнче мĕн пурри уншăн пурте çĕнĕ, пурте илемлĕ.

Анчахрах çĕкленнĕ хĕвел ирех хĕртсе пăхать. Çулăн икĕ енĕпе кĕр тыррисемпе çуртрисем ешерсе лараççĕ. Анюк вĕсене ытараймасăр пăхать. Мĕнлерех вĕсем, ирхи сывлăмпа шăрçаланнăскерсем, симĕсĕн те кăвакăн йăлкăшса çуталаççĕ. Сывлăмне вара пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтарас, çинçе çип çине тирсе ярăмлас, ума çакса ярас килет. Мĕнлерех шăрçа ярăмĕ пулмалла!

Уйри кайăксене те Анюк паянхилле пĕрремĕш хут курать темелле. Пĕтĕм янкăр тӳпе тăри юррипе янăраса тăрать. Çĕршер тăри пĕр харăс юрланăн туйăнать.

Анюк сар тутăр çыхнă пуçне каялла тайса таврана, тӳпене вĕçĕмсĕр тинкерет. Унăн тăри кайăка курас килет. Мĕнле вĕçет, мĕнле юрлать вăл?

– Акă куртăм, куртăм! – сасартăк савăнса кайрĕ Анюк.

– Мĕн куртăн? – ыйтрĕ ашшĕ.

– Тăрие! Авă вăл вĕçсе хăпарать, – аллипе тĕллесе кăтартрĕ Анюк. – Мĕнле вăл юрла-юрла вĕçсе хăпарать. Тĕлĕнмелле!

– Çулла пулнăшăн хĕпĕртет вăл, – терĕ ашшĕ.

Анюк тăрие куçран вĕçертмесĕр пăхрĕ. Ай, мĕнлескер вăл! Ян-ян янăракан шăнкăрав пек тăрлата-тăрлата, çунаттине васкамасăр çапа-çапа тӳп-турĕ хăпарать. Тӳпере кăшт чарăннă пек пулать. Унтан тăрлатма пăрахать те çунаттисене пуçтарса çĕрелле чул пек ярăнса анать. Ытла та хăрушă-çке!

– Ай, атте, манăн тăри ӳксе вилет! – хăранипе ашшĕн хулĕнчен ярса тытрĕ Анюк. – Чул пек ӳкет...

– Ан хăра, хĕрĕм,– терĕ ашшĕ лăпкăн. – Тăри ӳксе вилмест. Вăл, юрла-юрла хăпарнă хыççăн, кăштах сывлăш çавăрса ямалăх канать темелле. Ну, пăх-ха, ӳкмерĕ вĕт.

Тăри парка шăтса тухнă çуртри çине çитес чухне сасартăк çунаттине сарчĕ те темиçе хутчен çапса илчĕ, унтан аялтан малалла вĕçсе Анюкпа ашшĕ пыракан çулран инçех те мар калча ăшне ларчĕ.

– Атте, ман тăри ӳксе вилмерĕ! – хĕпĕртерĕ Анюк.

– Хăрарăн-и? – ыйтрĕ ашшĕ.

– Вăл чул пек ӳкет те. Хăрарăм çав...

Каллех умра тепĕр тăри вĕçсе хăпара пуçларĕ. Хăй вĕçĕмсĕр тăрлатать. "Тăр-тăр, хăвăртрах тăр. Эпĕ кăвак шуçăмлах тăнă, эсĕ те тăр!" – тенĕнех туйăнать Анюка тăри юрри.

– Эпĕ паçăрах тăнă. Эпĕ ыйхă чăпти мар, – терĕ Анюк савăнăçлăн.

Ашшĕ хĕрачи çине ăшшăн пăхса кулчĕ.

Анюк уй урлă каçнине сиссе те юлаймарĕ. Часах вĕсем Типвар хĕррине çитрĕç. Çырми пăхма хăрушă тарăн. Анас çулĕ те чăнкă. Анюк çавна курчĕ те пăлхансах кайрĕ.

– Атте, эпĕ хăратăп. Эпĕ урапа çинчен анатăп, – терĕ вăл ырăнта тăппăн ларма пĕлмесĕр. – Лашана чар. Эпĕ халех анатăп.

– Ан хăра, хĕрĕм, – терĕ ашшĕ лăпкăн. – Эпĕ кунта лашана çавăтса анатăп. Эсĕ ман ырăна тилхепе тытса пыр. Ну, килĕшетпĕр-и çапла?

– Ай, атте, эпĕ çавах хăратăп, – терĕ Анюк пăлханса.

– Хăрама кирлĕ мар. Акă хăвах курăн. Питех те лайăх анатпăр, – лăплантарчĕ ашшĕ. – Пирĕн Амур – ăслă лаша! Вăл çырмана аннă чухне нихçан та чупмасть.

Анюк хăра-хăра тилхепене тытрĕ те урапа çине лайăххрах юсанса ларчĕ.

Амурĕ чăнахах та ăслă лаша иккен. Вăл тарăн çырмана питех те асăрханса анчĕ. Анюк хĕпĕртесе кайрĕ те сумкăран пĕр чĕл çăкăр илсе лаша умне пычĕ, ăна хыптарчĕ.

– Эсĕ, Амур, ăслă лаша, – терĕ вăл, лашана тутинчен лăпкаса. – Сана татах çăкăр парам-и?

– Хальлĕхе çитет, – терĕ ашшĕ. – Куратăн-и, хĕрĕм, пирĕн çырмаран мĕн чухлĕ чул хăпартмалла! Кайран çитерĕпĕр тата.

Чулне вара унăн ашшĕ нумай кăларнă. Пит те нумай. Хăйăрлă чăнкă çыран çумĕнче чул  куписем  йĕркеренех лараççĕ.

– Атте, мĕн чухлĕ чул! – тĕлĕннĕ   пек те, хăранă пек те пулчĕ Анюк.– Хăçан турттарса пĕтерĕпĕр эпир ăна?

– Паян турттаратпăр, ыран турттаратпăр. Ну, нумай– нумай, эрне турттаратпăр. Анчах йăлтах турттарса пĕтеретпĕр, – терĕ ашшĕ. – Халь эпĕ пĕччен мар. Эсĕ те пулăшатăн. Иккĕн иккĕнех. Мана самаях çăмăл пулать.

Ашшĕ лашана çула май çавăрса тăратрĕ, умне утă хурса пачĕ. Часах ĕç пуçланчĕ. Ашшĕ пысăк чулсене çĕкле-çĕкле хучĕ, Анюк вĕтĕ чулсене урапа çине ывăтрĕ. Вăрахăн пулин те урапа тулсах пычĕ.

Сасартăк чул купи варринчен кайăк йăви тухрĕ. Ăна типнĕ вĕтĕ-вĕтĕ курăкран питех те чипер çавăрса тунă. Йăвара тăчă-тăчă пĕчĕкçĕ чĕпĕсем лараççĕ. Вĕсем сарă тутине карса, мăйне тăсаççĕ. Паллах, амăшĕ апат парасса кĕтеççĕ ĕнтĕ.

Кайăк йăвине чи малтан куракан̆ĕ Анюк пулчĕ.

– Атте, кунта кайăк чĕпписем пур! – пĕлтерчĕ вăл савăнса. – Кала– ха, мĕнле кайăк чĕпписем вĕсем?

Ашшĕ калама васкамарĕ. Юнашар тăракан хĕрачин пуçне аллипе тытсах сылтăмалла çавăрчĕ те çывăхра ларакан пĕр кайăк çине кăтартрĕ. Лешĕ вăрăм туналлă, шупка кăвакрах тĕслĕ. Çурăмĕ çинче, вăрăм хӳри çывăхнерех, ик-виçĕ çурма ункă палăрать. Хырăм айĕпе пичĕ шурă. Сăмси вăрăм. Пуç çийĕ, пĕчĕкçĕ çĕлĕк хурса янă евĕр, хурарах. Анчах янах айĕ вара хуп-хурах. Кĕтĕк саппун çакса янă тейĕн.

Анюк кун пек кайăка унччен те курнăччĕ, унăн ятне те пĕлме ĕлкĕрнĕччĕ: пăрчăкан!

– Атте, пăрчăкан мĕншĕн йăвине чул ăшне çавăрнă-ха? – тĕлĕнчĕ  Анюк.

– Пăрчăкана çырма-çатра кайăкĕ тесен те юрамалла, – ăнлантарчĕ ашшĕ. – Пăх-ха эсĕ ăна. Çӳрессе те вăл çырмари пĕчĕкçĕ шыв хĕррипе çӳрет.

– Апла вăл шыв кайăкĕ? – тĕлĕннĕ пек пулчĕ Анюк.

– Пăрчăкан ăслă кайăк, – ăнлантарчĕ ашшĕ. – Çавăнпа вăл пытанса йăва çавăрать, чĕпписене те пытанса кăларать.

– Камран пытанать?

– Куккук кайăкран.

– Ма куккук кайăкран пытанать?

– Ай, тĕпчевçĕ! Мĕнле каласа ăнлантарас ман сана? – самант аптăранă пек пулчĕ ашшĕ. – Куккук вăл хăй чĕпĕ пусса кăлармасть, чĕппине те хăй пăхмасть. Вăл урăх кайăк йăвине çăмарта туса хăварать те, лешĕ вара ăна пусса кăларать, мĕн çитĕнсе çитичченех çав мăнттай кайăка тăрантарса пурăнать.

– Уй, мĕнле кахал кайăк вăл куккук! – пăшăрханнă пек пулчĕ Анюк. – Эпĕ ăна юратмастăп!

– Куккук кахал кайăк мар, йăли çапла унăн, пит те ĕçчен кайăк вăл. Вăл йывăçсене сыхлать эппин. Çавăнпа вăл чăн-чăн вăрман тухтăрĕ шутланать. Питех те усăллă кайăк.

Анюк кайăк йăви патне тепре пĕшкĕнчĕ.

– Атте, пăх-ха, пăх! – сасартăк хĕпĕртесе кайрĕ вăл. – Пĕчĕкрен те пĕчĕк чĕпĕсем, анчах мĕн тери тирпейлĕ вĕсем. Йăви тап-таса. Каккине те йăва тулашне тăваççĕ. Тĕлĕнмелле!

– Пăрчăкан тирпейлĕ те таса кайăк, – ăнлантарчĕ ăна ашшĕ. – Çавăнпа тирпейлĕ те таса хĕрачана пăрчăканпа танлаштараççĕ.

– Апла, атте, эпĕ те пăрчăкан пекех? – хавхаланса калаçрĕ Анюк. – Ну, атте, кала, пăрчăкан пек мар-и?

– Эсĕ манăн чăн-чăн пăрчăкан, – мухтарĕ ашшĕ хĕрачана. – Аннӳ те сана çавăн пек чĕнет. Тирпейлĕ те таса пулнăран çапла чĕнет.

Хĕпĕртесе кайнă Анюк пăрчăкан пекех сиккеле пуçларĕ.

– Эпĕ пăрчăкан пек пулатăп, эпĕ пăрчăкан пек пулатăп! – савăнчĕ вăл. – Ну, атте, курăн акă, эпĕ чăн-чăн пăрчăкан пекех пулатăп.

– Эсĕ манăн халь те пăрчăкан, – мухтарĕ хĕрачана ашшĕ.

Сасартăк Анюк чарăнса тăчĕ, шухăша кайнă пек пулчĕ, унтан йăва патне пычĕ те чĕпĕсене ачашланçи турĕ.

– Ай, пĕчĕкскерсем, ай, пĕчĕкскерсем! – терĕ вăл хĕрхеннĕ сасăпа. – Халь капла мĕнле пурăнăр? Сире çăхан-хурчăка та тытса кайĕ...

– Хĕрĕм, ытлашши ан хурлан, – терĕ ашшĕ Анюка çурăмĕнчен лăпкаса. – Йĕркеллех пулать. Вĕсен йăвине эпир урăх çĕре куçарăпăр. Вара амăшĕ чĕпĕсене лайăхах пăхса çитĕнтерĕ.

– Апла йăвана халех куçаратпăр?

– Халех.

Ашшĕ чул купи çывăхĕнчи çырана тимĕр кĕреçепе чавса вырăн хатĕрлерĕ, виçĕ енне виçĕ лаптак та сарлака чул тăратрĕ, тĕпне вакрах чул сарчĕ. Вара, чĕпĕсен йăвине илсе, çавăнта майлаштарса хучĕ.

Анюк та ашшĕпе пĕрле вĕткеленчĕ.

– Ай, пĕчĕкскерсем, халь çĕнĕ çĕрте мĕнле пурăнăр? – пурпĕр шикленсе калаçрĕ Анюк.

– Йĕркеллех пулать, – йӳнеçтерме тăрăшрĕ ашшĕ. – Эпир йăва çине çакăн пек лаптак чул хурăпăр. Вара хĕвел те пĕçертмест, çумăр шывĕ те каймасть. Лайăх пулать вĕт çапла, Анюк?

– Лайăх, лайăх, – хĕпĕртерĕ хĕрача.

– Умне те чул хурса тухăпăр. Амăшне кĕрсе тухмалăх пĕчĕк шăтăк хăварăпăр.

– Капла питех те лайăх пулать-çке, – пушшех савăнса кайрĕ Анюк.

Лава тиесе çитерсен ашшĕ тилхепене тытса лашана вырăнтан тапранма хушрĕ.

– Ну, Амур, кайрăмăр...

Анюк çырма тĕпне пĕччен тăрса юлчĕ. Вăл малтанласа айăккăн вĕçсе çӳрекен пăрчăкана куçран вĕçертмесĕр сăнарĕ. Унăн пăрчăкана хăйĕн чĕписем патне ярас килчĕ. Анчах вăл çывăха вĕçсе пымарĕ-ха.

– Пăрчăкан, пăрчăкан, – кайăка йыхăрчĕ Анюк, – сана пĕчĕк чĕпĕсем кĕтеççĕ. Кĕрсе тăрантар вĕсене...

Çук, ăнланман пăрчăкан ăна итлемерĕ, çаплах айăккăн вĕçсе çӳрерĕ. Юлашкинчен çапах та чăтаймарĕ курăнать, çĕнĕ çĕре куçарнă йăва патнех вĕçсе пычĕ, анчах – те Анюкран хăрарĕ – йăвана кĕрсе тухмарĕ, малалла вĕçсе кайрĕ.

– Пăрчăкан, пăрчăкан, эсĕ манран ан хăра, эпĕ сана тивместĕп, – терĕ Анюк ачашшăн.– Чĕппӳсене кĕрсе тăрантар. Е манран хăратăн? Хăратăн пулсан, эпĕ аякка кайса тăратăп. Çапла килĕшетпĕр-и?

Анюк йăваран чылай аякка кайса тăчĕ, пăрчăкана куçран вĕçертмесĕр сăнарĕ. Ай, ăслă кайăк! Вăл çавна кăна кĕтнĕ иккен. Пăрчăкан çавăнтах йăва çывăхне вĕçсе пычĕ, чул çине ларчĕ, кăвакрах хӳрине пĕрре усса, тепре çĕклесе, унталла-кунталла пăха-пăха илчĕ.

– Ман пăрчăкан хăйĕн чĕпписене тупрĕ! – хĕпĕртесе кайрĕ Анюк. – Ну, мĕн пăхса тăратăн? Кĕр чĕппӳсем патне. Вĕсем санран апат кĕтеççĕ вĕт…

Пăрчăкан Анюка итленĕнех йăвана кĕрсе кайрĕ.

– Тупрĕ, тупрĕ пăрчăкан хăйĕн чĕпписене! – савăнчĕ Анюк. – Халь сан чĕппӳсем выçса вилмеççĕ. Лайăхах çитĕнме пултараççĕ.

Анчах пăрчăкан йăвара нумай тăмарĕ – çавăнтах тухрĕ те вĕçсе кайрĕ.

"Ăçтаваскать вăл? Мĕншĕн чĕпписене ачашласа йăпатмасть?.." – ăнланмасăр тăчĕ Анюк.

Çак вăхăтра ашшĕ чул пушатса таврăнчĕ.

– Атте, ман пăрчăкан хăйĕн чĕпписене тупрĕ, – пĕлтерчĕ Анюк пăрчăкан пек сиккелесе.– Анчах йăвинче нумай тăмарĕ, кĕчĕ те çийĕнчех тухрĕ, каллех вĕçсе кайрĕ.

– Вăл халь чĕпписене тăрантарать ĕнтĕ, – ăнлантарчĕ ашшĕ.

– Эпĕ вĕсем валли йăва çывăхне çăкăрпа тăпăрчă тĕпретсе паратăп. Апат çывăхрах пулать. Ăна шыраса та çӳреме кирлĕ мар. Пăрчăкан çав апата чĕпписене çитерме пултарать. Атте, çапла тăвам-и?

– Парса пăх, – килĕшенçи пулчĕ ашшĕ. – Анчах сан апатна çийĕç-ши вĕсем?

Анюк апат-çимĕç чиксе килнĕ сумкăран çăкăрпа тăпăрчă илчĕ, вĕсене пăрчăкан йăви умĕнчи чул çине тĕпретсе пачĕ. Вара тин ашшĕне чул тиеме пулăшма тытăнчĕ.

Чул тиенĕ чух та, тиенĕ лавпа ашшĕ Типвар хĕррине хăпарса кайсан та Анюк пăрчăкана куçран вĕçертмерĕ. Хăй панă апата пăрчăкан чĕпписене çитерессе кĕтрĕ. Анчах тĕлĕнтермĕш кайăк вăл панă апата сăхмарĕ.

– Атте, пăрчăкан эпĕ панă апата чĕпписене çитермест, – пăшăрханса пĕлтерчĕ ашшĕне Анюк. – Мĕншĕн çитермест? Апла вĕсем выçса вилеççĕ-çке?

Ашшĕ ăшшăн кулса илчĕ.

– Пăрчăкан хурт-кăпшанкăпа, шăна-пăванпа пурăнать. Чĕпписене те çав апата çитерет, – ăнлантарчĕ вăл. – Çавăнпа та эсĕ панă апата хăй те çимест, чĕпписене те çитермест.

– Мĕнле-ха апла? – ăнланмарĕ Анюк.

– Çаплах, хĕрĕм, – терĕ ашшĕ. – Кашни кайăкăн хăйĕн апачĕ.

– Апла иккен... Эпĕ пĕлмен, – ӳкĕннĕ пек пулчĕ Анюк.

Малтанласа пăрчăкан аякра вĕçсе çӳрерĕ. Анчах вăрахăн-вăрахăнах вăл Анюка та, унăн ашшĕне те хăнăхса çитме пуçларĕ пулмалла. Вăхăт каçалана сулăннă тĕлелле хайхискер çывăхрах вĕçсе-утса çӳрерĕ. Тĕлĕнмелле кайăк! Анюк ăна ытараймасăр сăнать. Мĕнлерех вĕçет вăл! Йăр-йăр ярăнса вĕçсе килет. Çырмари пĕчĕкçĕ шыв хĕррине анать те сике-сике малалла иртет. Чарăнса тăрсан тата мĕнлерех! Вăрăм кăвак хӳрине пĕрре усать, тепре çĕклет. Ку Анюка пушшех те кăмăла каять. Пăрчăкана вăл хăйĕн кайăкĕ вырăнне хурса ăна кунран-кунах сăнаса пурăнчĕ.

Анюк кашни кунах ирхине чул турттарма пырсан чи малтан пăрчăкан чĕппи-

сем патне васкарĕ. Лешсем вара, Анюк йăва çывăхне пĕшкĕнсенех, хăйсен сарă тутине карса малалла туртăнаççĕ. Вĕсем, паллах, амăшĕ çитрĕ, тутлă апат парать тесе кĕтеççĕ ĕнтĕ. Анчах çавăнтах, амăшĕ пулманиине курса, пăшăрханнă пек лăпланса лараççĕ, хура шăрçа пек пĕчĕкçĕ çутă куçĕсемпе хĕрача çине пăхаççĕ.

– Ай, пĕчĕкскерсем, – тет вара Анюк чĕпĕсене хĕрхенсе, – ман сире валли апат çук-çке. Эсир ман апата çиместĕр. Акă аннĕр вĕçсе килет те сире тутлă апат çитерет. Эсир манран ан хăрăр. Эпĕ сире урăх чăрмантармастăп. Эпĕ каятăп. Лайăх пурăнăр, хăвăрт çитĕнĕр...

Çапла Анюк чĕпĕсене эрнене яхăн сăнарĕ. Çак хушăра ăна пăрчăкан лайăхах хăнăхса çитрĕ. Вăл унăн çывăхĕнчех вĕçсе-утса çӳрерĕ. Тепĕр чухне алла кăнтарса тытас пекех çывăхра пулчĕ. Пĕрре мар ачашшăн йыхăрса та пăхрĕ. Çук, кайăк унăн аллине пымарĕ.

Юлашкинчен, эрне иртсен, вĕсем Типвара чул турттарма çитсен Анюк яланхи пекех чĕпĕсене курма васкарĕ. Анчах унăн ĕмĕтленни пулмарĕ – йăвара пăрчăкан чĕпписене кураймарĕ. Аптăранă енне йăва çине хунă лаптак чула та илсе тăратрĕ. Вăр-çаврака та тип-тикĕс çавăрса тунă йăва – пуш-пушах.

– Атте, ман чĕпĕсем çук, – хурланса пĕлтерчĕ Анюк. – Кам çĕклесе кайнă вĕсене? Çăхан-хурчăка тытса кайман-ши вĕсене?

– Ан хăра, хĕрĕм. Вĕсене никам та тивмен, – лăплантарчĕ ашшĕ хĕрачана. – Эпĕ ĕнерех пăрчăкан чĕпписем çитĕнсе çитнине асăрханăччĕ. Сана ун пирки калама пĕлеймерĕм. Паян вара пăрчăкан вĕсене ир-ирех йăваран вĕçтерсе кăларнă ĕнтĕ.

Анюк нимле мар пулса тăчĕ.

– Мĕн, хĕрĕм, кулянатăн-и?

– Ă-хă. Кураймарăм-çке пăрчăкан чĕпписене йăваран вĕçтерсе кăларнине...

Сасартăк ашшĕ кулса янă пек пулчĕ.

– Анюк, пăх-ха çӳлелле. Çавсем сан пăрчăкансем мар-и? Сана тав тума килмерĕç-и?

Çавăнтах Анюкпа унăн ашшĕ çийĕн çичĕ-сакăр пăрчăкан çывăхранах ярăна-ярăна вĕçсе иртрĕç.

– Кусем ман пăрчăкансем! Кусем ман пăрчăкансем! – терĕ Анюк юрланă пек савăнăçлăн. – Эсир халь пысăк ĕнтĕ. Лайăх вĕçĕр, лайăх пурăнăр!..

Пăрчăкансем мĕн куçран çухаличченех вĕсен енне пĕчĕкçĕ аллипе сулса тăчĕ Анюк.




КАПКӐН КӖТЕСӖ

**Валерий КОШКИН**

# Шанми пулчӗ

Мартын Ванькки сен Улюшки пӗр пуян кӗрекене ӑнсӑртран пырса ҫакланчӗ. Чылайлӑха асра юлчӗ ку ӗҫ. Шупашкара ялтан килнӗ-килнех эрне кун каҫхине вӑл Тулькка пиччӗшӗ ӗҫлекен "Япшар" тулли мар яваплӑ обществӑна ҫитсе курма шут тытрӗ. "Офис" тенине шыраса тупрӗ-ха, анчах та "Генеральнӑй директорӗ – Анатолий Иванович Мартынов" тесе ҫырнӑ алӑк патне ҫитиччен пӗр ана ҫӗр улми кӑлармалӑх вӑй та пӗтрӗ пулӗ. Малтан – ҫырӑнмалла, документсем кӑтартмалла, мӗн ыйтупа килнине пӗлтермелле, черет йышӑнса кӗтмелле... Хуралҫӑсем хулӑн сӑран портфельсем йӑтнӑ ҫынсене пӗрин хыҫҫӑн теприне черетсӗр-мӗнсӗрех, аяла ансах кӗтсе илеҫҫӗ, пӗрле илсе кӗреҫҫӗ. "Шефӑн тӗп хуларан килнӗ хуҫасемпе ӗҫлӗ канашлу ирттермелле, – терӗ пӗри. – Польский хушаматлине вара кӗҫ хӑй тухса кӗтсе илет".

Килсе ҫитрӗҫ пулас: пиччӗшӗ анчӗ, шӑллӗне те пырса алӑ пачӗ. «Тӑхта, Улюшка, – терӗ, – Мускавран килнӗ хӑнапа, унӑн Шупашкарти тусӗсемпе паллаштарӑп».

Канашлу хыҫҫӑн хӑнасене урӑх пӳлӗме илсе кӗчӗҫ: аш-пӑшӗ те, тем тӗрлӗ ӗҫме-ҫиме те пур, вӑлчисем кӑна – хури, хӗрли, сарри... Ӗҫмелли тесен – эрех лавккин сентрине кунта куҫарса килнӗ тейӗн. Анчах, чим-ха, Польский хушаматли сӗтел ҫинчи эрех-сӑрана ас тивме васкамасть. Кӗҫ хӗвӗнчен коньяк кӗленчи туртса кӑларчӗ, фужер тӗпне кӑштах тумлатрӗ те хаяр шӗвеке шӑл хушшипе сӑрхӑнтарса курнӑҫланса ларчӗ. Улюшка вӑл калаҫнине ӑнланаймарӗ: унашкал ют сӑмахсемпе ялта пуплесех каймаҫҫӗ. Сӑмах мӗнле пуясси, пысӑк налукран епле хӑтӑласси, патшалӑха та, ӗҫлекен халӑха та чееленсе улталасси ҫинчен пынине вара чунпа ӑнланчӗ. Польскипе юнашар лараканнине Митренко тесе чӗнеҫҫӗ иккен: тахҫан партие кӗрсе карьера тунӑскер халӗ пӗр завода алла ҫавӑрса илнӗ те усламне Мускаври юлташӗпе пайлать имӗш. Вӑл та хӗвӗнчен кӑларса хӑйӗн коньякне ҫеҫ ӗҫет: шанмаҫҫӗ иккен – такам наркӑмӑшласа вӗлересрен хӑраҫҫӗ пулинех!

Хӑнасем Мускав пуйӑсӗ ҫине васкатрӗҫ. Кӗҫех юлнисем те пӗрин хыҫҫӑн тепри офисран тухса шӑвӑнчӗҫ.

Унтанпа вӑхӑт чылай иртрӗ. Улюшка пиччӗшӗн офисӗнче урӑх пачах та пулаймарӗ. Хулана ҫур ҫултан тепре килсен ҫавӑн чухне хӑнара пӗрле пулнӑ ҫынна тӗл пулчӗ вӑл.

– Анатолий Иванович патӗнче пулкалатӑр-и? – тесе ыйтрӗ вӑл унран, хӗвӗнчен Польскипе Митренкӑн кӗленчи пек лаптак пулштух кӑларса. – Ку килте тунӑскер, «Хенесси» аякра тӑтӑр...

– Анатолий Иванч темскер сивӗнчӗ пирӗнтен, – хуравларӗ лешӗ.

– Сӑлтавӗ мӗнре-ши?

– Пире, ахаль ҫынсене, шанми пулчӗ. Пуйнӑҫемӗн вӑл хаклӑ эрех-сӑрана пӗччен ӗҫме кӑмӑллать.

**«Тӑван Атӑл», «Капкӑн» ҫырӑнсан**

# ШӐ́ТЛЕСЕ ТЕ ЙӖПЛЕСЕ




### ТУЙ УМĔНХИ КАЛАÇУ

– Савниçĕм, эсĕ мана пĕрлешнĕ хыççăн та юратма пăрахмастăн пуль-ха, – тет çураçнă хĕр каччăна.

– Паллах, эпĕ каччă кайнă хĕрарăмсене пушшех те юрататăп.




### СĔНӐ́

– Кăвакарчăнăм, ытла тутлă шăрттан пĕçернĕ эсĕ. Ăна епле майпа упрамалла-ши? – ыйтать упăшки.

– Хăнасем умне лартса парас мар, – самантрах кирлĕ сĕнӳ парать арăмĕ.

### ĂСАТУ

Арăмĕ йĕре-йĕре упăшкине командировкăна ăсатма тухать.

– Чунăмçăм, мĕншĕн татăлсах йĕретĕн? Эпĕ пĕр уйăхлăха кăна каятăп-иç, – лăплантарать упăшки.

– Пĕлетĕп сана! Пĕр уйăхлăх тетĕн те виçĕ кунтанах таврăнатăн.




### АСĂРХАТТАРАТЬ

Арăмĕпе упăшки хăнаран таврăнаççĕ. Арçын чылаях хĕрнĕ. Çавăнпа тулли кĕленчине, йывăр сумкăна хĕрарăм çĕкленĕ. Тарăн та чăнкă çырма урлă каçнă чух упăшки арăмне асăрхаттарать.

– Арăм, тархаслатăп, асăрханарах каç. Санра хуняма кучченеçĕ. Хаклăскер, хаярскер, пĕр тумлам шывсăр çăтса ямаллискер.

– Эсĕ ман пирки капла чипер сăмахсем каланине пуçласа илтетĕп, – тĕлĕнет арăмĕ.

**тунсăхламăн, тусăм, нихăçан!**

## ТĔРĔ ПУЛТĂР ПАРНЕ







70
60
50
40
30
20
10
10
20
30
40
50
60
70
80
90
100

## ÇАВРА ÇУЛСЕМ Авăн (сентябрь) Чăваш календарĕ

### 180

А.С.ПУШКИН ШУПАШ-КАРТА ПУЛНИ (4–5.09.1833)



Е.Пугачев ертсе пынă Хресченсен пăлхавĕ çинчен материалсем пухас тĕллевпе А.Пушкин Уралпа Атăл тăрăхне çитнĕ. Поэтăн çулĕ Васильсурск, Шупашкар, Октябрьски, Сĕве, Хусан урлă выртнă. Шупашкарта вăл лашисене ылмаштарнă, хулара уçăлса çÿренĕ, пăлхав ку тăрăхра еплерех пулса иртнине тĕпченĕ. Çак пулăма Н.К.Сверчков «А.С. Пушкин чăваш ялĕнче» тата Н.В.Овчинников «Çăл умĕнче» (А.С.Пушкин Чăвашра) картинисенче сăнарланă.

### 125

Марфа ТРУБИНА (02.09.1888–27.11.1956)



Паллă çыравçă, педагог, ЧАССР шкулĕн тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ (1944), РСФСР шкулĕн тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ (1951). Куславкка районĕнчи Куснар ялĕнче çуралнă. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ. Пĕтĕм пурнăçне ачасене вĕрентес ĕçе халалланă. Поэт, прозаик, драматург. Ача-пăча литературине аталантарма тăрăшнă. Чăваш чĕлхине вĕрентме учебниксем те çырнă. Тĕп кĕнекисем: «Çырнисен пуххи», «Хĕллехи каçсенче», «Ача чухнехи», «Вупăр», «Асăнмалăх, савăнмалăх», «Ачасем валли çырнă юмахсем», «Чăваш юмахĕсем» т.ыт.те. Ленин орденĕпе медальсене тивĕçнĕ. Ун ячĕпе Шупашкарти пĕр урам хисепленет, преми те пур.

### 120

Иоаким МАКСИМОВ-КОШКИНСКИЙ (14.09.1893 — 30.08.1975)



Драматург, куçаруçă, актер, театрпа кино режиссерĕ, чăвашсен профессилле театрне, «Чăвашкино» студие пуçарса яраканĕ, Чăваш сценин тава тивĕçлĕ артисчĕ (1922), ЧАССР халăх артисчĕ (1955), РСФСР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ (1968). Тутарстанри Теччĕ районĕнчи Кăнна Кушкинче çуралнă. Чăваш çамрăкĕсенчен Хусанта труппа йĕркеленĕ, А.Островскийĕн «Хăв пурăнас килнĕ пек ан пурăн» пьесине лартнă. Кайран Чăваш драма тетарĕнче ертÿçĕре, режиссерта ĕçленĕ, «Хура юпа», «Апайка», «Киремет кати» фильмсем ÿкерес ĕçе ертсе пынă. Пьесăсем, сценарисем, либретто çырнă, вырăс тата тĕнче литературисен классикĕсене куçарнă. Тĕп кĕнекисем: «Уйчăк», «Урнă самана», «Хĕвел тухсан», «Сатурпа Илем» т.ыт.те.

### 110

ХУММА ÇЕМЕНĔ (23.09.1903–25.09.1936)



Çыравçă, литература тишкерÿçи, куçаруçă. Тăвай районĕнчи Енĕш Нăрвашра çуралнă. Пĕрремĕш хайлавĕ 1920 çулта тухнă. Тĕрлĕ çулсенче куçаруçăра, литсотрудникра, корректорта ĕçленĕ, кĕнеке кăларас ĕçе хутшăннă. Калавсем, фельетонсем, пьесăсем, сăвăсем çырнă, çыравçăсен хайлавĕсене тĕпченĕ. «Йÿçлĕ-тутлă» романне вĕçлесе ĕлкĕреймен. П.Беранже, Г.Гейне, В.Гюго, У.Уитмен, Д.Бедный, А.Фет, А.Кольцов хайлавĕсене чăвашла куçарнă. Тĕп кĕнекисем: «Пирĕн вăй», «Штрум», «Суйласа илнисем», «Орфей чĕрĕлсе тăни» т.ыт.те.

### 100

Мĕтри КИПЕК (15.09.1913–03.03.1991)



Çыравçă, ЧАССР Патшалăх премийĕн лауреачĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă. Вăрнар районĕнчи Тимĕрчкасси ялĕнче çуралнă. Çар сыхăнăвĕн училищинчен тата Çар юридицийĕн академийĕнчен вĕренсе тухнă. 1935-1954 çулсенче Совет Çарĕнче хĕсметре пулнă, тăнăç вăхăтра çар юстицийĕн органĕсенче ĕçленĕ. 1933 çулта «Трактор» альманахра пĕрремĕш хайлавĕ тухнă. Повеçсем, романсем, калавсем çырнă. Тĕп кĕнекисем: «Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ», «Сунарçăсем», «Кайăк тусĕ», «Телейлĕ пурнăçшăн», «Парăнманнисем çĕнтереççĕ», «Хитре хĕрарăм», «Сунарçă калавĕсем» т.ыт.те.

### 90

Иван ОДЮКОВ (27.09.1923 — 16.04.1995)



Фольклорист, литературовед, филологи наукисен кандидачĕ, профессор, ЧАССР шкулĕн тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ, ЧАССР Патшалăх премийĕн лауреачĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă. Шупашкар районĕнчи Атăльялта çуралнă. Институтра, университетра ĕçленĕ. Чăваш халăх сăмахлăхне тĕпченĕ, пухнă, студентсене те явăçтарнă. Унăн тĕп ĕçĕсем: «Чувашский фольклор против религии и суеверий», «Чувашские народные песни социального протеста и революционной борьбы», «И.Я.Яковлев», «Чувашское устно-поэтическое творчество советской эпохи», «Чувашская народная лирика» т.ыт.те.

# Ял илемӗ – капӑр ҫурт






1-МӖШ ХУТ ПЛАНӖ




2-МӖШ ХУТ ПЛАНӖ

1⁰⁰

# ТӐВАН АТӐЛ

ЛИТЕРАТУРӐПА
КУЛЬТУРА
ТАТА ИСКУССТВО
ЖУРНАЛӖ

2013 ▪ 8

Индекс 11529
Хакӗ ирӗклӗ